Ж73
Ч-44854

## Николай ЖИРНОВ

# ЙĔПРЕÇ Тарзанĕ



Кӳкеç, 1999 ç.

Национальная библиотека ЧР
4-044854



Ж 73

Николай ЖИРНОВ

# ЙӖПРЕÇ ТАРЗАНӖ

Кӳкеç — 1999 ç.

УДК 894.344.
ББК 84 (2 Рос-Чув) — 4
Ж—73

Благодарю за оказанную материальную помощь при издании книги ФЕДОРОВА Владислава Ильича, начальника управления реализации и маркетинга АО «Чебоксарский агрегатный завод»; ГОРДЕЕВА Геннадия Васильевича, генерального директора ЗАО «Чебоксарский автоцентр КамАЗ»; ХРИСТОФОРОВА Владимира Ивановича, исполнительного директора ОАО «Электроприбор»; ЕРМОШКИНА Николая Пантелеймоновича, коммерческого директора ОАО «Электроприбор»; ФОМИНА Федора Федоровича, начальника отдела взаимозачета ОАО «Электроприбор».

И-44854

РГУП «Кугеськский издательский дом»

Национальная библиотека
Чувашской Республики

## АСТАЛАХ ЫТАМЕНЧЕ

Йĕпреçре, илемлĕ вăрман поселокĕнче. хыр-чăрăш, çăкахурăн ытамĕнче савăнса пурăннă вăхăтра кӳршĕре хура кăтрарах пуçлă пĕр ача шĕвĕрккесем хушшинче уйрăмах палăратчĕ. Хамăр умри паркра е сĕт-çу завочĕн вăрăм пĕви хĕрринче эпĕ ăна час-часах кураттăм. Манăн ывăл Борис та ăна литегатурăри геройсемпе, хăюллисемпе-хастаррисемпе танлаштарчĕ. Коля Жирнов пулнă иккен вăл. Амăшĕ, Анисий Елчĕк тăрăхĕнчи ĕçчен хĕрарăм, стройкăра вăйне парса палăрнăскер, ăна çирĕп пулма, çынна хисеплеме, пуçра палăртнине вĕçне çитерме вĕрентнĕ. Пĕчĕклех ашшĕсĕр тăрса юлнăскере пурнăç урапи çине ларма çăмăлах пулман. Вăрнар районĕнче çуралнă Трофим ачисене ура çине йĕркеллĕ тăратаймасăрах, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Çавăнпа Микулайшăн терт миххийĕ-кутамкийĕ ачаранах çумран уйрăлми йывăрлăх шутланнă. Ачалăхăн пĕр пайне Шупашкарта та вĕренсе-пурăнса ирттернĕ, Йĕпреçре те пĕлӳ илнĕ. Патвар та вăйлă йĕкĕте Мускава, Дзержинский ячĕллĕ, паттăрлăхпа палăрнă дивизие хĕсмете илнĕ. Çартан таврăнсан вăл стройкăра нумай çул ĕçленĕ.

Йĕпреçрен Шупашкара куçса килсенех вăл мана пичет çуртĕнче шыраса тупрĕ. калавĕсемпе паллаштарчĕ.

Вăл вăхăтра чăваш чĕлхи ытла хисепрех марччĕ, уйрăмах Йĕпреç пек хула-поселоксенче. Нумай наци çыннисем пурăнакан вырăнта ытларах вырăс чĕлхи çирĕпленнĕччĕ. Шкулта кăна мар, халăх хушшинче те вырăс чĕлхи хуçаланатчĕ. Çав сăлтавсене пулах Николай Журнов та, манашкал, чăваш чĕлхипе литетраурине хăй вăхăтĕнче, ача чухне, тĕплĕн вĕренеймен.

Çыравçă мĕхелĕ пур унăн, турă пани пурах ку енĕпе. Писатель ятне чăннипех тытать. Вулакана вăл чи малтанах этам пурнăçĕнчи çивĕч сăлтавсене, çынсем хушшинчи кăткăс ыйтусене хутшăнусене юратури хăйнеевĕрлĕ пулăмсене ăстан, сăнарлă куç умне кăларса тăратма пултарнипе тыткăнлать. Çын ăшĕнчи хаваслăх, хуйхă, икĕпитлĕх, хапсăнчăклăх, курайманлх, ырăлăх туйăмĕсем нумай-нумай сăнарта асра

юраççĕ. Хăйне евĕр афтобиографиллерех «Тарзан» повесть çыннăн илемне, юратăвне, хăюллăхне, хăватне ĕненмелле уçса паратть.

Чăваш писателĕсен союзне илнĕ хыççăн Николай Трофимович Жирнов тата тăрăшарах çырма пуçларĕ. Унăн калавĕсем республикăри журналсенче, хаçатсенче тăтăшах пичетленеççĕ. Кĕнекесем те кăларчĕ вăл. Асталăх ытамĕнчи çамрăк çыравçă çакă кĕнекери хайлавĕсемпе вулакан умне çĕнĕлле, хĕрӳллĕрех. ăстарах пултарулăхпа тухать.

**Владимир КУЗЬМИН,**
**Чăваш Республикин писателĕсен Союзĕн председателĕн çумĕ.**
1999 çулхи юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ.

## ЙЕПРЕҪ ТАРЗАНӖ

### Калав

Тӑвата ҫул тинӗс хуралӗнче тӑнӑ Геннадий хаваслӑ кӑмӑл-туйӑмпа килне таврӑнать. Савӑннипе те пӑлханнипе чӗри сиксе тухасла тапать. Акӑ, вӑрман ытамӗнче сарӑлса ларакан тӑван Йӗпреҫ станцийӗ. Перрон ҫине ҫӑмӑллӑн сиксе анчӗ те вӑл пӗр хушӑ уҫӑ сывлӑша ӑша туртса тӑчӗ. Ун-кун пӑхкаларӗ, анчах паллан-тӑван курӑнмарӗ. Ҫывӑхри ялне уй урлах вашлаттарчӗ. Уничерен кӗрсе хӑйсен урамӗпе пырать. Пурте алӑ параҫҫӗ, сывлӑх сунаҫҫӗ, хӑнана чӗнекен те пур. Анчах... нихӑшӗ те палламасть матрус тумӗ тӑхӑннӑ йӗкӗте. Камсен пулатӑн тесе те ыйтмаҫҫӗ.

Геннадий хӑй ҫуралнӑ килне ҫитрӗ, урам алӑкне уҫрӗ те чарӑнса тӑчӗ. Нимӗнех те улшӑнман, кивӗ пӳрчӗ ҫеҫ, кӗтесӗ ҫӗрӗшнипе, чалӑшарах панӑ. Арҫын алли ҫитменни тӳрех курӑнать. Тӑван кил хушшинчи тӑван сывлӑш кӑкӑра тултарса лартрӗ, кашни ҫывӑх япалана алӑпа тытса пӑхас килчӗ, вара вӗҫнӗн алӑк патнелле ыткӑнчӗ, урай хӑми чӗриклетнипе вӑл тӑна кӗчӗ. Пӳрт алӑкне хуллен уҫрӗ. Кӑмака умӗнче амӑшӗ аппаланать. Тулли чугуна ухватпа лартать. Ҫын кӗнине сиснӗ амӑшӗ вӑрт ҫаврӑнчӗ. Ҫав хушӑрах Геннадий ӑна ыталаса илчӗ те пӗркеленчӗк питӗнчен ачашшӑн чуптурӗ:

— Аннеҫӗм... таврӑнтӑм эпӗ. аннеҫӗм!

Хӗрарӑм ҫамрӑка тӗртсе ячӗ те хӑранипе аяккалла кайса тӑчӗ, ӑна ура тупанӗнчен пуҫласа пуҫ тӳпине ҫитиччен тенӗ пек шӑтарасла пӑхрӗ, тур кӗтессинелле ҫаврӑнса сӑхсӑхса илчӗ:

— Эй, турӑ, кам ачи пултӑн ҫак эс, мана анне текенскер?

— Эпӗ-ҫке ку, Гена.

— Сассунтан эсех пек. Эй турӑ, ӑҫтан паллан. Имшеркке лутакаскерне ӑсатса ятӑм та салтака, упа пек каччӑ татӑлса анчӗ пӗлӗтрен ман ума. Чӑнах Кинати-ши вара эс?— кушӑрханӑ хытанка аллисемпе хыпашласа пӑхрӗ кил хуҫи кӗтмен хӑнана.

— Эпех-çке, анне,— аллисене саркаласа кулса ячĕ ывăлĕ. — Астăватăн-и эпĕ пĕррехинче айăпа кĕнине?

— Хăçан? Ача вăл пĕрмай айăпа кĕрет те...

— Килти юлашки укçана çухатнăччĕ.

— Э-э, астурăм. Йĕпреçе сахăр илме ярсаччĕ сана.

— Эс мана кутран тивертесшĕнччĕ.

— Тыттармарăн çав, аслăк çине хăпарса тартăн.

— Эпĕ пусмине туртса хăпартрăм та, эсĕ хăпараймарăн.

— Ăсу пуррине туйнипе шăрт та иртсе кайрĕ çав вара. Эй турă...

— Астăватăн-и, тата иксĕмĕр Йĕпреç çулĕ çине сехечĕ-сехечĕпе пăхса тăнине?

— Астумасăр, ывлăм, аçуна кĕтсе илеймерĕмĕр пурпĕрех, — тутăр вĕçĕпе куççульне шăлса илчĕ амăшĕ. — Сана кĕтсе илтĕм ак тинех, Кинати. Тин палласа илтĕм. Хуйхă-суйхăпа пуç та пăтранса каять ман.

Амăшĕн ытамĕнче Геннадий хăй те чăтаймарĕ. ăшра макăрчĕ.

— Лар сĕтел хушшине, ывлăм, лар Кинати, эп çиччас.

Çĕнĕ вăй пырса кĕнипе амăшĕ çамрăк çын пек кускалама пуçларĕ, сĕтел çине мĕн пуррине лартать те лартать. Ывăлне ним те тутарасшăн мар. Нÿхрепе те хăех кĕчĕ.

— Кăçал хăяр нумай пулчĕ. Ак куна, тăварланине те тутанăпăр. Сăра та пур-ха ман, сана кĕтнĕ пекех пичкине пуçламарăм.

Витрери кăпăклă сăрана ĕçнĕ май Геннадий ача чухне амăшĕ çăра ăсла ĕçтернине аса илчĕ. Хырăм тăранатчĕ унпа.

— Тавах анне. Тăван кил сĕчĕ пекех пулса кайрĕ сан сăру.

— Ĕç, ĕç, Кинати, ăш каниччен ĕç, урпа салатĕнчен тунăскер. Эй турă, телей патăнах мана, ывăла çаварса çитертĕн. Ĕç те, Кинати, шăрттанне çи. Çиччас шаркку пиçет. Эс юратаканни. Çунăк питлĕ çăкăр чĕлли юрататтăнччĕ. Ăна халь ан çи. Сана нимле упа та тытмасть пуль. Эс халь ху упа-утаман. Вăт савăнăç...

Кĕç ачалăх тусĕ Саня каçрĕ, вăл та кÿршине араҥ палларĕ. Асанлÿ пуçланчĕ вара. Сăра сакки сарлака, ял çамрăкĕсем пухăнсах пычĕç. Шурăмпуçченех шав тăчĕ Хĕвелюн инкен чĕрĕлнĕ килĕнче.

Эрне вĕçнелле тинĕс паттăрне юлташĕсем район уявне чĕнчĕç. Массовка теççĕ йĕпреçсем çурхи ĕçпе юрă уявне. Сарлака кайиччен кĕпе-тум юрамарĕ, çĕнĕрен туянма укçа çук: Çавăнпа та Геннадий тельняшкăпа сарлака пĕçлĕ хура шăла-

варне тăхăнчĕ, çăра кăтрарах çӳçĕ çине кăсыруксăр, хитре хăюллă карттусне лартса ячĕ.

Канашалла каякан çул хĕрринче, пасар картишĕнче, массовка кĕрлет. Карусель çумĕнчи параппан сасси аякранах илтĕнет. Пурте капăр тумланнă. Çамрăк моряк çине хĕрсем вăрттăн та, куçкĕретĕн те ăмсанса пăхаççĕ. Йĕпреç хĕрĕсемпе карусель сăпкинче пĕр-икĕ хутчен ярăннă хыççăн тусĕсем ăна аяккалла туртрĕç. Магазинсем патшалăх таварне сутаççĕ, ял ăстисем хăйсен таварĕсене илсе тухнă. Сутуçăсенчен инчех мар арçын ушкăнĕ шавлать. Пысăк ушкăн варринче пĕр пăхаттир пăркаланса сиккелесе çӳрет.

— Кĕрешме кăмăллакан пур-и урăх?— илтĕнчĕ судья сасси.— Çук пулсан, кăçал та Буинскри Абдулов çĕнсе илет район призне. Астăвăр, кăçалхипе пиллĕкмĕш çул подряд...

Юлташĕсем Геннадие çав чемпиона кĕрешме ӳкĕтлеççĕ, çĕнтермелле çав тутара, теççĕ. Геннадий, кăшт турткаланса тăнă хыççăн, хăйĕн ниçта хума пĕлмен вăйне туйнипе, кĕрешме килĕшрĕ.

Акă, паттăрсем çавракăш тавра каллĕ-маллĕ уткалама пуçларĕç, кашни мелле самант шырать. Пĕр-пĕринпе çыхланчĕç кăна, Геннадий мĕнпур вăйне пухса тутар ентешне хăй патне çиçĕмле хăвăртлăхпа туртса илчĕ те, лешĕ тан тăрса ĕлкĕреймерĕ, çав самантпа усă курса ăна çерем çине çавăрса çапрĕ, хул калакĕсене çĕр çумне пусарса хучĕ. Юлташĕсем чупса пырса Геннадие ыталарĕç, çĕнтернĕ ятпа саламларĕç, пĕр купана пухăнса йăваланчĕç. Намăс тӳснĕ паттăр эхлетсе ура çине çĕкленчĕ, ниçта кайса кĕрейменнипе Геннадий патнелле ыткăнма пуçларĕ, анчах хăйне вăхăтра тытса чарчĕ те пуçне усрĕ.

— Урăх кĕрешес текенсем пур-и? Унашкалли тупăнмарĕ.

— Çĕнтерӳçĕне — така. Саламлатпăр ăна. Пирĕн Йĕпреçре те хамăрăн çĕнĕ паттăр — Тарзан тупăнчĕ, — терĕ судья.

Самăр мăн такана хулпуççи çине хурса мăнаçлăн таврăнчĕ яла Геннадий. Тусĕсем те питĕ савăннă. Çĕнсе илнĕ такана пусса тирпейлерĕç те, кӳршĕсен така хуранне урама йăтса тухрĕç, унтах кăвайтă чĕртсе шӳрпе пĕçерчĕç. Ĕçмелли-çимелли илсе килсе тултарчĕç. Ял ĕçки тапранчĕ. Çĕрлеччен ташларĕç, юрларĕç. Ваттисем салансан уява каччăсемпе хĕрсем пăшăл пăтти пĕçерсе малалла тăсрĕç. Геннадий хул хушшине те Аннушка ятлă хĕр лекрĕ. Аннушкăран çурхи çаран чечекĕнчен кĕрекен ӳсĕртекен шăршă пек шăршă çапать, пичĕ-куçĕ хĕвеллĕн çиçет, лапсăркка йăмрасен хӳттипе вĕсем, аллааллăн тытăнса, ял тăрăх утса çаврăнчĕç. Тинĕс шывĕн тăва-

рёпе хытнă каччă тутине усламçу пек ирёлсе тăракан хёр тути хăй çумне çыпăçтарсах лартрĕ. Кăвар пек çунтаракан кăкăрĕ пĕтĕм кĕлеткене вĕрилентерсе хытарчĕ. Тĕнче савăкĕнчен, çутçанталăк сĕткенĕнчен самант та уйрăлас килмест юрату хăвачĕсĕр антăхса çитнĕ йĕкĕтĕн. Тута хĕррисем пĕçерекен пуличченех сăмахсăр юратрĕç вĕсем пĕр-пĕрне, шурăмпуç çути ачашлама пуçласан тин тăна кĕчĕç.

Хĕр хапха алăкĕнчен кĕрсе кайсан Геннадий ĕшенчĕклĕн килнелле уттарчĕ. Амăшĕ хапха алăкне питĕрнĕ пулнă та анкартипе çаврăнчĕ. Амăшĕ шыв ăсма тухать. Витрине унран илсе ăна шыв тултарнă витрене каялла тыттарчĕ те ывăлĕ ун çине ăшшăн пăхрĕ.

— Сана кĕтсе куç хупмарăм, калаçас килет ман санпа, эс пур... Атя, кĕр, апат çийĕпĕр.

Сĕтел ушшинче калаçу ĕç патне те çитрĕ.

— Председатель ĕç тупса паратъ-ши мана?— терĕ Геннадий.

— Шанма йывăртарах. пур-ши мĕн те пулин эс тумалли ĕç...— иккĕленсе хаш сывларĕ амăшĕ.

Правленире колхоз хуçи Геннадие яла таврăннăшăн, амăшне хĕрхеннĕшĕн ырларĕ, ĕнерхи çĕнтерӳшĕн мухтарĕ, анчах та ĕç пирки нимех те шантармарĕ, пĕр пушă вырăн та çук. Йĕпреçе, вăрманпромхоза кайса пăх-ха, терĕ, район центрне пĕрлех лартса кайрĕ.

Акă Геннадий вăрманпромхозăн чукун çул çумĕнчи эстакади патĕнче уткаласа çӳрет. Хулпуççи çине пĕчĕк минтерсем çыхса хунă тăлпан арçынсем вакуна метр тăршшĕ юман пуленкисем тиеççĕ. Ăна хирĕç вăтам пӳллĕ çамрăк хĕр вĕлтĕртетсе килет. Хĕр куçĕсем ăшăтса вăратнипе йĕкĕт боцман умĕнчи пек тӳрленсе тăчĕ.

— А, Тарзан... ихик.

— Ăçтан пĕлетĕр эсир мана?— тĕлĕнчĕ Геннадий.

— Район чемпионне кам пĕлмест пуль. Йĕпреç хĕрĕсем ĕнертенпе ыйхă çухатнине те пĕлместĕр пуль?.. Шӳрпе çиме чĕнмерĕр...

— Асăрханă пулсанах сире... Палланă пулсанах... Аплаха. Паллашар, Гена.

— Люба.

— Эсир кунтисемех-и? Ăçта ĕçлетĕр?

— Йĕпреçренех. Вăрманпромхозра ĕçлетĕп.

— Темле начальница пуль-ха?

— Çу-ук, пуçлăха çеç пулăшатăп. Директорăн секретарĕ. Эсир кунта мĕн сăлтавпа çӳретĕр?

— Ĕç пирки-çке. Ялта вырăн тупса памарĕç. Сирĕн патра пур-ши?

— Пирĕн Василий Федорович пит ырă çын. Сирĕн пек упа валли вăрманта вырăн тупатех. Чупрăмăр, эп васкатăп.

Вăрманпромхоз кантурне çитсен Люба йĕкĕте йышăну пӳлĕмĕнче хăварчĕ те хăй директор патне кĕрсе кайрĕ. Унтан вăл часах тухрĕ, шалтан «Кĕрĕр!» тенĕ сасă илтĕнчĕ. Директор чăнах та кăмăллă пуçлăх иккен, васкамасăр калаçать, çамрăк çыннăн пурнăçĕпе ĕмĕт-туйăмĕ çинчен майĕпен ыйтса пĕлет.

— Ĕç тупатпăр, сан пек «тарзансем» пире питĕ кирлĕ. Общежитире уйрăм пӳлĕм те тупăнĕ,— терĕ Василий Федорович ăна сарлака хулпуççинчен арçынла лăпкаса.

Çутă та анлă пӳлĕмрен хĕвел пек çиççе тухнă каччă куçĕсемпе тĕл пулнă хĕр куçĕсем йăлкăшса çиççе илчĕç.

— Тавтапуç сире, Люба. Турри хăех тĕл пултарчĕ пуль мана сирĕнпе паян.

Хĕр пуçне пĕксе машинка умĕнче хумханса ларчĕ. Геннадий хăйне кинона чĕннине те тăнласах итлемерĕ, шухăшĕпе йĕкĕт çумĕнче ăшталанчĕ. «Кĕтнĕ тĕлпулу... Чăнах çитрĕ-ши вăл? Вокзалта, пиччене ăсатнă чухне, пуçласа куртăм та сана... Вакун картлашкинчен çăмăллăн сиксе антăн та. шенкер куçлăскер, хура-хăмăр куçхаршиллĕскер, хальхи пекех кăлтăртатса кăмăллăн кулса илтĕн те, ман енне ытарлă ăшă туйăм хумĕ çаптарса вокзал урамĕпе вăрăм утăмсем туса вашлаттартăн. Аллуна пĕчĕк чăматан тытнăччĕ, чалăш лартнă безкозырка айĕнчен йăм хура çăра çӳçӳ сывлăша вăркăштаратчĕ. Ытти çынсенчен çӳлĕрехскерне сана курăнми пуличченех пăхса тăтăм... Енер ярмăрккăра — «массовкăра» тутар йĕкĕтне çĕнтерсен... ман çине те пăхса йăлл култăн-çке эсĕ. Паянхи ир эстакада çинче кулнă пекех. Виççĕмĕш тĕлпулу... Тура каларăшле, виççĕ теççĕ те... Юрату-ши ку? Тантăшсем туртса илмĕç-ши?»

— Кинона-и?— аптăраса ӳкрĕ Люба.— Юрĕ, эппин, рăдăка умĕнче тĕл пулăпăр.

Каç пуличченех поселок тăрăх ĕçсĕр аптăраса çӳрерĕ Геннадий, пуçра икĕ шухăш тавлашрĕ: «Çурхи çаран шăршипе ӳсĕртсе янă Аннушка... Усламçу пек ирĕлсе тăракан Аннушка тути... Кăвар пек çунтаракан Аннушка кăкăрĕ. Тельняшкăна çунтарса чĕрене шăтаракан Люба куçĕ... Вăтанса пуçне пĕкнĕ Люба... Ĕçе вырнаçма пулăшнă Люба... Лапсăркка йăмрасем айĕнчи анлă сак çинче кĕтекен тутлă Аннушка патне-ши

е ҫӳллӗ тирексем ҫумӗнчи культура ҫуртӗнче кӗтекен хӗвеллӗ Люба патне-ши ҫитмелле кӗҫӗр?»

Вӑрман тӑррине ачашлакан хӗвел, «Тарзанран» кулса илнӗ пекех, шевлине сапрӗ те, куҫран ҫухалчӗ.

Барак вӑрманпромхозран аякрах мар. Ҫурт пӗренисем хӗвел айӗнче, ҫил ҫинче, юрпа-ҫумӑрпа хӑйӗн малтанхи илемне улӑштарма ӗлкӗрнӗ. Шала кӗрсен ура айӗнче хулӑн хӑмасем чӗриклетсе илчӗҫ. Геннадий «1» тесе ҫырса ҫапнӑ алӑк умӗнче чарӑнчӗ. Гайка ключне ҫавӑркаларӗ те ҫирӗп аллинче, алӑка ҫӑмӑллӑн уҫса шала кӗчӗ. Сӑмсана тӳрех нӳрлӗх шӑрши пырса ҫапрӗ, уҫӑлӑх шӑмшака сӑрӑлтаттарчӗ. Тусан ӑшне путнӑ пӳлӗмре лӳчӗркенӗ, ҫурнӑ хаҫат татӑккисем, кӑмака умӗнче темиҫе вут пӳлени сапӑнса выртаҫҫӗ. Ҫакӑнта пурӑнмалла пулать ӗнтӗ манӑн тесе вӑл пӳлӗмваррине саркаланса тӑрса шухӑша путрӗ. Ҫапах та, савӑнчӗ. Юмахри пекех пулса тухрӗ-ҫке, кӗтмен-туман ҫӗртен ӑна тӳрех хваттер, вӑхӑтлӑха пулин те, пачӗҫ. Чун-чӗре ҫӗкленчӗ, вӑй хушӑнчӗ. Каччӑ вара ялалла вӗҫтерчӗ, ҫӗр ҫине ҫирӗппӗн пусса, аллисемпе сывлӑша ҫурса, тикӗссӗн сывласа, васкавлӑн утрӗ. Часрах киле ҫитсе унӑн амӑшне савӑнтарас килчӗ. Кӑлӑхах пулчӗ — амӑшӗ таҫта кайнӑ. Ҫӗнӗ ҫӗрте пурӑнма малтанлӑха мӗн-мӗн кирлине хӑпӑл-хапӑл пухнӑ хыҫҫӑн вӑл, вӑрӑм кӗрӗкне хулпуҫҫи ҫине уртрӗ те, амӑшӗ валли хут ҫырса хӑварчӗ, ӑҫта шыраса тупмаллине пӗлтерчӗ.

Йӗпресри хваттере ҫитсен Геннадий чи малтан йӗрке тума пуҫларӗ, флотри пек швабра турӗ, стенасене шӑлса тухрӗ, урай сӗрчӗ, кӑмӑлне тултарсан тин сехечӗ ҫине пӑхрӗ: ахух, тӑххӑр та ҫитет! Тӗттӗмлене пуҫларӗ, вара вӑл, ҫӑвӑнкаласа, хӑйне йӗркене кӗртсе, районти культура ҫуртне тухса чупрӗ. Керменте вӑл аякранах хӑйӗн Любашине асӑрхарӗ, ҫынсене тӗрткеле-тӗрткеле ун патне хӑшӑлтатрӗ.

— Ма кая юлса килтӗн-ха тата?— савӑнӑҫӗпе кӳренӗвне пытарайманӑ хӗр.

Ӑнлантарма пуҫланӑ Геннадий ҫӑварне хупрӗ.

— Пӗр билет та юлман, кино курасси пулмасть.

— Кунашкал пулса тухасса кӗтмен-ҫке эпӗ, Люба, каҫар мана, тепрехинче билечӗсене малтанах илсе хурӑп,— айӑпне йышӑнчӗ каччӑ.

— Пуҫна ан чик, Тарзан,— хӗр пӗчӗк сумккӑран билетсене туртса кӑларчӗ,— чун сиснӗ пекех, туянтӑм эп.

Ҫав вӑхӑтрах вӗсем патне Любӑн тантӑшӗ пырса тӑчӗ, билет ҫуккишӗн кулянса калаҫрӗ. Хӗр аяккалла пӑрӑнсан, Геннадий Любӑна сӗнӳ пачӗ:

— Парăр тантăшна билетсене, ман уçалса çӳрес килет.

— Манăн та...

Люба тантăшне хĕпĕртеттернĕ хыççăн вĕсем тулалла тухрĕç. ватă тирексем хушшипе хуллен утрĕç. Ура айĕнче — йывăç мамăкĕ, чĕрере — тĕлпулу вучĕ. Каччăн ырă кăмăлĕшĕн, тантăшне йывăрлăхра пулăшма хатĕр пулнишĕн, Люба кăмăллă юлчĕ.

Çамрăксем — лăпкă каç ытамĕнче. Хăюллăрах хĕр каччăн пиншак çаннинчен тытма хăйрĕ, ăна хулĕнчен çаклатаймарĕ, мĕншĕн тесен Геннадий Любăран икĕ хута яхăн çӳллĕ. Ăнланнă каччă хĕре пĕчĕк аллинчен çавăрса тытрĕ, ăна тротуар çине илсе тухрĕ. Сăмах чĕнмесĕр, пĕр-пĕрин юн таппине туйса, аллисене пĕçертсе васкамасăр утаççĕ. Пĕтĕм тавралăх, тĕнче вĕсенче, вĕсен шухăшĕнче тейĕн. Чукун çул вокзалĕ патне çитнине те сисмерĕç.

— Пăх-ха, Геннадий, авă кунтан пирĕн пӳрт курăнать,— шăплăха хускатрĕ Люба.

Хĕр качча килнелле мар, урăх еннелле туртрĕ. Геннадий вĕсен капмар пӳртне, станлă хуралтисене тата илемлĕ садне ăмсануллăн сăнаса иртрĕ.

Йĕпреç поселокĕн ку кĕтессинче йĕрки-йĕркипе лартнă çамрăк хурăнсем хăйсем çумне туртаççĕ. Çулçăсем витĕр йывăççем хушшине уйăх çути сăрхăнса вĕсене ачашлать. Ирчченех каллĕ-маллĕ хутларĕç хурăнсем хушшинчи сукмакпа хĕрпе каччă. Геннадий хĕре ыталама та, чуптума та хăяймарĕха. Любăпа юнашар чухне те вăл Аннушкăн пĕçертекен тутине, тутлăн чуптунине, ăшă куçне, ырă шăршлă çӳçне, хитре явнă çивĕтне, ачаш аллисене, авкаланакан тăлпу пӳне куçран вĕçертеймерĕ. Любăна килĕ умне çитерсе хăварнă хыççăн. ирхи уçă сывлăшпа чыхăна-чыхăна вĕриленсе пычĕ. Хĕрĕн унпа юрату юрри те юрлас, юрату ташши те ташлас килнине туйрĕ-çке вăл. Вăт ухмах! Çапах та хĕрӳллĕ, хăюллă хĕрпе паллашнăшăн савăнчĕ. Канмалли кун вара Аннушкăпа тĕл пулса калаçма шутларĕ.

Халĕ акă хваттерне кĕмесĕрех Геннадий тӳрĕ сукмакпа масар çумне ӳкрĕ, вăрмантан уйăрса капăрлатнă парк витĕр тухрĕ, Хурашыв кĕперĕ урлă каçса, çав ятлă поселок хыçĕнчи гараж патне çитрĕ. Вăрман турттаракансем ирех вăраннă. Вăрăм прицепсем кăкарнă мазсем уласа-кĕрлесе вăрман çулĕпе кайса çухалаççĕ. Тем вăхăтран кунта темиçе çĕмрĕк автомашина тата юсавçăсем кăна тăрса юлчĕç. Гаражран тухнă вăтам пӳллĕ арçын вĕсенчен кашнине хушу парса тухрĕ. Ку

çын гараж хуçи пулнине ăнланнă Геннадий тӳрех ун патне пычĕ.

— Мана сирĕн пата ĕçе ячĕç.

— Хут-мĕн, ĕçлеме ирĕк пани пур-и?— тăлпан качча ыйтуллăн сăнарĕ спецовка тăхăннă арçын.

— Унашкалли çук та...

— Хăть мĕн те пулин пур-и? Мĕн лĕпĕртетсе тăран?

Пăлханса ӳкнĕ Генадий шăлавар кĕсйисене чиксе пăхрĕ, кăкăр çумне хыпашларĕ аллисене, хулпуççийĕсене сиктеркелесе илчĕ, тутине чăмăртаса пуçне çеç пăрчĕ.

— Юрĕ, мана хут тавраш̆е мар, техникăна ăнкартакан кирлĕ,— кĕлеткине тӳрлетсе çирĕппĕн каларĕ асли.

Урисене куçаркаласа хутланса илчĕ те Геннадий, хăйне алла илчĕ, çирĕппĕнех хуравларĕ:

— Салтака кайиччен колхозра тракторпа ĕçленĕ, флотра дизелист пулнă. Тата мĕн кирлĕ?

— Тахçанах пĕлтермеллеччĕ ун пирки. Мана технарьсем кирлĕ, хут хурчĕсем мар...— мăкăртатса аллине ласт! сулчĕ хуçа, атя, ут хам хыççăн, кăтартап техникуна — тимĕр купине.

Çӳллĕ карта çумĕнче икĕ трактор икĕ еннелле пуçĕсене усса хуçисене кĕтеççĕ, машина мар — скелет.

Ĕнсине хыçса тăракан çамрăка аслăраххи лăплантарчĕ:

— Пур кĕтессе те çитейместĕн, шаймăксем алхасаççĕ, çаратаççĕ. Шел, пурне те сыхласа хăварма май çук. Эх, кирлех çав уй-вăрман ĕçĕнче, питĕ кирлĕ çак тракторсем — «семьдесят пятка» текеннисем. Нумай килет вĕсенчен пирĕн малашлăх. Хăранипе шăрсах ан яр. Çуса типĕтекенни çукрах пуль-ха. Ĕçлеме пуçлар. Районти сельхозтехниксем патне кайса двигатель илсе килетĕп, ытти хатĕр-хĕтĕрне тупăпăр, хамăн склад та чухăнах мар-ха. Çиччас сана комбинезон паратăп.

Гараж хуçи кайсан Геннадий ĕçе пикенчĕ, хăйне складран парса хăварнă пайсене, узелсене улăштарчĕ. Пуш параппан çапакан пулмарĕ иккен гараж хуçи, тепĕр куннех Йĕпреçрен çĕнетнĕ двигатель турттарса килчĕ. Ăна вĕсем эртелпе хăй вырăнне лартрĕç. Фарисене вырнаçтарнă май «улăп» куçланчĕ, чĕрĕлчĕ. Утса кайиччен татах та сипленмелле-ха. Унăн пулас хуçи тимĕрçĕ лаççине кĕчĕ, улăп чĕрине кабинăран ĕçлеттермелли хатĕре çĕнетсе майлаштармаллаччĕ. Тĕтĕмпе газпа сывлама йывăр. Ăна-кăна пăхмасăр арçын ушкăнĕ пирус тĕтĕмĕ мăкăрлантарать, юмах çапать. Хăйăлтарах сасли, Нашиванкин текенни, пуринчен те ирттерет.

— Çамрăкки ваттине те çĕнетсе пырать иккен,— тет вăл çăвар тулли кулса.— Аттеренех тĕлĕнетĕп эп. Сакăрвунна çывхарать, еркĕнĕ — çирĕм пиллĕкре. Анне вилнĕ хыççăн намăс мар-и сана, терĕм те... мана хирĕç тимĕр шăлĕсене çутатса çеç кăтартрĕ. Мунча хутнăччĕ. Вĕри шыв илме кайрăм та... Çунтараççĕ кăна, мунча ташлать.

Хытă ахăлтатнипе вучах та хытăрах çунма пуçларĕ. Геннадий те чăтаймарĕ:

— Çамрăкки ваттине те ура çине тăратать çав, аçу хĕвел пек йăлкăшса çӳреме пуçланине эпир те курнă,— терĕ вăл пурне те сывлăх сунса.

— А-а, эс çамрăкки-и-ха?— алă пачĕ ăна Нашиванкин.— Чĕлхӳ-çăвару килĕшет. Мĕн кирлĕччĕ?

— Ман та çав ват дăтăна çамрăклатас килет те...

Тимĕрçĕ Геннадие кирлĕ хатĕр-хĕтĕре часах хĕртсе майлаштарса пачĕ. Лаçран хĕпĕртесе тухнă тракторист тапах чарăнчĕ. Унăн «улăпĕ» каллех куçсăр тăрса юлнă. Кĕлетки хĕрсе кайрĕ унăн, тăвăлнă чунне пусарас тесе унталла чупрĕ, кунталла... Фарăсем аяккарах ларакан машина урапи хыçĕнче выртаççĕ.

— Камăн машини?!— таврана янратса ячĕ каччăн хаяр сасси.

— Петĕрĕн,— терĕ пĕр шофер вăрттăн.

— Кам унта качакалла çухăрать? Кама кирлĕ эп? Кунтах эп. — илтенчĕ хăрăлтирех сасă пит шанчăклăн.

— Мана кирлĕ,— терĕ çирĕппĕн Геннадий.

— Сан, çĕннин, шăпрах çӳресчĕ.

— А сан вăрă пулмалла мар.

— Мĕн пакăлтататăн эс. Е эп йăнăш илтрĕм-ши?

— Тĕп-тĕрĕс илтрĕн. Акă манăн фарăсем сан машину хыçĕнче выртаççĕ.

— Хэх, тен, эс вĕсене ху юри килсе пăрахнă?

Петĕр сулахай урине малалла туса. аллисемпе пилĕкне тытса мăнкăмăллăн тăрать, хушăран шăхăркаласа илет, сайра шăлĕсене кăтартса кулать.

Чупса çитнĕ гараж хуçи çухăрса ячĕ:

— Мĕн пулчĕ, йĕкĕтсем?

Ним пулман пекех Геннадий фарăсене илсе уттарчĕ. Петĕр ăна усал куçпа ăсатрĕ. Хаяр калаçăва итлесе тăракансем, тĕлĕнерех калаçса, саланчĕç. Гараж хуçи ятлаçни вăрахчен янăрарĕ.

Еç вĕçленнĕ хыççăн Геннадий улăх тăрăх киленсе пырать. Çулнă утта пĕчĕк купасене хывнă. Мăн çул çине тухса пĕве

пуçĕпе каçать. Кĕпер çине кĕрсенех ăна хирĕç иккĕн сиксĕ тухрĕç. Аллисене кĕсьене чиксе саркаланса утаканнине вăл тӳрех палларĕ: трактор фарисене кăларса илекен Петĕр.

— Аçта пит васкаса хăшăлтататăн-ха, шăхлич? Пирĕнпе пуплесшĕн те мар-и? — тесе вăл Геннадие алăран тытса чарчĕ.

— Тасал ман çумран, симĕс шăна! Санпа калаçса çăвар тутине те пĕтерместĕп! — Петĕрĕн сивĕ аллине сирсе ячĕ Геннадий.

Лешĕ кĕсйинчен вăрăм çĕçĕ туртса кăларчĕ. Куçĕ йăлкăшса илчĕ. Çĕççипе вăл аллинче хăюллăн вылярĕ.

— Çиччас урăхла калаçма пуçлатăн ак, сысна пек çухăртатпăр.

Хăрама та шутламарĕ Геннадий, сулахай питне чалăштарса кулчĕ те малалла лăпкăн уттарчĕ. Çав самантрах Петĕр çĕççипе сулса ячĕ. Сисĕмлĕ Геннадий, хăрушлăха асăрхаса, çиçĕмле хăвăртлăхпа аяккалла сиксе ӳкрĕ. Çĕçĕ çапах та хулпуççине кăштах лекрĕ.

— Ах, çĕлен! Путсĕр кăна хыçалтан тапăнать! — тесе урса кайнă Геннадий ик хураха ярса илчĕ те çамкисемпе шаклаттарчĕ, унтан кăвакал чĕпписене пенĕ пек кĕпер çинчен шыва шамплаттарчĕ.— Кăштах уçăлăр, тăна кĕрĕр.

Хваттерне таврăннă Геннадий суранне çыхрĕ те канма выртрĕ. Ниçта та тухас килмерĕ.

Культура çуртĕнче Петĕрпе тусĕ Геннадие тăн кĕртрĕмĕр тесе мухтанса çӳренĕ. Люба мухтанчăксем умне пынă та:

— Эсир Тарзана çĕнтернĕ тенине ним парсан та ĕненместĕп,— тенĕ.— Çĕрлехи лĕпĕшсем эсир.

— Çĕççи йĕррине курсан, ĕненĕн-ха,— чăрт сурнă Петĕр.

— Вăйсăр çын çеç çĕçĕпе чиксе парăнтарма хăтланать. Апла-тăк, нихçан та чăн-чăн арçын пулаймастăн эс, путсĕр. Пăхма намăс сирĕн çине.

Çамрăксем Петĕртен кулкаласа аяккалла пăрăнчĕç. Любăн чунĕ кӳтрĕ, килне тухса чупрĕ, аптечкăра мĕн пуррине пуçтарчĕ те Геннадий патне хашкаса çитрĕ.

— Сана çĕçĕпе чикнĕ тесе паврарĕç те Петĕрсем... Юрать-ха сывах,— куççульне шăлса типĕтрĕ Люба.

Хĕр Геннадий суранне, юнланнă алшăллине салтса, сиплĕн çыхса ячĕ.

— Тавтапуç. Люба,— каччă сывă аллипе хĕр çӳçне ачашшăн сĕртĕнчĕ, çинçе пилĕкĕнчен ачашларĕ.

Люба хирĕçлесе аяккалла сиксе ӳкмерĕ, каччă кĕлетки çумнерех ачашшăн сулăнчĕ.

— Ах ухмахсем, кама хирӗç çӗкленӗ таса мар аллисене. Хытӑ ыратать-и?

— Антрамасть.

— Апла авланиччен тӳрленет.

Электроплитка çинче чей вӗретсе ӗçрӗç, мӗн çинчен кӑна каласмарӗç пуль хӗрпе каччӑ, куçран-куç вӑтанмасӑрах пӑхма хӑнӑхрӗç. Килне кайма шутламарӗ те Люба. Ирпе апат хатӗрлерӗ, салӑпа çӑмартӑ ӑшаларӗ. Уйрӑм пӳлӗме хупӑннӑ çамрӑк чунсем йывӑр вӑхӑтра сывӑхланчӗç. Люба каччин хура çӳçне пукан çине тӑрса ачашларӗ, хыçалалла турарӗ.

— Эх эс, манӑн Тарзанчикӗм, асӑрханулларах пул-ха. Усал ухмахсенчен тем те кӗтме пулать, ман сана сыхлас килет.

— Маншӑн ан хӑра, чунӑмçӑм,— пилӗкӗнчен тытса урайне антарчӗ хӗрне Геннадий.— Хамӑр çӗр çинче унашкаллисенченех хӑрамалӑр-ха. Эс маншӑн пӗртте ан кулян.

Геннадий пӗшкӗннипе усӑ курса Люба ӑна тутинчен ту-утлӑн чуптурӗ.

Ёçе Геннадий йывӑр кӑмӑлпа тухса утрӗ. Гараж еннелле сывхарнӑ май путсӗр Петӗр куç умӗнчен сирӗлме пӗлмерӗ. Çӗркаçхи савӑклӑх та çӗнтерейменрӗ, уçӑлтараймарӗ унӑн шухӑш-кӑмӑлне. Хулпуççи сурать, пуç кашлать. Унашкал самантра мӗн тумаллине амӑшӗ калани аса килчӗ. Акӑ вӑл йӑрӑс хыр çумӗнче чарӑнчӗ, унӑн тӑррине пӑхса илчӗ, «Сывӑ-и, ман сиплевçӗм?» тесе йывӑçа ыталарӗ. Ура айӗнче хӑрӑк вӗт турат, йӗп, йӗкел кавирӗ, кӑкӑр çумӗнче сухӑр шӑршиллӗ сиплевçӗ. Тинех уççӑн сывласа ячӗ каччӑ. Темле кайӑк сасси хӑлхаран Люба чӗвӗлтетнӗн илтӗнчӗ. Лӑпланнӑ кӑмӑл çанçурӑма уçӑлтарчӗ. Васкамалла, ёçе çитмелле.

Юрать-ха Петӗре курмарӗ вӑл... Шофер вӑрмана тухса кайнӑ. Гаража юлнӑ юсавçӑсемпе механизаторсенчен вӑл паян чӑн-чӑн арçынла сӑмах илтрӗ. Туйрӗ Геннадий, унӑн ячӗсумӗ ушкӑнра палӑрчӗ. Улӑштармалли пайсене тимӗрçӗ лаççинче çӗнеттерчӗ, ун чухне унран Нашиванкин шӑл йӗрсе кулкаласа та пӑхрӗ, ялан çамрӑкки ваттине юсаса чун кӗртнин сӑмах-юмахӗпе хавхалантарчӗ. Гараж хуçи те ӑна кӑмӑлласа пӑрахрӗ, хӑйӗн вӑрттӑн кӗтесӗнчен никама паман тимӗр хатӗрӗсем «тупса пачӗ». Трактор ӗнтӗ шалтан та, тул енчен те çӗнӗ тум тӑхӑнчӗ.

Çапла кӗр-кӗрлесе кӗр те çитрӗ. Геннадий вӑрманта тӑрӑшсах ӗçлерӗ. Çумӑрлӑ çанталӑк поселок, вӑрман çулӗсене, этемрен мӑшкӑлланӑ пекех, хӑй майлӑ «юсарӗ». Вырӑнӑн-вы-

рăнăн хунă йывăç шпалсем тăрăх та аран-аран кусаççĕ йывăр машинăсен урапisем. Чи йывăр вăхăт. Геннадий хăйăрлă çула икĕ енĕпе те юсаса тухрĕ, кăштах та пулин унран усă пулчĕ. Вăрман çулĕ çинче лакса ларнă миçе автомашинăна туртса кăларса пулăшмарĕ-ши, анчах сĕнсе панă пĕр укçана та кĕсйине чикмерĕ. Шоферсем алă сулса çеç уйрăлаççĕ унран.

Вăрман çаралса, уçăлса пычĕ, хыр-чăрăш ушкăнĕсем кăна симĕс тумĕпе мухтанса ларчĕç. Чарăнман йĕпхӳ йăлăхтарса çитерчĕ пулин те, вăрманта чун юрлать. Çĕр çине сапса тухнă сарă çулçă кĕçех юр айне пуласса кĕтет вăрман.

Кабинăра та уçă, йĕпенсе тăракан кантăкран умра МАЗ курăнать. Вăрăм хурăнсем тиенĕ лесовоз каллĕ-маллĕ силленсе ташлать. Геннадий трактор утăмне хăвăртлатрĕ. Автомашина кабининчен Петĕрĕн тăрмаланчăк пуçĕ курăнчĕ. Геннадий тракторне çавăрса хыçалалла пачĕ. Сиксе аннă Петĕр йывăр тросĕпе машинине кăкарчĕ. Анатри склад эстакади патнех çитерсе ячĕ Геннадий тулли лесовоза. Тракторист утне поселок тăрăх гаража пустуй хăвалас та темерĕ, сĕрĕпе ĕçлекен вырăнта шанчăклах упранмалла. Мотора чарнă хыççăн, кабинăран тухсан, хăлха уçăлса кайрĕ. Хапха патнелле утнă май шăхăркаласа юрларĕ. Акă каллех ун умне иккĕн тухса тăчĕç, пĕри — Петĕр. Унăн çулне пӳлчĕç. Чышкăсем тимĕр пек хытрĕç.

— Хăвăртлăхна чакар-ха кăштах? — терĕ Петĕр.

— Тата мĕн кирлĕ сана?

— Эпир санпа мирлешесшĕн. Сан умăнта шутсăр айăплă. Кăмăлне çĕнĕрен хуçнă Геннадий чарăнма шутламарĕ те. Чупса çитнĕ Петĕр качча вăйпах тытса чарчĕ.

— Итле, тăхта? Арçынпа арçынла калаçар.

— Чăнах арçын-и вара эс?

— Арçын пулса çуралнăскер, арçынах пуль ĕнтĕ. Юрĕ, манар тахçанхине. Тавтапуç сана, тепри пулсан-и паян?

— Манăн ĕçĕ çав.

— Çапах та... Атя, килĕшер?

Шухăшласа тăчĕ-тăчĕ те Геннадий, Петĕре хăрах алăпа хăй çумне туртса илчĕ, çурăмĕнчен пĕр-иккĕ шаплаттарчĕ, унтан тин вĕсемпе пĕрле хуралçă хӳтлĕхнелле уттарчĕ. Петĕр кĕсйисенчен икĕ кĕленче, юлташĕ хĕвĕнчен лаша кăлпассийĕ кăларчĕç, тепĕр буханка хура çăкăр тупăнчĕ. Сак çине юнашар ларчĕç те виççĕшĕ, çурçĕрчченех пакăлтатса вăхăта çунтарчĕç. Анаталла ытакланса, юрласах уттарчĕç. Петĕр вĕçĕмсĕр пĕр юрă юрларĕ:

— Халь эс, Генка, ман чи ҫывăх тус...

Хваттерĕ патне ҫывхарнă чухне Геннадий чӳречере ҫутă пуррине асăрхарĕ. Унăн килĕнче такам пур. «Люба пуль-ҫке?» — вĕлтлетсе илчĕ ӳсĕр пуҫĕнче хĕмленӳллĕ шухăш.

Алăка яри уҫсанах ăна хирĕҫ Люба чупса пычĕ, сиксе мăйĕнчен ҫакăнчĕ, турткаланса часах ытамран вĕҫерĕнчĕ.

— Фу, шăршлă, ĕҫсе тултарнă...

— Любаша, каҫар ĕнтĕ мана. Петĕрсем ĕҫтерчĕҫ.

— Мĕн, мирлешрĕр-им?

— Аха.

— Ну, юрĕ апла. Вăрҫса-тулхăрса ҫӳрени те пурнăҫ мар.

Геннадий хĕре ҫĕнĕрен ыталаса чуптурĕ, унăн вĕрилĕхĕпе ҫĕкленсех кайрĕ.

— Пăчăртаса вĕлерен вĕт, Тарзанчик. Кампа пурăнас тетĕн вара?

Санпах! Санпах, чунăмҫăм! Вĕлерместĕп. Эсĕ ху мана вĕлеретĕн. Юрату вăйĕпе...

Йăлкăшакан Люба сĕтел ҫине ăшаланă ҫĕрулми лартса пачĕ, хирĕҫ пăхса тăранаймарĕ.

— Киле кайса савăт-сапа илсе килтĕм. Шăллăм, Коля, атте тунă сĕтеле йăтса килсе пачĕ.

— Пуҫĕпех куҫма шутлатăн-и-ха?

— А мĕн пулать уншăн?

— Ним те, чунăмҫăм. Эпĕ хĕпĕртетĕп ҫеҫ.

Палан пек хĕрелсе кайнă пит ҫăмартисене тутăр вĕҫĕпе шăлса илчĕ те Люба, Геннадий ҫумне пырса тăчĕ, унăн аллине тытса хуллен хырăмĕ ҫумне ҫывхартрĕ.

— Малтанхи каҫрах ҫие юлчĕ пулас манăн. Сисекен, туякан пултăм чĕрĕ чуна. Ах, атте пĕлсен кун ҫинчен... Качча тухмасăр аппаланнăшăн... вĕлерет. Хаяр вăл пирĕн.

— Пĕлетĕп ун кăмăл-туйăмне,— сасартăк сиксе тăчĕ Геннадий.— Ма хăрамалла? Савăнмалла ҫеҫ. Кĕрӳ пулать унăн. Авланатăп. Пĕрлешетпĕр те... Ачана... ачасене йĕркеллĕ пăхса ӳстеретпĕр. Юратсан, туйччен-и, туй хыҫҫăн-и?.. Пирĕншĕн халĕ пурпĕрех мар-и? Аннепе калаҫатăп та. Ҫураҫать вăл. Сан та ҫураҫмаллах.

Уҫăлса кайнă кăмăлне ниҫта хума пĕлмесĕр чуптурĕ, ачашларĕ Люба хăйĕн упине, шăрш-марш та кансĕрлемерĕ.

Ĕҫрен Геннадий тӳрех яла вашлаттарчĕ. Ĕҫ хыҫҫăн яла таврăнакан каччăсемпе хĕрсене хуса ҫитсе иртсе каять, нихăшинпе те калаҫса вăхăт ирттерес килмест унăн. Чылай



И-44854
Национальная библиотека
Чувашской Республики

малта Санькăна асăрхарĕ. Ăна чупсах хуса çитрĕ, хулпуççинчен хуллен лăпкарĕ:

— Çитет юмах çапса!

Юлташĕ ăна алă пачĕ:

— Ăçта çухалтăн эс, Тарзан?

— Вăрманпромхоза ĕçе вырнаçрăм.

— А эпир ачасемпе эс каллех флота тухса шуман-ши ку тесе шухăшласа пурăнатпăр. Пĕрремĕш статьяллă старшина кирлех пуль...

— Ай çук, çитет аякра, тĕнче укияние утасласа, ялах юлатăп, çуралнă кил, тăван çĕр туртать. Нимпе те улăштарма çук хамăр тăван çĕр-шыва.

Санька ăна çакна пĕлтерчĕ:

— Эс тăнла, Тарзан? Пусахлаççĕ пире. Кӳршĕсем ытла хаçăртма пуçларĕç сăмсисене, яла килсех хĕрсене туртса илеççĕ. Юсамалла мар-ши пĕрре вĕсене?

— Ăна тума йывăр мар-ха. Хăвăр начартарах юрататăр пуль хĕрĕсене? Юратакан каччăран хĕр урăххи çумне сыпçăнас çук.

— Юрату çинче мар кунта, Тарзан. Сĕмсĕрлĕх ку. Тавăрмаллах. Эпир кĕрешме-çапăçма шутларăмăр. Вырсарникун килетĕн-и?

Геннадий шухăшласа утрĕ, майĕпен хăйĕн вăрттăнлăхне уçса пачĕ:

— Кĕрешесси ниçта та тармĕ-ха, Санька. Манăн пурнăçри чи пысăк ыйтăва татса памалла-çке.

— Мĕнле капла ыйту вăл?

— Эх, Санька, авланатăп шăматкун. Пĕлетĕн вĕт ман Любашăна?

— Паллатăп, леш, Аннушка хыççăн паллашни.

— Çав чиперккене качча илетĕп те. Эс те пыр.

— Тавтапуç. Апла эпир шăматкун тăн кĕртетпĕр те вĕсене, хамăр камантăпа тӳрех сан туйна кĕрлесе çитетпĕр. Юрать-и?

— Килĕшетĕп. Тулькăш, ан парăнăр. Парăнсан — кĕртместĕп.

Тăван кил Геннадие выльăх-чĕрлĕх сассипе-шăршипе кĕтсе илчĕ. Пӳртре амăшĕ кăмака умĕнче. сысна валли пĕçернĕ çĕрулмие тĕвет. Ывăлне курнипе вăл ура çине тăчĕ:

— Килех, ывăлăм? Кĕтсе ывăнтăм. Юнашар усрас килет ман сана.

Ывăлĕ амăшне кăкăрĕ çумне сывхартрĕ. Амăшĕн куçĕ шывланчĕ.

— Виç çухрăм анчах вĕт, инçе мар Йĕпреç. Пырса куратăн,— лăплантарчĕ Геннадий амăшне.

— Ывăлăм, хырăму выçрĕ пуль, апат хатĕрлем-ха.

Сĕтел хушшинче Геннадий амăшне кĕтмен хыпар пĕлтерчĕ:

— Авланма шутларăм, анне.

— Хăçан?— хыпăнса ӳкрĕ амăшĕ.

— Çитес шăматкун.

— Хĕрӳ кам-ха?

— Люба. Вăрманпромхозра ĕçлет. Каланăччĕ пулас сана ун çинчен.

Çакна илтсен амăшĕ тайăлса кайрĕ. Ывăлĕ ăна ӳкме памарĕ, шыв ĕçтерчĕ.

— Аннушкуна мантăн апла, пăрахрăн,— чĕтрекен тути хĕррисене чĕлхипе çулла-çулла чĕтревлĕ сасăпа калаçрĕ амăшĕ.— Кашни кун килет, сан çинчен ыйтса пĕлесшĕн çунать. Ах сире, ухмахсене, мĕн тумалла-ши? Вĕлеретĕр мана капла...

— Эп Любăна ытларах юрататкан пултăм. Вăл та мана кытă юратать. Ача пулать пирĕн унпа. Эп саншăн çеç çуралнă, тет.

— Тет, тет,— сăхсăхса илчĕ амăшĕ.— Часрах арçын айне кĕрсе выртаççĕ те... хырăмне мăкăртса кăлараççĕ... Хуть те ăçта кайса кĕр вара арçыннăн. Сан та çаплах пулса тухрĕ пуль ĕнтĕ. Мĕн тумалла халь?

Апат çиме мансах Геннадий амăшĕн шывлă куçĕнчен пăхрĕ, ăна ачашларĕ:

— Пулчĕ çав пирĕн те, хĕртен хĕрарăм пулса тăчĕ те сисмесĕрех. халь ĕнтĕ... туй кĕрлеттермелле. Хатĕрлен. Эпĕ кĕçĕрех каятăп. Люба кĕтет.

— Çапла ĕнтĕ вăл, хĕр-хĕрарăм тупсан ывăла ăна амăшĕ кирлĕ мар,— йĕрсех ячĕ амăшĕ.

Ывăлĕ амăшне лăплантарса калаçрĕ, хăй çав хушăрах япалисене хатĕрлерĕ, амăшĕ те пулăшрĕ, сăмах май пулас хăтисем çинчен ыйтса пĕлчĕ, маларах çитсе пулăшма пулчĕ.

Яла килнĕ чухне пуçра малтанхи юрату саманчĕсем явăнма пуçланăччĕ. Вăл таврăннине Аннушка курнах-пĕлнех пуль. Мĕн тумалла? Анкартипе тухса тараймастăн. Урампа вĕсен умĕнченех иртсе каймалла. Урăх çул çук. Аннушкăсен тĕлне çитсен чĕркуççи лĕнчĕрех кайрĕ. Хапха алăкки чĕриклетсе уçăлчĕ те, ума пиçнĕ хулă пек кĕлетке тухса тăчĕ: капăр тумпа.

— Сана курасса чун сисрĕ паян, Геннадий,— васкаса çывхарчĕ Аннушка.— Тĕлĕкре иксĕмĕр Хурашыв пĕвинче мăн

караппа ишрĕмĕр. Карапĕ тункатаран çакланчĕ те... путрĕ Эпĕ ишсе тухрăм. Сана ниçта та кураймарăм. Акă халĕ...

— Акă халĕ куртăн. Эпĕ — сан умăнтах.

Туйăмĕсем вĕсен куçĕсене хĕлхем хушрĕç. Аннушка чуп тума пĕлет çав, çумри арçынна астарсах ячĕ. Пулас арăмĕ çинчен те вăхăтлăха манчĕ Геннадий, вăйлă аллисемпе хулла аврĕ те аврĕ.

— Кунта çын курма пултарать, атя килкартне кĕрер,— туртрĕ ăна Аннушка.— Юрату ытамĕнчен ирччен те вĕçертместĕп сана, ах...

Канлĕх туйăмĕ Геннадие ухмахах кăларать пуль. Хĕрӳ мунчаран çурçĕр çитерехпе тин тарласа тухрĕ вăл.

Каçалапа Люба шухăша кайса тăчĕ: киле каймалла-и Тарзанчик патне. Ун патне ялтан часрах чупса килме те пултарнă. Юратнă çыннине курас килнипе хавхаланса, кăмăллăн чупнă пек васкарĕ. Анчах та ăна пуш пӳлĕм кĕтсе илчĕ, сивĕ сывлăш пырса çапрĕ. Ашшĕсем патне кайса ăшăнатăп та, апатланатăп та, кăшт каярах тавранатăп тесе те шухăшларĕ. Тарзанчик килĕ те, сивĕ пӳлĕмре мана шырĕ, терĕ. Каллĕмаллĕ хутлас темерĕ, вара кăмака хутса ячĕ, тем тĕрлĕ апат хатĕрлесе лартрĕ, тутлăрах çитерес килет-çке юратнă пулас упăшкана. Ывăннине туйса пукан çине ларчĕ те, кăмакана ыталаса шухăша путрĕ, тĕлĕрсех кайнă. Хырăма вĕри çапнипе вăранса кайрĕ. Кăмакара кăвар сӳнме пуçланă. Турчкапа пăтратнă хыççăн юшкине тайрĕ. Пӳлĕм ăшăнма пуçланă. Çурçĕр тĕлнелле яланхилле çутă виçĕ хутчен пăч сӳнчĕ. Электричество пама пăрахас умĕн пулать вăл. Краççын лампи хатĕрлесе лампочка çумне çакрĕ, фитильне чĕртрĕ. Акă çутă сӳнчĕ. Тĕксĕм çутăра Люба чĕтресе ларчĕ, хушăран чӳречерен пыра-пыра пăхрĕ: никам та çук. Кунашкал тăр пĕччен вăл килĕнче нихçан та юлса курман. Хăрама пуçларĕ. Тĕлĕрме пуçланăччĕ кăна... алăка хуллен шаккани илтĕнчĕ. Люба хăраса сиксе тăчĕ те унталла тăпăртатрĕ. Тата шаккарĕç.

— Кам унта?

— Эпĕ-ха ку, Геннадий. Уç?

— Ах эс манăн Тарзанчикĕм. Хăрамарăн-и çĕрле çӳреме? Люба ăна хыпăнсах уçса кĕртрĕ, ыталаса чуптурĕ. Геннадий япалисене çĕре хучĕ.

— Эп кулянса ларатăп, кĕтсе ывăнтăм...

— Аннене час ӳкĕте кĕртеймерĕм те,— суйрĕ Геннадий.— Ват çынна ăнлантарасси...

Хăйĕн çав самантра ăшĕ вăркарĕ, Любăн куçĕнчен пăхма та вăтанчĕ. Хăть чĕрене çурса ик еннелле пер. Ана-кăна ăн-

ланман Люба ун тавра кускалать, ачашлать, чуптăвать, хывăнма пулăшать, сĕтел çине апат-çимĕç лартать, чĕвĕлтетет:

— Ваттисем ман килĕшеççĕ. Ӳссе çитĕннĕ, хăвăнне ху пĕл, терĕç. Сана вĕсем курнă, палласçĕ. Начар мар упа тупнă, аçунтан та ирттерет, тесе ыталарĕ анне. Çавăншăн, вĕсен ячĕпе, сана тепре чуптăвам-ха.

Палăртма шутламарĕ Геннадий, Любăна хавхалантарса пыма тăрăшрĕ, пĕр сăмахпа çеç сехĕрлентерсе ӳкерчĕ.

— Шăматкун туй пулмасть пуль, Люба,— терĕ хĕрарăм куçĕнчен пăхса Геннадий.

— Мĕн те-те-тĕн?— шуралса кайрĕ Люба.

— Лайăхрах ăнлантарам-ха апла. Итле, шăматкун çырăнăпăр, вырсарникун вара туйне пирĕн ялта тăвăпăр, пурне те унта чĕнĕпĕр.

— Хăратсах пăрахрăн малтан мана, чĕре те тапма чарăнчĕ пулас,— тин сывлăш çавăрса ячĕ Люба.

Çамрăк хĕрарăм вырăн çинче ачашланасшăн çунать. Çамрăк яшăн чунĕ ик вучахра çунать. Аннушка хĕрĕвĕ те иртсе каяйман-ха кĕлеткере. Любаша çине-çине чуптăвать, ыталать, вылять. Юрать вăй пур та... Аннушкăна куç умĕнчен хăваласа ярсах Любашăна хĕстерет, ахлаттарать Геннадий.

Туя хатĕрленсе вăхăт иртнине те сисмерĕç, шăматкун персе те çитрĕ. Туйла тумланса Любăн тантăшĕ Таня çиçсе çитрĕ. Иккĕшĕ вĕсем тем вăрттăн пăшăлтатрĕç. Геннадий тусне кĕтрĕ. Санька часах çитеймерĕ. Загăса кайса çырăнса килчĕç. Хваттер алăкĕ умĕнче вĕсене Люба шăлнĕ кĕтет.

— Эпир ыран тăватпăр терĕмĕр-çке туйне?— терĕ Геннадий.

— Аннесем сире халех илсе пыма хушрĕç, — çине тăрсах чĕнет Коля.— Сĕтел çинче пурте хатĕр.

Килĕшмеллех пулчĕ, çамрăксем чукун çул хĕррипе Любăсем патнелле утрĕç. Ашшĕ-амăшĕ çамрăк мăшăра турăшпа, çăкăр-тăварпа. сăра-эрехпе хапха умĕнче кĕтсе илчĕç. Çĕрĕпех янрарĕç. Ир енне çамрăксем сарай маччине, чăлана пытанчĕç. Любăпа Геннадий мунчана юрату мунчи кĕме васкарĕç.

Санька малтанах куçран çухалнине асăрханăччĕ-ха Геннадий. Тусĕ мĕн сăлтавпа тарнине вăл тин курчĕ. Акă, кăвак çутлах урама лаша тулхăрни, шăнкăрав сасси, купăспа параппан янравĕ вăратрĕ. Ял ачи пӳрте йăтăнса кĕчĕ. Пурте хаваслă. Пурне те вăратса ура çине тăратрĕç, çылăха кĕнисене мунчаран туртса кăларчĕç. Люба амăшĕ, ташла-ташла, кашнине сăра-эрех сĕнет. Виçĕ купăс, параппан пӳрт ăшчик-

кине çураççĕ. Чăваш туйĕн çемĕ, юрри, ташă сикки туя вăйлатса çӳле çĕклет. Пурте хавас. Такмак калакан çамрăксем пурне те тулалла туртса тухрĕç. Урамра виçĕ тăрантас, икĕ урапа. Лашисене, кӳлмелли хатĕр-хĕтĕрне чăваш эрешĕпе, тĕрленĕ алшăллисемпе капăрлатнă. Çамрăк мăшăра виçĕ лаша кӳлнĕ тăрантас çине лартрĕç. Ларкăчĕ çине Санька сиксе ларчĕ те, тройка малалла тапса сикрĕ. Туй йĕпреçрен кĕрлесе тухса кайрĕ. Акă ăçта тата мĕншĕн тухса тарнă-мĕн унăн тусĕ Санька. Куншăн Геннадий ăшĕнче хĕпĕртесе пычĕ.

Поселокран мĕнле хăвăртлăхпа тухнă, çавăн пекех кĕрлеттерсе çитрĕç вĕсем яла та. Çынсем урама сиксе тухнă, чӳречерен сăнаççĕ. Амăшĕ, тăванĕсем хапха умĕнче кин кĕтсе тăраççĕ.

Каччăсем вăрттăн шухăш тытнине Геннадий малтанах пĕлчĕ. Енер вĕсен тытăçу пулман, апла-тăк, паян хатĕрленеççĕ. Лашасене тăваратпăр та, каяллах килетпĕр, терĕç, пĕрле ăна та чĕнчĕç. Пӳрте кĕрсе тухнă хыççăн Геннадий çамрăксемпе пĕрлех лаша витине вĕçтерчĕ. Амăшне те, арăмне те итлемерĕ. Витерен вĕсем ял хыçн чупрĕç. Кӳршĕ ял ачисем паçăртанпах кĕтеççĕ иккен вĕсене. Ушкăнăн-ушкăнăн тăраканскерсем, çурма унка пуçтарăнчĕç. Хушши пĕр вунă утас пек. Санька мала тухрĕ, лешсен те пĕр каччă тухрĕ. Иккĕшĕ тем калаçрĕç те хăйсен вырăнĕсене кайса тăчĕç.

— Мирлешесшĕн мар, эпир сиртен икĕ хут йышлăрах, пурпĕр сире аяла пĕтĕрсе чикетпĕр, теççĕ,— ăнлантарчĕ Санька.

Пурте Тарзан çине пăхаççĕ.

— Пуçа ан чикĕр, ачсем!— хавхалантарчĕ каччăсене Геннадий.— Хамăр ята ярар мар. Кăтартар камне. Тек сăмсисене ан чикчĕр пирĕн ял урамне! Çапла-и?

— Çапла!— харăс хуравларĕç пурте.

Геннадие хирĕç леш ушкăнран тăлпан каччă, юман каска пекскер, йăраланса тухрĕ. Пуçĕсене пĕксе пĕр-пĕрне саламларĕç. Сиссе те юлаймарĕ Геннадий, леш пăхаттирĕ сулса яма ĕлкĕрчĕ. Геннадий пăрăнчĕ, анчах иккĕмĕш хутĕнче ăна хырăмран сисĕнмеллех лекрĕ. Хĕрсе, тарăхса кайнăскер вăл пĕрре çапсах лешне çĕре йăвантарчĕ. Ăна пулăшма юлташĕсем çитсе тăчĕç, ĕнсе хыçĕнче хастаррăн сывласа тăраççĕ. Авалах çарта усă курнă меслетпе савăлласа кĕрсе кайрĕç вĕсем кӳршĕсен çурункине, салатса ячĕç. Тарзанăн пуринчен те ытларах вăй виçмелле пулчĕ. Хĕрсе кайнăскер вăл кам алла лекнĕ çавна юсарĕ, çавăрса çапрĕ, урисенчен тытса арман

пек çавăрчĕ, тапа-тапа сирпĕтрĕ, айăк пĕрчисене шĕкĕлчерĕ. Хăйне те лекрĕ. Кӳршĕсем йăлăнма пуçларĕç:

— Саня, килĕшӳ-ӳ.

— Çук, хăвăр пĕçерне пăтта хăвăрах çийĕр!— кăшкăрать Саня.

Ăна Геннадий хăлхаран пăшăлтатрĕ:

— Тен, чарăнас, çапах та паян ман туй, кăмăл-туйăмне йăлтах хуçса пĕтерер мар вĕсенне те.

— Юрĕ, чарăнар!— сылтăм аллине çĕклерĕ Саня.

Пуçламăшĕнчи пек каллех кӳршĕсен ачипе Саня калаçса илчĕç.

Саня пурне те илтмелле каларĕ:

— Ак çапла килĕшӳ тăватпăр. Пирĕн урамра хуран çакатăр, кăвайтă чĕртетĕр, шӳрпе пĕçеретĕр, тавралла сăмакун четвĕрчĕсем ларччăр. Ăнланмалла-и?!

— Мир тума капла килĕшетпĕр,— алă пачĕ Санькăна лешсен пуçлăхĕ, Володя текенскер.— Çапах та шел сире, Тарзан пулман пулсан-и, самаях шĕкĕлчеттĕмĕр сире, шăркалчăсене.

— Шăлна ан йĕр,— аяккалла тĕртрĕ ăна Санька.— Пурнăçла эпир мĕн хушнине. Çĕнтерӳçĕсен паян уяв!

Çĕнтернисемпе парăннисем пĕрлех ура çине тăма пуçларĕç. Çапăçура пурне те лекет-çке. Хăшĕ юнлă сурать, тепри шăлне тĕрĕслет, айăк пĕрчине хыпашлать, пит-куç кăвакармашыçма пуçланă. Пиншаккисене йăмра тураттн çинчен илнĕ йĕкĕтсем-харсăрсем шыв патне анаççĕ, пит-куçне çуса тасатаççĕ. Çурăк-кăвак питлĕ Санька кулать:

— Ку кĕрешӳ хыççăн тата çирĕпленетĕр!

Геннадий ачасене килне чĕнет.

Хуняма килне лекнĕ Люба тĕлĕнсе хытрĕ. Сĕтел çинче мĕн кăна çук пуль! Варринче — кĕрхи чечексем: хĕрлĕ, шупка, шурă гладиолуссем. Кине хăмăртарах тĕслĕ чăмăркка пит кăсăклантарчĕ.

— Калăр-ха, мĕн ку?

— Шăрттан, чăвашăн хаклă апачĕ.

— Мĕнтен тăваççĕ ăна?

Хунямăшĕ ăнлантарчĕ:

— Сурăх ашне касса-тураса пыршă ăшне тултаратпăр та вĕри кăмакана лартатпăр, тутлăрах пултăр тесе унта ăна-кăна хушатпăр, акă, кин, астивсе пăх-ха, тархасшăн.

Любăна шăрттан пит тутлăхлăн туйăнчĕ. Хăй вăл вырăс çемйинчен те, хунямăшĕ вырăсла-чăвашла калаçнине аран-аран ăнланчĕ. Ыттисем пурте чăвашла калаçаççĕ. «Пĕрле пурăнас пулсан манăн та вĕсен чĕлхине вĕренмеллех пулать»,—

тесе шухăшларĕ вăл. Люба чӳречерен пăхрĕ те сиккелесе илчĕ. Унăн Тарзанчикне хупăрланă çамрăк ушкăнĕ шавласа çывхарать. Атту унпа пĕрле хунямăшĕ те, ашшĕпе амăшĕ те кулянма пуçланăччĕ-ха. Туя малалла тăсмалла вĕт.

Кĕçех пӳрт çамрăксен шавĕпе тулчĕ. Вĕсен кăвакарнă-шăйрăлнă-шыçнă питçăмартийĕсем çине пăхса кулаççĕ. Кĕрӳ каччин кĕпи çухавине кăкăр таранах çурса антарнă.

— Ах çакна, аçтахана,— тесе амăшĕ хыпăнса ӳкрĕ.

— Тарзанчикĕм-упаçăм, кам сана капла тапăнчĕ?— хулран тытса пӳлĕме илсе кĕчĕ упăшкине арăмĕ.— Çынсем тем шутларĕç пуль. Хыв часрах кĕпӳне! Улăштармалли пур-и?

— Çуккă. Пуррине Йĕпреçе илсе кайнăччĕ.

— Çиччас çĕлесе парап, туп йĕппе çип, — хыпăнтарчĕ Люба.

Хĕрупраçсем, хĕрарăмсем ытти паттăрсене те йĕркене кĕртрĕç.

Ваттисен йăлипе çамрăк мăшăра тур кĕтессине кĕртсе лартрĕç. Ваттисем, ашшĕ-амăшĕ пиллерĕç. Черетпе саламлама пуçларĕç. Туй ачисемпе хĕрçумсем юрă шăрантарчĕç, «йӳçĕ», «йӳçĕ» тесе кăшкăрчĕç. Упăшкипе арăмĕ, ашшĕ-амăшĕнчен, хăнасенчен вăтана-вăтанах темиçе те чуптурĕç ĕнтĕ. Вĕсене ташша чĕнчĕç. Туй халăхĕ хĕрсе пычĕ. Геннадий çав вăхăтра Любăна çухатрĕ. Ăна тантăшĕ тем сăлтавпа пӳлĕме чĕнчĕ пулас. Қалаççах пĕтерейместĕ-çке вĕсем. Çурăм хыçĕнче çывăх çын тăнă пекех, унăн сывлăшĕ ĕнсене кăтăклантарнăнах туйăнчĕ Геннадие. Чăнах та, пуçа пăрсанах вăл алăк çумĕнче аллисене кăкăр çине хуçлатса тăракан Аннушкăна курчĕ. Қуççем вăрттăн йăлкăшса курăнми çулăм кăларчĕç. Аннушкăн тути хĕррисем чĕтренсе илчĕç. Çакна Санька сисрĕ пулас, тусне айăкран сисĕмлех тĕкрĕ. Хăй хыççăн чĕннĕ пекех Аннушка вăшт çухалчĕ. Тĕлĕкри пек сăнар Геннадий чĕрине ыраттарса хăварчĕ. Шăв-шавра вĕсем тула тухнине никамах та сăнама шутламарĕ пулас. Пĕлнĕ пекех Геннадий сарай хыçнелле утрĕ, Санька хăй ĕçĕпе кĕтесре тăрса юлчĕ. Аннушка чăнах та ăна унта кĕтсе тăрать.

— Улталарăн-ха апла мана,— йĕрсе ячĕ хĕрарăм.— Манпа йăпаннă чухне саншăн эпĕ çеçчĕ тĕнчере, мана кăна юрататăп. санпа пурнăç тăватăп, тесе лĕпĕртететтĕн. Хăвăн вара çав вăхăтрах урăххи пулнă. Епле шĕпĕн, кнопка тупнă?..

Хăйне ыталанипе çемçелнĕ Аннушка йĕре-йĕре вăйлă арçынна чуптурĕ, ун çумне çыпăççах ларчĕ. Юрату çилĕмĕ уйрăлассăн та туйăнмарĕ Геннадие.

— Пурпĕрех эсĕ халĕ те, çак самантра манăн, кнопкăн

мар, савăнтаратăн, манах вĕçтеретĕн, сиктеретĕн юрату сăпкинче. Санран илнĕ канлĕх иксĕмĕр тепре тĕл пуличчен кĕлеткерен çухалмĕ. Халь кай шĕпĕнӳ патне,— тесе Аннушка çĕкленĕ кĕпине антарса майларĕ. Тепре чуптăвам та... Пурпĕрех эп сана юратма пăрахмастăп. Вилсен те...

Кĕлетке те, чун та пушанса юлнăн туйăнчĕ Геннадие. Анкарти чиккипе каялла çаврăна-çаврăна пăхса утакан чун савнине хурлăхлăн та савăнăçлăн ăсатса янă хыççăн Геннадий килкартине кĕчĕ. Алăкра ăна Санька кĕтсе тăрать.

— Çăлас тетĕп сана. Пĕрле тухнă — пĕрлех кĕрер. Хамăр пата каçса килтĕмĕр, тесе суяр. — каллех айăк пĕрчинчен тӳнлеттерсе илчĕ тусĕ.— Майлакала шăлаварна лайăхрах, улах ачи.

Санька чăнах та çав юмаха каласа ĕнентерчĕ Любашăна. Ыттисем те тĕпчемерĕç. Туссем вĕт, вĕсен калаçмалли те, тем тумалли те тупăнать. Арăмĕ юратнă упăшкине, кунĕпех ним те çимен пуль тесе, хур тукмакки тыттарчĕ:

— Çи-çи, атту ӳсĕрĕлсе кайăн. Хăвна çирĕпрех тыт. Атте пек.

Купăсçăсем туй халăхне урама чĕнчĕç. Туй карти карчĕç. Уйăх çуттăнрах çутатса ячĕ. Ял çийĕн, урамсемпе çырма тăрăх авалхи, хальхи юрă ян кайрĕ. Ир енне тин тĕлĕркелесе илчĕç. Любăпа Геннадий ялта та канма мунчана вырнаçрĕç.

Туй çынни хĕвелпе пĕрлех вăранчĕ, сĕтел хушшине вырнаçрĕ. Кунĕпе шавларĕ Геннадисен килĕ. Каçалапа Санька çамрăксене ваттисенчен хăпăтса тухрĕ.

— Хамăр эртелпе ял тăрăх савăнса çӳрер-ха,— терĕ вăл. —Кӳршĕсем килнĕ. Хăнана чĕнеççĕ. Хамăрах хушрăмăр вĕт.

Çамрăксем кăна мар, пӳртрисем пурте пĕрлех тухрĕç. Урам тăрăх юрласа-ташласа пыраççĕ. Ял пуçĕнче çунакан вут аякранах курăнать. Ун тавра каччăсемпе хĕрсем ташласа çаврăнаççĕ. Купăсçăсем иккĕн сиктереççĕ кăна вĕсене. Туй халăхĕ те çав савăк картана хутшăнчĕ.

Çĕнĕрен çуралнă çемье ют ял ачисенчен салам йышăнать. Миçен вĕсем, шутламарĕ Геннадий. Любăна çеç кашнине алă парса йăлăхтарма пуçларĕ. Упăшки сисрĕ те çакна, пурте илтмелле каларĕ:

— Тавтапуç ыр кăмăлшăн! Савăнар пĕрле!

Кăвайтă урлă сикме пуçларĕç. Хĕрсем те чăтаймарĕç, каччисем хыççăн ярăнчĕç. Шӳрпине те пĕçерме манман иккен. Така пусса килнĕ. Эртелпе пурне те çитрĕ. Любăпа Геннадие шашлык тыттарчĕç.

Виçĕ куна тăсăлчĕ уяв. Уй-хир ĕçне вĕçленĕ халăх ирĕклĕ. Уйрăмах арçынсем тăрăшрĕç, Геннадий амăшĕн пичке тĕпне сăрăхтармасăр, сăмакун четвĕрчĕсене пушатмасăр уралмарĕç. Çамрăксем ывăнсах çитрĕç. Ирĕклĕх вăхăчĕ иртсе кайрĕ. Ĕçе тухмалла. Геннадий каллех вăрман çулĕпе, кăкăр тулли уçă сывлăшпа сывласа, гаража васкать. Люба та кантураллă уттарчĕ. Çук çав, вĕçленсех пĕтмен ĕçкĕ-çикĕ. Шоферсемпе трактористсем, юсавçăсем ярса илчĕç Геннадие. Кăнтăр апатĕнче унăн тракторĕ патĕнче туя малалла тăсрĕç. Хăйне евĕр банкет уçрĕç. Пĕрле ĕçлекенсем хăйсене туя чĕнменшĕн лайăхмарланнă та, мĕн тăвăн, Геннадий ăнлантарнă хыççăн, унпа килĕшрĕç. Пысăк туй тума шутламан-çке, тăвансемпе кăна палăртас тенĕ.

— Сана эпир пурпĕрех çилленместпĕр,— терĕ ӳсĕрĕлме пуçланă Петĕр,— укçа-тенкĕ те пулас çук мăн эртеле йышăнма, сатту хамăр йышпа саламлатпăр, савăк, çирĕп çемье пултăр, ху пекех пăхаттирсем çуратса тултарăр.

— Пирнешкеллисене тăн кĕртекеннисем пулччăр тесшĕн пуль-ха эс, Петĕр-халтăр,— тĕксе илчĕ ăна гараж хуçи.

— Çаплах пултăр. Вăйлă çын таçта та çĕнтерет, хамăр халăх вăйне çĕклет. Çавăншăн ӳпĕнтерер тепĕр стакан. Илемпийĕсем те çуралччăр. Атьăр, хамăр Геннадишĕн, унăн чиперкишĕн ĕçер!— Петĕр стакана куç хупмасăрах çавăрса хучĕ.

Ĕçкĕ-çикĕ сĕрĕмĕ çакăнпа сĕвĕрĕлчĕ. Каллех кĕрхи нушаллă йывăр ĕç пуçланчĕ. Килте — çемье пурнăçĕ.

Йăваш кăмăллă арăмĕ илемленсе, чăмăрланса пынине сисет Геннадий. Куçĕнче çиçекен ăшă çутăпа чунне ăшăтать. Ĕçлесе илнĕ укçи-тенкине пĕрле пухса япаласем туянаççĕ. Пӳлĕм капăрлансах пырать. Пĕлет Любаша ăçта мĕн лартмаллине-вырнаçтармаллине. Упăшкине те юрас килет унăн. Пĕррехинче каçалапа вăл упăшкине хăй çумне лартрĕ те:

— Пуçна çакăнтарах хурса итле-ха,— терĕ.

Геннадий хăлхине арăмĕн хырăмĕ çумне тĕкрĕ.

— Чăнах та тапрĕ мана!— кăшкăрса ячĕ тӳрех хавассăн. — Пăхаттирех пулать тетĕп вĕт сана. Хамăр йăха малалла тăсаканни. Ну-ка, тап-ха тепре! Тата!

Юрать-ха канмалли кун пулчĕ. Геннадий шыв йатса килчĕ те вут хутса ячĕ. Юлашки вăхăтра вăл хĕрарăм ĕçне те хăй тăвать, арăмне шеллет. Яшка пĕçерме хатĕрленнĕ арăмĕ, акă, чĕркуçленсе ларчĕ, типнĕ тути хĕррисене çыртса лартрĕ.

— Пуçланать пулмалла,— пăшăлтатрĕ, хăранипе-ши. куçне-пуçне чарса пăрахрĕ Люба.

Хыпăнса ӳкнĕ упăшки ăна çĕклесе вырăн çине лартрĕ.

Арăмĕ шуса анчĕ те вырăн çине ӳпĕнчĕ. Геннадий хăпăл-хапăл тумланса тухса чупрĕ, пушарниксем патне хашкаса çитрĕ.

— Мĕн, пушар тухнă-им?— ыйтрĕ дежурнăй.

— Тухма хатĕрленет. Пулăшăр тархасшăн?

— Шӳтлесе ан тăр-ха эс, Тарзан, этемле ăнлантар?

— Арăм ача çуратать. Ăнлантăн-и? Васкамалла!

Йĕркене пăссах ăсатса ячĕ пушарник вĕсене пульницана. Çĕр çывраймарĕ Геннадий. Ĕçе кайма тухсан, çула май пушарниксем патĕнчен шăнкăравласа пĕлчĕ. Люба ирпе çуратнă. Кĕтнĕ пăхаттир мар иккен, хĕр. Ĕнсине хыçса илчĕ те Геннадий, пурпĕрех тем пекех хĕпĕртерĕ илемпи-чĕкеçшĕн. Вĕсен ача пур ĕнтĕ!

Ĕçе кая юлмасăр çитрĕ те Геннадий, урлă-пирлĕ шухăшланă хыççăн чăтаймарĕ, тракторĕпех пульницаналла кĕрлеттерчĕ. Мăкăрлантарса пырать кăна. Çĕкленӳллĕ туйăмăн чикки те çук тейĕн. Хăвăртрах çитсе арăмне ырă тăвас, пĕрремĕш пепкине алла тытса курас килет-çке. Пульница картишне çĕмĕрттерсе кĕрсе ача çуратмалли çурт умĕнче тап! чарчĕ тракторне, моторне чармасăрах кабинăран тухса сирпĕнчĕ, алăк хупă та, каллех хăй вырăнне кĕрсе ларчĕ. Акă чӳречере Любаша курăнса кайрĕ.

— Тавтапуç сана, чунăмçăм! Саламлатăп!

Любаша аллипе сулкалашать, тем калать, анчах нимĕн те илтĕнмест. Алăкран шурă халатлă хĕрарăм сиксе тухрĕ те трактор патне пычĕ.

— Хăвăртрах тасал кунтан тракторупа! Юрамасть шăвшав çĕклеме! Арăму патне пĕччен кил!

Геннадий итлемест те. ăна çак самантра никам та, нимĕн те хумхантармасть, ăна арăмĕпе ачи çеç кирлĕ.

— Ак эп сана çиччас, шофера калам-ха, хӳтерсе ятăр.

Тем вăхăтран трактор патнелле монтажка йăтнă арçын çывхарчĕ, хăмсарса çухăрчĕ:

— Куратăн-и çакна?!

Кабинăран мĕнле упа тухнине асăрханăскер вăл туххăмрах таçта кайса çухалчĕ. Геннадий хăй мĕн тунине ăнланмасăрах тракторĕпе ĕçе таврăнчĕ, каçалапа çимелли-ĕçмелли туянса, пĕр çын патĕнче теплицăра ӳстерекен чечек илсе çурран çитрĕ ача çуратмалли çурта. Халĕ ĕнтĕ çамрăк ашшĕне урăхла кĕтсе илчĕç. Начарланнă Люба ăна хирĕç аран-аран утса пырать, ачине сестра йăтнă. Ик-виç сăмах перкелешсе илнĕ, ачине пăхма ĕлкĕрнĕ хыççăн вăл каллех пĕччен тăрса юлчĕ.

Вĕсене вăл тепĕр эрнерен юлташĕн çăмăл машинипе кайса илчĕ.

— Анне пек пулнă вĕт пирĕн пепке,— пысăк аллинче пукане пек тытса ларать Геннадий хĕрне.

Аннÿ пекех, сан пекех, ан хăра: кÿршĕ пек мар,— кулкалать амăшĕ.— Унта эп тем те илтсе тĕлĕнтĕм. Арçынсем эсир ачисем ют арçынтан пуласран хăратăр иккен. Сан та çав шухăш пулчĕ пуль-ха?

— Çу-ук, Любаша, нихçан та шухăшламан ун пирки. Эп сана шанатăп.

— Юрĕ,— чуптурĕ Люба,— пĕр-пĕрне шанса, юратса, хисеплесе пурăнăр. Кÿр ăна мана, çухăрма пуçларĕ, чĕчĕ парам.

Ача пÿлĕме тултарса тăвăрлатсах лартрĕ. Люба кунĕпех унпа аппаланать, пĕрмай ача япали çăвать, типĕтет, апат пĕçерет. Геннадий ĕçрен ывăнса таврăнать. Унран трактор шăрши кĕрет. Ун япалисене те вĕçĕмсĕр çуса тасатмалла. Чăтса, хĕсĕнкелесе пурăнать пĕчĕк пÿлĕмре. Çутçанталăк юххинче акă йыш татах хутшăнчĕ. Ашшĕ кĕтнĕ пăхаттир тинех тĕнче илтмелле çухăрса ячĕ. Пÿлĕм халĕ ĕнтĕ ашшĕн савăнăçĕпе ытларах тулчĕ. Хушăран амăшĕ килет. Урайĕнче выртса тăраççĕ. Çемьери йывăрлăха чи малтан хĕрарăм ытларах туятьçке. Люба та чăтаймарĕ, упăшкине çулса илчĕ:

— Хăçан эс пуçлăхсенчен хваттер ыйтма тытăнан? Мĕнле çăрăлса пурăнатпăр. Аннесем те килĕшÿллех мар. Кай, санпала, лÿппер упапа...

— Ĕç пĕтерет. Ирпе каятăн та, каçпа таврăнатăн. Хăçан çÿрес кантур тăрăх. Сан хăвăн та...

— Килте арçын пур чух хĕрарăмăн чупса çÿремелле-и?

Кунашкалли те пулкалать çемьере. Нуша иккĕшĕн кăмăлне те хуçрĕ. Апат та анмарĕ, Геннадий çимесĕрех ĕçе тухса утрĕ. Люба аллинчи пуш витрине алăран ÿкерчĕ. Ачисем çухăрса ячĕç...

Кĕрхи çумăрлă çанталăк та хăй вăхăчĕпе иртсе каять, çурхи хĕвеллĕ кун та персе çитет. Сисмесĕрех. Вĕсен те пурнăçĕ хăй урапипе чупать. Хваттер хирĕçĕвне тахçанах маннă ĕнтĕ. Гаража, апат вăхăтĕнче, Люба чупса пычĕ, хăй хĕвел пек çиçет. Мĕн пулнă-ши ман майрана тесе тĕлĕнчĕ Геннадий. Пуçласа курать-ха та вăл арăмне кунта. Упăшки умне çитрĕ те ун тавра ташласа çаврăнчĕ, мăйĕнчен çакăнчĕ, чуптуса пĕтерчĕ.

— Намăса пĕл-ха,— вĕçертрĕ ăна хăйĕнчен Геннадий,— Çынсем тем калĕç.

— Курччĕр эпĕ упăшкана мĕнле юратнине. Вăтанмастăп

сана чуптума паян. халăх умĕнче те. Паян пирĕн савăнăç. Туй чухнехи пекех!

— Мĕнле савăнăç?— ниепле те ăнланаймарĕ упăшки.

— Хваттер пачĕç! Акă,— пĕчĕк сумккинчен вăл виçĕ уçă туртса кăларчĕ те пуçĕ тăррине çĕклесе ташласа илчĕ.

— Чăнах-и? Ăçта?

— Инçех мар кунтан. Кăтартнăччĕ-çке эпĕ сана вăрманпромхоз тăвакан çурта? Хурашывпа Йĕпреç хушшинче, парка хирĕç. Тапрат тракторна та кăкар прицеп. Халех япала тиеме каятпăр. Паянах куçатпăр. Йăлăхтарчĕ тăвăр пӳлĕмре айкашăнса пурăнма. Эх, уяв çитрĕ!

Упăшки те ташласа илчĕ. Вăл ăшĕнче хăй хваттер илейменшĕн, арăмĕ кантурта ларсах виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер илме пултарнишĕн кĕвĕçӳллĕн шухăшласа кайрĕ. Сахал илтнĕ-и вăл шăлйĕренсенчен пуçлăхсем секретарь-машинисткисене мĕншĕн хытă тав тунине. «Тен, ман арăм та çавнашкал?» Ниепле те тасаласшăн мар ку путсĕр шухăш пуçран.

Гараж хуçипе калаçса татăлнă хыççăн вĕсем тракторпа хваттерне таврăнчĕç, никама та чĕнсе чăрмантарас темерĕç. Япали-мĕнĕ вĕсен, шифоньерпа икĕ кравать, сĕтел-пукан, тумтир темиçе çыхă, чашăк-тирĕк тата ытти ăпăр-тапăр. Хăйсемех куçарчĕç, майлаштарса лартрĕç. Геннадий çĕнĕ çĕре куçнине пĕлнĕ Петĕр хăйĕн уйрăлми тусĕпе ĕç хыççăн хваттер çума персе çитрĕ. Ачисем пӳлĕмрен пӳлĕме чупаççĕ. тытмалла выляççĕ. Хваттер савăнăçпа тулчĕ.

Шăматкун Геннадий амăшĕ персе çитрĕ. Ывăлĕ çĕнĕ хваттерте пурăнма пуçлани çинчен ăна Санька кĕрсе каланă. Икĕ мăн сумка сĕтĕрсе çитнĕ. Любăн ашшĕпе амăшĕ, шăллĕ пуç тарăнчĕç. Тĕлĕнмелле, Любăн пуçлăхĕ те парнепе пычĕ, люстра парса хăварчĕ. Таçта пытаннă кĕвĕç каллех сиксе тухрĕ Геннадий умне. Хăваларĕ-хăваларĕ вăл ăна, пурпĕрех ăшран тухса тасалмарĕ, таçта, тарăн çырмара, Анюта сăнарĕпе хутăшса, чĕрене суртарчĕ. «Эх, манăн çеç Анютапа йăпанмалла пуль ĕнтĕ... хĕрарăмăн та хăйĕн вăрттăнлăхĕ пулма пултарать... пулма пултарать... пултарать...»

Йăм хура пĕчĕк пуççене асламăшĕ черетпе шăлать, вĕсене ыталать, мăнукĕсемшĕн хĕпĕртет, юлашки вăйне пама хатĕр. Мăнукĕсене кукамăшĕпе кукашшĕ те хытă юратаççĕ. Кукашшĕ пĕчĕк упапа выляма юратать, ăна кĕрешме, шăрчăкланса тытăçма та вĕрентет. Арçын пултăр тет ĕнтĕ.

— Итле-ха Геннадий?— чĕнсе илчĕ хăй патнерех ывăлне амăшĕ.— Пурнăç тума пуçларăр пек туйăнать. Çапах та пĕр çитменлĕх пур сирĕн.

— Мĕн тата?— тĕлĕнчĕ ывăлĕ.

— Ачусене хăçан шыва кĕртетĕр? Тур шывĕ ĕçтермеллех. халăхпа пĕр шухăша кĕртмеллех пуль вĕсене те. Эпир тĕне кĕнĕ чăвашсем те...

— Ах анне, каçар мана эс, çапах та ăнлан, партие илчĕç- çке пире. Коммунистсен ачисене шыва кĕртме юрамасть.

— Христоса хирĕç пыракансене сире, сăмса шывĕсене, ка- лам-ха.

— Мĕн калатăн-ха, анне?

— Мĕн хăраса тăраттăр? Ай начальниксем эсир? Мĕн, са- на трактор çинчен кăларса ывăтаççĕ-им партирен хăтарсан, е кине директор патĕнчен хăваласа яраççĕ? Тăватăр эсир хă- вăр ĕçна. Сиртен урăх ним те кирлĕ мар. Хурамала лартса каятпăр та ак мăнуксене, чиркӳре йĕркеллĕ шыва кĕртетпĕр. Хăратăр пулсан, Санька пулăшать. Сиссе те юлаймастăр. Пу- лас куммусене палăртса хума ан манăр тулĕк.

Амăшĕ кун пирки тăхлачă-хăтипе те канашласа илме ĕл- кĕрнĕ иккен. Пур енчен те хĕстерсе лартрĕç антихристсене. Килĕшмеллех пулчĕ.

Ачисем çине пăхса тăранаймаççĕ Любăпа Геннадий. Пĕри тепринчен ырă, хитре. Уйрăмлăхĕсем те пур. Хĕрĕ Хурашыв- ри хăмăш пек тăсăлса кайрĕ. Люся вăл. Ашшĕ пек мăнтăр- кка, мечĕк пек ывăлĕ — Витя.

Кĕтни-кĕтменни те пулсах пырать çав. Вырсарникун ирех алăка хыттăн шанлаттарчĕç. Санька çитнĕ.

— Хатĕрленĕр!— хушать тусĕ.

— Ăçта?

— Хурамала. Ăçта сан куммусем?

Вĕсене тупма йывăр пулмарĕ. Геннадий мухмăрла Петĕре кĕрсе илчĕ, мухмăрне те чĕрттерчĕ. Люба хăйĕн нихçан уй- рăлман тантăшне Таньăна çаклатса тухрĕ. Тăрантаспа Хура- мала çитрĕç. Чиркӳ чанĕн сасси таврана саланать. Халăх йышлă. Ун пеккине Геннадий кинора çеç курнă, пачăшкăпа та тĕл пулса каласман.

Ачасене шыва кĕртнĕ хыççăн вĕсем эртелпе Геннадисен амăшĕ патне кĕчĕç. Амăшĕ кунашкал хăçан савăннине те ас- тумасть ывăлĕ. Санька йăлтах йĕркелеме ĕлкĕрнĕ иккен. Мĕн- пур тăвансене, хурăнташсене, пĕлĕшсене пуçтарнă амăшĕ. Ял- йышпа савăннă хыççăн Йĕпреçе куçрĕç. Любăн ĕнтĕ кухня тулли аш-пăш, ытти ĕçмелли-çимелли. Ашшĕпе амăшĕ те пĕр- лех. Люба чăвашла калаçма вĕреннĕччĕ те, уншăн халĕ ял çыннисемпе, уйрăмах ваттисемпе, пуплеме чĕлхе-çăвар çаврă- нать. Кум кунĕ вĕçленчĕ. Каллех — ĕç.

Хайне парти райкомне мĕншĕн чĕнтернине Люба партком секретарĕнчен пĕлчĕ. Пĕрмай чĕлĕм мăкăрлантаракан вăтам пÿллĕ секретарь ăна çапла каларĕ:

— Ачусене шыва кĕртнине эсĕ ху çине ан ил, аннÿсем çине пер. Кайран кунта, хамăр патра, çăмăллатăпăр сирĕн айăпа. Упăшкуна та чĕннĕ. Мана та.

Выговорпа çăлăнса юлчĕç вĕсем.

Ĕçкĕ-çикĕпе укçасăр тăрса юлчĕç. Ашшĕ-амăшĕнчен ыйтма вăтанчĕç. Люба кÿрше каçрĕ. Уçă чунлă, ырă кăмăллă учительсен çемйине Геннадий пĕлет. Тамара Прокопьевнапа Николай Афанасьевич вĕсене унччен те пĕрре кăна мар пулăшнăччĕ, арăмĕ вĕсем патĕнчен пуш алăпа каçасса шанмарĕ.

— Хăçан парса татăпăр тулĕк,— пуçне усса хваттере кĕчĕ Люба,— çынран анратса çÿреме те аван мар.

— Пире преми памалла-ха,— хавхалантарчĕ упăшки.

Вĕсен çуртĕнче виçĕ Геннадий пухăнчĕ. Пĕри тракторист, тепри шкул директорĕ, виççĕмĕшĕ — спортсмен. Вăл канмалли кунсенче вăрманти çырмана виннестертан пушă кĕленчесене персе çĕмĕрме каятчĕ, хваттерĕнчен штанга сасси çеç илтĕнетчĕ.

Геннадий спортсмен Геннадий трактористпа паллашасшăн пулнă иккен. Нимле секцире хатĕрлемесĕрех хăйне питĕ вăйлă тытни шухăшлаттарнă ăна. Поселокра ун пирки нумай сăмах-юмах çÿрет тата. Кĕрешсе пăхма ĕмĕтленнĕ Геннадий спортсмен Геннадий трактористпа.

Вырсарникун Геннадий ывăлĕпе уçăлма тухрĕ, хăйсен умĕнчи лăпсăркка çăкасем çине пăхса киленчĕ. Кĕрхи хĕвел çулçăсем витĕр асăрханса пăхать. Геннадий пÿрт умĕнчи тенкел çинче канать. Тенкел тепĕр пуçне Геннадий спортсмен тухса ларчĕ, пуçĕпе сĕлтсе сывлăх сунчĕ.

— Кăштах çанçурăма лутăркарăм-ха, штангăпа вылярăм,— хулпуççийĕсене сиктеркелерĕ спортсмен.

— Эп те ĕнерхи ĕç хыççăн канас терĕм.

Ларсан-ларсан лешĕ ун еннелле пĕтĕм кĕлеткипе çаврăнчĕ те:

— Атя иксĕмĕр кĕрешсе пăхатпăр,— терĕ.

— Эп спортсмен мар та...

— Мана çĕнтерсен, спортсмен, чемпион пулатăн,— хавхалантарчĕ лешĕ.

Трактористăн килĕшесси çеç юлчĕ.

— Юрĕ, спортсмен,— терĕ вăл,— çакăнтах, хăйăр çинчех кĕрешĕпĕр.

Лешӗ килӗшрӗ. Акă, иккӗшӗ те кӗписене хывса пăрахрӗç, карта çине çакрӗç. вăкăрсем пек пӗр-пӗрин патнелле çывхарчӗç. Геннадий спортсмена ниепле те меллӗн çавăрса илеймест, лешӗ е аллипе сирсе ярать, е вăрт-варт çаврăнкалать. Пилӗкрен çулса илсенех тимӗр кăшăла хӗстерчӗ те вăл ăна хыттăн çавăрса çапрӗ, аллисенчен тытса хул калаккисене хăйăр çумне пăталарӗ.

— Çитет, Тарзан, хула пăрса лартан, — парăннă сасă илтӗнчӗ аялтан.

Ура çине тăрса иккӗшӗ те шăлаварӗсене хăйăртан тасатрӗç. Спортсмен пурпӗрех лăпланмарӗ, хăйне çӗнтерекене сив куçпа пăхса чышкине чăмăртарӗ. Геннадий ăна аяккалла сирсе яма ӗлкӗрчӗ.

— Штанга йăттарап сана. Атя?

Çăка айӗнчи спорт лаптăкне иккӗшӗ те хашкаса çитрӗç. Спортсмен хăй малтан йăтрӗ, икӗ пуçне пилӗкшер кило хушса тата çӗклерӗ. Геннадий тӳрех вунщар кило хуштарчӗ, çăмăллăнах йăтрӗ. Çав йывăрăша спортсмен илеймерӗ, тарăхнипе, ним каламасăрах подъезда кӗрсе çухалчӗ. Тарзан ывăлӗ патне пырса шăкăл-шăкăл калаçма пуçларӗ. Улăхри чечексемпе илемлетнӗ пек çӗнӗ кӗпе тăхăннă, чăп-чăмăр питлӗ Люба çăмăллăн утса тухрӗ.

— Аннесем патне кайса килер мар-и, Тарзанчик?

— Эпӗ хавасах. Ачасене çавăртар та...

Панулми сăпасӗ иккен. Тăванла туйăмпа кӗтсе илчӗç вӗсене. Сӗтел кукăль-икерчӗпе, сăра-эрехпе тулса ларчӗ. Люба ашшӗ панулми тултарнă карçинкка йăтса кӗчӗ, мăнукӗсене валеçсе пачӗ. Ваттисене асăнса палăртрӗç уява. Унтан киле кайма тухрӗç.

Малтан ӗçе çӳренӗ сукмакпа вӗсем килӗ еннелле савăнăçлăн пыраççӗ. Ачисем малта чупаççӗ, ашшӗпе амăшӗ панулми тултарнă карçинкка, сумккăсем йăтнă. Кивӗ масар вырăнӗ пушах. хӗресӗсем çӗрсе ӳксе пӗтнӗ. Унта хăшӗсем çӗр чавса çӗрулми лартаççӗ. Урам хӗресленнӗ çӗрте мăн хурăн сарăлса ларать. Иртен-çӳрене, машинăсене те вăл питӗ кансӗрлетчӗ. Унран хăтăлас текенсем те тупăннă авă. Моторлă пăчкă кӗрлени илтӗнет. Александров текенскер татать, шултра кӗрпе аяккалла сирпӗнет. Спортсмен вăрăм патакпа мекӗрленсех тӗкет, сулăнтарса татма çăмăллатасшăн ӗнтӗ. Хăйсем тем пулнă пек çуйхашаççӗ.

Тархасшăн пулăш-ха, Тарзан,— чӗнчӗ вӗсене курсан Геннадий спортсмен.— Пăчка шалккă, хурăн кучӗ хӗстерсе пырать, аркатать.

Чённě çěре чупса çитнě Тарзан пěтěм вăйран ўпěнчě вăрăм патак çине:

— Р-раз... два-а... кайрě!

Йывăç майěпен тўрленчě те, айккинчен хытă тěртнине парăнса, тепěр еннелле сулăнма пуçларě, унтан ўхěрсе çěре шартлатрě, туратсем çўлелле сирпěнчěç.

— Пěлмен ěçпе унпа, — айккалла сурчě те тарланă çамкине шăлса типěтрě Коля Александров,— эсир çывхарнă чухне как рас хěссе лартрě, сехре хăпрě моторкăна аркатасран хăранипе. Тавах сана, Геннадий, ахаль тумăпăр, пěр пайне пама пултаратпăр, кăмака хутма сана та вутă нумай кирлě.

— Кирлě мар чăрманма, вутти ман çителěклех, хамăр алрах-ха вăрман, хăвăрах татса сыпăлăр, — тесе уйрăлчě Геннадий вěсенчен.

Хваттерте кăштах ěçлекелемелли-майламалли пурччě, анчах инструментсем кăларнăччě, тул енчен шаккарěç те, уçнă алăкра спортсмен пуçě курăнчě, сулахай куçне мăч тутарчě. Анланмалла. Эп юлташсемпе кăштах калаçам-ха тесе Геннадий коридора тухрě. Коля Александров та кунтах иккен. Вěсем ăна хăналасшăн, парка чěнеççě. Арăмě хирěçлемерě.

Пěр çурт çыннисем çапла сăпас кунне арçынла паллă тума шутларěç. Паркра çырма леш енне меллě вырăна ларчěç те ěçке ячěç. Спортсмен Тарзанпа тепре кěрешсе пăхма шутларě. Кăмăлě уçăлтăр тесе Геннадий парăннă пек пулчě. Спортсмен чăнах та хавасланчě, кулкалать кăна.

Пěччен юлсан Люба панулми илчě те кўрше каçрě. Ачисем урамра выляççě. Тунсăх атту. Тамара Прокопьевна ăна пит хавас кěтсе илчě, кухньăна чěнсе сěтел хушшине лартрě. Залра ачисем кино куратчěç.

— Пўлěм туллиех-çке ача? — тěлěнчě Люба.— Урам ачи йăлтах пухăннă пуль?

— Николай Афанасьевичпа эпир вěсене ятарласа чěнетпěр хамăр пата, тăрантаратпăр, хăшне-пěрне тумлантаратпăр. Хамăр ачасемпе пěрле ўсеççě. Хěрхенес килет, пурин те вěсен килěнче çителěксěр пурнăç: е амăшě пěччен, е ашшě ěçсе кайнă, тăлăх-турат та пур. Пире тăвăр мар, хăнăхнă эпир шкулта ачасемпе айкашăнма.

Ашшěсем патěнчен илсе килнě панулмие Люба пěтěмпе тенě пекех каçса илчě те, Тамара Прокопьевнапа кашнине валеççе пачě. Николай Афанасьевич ырласа ларать. Хăйсен алăк сассийě илтěничченех шăкăл-шăкăл калаçса ларчě Люба кунта. Юнашер çавнашкал ыр кăмăллă çынсем пурришěнпурăннишěн çав тери хěпěртерě Люба.

Ĕçе çӳреме çывăхланчĕ. Халĕ ĕнтĕ Геннадий масар енчи сукмакпа мар, сĕт-çу завочĕ хыçĕпе, пĕве хĕррипе, çамрăк хырсем хушшипе уççăн утать гаража. Ĕçе çитиччен ĕнерхи йывăрлăх та пуçран таçта тухса ӳкрĕ. Петĕр кĕтсе тăрать.

— Пулăш, Тарзан? Передача коробкине пĕччен лартаймастăп.

— Çиччас, гараж хуçине пĕлтеретĕп те, туххăмрах майлаштаратпăр.

— Тен, тепĕр ик-виç çын чĕнмелле?

— Хăвăнне ху пĕлетĕн, манăн васкамалла, çул çине тухмалла, кĕрсе ларакан лесовозсене туртса кăлармалла.

— Чĕнес-и?

Геннадий çав хушăрах кабинăна кĕчĕ те, пĕшкĕнсе, коробкăна икĕ аллипе те ярса илчĕ, çĕклесе хăй вырăнне лартрĕ. Петĕр çăвара карса пăрахрĕ. Гайкисене пăрса çирĕплетме те пулăшрĕ, унтан тин хăйĕн улăпĕ патне çитрĕ. Кунĕпе вăрманта ĕçлерĕ, кабина алăкĕсене яри уçса янă пулин те, чăтма çук пăчă, çитменнине тата хăйăр кĕлеткене те кăтăклантарать, çăвара та кĕрет, куçа курми тăвать. Халсăрланса çитнĕ Геннадий, тракторне лартнă хыççăн, хуçăк кăмăлпа килнелле уттарчĕ, хваттере хăвăртрах çитсе пĕтĕм çемйипе пĕвере шампăлтатса, ишсе чуна уçас килчĕ. Гараж алăкки çумĕнчех Петĕрĕн машини ларать. Хыçалтан хуçи сиксе тухрĕ.

— Тăхта-ха Тарзан,— ум пӳлчĕ вăл.— Санпа пит вашнă калаçмалли пур.

— Васкатăп. Киле. Арăм, ачасем кĕтеççĕ. Хăвăртрах кала.

— Кĕр кунта?

— Ăçта?

— Гаража.

Кирпĕч çурта кĕрсен Геннадий сăмсине чĕлĕм тĕтĕмĕн шăрши чутах ураран ӳкермерĕ. Хăй вăл нихçан туртса курманскер, кунĕпе шăршă çинче ĕçлесен те, чăтма пултараймасть табак-махорка шăршине. Пĕрле ĕçлекен арçынсем ĕçке янă. Унашкаллинчен тĕлĕнме пăрахнă Геннадий ним калама аптрарĕ. Ӳсĕр Петĕр, пуш кĕленчесем çине пăхса илчĕ те, авкаланса, çапла каласа хучĕ:

— Кунĕпех сан пирки калаçрăмăр. Мазăн передача коробкине эс пĕччен йăтса вырнаçтарнă тенине никам та ĕненмест. Суятăн, теççĕ. Ку чăнах пулнă тесе вĕсем умĕнче кала-ха?

— Пулнă. Чăнах,— пĕлтерчĕ Геннадий.

Арçынсем тĕлĕнсе калаçкаласа илчĕç.

Каллех Петĕр сиксе тухрĕ:

— Çакăн хыççăн шухăшларăм та эп, тракторăн хыçал енне те йăтма пултаратăн пуль терĕм.

— Тата мĕн шухăшласа кăларатăн, шăркалчă? — кулса ячĕ Тарзан.

— Мужиксемпе эпир пĕр ещĕк эрехле тавлашнă.

— Эрехне эсĕ-и е вĕсем илеççĕ?

— Эсĕ йăтсан — эпĕ, йăтаймасан...

— Урăхларах пуль, Тарзан йăтсан — эпĕр, йăтаймасан — вăл,— кулса ячĕ юнашар çитсе тăнă гараж хуçи.

— Манпа калаçса килĕшмесĕрех мĕн суту-илӳ тăватăн эс, Петĕр? — аллине ласт сулчĕ Геннадий.— Ман васкамалла, ху йăтса кăтарт.

Алăк еннелле утакан Тарзана механизаторсем тытса чарчĕç.

— Эртелпе ыйтатпăр?

— Сирĕнпеле ĕнтĕ,— килĕшрĕ Геннадий.— Атьăр хам улăп патне.

Улăпĕ, çитмĕл пиллĕк лаша вăйлăскер, капмаррăн кĕтсе илчĕ хĕрсе кайнăскерсене. Геннадий кĕпине, шăлаварне хыврĕ. Йăтнă чухне вĕсем çурăлма пултараççĕ. Тарăннăн умлăхыçлă сывласа илчĕ те Геннадий, мĕнпур вăйĕпе мекĕрленсе, хыçал енчен тытнă трактора пилĕк таран çĕклерĕ, кăшт тытса тăчĕ те çĕр çине кăрслаттарчĕ. Пурте тĕлĕнсе кайрĕç. Машинăпа эрех илме гараж хуçи хăех ячĕ. Вăрмана тухса, хурăнсем хушшинче, шавларĕç. Петĕр ăна чунтан тенĕ пек тав турĕ. Улталамарĕ-çке Тарзан.

Хĕрсе кайнипе тата эрех пулăшнипе Геннадий нимех те туймарĕ, ир енне пилĕк касса ыратма пуçларĕ. Васкавлă пулăшу чĕнме тиврĕ. Укол турĕç, çĕлен наркăмăшĕпе сĕрме сĕнчĕç. Пулăшаканĕсем те кӳршĕсемех пулчĕç. Тамара Прокопьевна пырса пачĕ. Упăшки аптăрать иккен пилĕк нушипе. Мĕнле лайăх пĕр-пĕрне пулăшни!

Эрне хваттерте йăваланса выртрĕ Геннадий. Люба массаж тăвать, пилĕке, çурăма çĕлен наркăмăшĕпе сĕрсе йăвалать. Самай пулма пуçларĕ. Хушăран Петĕрсем, ялти Санька кĕрсе сиплесе хăвараççĕ. Гараж хуçи те пырса кайрĕ. Амăшĕ пычĕ.

— Санька каларĕ мана сан пирки,— тесе сĕтел çине апатçимĕç кăларса хучĕ.— Кулянса ӳкрĕм. Çав ыр кăмăлупах ĕнтĕ эсĕ. Кăралуху та пĕтмест. Ку лайăх-ха, никамран та парăнмалла мар, никам куçĕнчен те пăхмалла мар, аçун кăмăлĕ çампекчĕ.

Сăмах май амăшĕ хĕвĕнчен хут татăкки туртса кăларчĕ,

чĕтрекен аллипе вăл силленсе сывлăш кăларать. Теме сиснĕнех, йăшт чиксе илчĕ Геннадийĕн чĕри.

— Мĕн ку?

— Акă, вула. Парса ячĕ.

— Кам?!

Пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ утакан ывăлĕ çине хĕрхенӳллĕн пăхрĕ амăшĕ:

— Кам пултăр ĕнтĕ, Аннушка...

Амăшĕ аллинчен туртса илнĕ хут татăккине Геннадий антăхса вуларĕ: «Манăн юратнă чунăмçăм. Сана кĕтсе ывăнтăм эпĕ. Туй касĕнчи çăлтăр мана хăй патне чĕнет. Эпĕ ăна пăхса кĕлтăватăп. Ун патне каятăп. Эсĕ, манăн çĕр çинчи çăлтăрăм, нихçан та урăх манпа юнашар çутатас çук. Кĕвĕçсен те, сире усал сумастăп. Аннушка».

— Мĕн пулнă?

— Леш тĕнчене кайрĕ Аннушка. Ӳсĕрпе хлорофос ĕçнĕ те... Тухтăрсем чĕртеймерĕç. Çыруне хăйĕн тантăшĕ пырса пачĕ. Эх, ку латсăр пурнăçа... Хăвăр йĕркеллех пурăнатăр-и?

— Чиперех.

Шкултан чупса килнĕ мăнукĕсемпе калаçса-вылякаласа амăшĕ кухньăналла кĕрсе кайрĕ. Геннадий шухăша путрĕ. Унăн куçĕ умĕнче Аннушка çурхи вăйăра авкаланакан çĕлен пек явкаланчĕ.

## З И Н А

### I

Ирсерен кĕрхи сивĕ тăрать, кăнтăр тĕлне çĕр çине хăяккăн пăхакан хĕвел çавах та сывлăшпа çĕре ăшăтать. Йывăçсем саралман, кĕренленмен пулсан, çу кунĕ теме те пулĕччĕ ун пек вăхăтра. Қаç тĕлнелле каллех сулхăнланать. Апла пулин те, кĕр типĕрех килчĕ кăçал. Çавăнпа усă курса, ял çыннисем тыр-пула, пахча çимĕçе тирпейлĕ те çителĕклĕ пухса кĕртрĕç, кĕлетсене тырă, вите маччисене утă, нӳхреп-тĕп сак айсене пахча çимĕçе чыхса тенĕ пекех тултарчĕç. Чӳк уйăхĕ тĕлне тĕп ĕçсем вĕçленчĕç. Пуçланчĕç вара ялта туйсем, пĕрин хыççăн тепри. Пĕри шавласа иртме ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрмен, тепри юрă-ташăпа кĕрлет. Хут купăс сасси эрни-эрнипе тăрать ял çинче.

Зина куç кĕски умĕнче хăйне хăй пăхса ларать. Çамка çинче пĕркеленчĕксем палăра пуçлаççĕ имĕш.

— Эх, йăшса пыратăп пулмалла, кун пек ват хĕре тăрса юлма та инçе мар, атте-аннеçĕр пуçне кама кирлĕ пулăп-ши вара,— шутларĕ хĕр, çамкине сăтăркаласа. Вăл умĕнче выртакан «балет» ятлă крема илчĕ те çамкине, пит çăмартийĕсене çӳхен сĕрсе тухрĕ, унтан пусарах сăтăрчĕ, ӳт виттĕр тесе турĕ çав процедурăна вăл.

— Çирĕмултă çул кĕтетĕп ĕнтĕ Турă çырнине, ниепле те кĕтсе илейместĕп. Манран пилĕк-ултă çул кĕçĕнреххисем, ав, пĕрин хыççăн тепри качча тухаççĕ, мана çураçма килекен те пулмарĕ ку таранччен,— такама каласа кăтартнă пекех пуплет хăйпе хăй.

Хăйне хăй хĕрхеннипе куççулĕсем юхса анчĕç унăн, пĕчченлĕх кичемлĕхĕ пусрĕ ăна. Çав вăхăтра çенĕкре ура сасси илтĕнчĕ. Зина, куç кĕски умĕнчен тăрса, куççулĕсене хăвăрт шăлса типĕтрĕ, пит çăмартисене пудрăпа çăмăллăн сăтăрса илчĕ. Пускил хĕрĕ Оля пулчĕ-çке ку.

— Зина, мĕн пĕччен ларатăн, айта Римма туйне.

— Ăват шутласа ларattămччĕ-ха, каймалла-и, каймалла мар-и тесе.

— Мĕн шутламалли пур, хăй вăхăтĕнче савăнса юлмалла, кайран каю шăтма пултарать.

— Эсир çамрăк-ха, çавăнпа савăк та. Ман валли каччă çук, ав.

— Ан куллян, Риммăн каччи пĕччен килмен, унпа пĕрле тусĕ пур тет, сан çулхисемех, хусах тет, пуян тет, хăйĕн çăмăл машина пур тет.

— Сан тетӳне итлесе, пĕлĕтех вĕçме пулать. Пĕлмен-илтменрен мĕнле пырăн ун патне? Ют вĕт вăл маншăн.

— Вăт туйра шанăç пулать те, унта уяса тăмаççĕ вĕт ют-и эс ют мар-и.

Зина пичĕ хĕрелнĕ пек пулчĕ, чун кăлтлатса илчĕ, вăл тумланма пикенчĕ. Шкаф умĕнче хĕр платйине тытса пăхать, теприне, унтан татах...

— Ку килĕшет-и, ку килĕшет-и,— тесе ыйтать кашнинчех Ольăран.

— Ак çак тĕксĕм кăвакки питĕ килĕшмелле.

Зина ниепле те лăпланаймасть, татах та татах туртса кăларать тумĕсене.

— Зина, кун пек эс каçчен те пуçтаранаймăн, суйласа ил хăшне те пулин.

Юлашкинчен Зина тĕксĕм-кăвак платйине тăхăнчĕ те куç кĕски умĕнче чылайччен ăна-кăна майласа тăчĕ.

— Зина, йăлăхтарса çитерчĕ мана эс мăшăлти пулни, кун пек эпир туя ĕлкĕрейрес çук, вăл кайĕ те. Ман чăтăм пĕтрĕ, эп уттарам.

— Тепĕр кăштах тăхта ĕнтĕ, çиччас.

Зина çӳçне майласа тутăр çыхрĕ, кĕрхи сезонлă пальто тăхăнчĕ, вара Оля хыçĕнчен урама тухрĕ. Туй сасси кунтах çитет, юрлани-ташлани илтĕнет, хут купăс вылять. Риммăсен кил картинче туй халăхĕпе курма килнĕ халăх хĕвĕшет, ача-пăча кускалать, каччăсемпе хĕрсем пăшăл пăтти пĕçереççĕ.

Хĕр илме килнĕ каччă тăванĕсемпе пӳртреччĕ. Оля Зинăна туртсах кĕрсе кайрĕ пӳрте. Кунта эрех, тĕрлĕ апат-çимĕç, ыхра шăрши тăрать, сывлăш пăчă. Алăк ярмех уçă пулин те, хутнă кăмака ăшши тухса пĕтеймест. Пӳртре палламан çынсем чылай, çавăнпа Зина аванмарланчĕ, каялла тухма та шутланăччĕ, Оля аллинчен тытса чарчĕ. Унтан айккинчен чышкипе тĕртсе пăшăлтатрĕ:

— Ав, çĕн кĕрӳпе юнашар ларать.

Оля пĕр вăтанмасăр малалла сĕтел патне иртрĕ те тус-

тантăшне Риммăна тем каларĕ, вара ним пулман пекех каялла алăк патне Зина çумне пырса тăчĕ. Римма çĕнĕ кĕрӳпе, паянтан хăйĕн упăшкипе ĕнтĕ, калаçса илчĕ. Лешĕ — хăйĕн тусĕпе.

Кăштахран ют ялтан килнĕ туй халăхĕ кил картине кĕпĕрленсе тухрĕ. Зина вĕсенчен маларах тухасшăнччĕ те, Оля кăмака хыçнелле хĕстерчĕ ăна.

— Ан васка, ĕлкĕрĕпĕр-ха тухма.

Пӳрт ăшчикки пушанарах юлсан, çĕнĕ кĕрĕвĕн тусĕ сĕтел хушшинчен тухрĕ. Вăл туйра свидетель те, кĕçĕн кĕрӳ те имĕш. Çавна май Ольăпа Зинăна сĕтел хушшине чĕнме ирĕк панă пулать ăна.

— Эсир хĕр çумĕсем пулатăр эппин çĕнĕ кин енчен. Ан вăтанăр, иртĕр.

Зина турткаланнине кура, Римма та сĕтел хушшинчен тухрĕ, чĕнчĕ вĕсене. Вара ирĕксĕрех ларма тиврĕ сĕтел хушшине. Кĕçĕн кĕрӳ çумне лекрĕ Зина. Лешне Борис тесе чĕнеççĕ имĕш. Зинăран кăшт çӳллĕрех, купăста пуçĕ пек шурă çӳçлĕ, куçĕсем утмăл турат чечекки пек кăн-кăвак, кулли кăмăллă.

— Сарă хĕр, Сире мĕн хурса памалла?

— Эп хамах илме пултаратăп.

Зина çавах та хăйĕн умĕнчи тирĕке каччă еннелле шутарчĕ. Лешĕ аш-пăш хурса пачĕ те тирĕке хĕр умне тĕртрĕ. Аншарли те шурă эрех сыпма Зина килĕшмерĕ. Ăна вара самаях калăплă бокалпа шампански ярса пачĕç. Çавна сыпа-сыпа ларнă çемĕн пуçа та кайрĕ. Анчах та туй сĕтелĕ хушшинче кам чылай хушă сарăлса ларĕ, тухма тиврĕ. Çапах та паллашма ĕлкĕрчĕç вĕсем. Каччăна Борис тесе чĕнеççĕ, вăл Тюмень облаçĕнче ĕçлесе пурăнать имĕш, халь канăва килнĕ. Урама тухсан, Борис Зинăна сĕнчĕ:

— Айтăр, кăштах уçăлса çӳрер.

Хĕр пĕр сăмах та шарламарĕ, каччăпа килĕшсе, пуçĕпе кăшт палăрмалла сĕлтрĕ. Урам тăрăх утнă май улах вырăн шырарĕç, анчах пур çĕрте те мăшăрăн-мăшăрăн тăратчĕç. Зина пуçĕнче пĕр шухăш явăçрĕ: мĕнле тытмалла хăйне каччăпа? Енчен те çулăхас пулсан, килĕшмелле-ши, çук-ши? Зина пĕр сăмахсăр килĕшме шутларĕ. Хăçанччен тăсмалла тет хĕр ĕмĕрне, лăплантарчĕ вăл хăйне.

— Кĕрсе тухар-и пирĕн пата? — сĕнчĕ Зина Бориса.

— Кĕме юрать пуль, анчах пӳрте мар.

— Ăçта-ши, пĕлме юрать пулсан?

— Хӑв ӑҫта кӑмӑллан, ҫавӑнта. Эп ӑҫтан пӗлем, тен, пӑлтӑра, тен утӑ ҫине?

— Пӑлтӑра кӗнӗ чухне килтисем сисме пултараҫҫӗ. Утӑ ҫинче никам та чарас ҫук пире тӑраниччен каласса ларма. Ҫапах та хапхапа мар, анкарти енчен ҫак карта вӗрлӗкӗпе кӗрер.

Вӗсем вӗрлӗкпе пахчана кӗчӗҫ те сарай хыҫнелле утса кайрӗҫ. Утӑ тултарнӑ сарай маччине хӑпарма унта пусма тӑрать. Зина Бориса малтан хӑпартрӗ, кайран хӑй те улӑхрӗ. Кунта кӑҫалхи утӑн тутлӑ шӑрши кӗрет. Кӗрхи каҫ уҫҫи туйӑнмасть кунта, ҫителӗклӗ ӑшӑ. Пӗр-пӗрне курма ҫук, тӗттӗм. Вӗсем, пӗчӗк алӑкран кӗрсе, шаларах иртрӗҫ те юнашар ларчӗҫ. Вӗсен айӗнчи утӑ кӑштах анса кайрӗ, ҫавӑнпа ларма меллӗ мартан ирӗксӗрех ҫурӑмпа выртма тиврӗ. Кун пек питех те меллӗ имӗш.

— Борис, каласа пар хӑв ҫинчен.

— Мӗнех каламалли пур, салтака каиччен юнашар ялта пурӑннӑ, паянхи ҫӗнӗ кӗрӗвӗн пускилӗ. Ҫар хӗсмечӗн вӑхӑчӗ тухсан, салтакран отделенипех Тюмень облаҫне ӗҫлеме кайрӑмӑр. Ҫулталӑк ӗҫленӗ хыҫҫӑн вертолетпа вӗҫме вӗренме ячӗҫ. Вӗренсе пӗтерсен, каллех унта таврӑнтӑм. Унтанпа вертолетпа вӗҫетӗп, бур вышкисем патне вахта рабочийӗсене турттаратӑп, вышкисене тӑратса лартма пулӑшатӑп, сапас пайӗсемпе ытти кирлӗ япаласем те турттарма тивет.

— Интереслӗ сан пурнӑҫ. Тӳлеҫҫӗ-и хӑть?

— Пин тенкӗрен кая тухманччӗ-ха.

Зина шӑпланчӗ, хӑй ӑшӗнче шутласа пӑхрӗ, ҫулталӑк ӗҫлесен, машина илме пулать. Зина тек чӑрмантармарӗ Бориса ыйтусемпе. Борис ӑна ыталаса илчӗ, хӑй ҫумне пӑчӑртарӗ, чуп тума пуҫларӗ, унтан хӑпарсах выртрӗ. Зина ячӗшӗн хирӗҫлем пек турӗ, анчах вӑйсӑррӑн, ирӗлсе кайнӑн.

Ир-ирех автан сасси ҫывӑхрах янрани вӑратрӗ вӗсене. Борис тепре ыталаса илчӗ Зинӑна. Киленнӗ вӑхӑтра алӑк сасси, пушӑ витре хӑлӑпӗ чӑнкӑртатни илтӗнчӗ. Зина амӑшӗ ӗне сума тухрӗ ӗнтӗ. Сарай ҫи хушӑкӗсенчен кӑвак ҫутӑ сӑрхӑнса кӗрет. Борис хӑвӑрт тумланчӗ, ҫипуҫне утӑ ҫӳпписенчен тасатма пикенчӗ. Зина амӑшӗнчен шикленсе ӳкрӗ, ӗсӗклеме пуҫларӗ.

— Мӗн туса хутӑмӑр эпир Борис? Кам каччӑ илӗ мана ял пӗлсессӗн?

— Ним те пулман Зина, чысна мансӑрах ҫухатнӑ вӗт эсӗ.

— Мӗнле ҫухатнӑ пултӑр? Эп пӗр ар сынпа та ҫывӑрса

курман ку таранччен. Эп санне хам йёмпе шăлса илтĕм-çке, ан варалантăр эс тесе. Хам туйрăм, нӳп-нӳрĕччĕ вăл.

— Нӳп-нӳрĕ, нӳп-нӳрĕ... Нӳрĕ тĕрлĕрен пулать вăл.

— Чăнах та, шкула пĕрремĕш класа çӳреме пуçличченех ачасемпе туйла вылякаланăччĕ, çавăнтанпах чыссăр-ши эпĕ? Кам шутлама пултартăр ун пек пуласса. Турра пуç çапса калатăп, ар çын пĕлмен эпĕ.

Зина унччченхинчен те вăйлăрах ĕсĕклеме пуçларĕ.

— Мĕн ĕсĕклемелли пур тек? Сана ырă пулнă кĕçĕр, мана ырă пулнă. Тавай, мирлĕн уйрăлар.

— Эс вара кун пек ырă пулнă хыççăн та качча илме килĕшместĕн-и?

— Мĕн эс, Зина, манăн суйланă хĕр пур ялта.

— Ман мĕн тумалла тет, Борис?

— Ара, туйччен хĕрĕх хĕрĕн, каччăн аллă хĕр теççĕ вĕт. Çавна шута ил те лăплан.

— Хăвăн савни пур пулсан, ма çулăхрăн çĕр каç ман çумма?

— Ытла илĕртӳллĕ кĕлеткеллĕ те, чăтса тăраймарăм, çавах та ар çын вĕт эпĕ.

Зинăн чунĕ тăвăлса килчĕ, çилли тулчĕ.

— Э-э, çук, ырă çыннăм, ниçта та ямастăп сана хамран. Ар çын ĕçне тума пĕлтĕн-тĕк, явап тытма та пĕл. Санне шăлса типĕтнĕ эпĕ, вăл палласем ман çумрах. Каятăп та калатăп мăшкăлларĕ тесе.

— Ан ухмахлан-ха эсĕ, Зина, лăплан. Ху хирĕç пулмарăнçке. Тепĕр тесен, юрататăп тесе пĕр сăмах та асăнман вĕт.

— Пулин, сато эс мана килĕшетĕн. Ак, анатпăр та пӳрте кĕретпĕр, вара килтисене пĕлтеретпĕр эпир пĕрлешме калаçса татăлнă тесе. Шутла пуç тавра, тĕрмене лекес килмесен.

Çак самантра лупас çи алăкĕ уçăлса кайрĕ те пусма çинче Зина амăшĕ курăнчĕ. Аллинче сенĕк.

— Ай-уй! Кам кунта?

— Эпĕ-ха,— анне,— маларах тухрĕ Зина.— Ак, каччă тупрăм, манпа мăшăрланма килĕшетĕп тет.

— Чун тухатчĕ хăрапипе. Эппин мĕн утăсем тăрăх пытанса çӳретĕр? Кĕрĕр пӳртелле.

Çакă ăнсăртран пулса иртнипе тата ытла та тĕлĕннипе Борисăн янаххи усăнсах анчĕ. Вăл хирĕç те, майлă та пĕр сăмах та тупса каламарĕ. Ирĕксĕрех икĕ хĕр арăм варринче пӳрте кĕме тиврĕ. Ĕçсем мĕнле çаврăнса тухнине кура, Зина ашшĕ те кăмăллă юлчĕ.

— Вăт, тăванлашрăмăр та,— ыталарĕ вăл Бориса.— Текех

эп пĕччен мар ĕнтĕ, пур кампа сĕтел хушшине ларса ĕçме,— лăпкарĕ вăл Бориса çурăмĕнчен.— Ан кулян, кĕрӳ, манпа кичем пулмĕ сана.

Темиçе кун урăлма памарĕç ку çуртра Бориса. Шăплă туй ятне те туса илчĕç. Хутсемпе ял советне Зина хăйех çӳрерĕ, васкаттарчĕ ĕçлĕ çынсене, мăшăрăн кану кунĕсем вĕçленсе пыраççĕ, çавăнпа Тюмень облаçне пĕрле тухса кайма хутсене йĕркелеме ĕлкĕрмелле тесе ĕнентерчĕ. Çапла май Зинăпа Борис арăмĕпе упăшки пулса тăчĕç.

Кану вăхăчĕ те иртсех пычĕ. Совеçĕ хистенипе Борис хăйĕн савниййĕпе Аленăпа калаçма, кая юлса та пулин каçару ыйтма шутларĕ. Пĕр кунхине мел тупса ун патне кĕчĕ.

— Алена, итлесемччĕ мана.

— Тек мĕн итлемелли пур сана? Юратса, шанса пурăнтăм сана, эс пур, пĕрремĕш аркă курсанах ирĕлсе кайса суккăрланнă. Кай тухса, куç тек ан куртăр сана! Намăса пĕлесчĕ, сĕтĕрĕнсе килнĕ тата! Кай тухса, кай!

Алена Бориса вăйпах тĕртсе кăларса ячĕ те алăка шалтлатса хупса питĕрсе илчĕ. Çав кирлĕ-ха сана, эрех айне пулса суккăрланнăскере. Тăмсай. Борисăн чунĕ тăвăлса килчĕ. Мĕн пек каясшăн марччĕ вăл юлташĕн туйне, чунĕ мĕн пек туртмарĕ-сиенех пулмалла çав. Пускилле пулнăран, килĕшмесен аван мар терĕ анне те. Аван марри вара акă халь. Борисăн киле таврăнас килмерĕ, вăл уçă уя тухрĕ, тĕлли-паллисĕр ăçта куç курать, çавăнталла утрĕ. Акă вăл улăм ури тĕлне пырса тухрĕ. Унччеех такам улăма туртса меллĕ вырăн тунă. Борис çавăнта ларчĕ те чылайччен пуçне çавăрса шутларĕ. Анчах мĕн тăвайăн ĕнтĕ текех? Мĕн пулмалли пулнă. Чун савман хĕр арăмпах ĕмĕр ирттерме тивет. Тăвăлнă чунне çакăн пек лăплантарса ларнă чухне теменле мĕлке хуплари. Борис пуçне çĕклерĕ те ашшĕне курчĕ.

— А-а, эсĕ-çке ку. Эп пур, хăрасах ӳкрĕм.

— Ывăлăм, мĕн чунна пĕччен нушалантаран? Каласа пар мĕн пулса иртнине.

Çак кунсенче мĕнле пăтăрмаха лекнине Борис тĕппе-йĕрĕпе ашшĕне каласа пачĕ.

— Мĕнле пулăшам-ши сана, ывăлăм? Яла култарас марччĕ çеç. Кайран урама тухма та намăс пулĕччĕ. Пите кĕççе çакса çӳремĕн вĕт.

— Ытлашши шала кĕмен чухне уйрăлмалла пуль тетĕп, атте.

— Тен, пурна-киле пĕр-пĕрне хăнăхăр, ывăлăм. Сăнĕ-пи-

чĕпе, кĕлеткипе ăмсанмалла хĕр арăм-ҫке, чунĕ-характерĕпе темĕнлескер ĕнтĕ.

— Атте, ан ӳкĕтле мана, ҫавах усси пулмĕ.

— Эппин ак мĕн калам: ху пăтă пăтратнă, хăвах ҫисе яр.

Вĕсем ура ҫине тăчĕҫ. Ашшĕ ывăлне кусĕнчен тĕмесесе пăхрĕ те, унта тарăн тунсăх курса, чăтса тăраймарĕ, ывăлне арҫынла хыттăн ыталаса илчĕ. Тем пек шеллес килчĕ унăн хăйĕн ҫунатланнă чĕппине.

— Пурăнас теместĕн пулсан арăмупа, ан пурăн. Эппин ыранах тухса кай хăвăн Тюмень облаҫне. Эпир кунта ăна хăваласа яма мел тупăпăр. Ял умĕнчи намăса епле те пулин тӳссе ирттерĕпĕр аннӳпе.

Чунĕсене вăхăтлăха пусăртнă икĕ арҫын пахчасем хыҫĕпе киле таврăнчĕ. Вĕсене пӳртре икĕ хĕр арăм кĕтсе илчĕ. Зина чунĕ тӳрех ар ҫынсем хушшинче темĕнле калаҫу пулнине туйса илчĕ. Ҫав самантра пуринпе те питĕ кăмăллă пулмаллине ăнланчĕ вăл.

— Ҫавăн чухлĕ ăҫта ҫӳренĕ эс вара, Борис? Таҫта тем пулмарĕ-ши санпа тесе шутласа, чун сиксе тухатчĕ.

Зина ватăсем умĕнчех упăшкине ыталаса илчĕ. Лешĕ ашшĕ-амăшĕ умĕнче аван марланса арăмне тĕртсе уйăрасшăн пулчĕ. Ăҫта унта, Зина хытăрах ыталарĕ. Амăшĕ йăпăр-япăр сĕтел ҫине каҫ апачĕ хатĕрлерĕ, Зинăн таҫтан муртан кĕленче тупăнчĕ. Вара ҫемье кăшăл-кăшăл калаҫса ларчĕ. Черкке хыҫҫăн Борисăн чунĕ ҫемҫелчĕ, ăшĕ вăркама чарăнчĕ. Пурнăҫ япăх та мар-ҫке тесе шутларĕ вăл тепĕр пăртакран.

Зина чун-чĕрипе ăнланчĕ, тек кун пек тăсăлма пултараймасть. Ыранах тухса каймалла вĕсен Борисна кунтан. Лере ҫитсен, куҫ курĕ унта. Ҫапах та упăшкипе килĕштерме инҫетре ансатрах пулĕ. Унта вăл хăй хуҫа пулĕ, никам та хутшăнас-чăрмантарас ҫук.

Ирпе вăл упăшкине вырăн ҫине пырса парсах мухмăр чĕрттерчĕ.

— Тăма та вăхăт пулĕ, чунăм, ҫула пуҫтарăнмалла. Темиҫе кун ҫеҫ юлчĕ вĕт канăвун. Юлашки кунĕсенче лери таврапа лăхпа паллаштарăн.

Зина хăй ҫула пуҫтарăнма пĕр тăхтамасăр тытăнчĕ. Борис ҫухалсах кайрĕ, пĕр сăмах та чĕнме пултараймарĕ, мĕнмĕн илмеллине кăтартса ҫеҫ тăчĕ. Станцине машинăпа ăсатма пускиле ыйтрĕҫ. Хăйсен машинине гаража лартса хăварчĕҫ. Машина ҫăрине Зина хăй кĕсйине чикрĕ.

## II

Борис пуранна хула пӗчӗкскер пулчӗ. Юнашарах юхан шыв юхса выртать. Пӑр ларма ӗлкӗрнӗ, йӑлтӑртатса куҫа йӑмӑхтарать. Кунта юр ҫара ҫӗре витнӗ ӗнтӗ. Талккишпе куҫ виҫейми тайга. Шурӑ юр ҫинче вӑрман уйрӑмах симӗссӗн курӑнать. Тӗпрен илсен, хыр, чӑрӑш ӳсет, лаптӑк-лаптӑк кедр курӑнать. Шыв тӑрӑх ҫыранпа лиственница ӳсет. Халь йывӑҫсем ҫап-ҫара.

Борис Зинӑна хӑйсен общежитине вырнаҫтарасшӑнччӗ, анчах комендант яхӑнне те ямарӗ, юрамасть, ҫитменнине тата вӗсем валли уйрӑм пӳлӗм ҫук терӗ. Борисӑн ирӗксӗрех хваттер шырама тиврӗ. Телее, вӑл хӑйсен аэропортӗнче уборщицӑпа тӗл пулчӗ. Лешӗ ку хулара хваттер ӑҫта шырамаллине ӑнлантарчӗ. Борис ҫав кунах пушӑ ларакан ҫурт тупрӗ. Ҫурт хуҫисем пӗррехинче тайгаран таврӑнман. Ҫавӑнтанпа вӗсен тӑлӑха юлнӑ ачисем аслӑ аппӑшӗ патӗнче пурӑнаҫҫӗ. Вӗсене усрама укҫа кирлӗ, ҫавӑнпа пушӑ ҫурта хваттер яраҫҫӗ те. Уйӑха аллӑ тенкӗ ыйтаҫҫӗ. Тепиншӗн хаклӑрах та вӑл, Борис тытӑнса тӑмарӗ, килӗшрӗ, пӗччен хӗр арӑма тӑлӑхсене ӳстерме йывӑррине курчӗ вӑл.

Тул енчен ҫурт киввӗн те пӗчӗккӗн курӑнать. Шала кӗрсен, самаях анлӑ вӑл, хӑтлӑ. Кухня уйрӑм, ҫывӑрмалли пӳлӗм уйрӑм, вӗсене кӗме алӑксем каснӑ, уйӑракан шалти стенисем те хӑмаран мар, ик енӗпе тикӗслесе якатнӑ пӗренесенченех. Пӗр сӑмахпа, ӗмӗрсем ларма пултарать Ҫӗпӗр ҫурчӗ.

Кану кунӗсем татах юлнӑччӗ-ха Борисӑн, вӗсемпе ирӗклӗнех Ҫӗнӗ ҫула кӗтсе илме пулатчӗ. Анчах кунта вӗҫсе килнӗренпе Борисӑн чунӗ аэродрома туртӑнать, ал тупанӗсем штурвалшӑн тунсӑхласа ҫитнӗ. Тата пӗр пӳлӗмре хӗрарӑмпа чылай хушӑ нихҫан та пулса курман вӑл, ҫавӑнпа Зина та часах йӑлӑхтарса ҫитерчӗ ӑна. Каҫсенче юрать теме пулать: савӑшатӑн, ҫывӑратӑн, анчах кӑнтӑр кунӗсенче мӗн калаҫмалли пур кунсерен? Мӗн каламаллине малтанхи кунсенчех каланӑ пӗр-пӗрне. Хулана тухса ҫӳрес, вӑл пӗчӗккӗ, ҫур кун хушшинчех паллашса пӗтнӗ унпа. Тус-юлташӗсенчен ютшӑнать Зина. Лешсем, таҫта та пулса курнӑскерсем тата шуйттан шӑтӑкне те тенӗ пек кӗрсе курнӑскерсем, тем те пӗр калаҫаҫҫӗ, шавлӑ та ирӗклӗ тытаҫҫӗ хӑйсене. Зина вара, шӳте пӗлсех кайманскер, ҫавна май калаҫусене пур чухне те ӑнланаймаскер, калаҫӑва хутшӑнаймасть е хутшӑнсан та кирлӗ марла персе ярать, ҫавӑнпа упӑшкин компанийӗсенчен пӑ-

рӑнма тӑрӑшать. Юрать-ха тус-юлташӗсем ӑнланакан сынсем, кулмаҫҫӗ Борисран, Зинӑна та йӑлӑхтармаҫҫӗ.

Борис чӑтрӗ-чӑтрӗ ҫемьери кичемлӗхе, анчах чӑтӑмӗ ҫитеймерӗ унӑн, юлашкинчен кану кунӗсем вӗҫленмесӗрех аэродром пуҫлӑхӗ патне кӗчӗ.

— Начальник юлташ, йӑлӑхрӑм килте ларса, вӗҫес килет.

— Ӑҫта васкатӑн ҫавӑн пекех? Ирттер савӑклӑн чуп-чуп уйӑхне. Ҫӗнӗ ҫул уявне хаваслӑн кӗтсе ил, унтан, тархасшӑн, вӗҫ. Тен, пӗр ирӗклӗ кун та пулмӗ.

— Штурвалран тунсӑхласа ҫитрӗм, алӑсем ак кӗҫӗтеҫҫӗ ӗҫшӗн.

— Тунсӑх куҫусенченех куратӑп, хавас мар эс мӑшӑрупа.

Борис шарламарӗ, куҫӗсене ҫеҫ тартрӗ.

— Ӗҫсем ҫавӑн пекех пулсан, юрӗ-ҫке, вӗҫ эппин пӗр эрнелӗхе тӑххӑрмӗш вышкӑна.

Борисӑн сӑн-пичӗ ҫуталсах кайрӗ, юлашкинчен кичемлӗхрен хӑтӑлать вӑл. Ав унӑн вертолечӗ ӑна чӑтӑмсӑррӑн кӗтсе ларать. Борис ун патне сывӑх тӑванӗ патне васканӑ пекех чупса кайрӗ. Машинӑпа такам вӗҫнӗ пулмалла, кабинӑра хӑшпӗр япаласем хӑнӑхнӑ вырӑнта мар. Борис вӗсене каллех хӑйне килӗшнӗ пек вырнаҫтарчӗ. Штурвал умне вырнаҫса ларсан, ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ вӑл, чунӗ чул муклашкинчен хӑтӑлчӗ тейӗн. Вӑл машинӑна чӗртрӗ, мотор тикӗссӗн кӗрлет. Ҫав вӑхӑтра механик аллипе сулса чупнине курчӗ вӑл, ҫавӑнпа мотора сӳнтерме тиврӗ. Хӑшкӑлса чупнӑ механик записка тыттарчӗ ӑна. «Пӗр тӑхтамасӑрах Томск облаҫне вӗҫӗр» тенӗ унта.

— Пирӗн участок мар вӗт вӑл.

— Командир хушрӗ.

— Юрать, вӗҫмелле-тӗк, вӗҫмелле.

Моторӑн вӑйлӑ шавне те тунсӑхласа ҫитме пулать имӗш. Ак, халь Борис ҫав шавпа килленсе пырать, кану кунӗсенче ывӑннӑ чунӗ канать унӑн ҫак вӗҫевре. Каласа янӑ вырӑнта тата виҫӗ вертолет асӑрхарӗ вӑл. Ку ахальтен мар, шутларӗ Борис. Вертолетсем ҫумне анса ларсан, ҫирӗм ултӑ виле икӗ ретӗн выртнине асӑрхарӗ. Тахҫан пӗрле вӗҫнӗ юлташсене курчӗ те ыйтрӗ:

— Мӗн пулнӑ вара кунта?

— Ху пӗлен, ку облаҫре типӗ саккун. Кӑҫалччен хамӑр ҫӗр-шыв спирчӗпе усӑ куратчӗҫ ӗҫре. Техника спирчӗ пулин те, хушӑран сыпкалатчӗ хӑшӗ-пӗри. Ку хутӗнче америка спиртне илсе килнӗ пулнӑ. Вӑт кусем ҫав океан тепӗр енчи шӗвеке тутанса пӑхас тенӗ. Пирӗннинчен, тен, тасарах тенӗ

пулĕ ĕнтĕ. Ак сана результат. Асту, тасарах тăвĕç вĕсем, американецсем. Вĕсене укçа пултăр, уншăн тем ăшне те тем те пĕр хутăштарма хатĕр вĕсем.

Хăрушă пăхма кун пек сăн çине, чĕре çурăлать шелленипе, ӳт-пӳ сӳлет, алăсем чĕтреççĕ. Пурне те тăватă машинăна тиерĕç. Вара эпир вĕсене хулана илсе çитертĕмĕр, унта вĕсене тăванĕсем кĕтсе илчĕç. Чун чăтас çук ун пек сăна тепĕр хут курма. Борис чылайччен манаймарĕ ăна, тĕлĕксенче те сĕмленчĕ.

Зина, ют хулара пĕччен юлнăскер, ĕççĕр аптăранă вăхăта ытларах вырăн çинче ирттерчĕ. Шăтăка выртнă упапа танлаштарсан та çылăх пулас çук. Кĕнеке вуласа пăхма та пикенчĕ, анчах часах йăлăхтарчĕ, анчах çывăрса вăраннăскерне, татах тĕлĕрттерчĕ. Ялта чухне те кĕнеке вуласах кайман Зина. Пĕчченшĕн апат-çимĕç хатĕрлес килмерĕ унăн, холодильникре пулнă хатĕр çимĕçсемпе, консервăсемпе çырлахрĕ. Тепĕр чухне çăкăрсăрах ăшне вырттарчĕ, тухас килмерĕ унăн шартлама сивĕре урама, çăкăр лавкки инçех мар пулин те.

Вырăн çинче пуш шухăшсемпе вăхăта кĕскетет халь Зина. Тахçанхи ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ унăн: качча тухрĕ вăл, çитменнине, упăшки пуян. Лере, ялта, вĕр-çĕнĕ тенĕ пек машина юлчĕ. Кĕнеке çинче аллă пин выртать. Сберкнижкине Зина Борисăн хучĕсем хушшинче тупрĕ. Тепĕр каштахран татах çавăн чухлĕ пухăнĕ, вĕсене иккĕшне нумаях кирлĕ мар пурăнма, çи-пуçĕ пур халлĕхе, апат-çимĕçĕ нумаях каяс çук, вутти-шанки укçасăр тенĕ пек кунта, турттарса килмен ан ӳркен çеç. Хутса яр та кăмака, лар пăхса телевизăр. Упăшки кун пек час-часах килте пулмасан, çурма çисе те пурăнĕ-ха вăл.

Борисран та тунсăхласа çитрĕ Зина. Пĕр эрнелĕх каятăп терĕ те лешĕ, ак иккĕмĕш эрне те вĕçленсе пырать. Çĕнĕ çул эрнинче кутăн-пуçăн çаврăннă çил-тăман лăпланчĕ. Сурхури кунне уяртрĕ. Зина паян апат вăхăчĕ хыççăн магазинсене тухса кĕме шутларĕ, пĕлмелле-çке: мĕн сутаççĕ кунта? Универмагра ăна хăмăр норка кĕрĕкĕ килĕшрĕ, шăп та лăп ун çине çĕленĕ. Ытараймасăр темиçе те пыра-пыра пăхрĕ, продавщицăсем куларах пăха пуçласан çеç чуна хытарса çаврăнса утрĕ. Борис таврăнсанах илтеретĕп тесе шутласа хучĕ.

Хулана вĕççе таврăнсан, Борис ĕçри юлташĕсемпе «Обь» ресторана райрĕ. Иртнĕ кунсенче мĕн курнине хăвăртрах манас килчĕ унăн. Ресторан хупиччен тухмарĕç летчиксем сĕтел хушшинчен.

Борис кил тĕлне çывхарса пычĕ. Зинăна хăнăхсах пырать

пулмалла вăл, ак уншăн тунсăхланине туять халь, хăвăртрах ăшă пӳрте кӗрсе, ун вӗри кӗлетки çумне йăпшăнас килет, чуп туса ачашлас кăмăл ӳссе пырать. Вӗçевре мӗн курнине те каласа памалла, унсăрăн лăпланас çук Зина. Пӳрт умне çитсе, алăка шаккарӗ Борис. Самаях кӗтме тиврӗ унăн, унтан теп-ре шаккарӗ вăл, ку хутӗнче хытăрах.

— Кам унта? — илтӗнчӗ кăштахран..

— Эпӗ-ха, Борис.

— Шӗкӗр турра, çитрӗн пулать.

Вăл та тунсăхланă, ав, чупса пырса ыталама тăчӗ, анчах эрех шăршине туйса, тăпах чарăнчӗ.

— Фу-у, кӳпсе лартма ӗлкӗрнӗ те.

— Ăнлан эсӗ, юнашар облаçри пӗр вахтăра пӗр çын та юлман, ушкăнӗпех сарăмсăррăн вилнӗ, вăт çавсене асăнтă-мăр та кунта таврăнсан.

— Теприне халапсемпе ӗнентер, мана мар.

— Сăвăри ӗненмен Фома мар вӗт эсӗ.

Зина ун çине сивӗ куçсемпе пăхрӗ. Иккӗш мӗнле тӗл пу-лаcса хăй ăшӗнче пин хут та пуль ӗмӗтленнӗскер тата вăл юмахри пек пулса иртессе шаннăскер, халь вăл çилӗпе тул-чӗ, вара шăмăрса каларӗ,

— Урăличчен ман çума ан çыпçăн, ав диван çине вырт,— терӗ те спальнăйӗнче çухалчӗ, алăкне çаклатрӗ.

Çакна кӗтменскер, Борис малтан çухалса кайрӗ, унтан çиллине чараймасăр кăшкăра пуçларӗ:

. — Ăхă, хăвна кирлӗ чухне ман ӳсӗр чарман сана! Халь ва-ра кансӗрлет эппин?!

— Нушалан пӗччен, тен, кăмăллăрах пулăн.

Шавланипе ним усси те пулас çуккине кура, Борис лăп-ланчӗ, вара хыпăнмасăрах диван çине лапларӗ те кӗçех хар-латтарма та тытăнчӗ.

Пӗчченлӗхпе нушаланасси Зинăн хăйӗн пулчӗ вара. Ку саманта сахалтан та пӗр эрне кӗтнӗскер, хăйне ӳпкелесе те илчӗ вăл. Мӗн çитмерӗ сана, ухмаха, усал кӗсре пек шăмар-са хăратма? Тăм писмен мар-и вара эс çакăн хыççăн? Зина алăк çекӗлне вӗçертрӗ. Кăштахран тухса пăхрӗ. Упăшки ним пӗлми çывăрнине курса, каялла кӗчӗ те мӗн ирченех аяк çине çаврăна-çаврăна выртрӗ, хаш та хаш сывларӗ, ӗсӗклесе те илчӗ, анчах чавса çывăх та çыртма çук çав.

Ир енне юнашар пӳлӗмре ура сассисем илтӗнчӗç. Борис кухньăна шыв ӗçме кайрӗ ӗнтӗ. Унтан пӳрт алăкӗпе çенӗк алăкӗ икӗ хутчен уçăлса хупăнчӗç. Ура сассисем спальнăй алăкӗ патне çывхарнăн туйăнчӗ. Çук çав, диван патнех утса

кайрĕ упăшки Кăшт тăхтасан, Зина шыв ĕçем пек тăвас тесе, пӳлĕмрен тухса кухньăна утрĕ, хăй вăрт диван еннелле пăхса илчĕ. Борис ку хутĕнче хывăнсах выртнă. Зинăн чунĕ савăклăн кăрт турĕ. Каялла таврăннă чухне вăл спальнăйне кĕмерĕ, упăшки çине пырса выртрĕ те тутинчен, сăмсинчен, куçĕсенчен чуп тума пуçларĕ, алă лаппиcемпе ар çыннăн çăмлă кăкăрне сăтăрчĕ. Борис та чăтса тăраймарĕ, тем самантра Зинăна хăй айне пĕтĕрсе чикрĕ.

Пĕр кана хĕрӳллĕ савăшнă хыççăн канлĕн тăсăлса выртрĕç вĕсем. Борис йывăррăн сывларĕ. Зина кăмăллăн кулса выртрĕ. Кăштахран хăйне канăç паман шухăша пĕлтерме вăхăт тесе шутларĕ.

— Борис, универматра норка кĕрĕкĕ сутаççĕ, шăп та лăп ман çине çĕленĕ, эп виççе пăхрăм. Илмĕпĕр-и?

— Çак самантра мар ĕнтĕ ун пирки калаçасси, килленерха пĕр-пĕрин ăшшипе.

— Ара, тĕлĕкре те курăна пуçларĕ те...

— Мĕнле натура вара сан, пĕтĕм кăмăла пăсатăн. Илĕпĕр-çке, илĕпĕр, мĕн шутламалли пур ун пирки, кил çуммарах, ăшă вырăна ан сивĕт. Кĕрĕкĕ ниçта та тармĕ вăл.

Ирпе тăнă-тăман Зина Бориса сберкассăна илсе кайрĕ. Лешĕ уçăлнă кăначчĕ. Расход ордерне Зина хăйех çырчĕ.

— Ирех кун чухлĕ укçа çук пирĕн, сехет пек кĕтме тивет.

Зина вырăн тупма пĕлмерĕ, чăтăмсăррăн ун-кун кумрĕ. Çавна кура, кассир ыйтрĕ:

— Сире мĕн валли кирлĕччĕ укçи?

— Магазина кайма.

— Тӳрех çавăн пек каламаллаччĕ, эппин чек çырса парам.

— Çыр çав, çыр,— «эс» тесе калаçрĕ Зина ялта çавнашкал пуплеме хăнăхнă май.

Зина чека хăвăртрах ярса илчĕ те Борис çинчен мансах универмага иртрĕ. Борис пашкаса çитнĕ çĕре лешĕ темиçе кĕрĕк висме ĕлкĕрнĕччĕ. Юлашкинчен вĕсенчен пĕрне суйласа илчĕ. Ăна кĕтнĕ хушăра ăшă тум тăхăннă Борис пăчă магазинра ăшша пиçрĕ. Çĕнĕрен шартлама сивĕ урама тухасса аран чăтса иртерчĕ.

Киле таврăннă-таврăнман Зина каллех тĕкĕр умĕнче явкаланчĕ, каллех упăшки çинчен манса кайрĕ пулмалла. Хырăмĕ выçнă Борис чăтса тăраймарĕ, сăмах хушрĕ:

— Ку суртра апат çитереççĕ-и паян?

— Килте çимелли çук, кайса кил-ха магазина, хăвна мĕн килĕшет, çавна ил.

— Вăт пурнăç кайрĕ, эп ик эрне штурвал алăран яман,

килте вара апат-çимĕç çук. Пĕр май хуп туртман пулĕ те эс кунта?

— Ӳпкевлетĕн эппин? Апла ыранах ĕçе вырнаçатăп.

— Сăмах та каламалла мар.

— Эс ан кала.

— Общежитире хамăннах апатланма тивнĕ, çынна шанман. Кунта та аплах пулсан, эс мĕн тума кирлĕ тет?

— Хăв хыçăнтан упаленекене тупмалла пулнă.

— Эс ху çакăнтăн ман майран.

— Хăш енчен пăхсан мĕнле-ха унта.

— Ах, кĕсре, эс манах айăпласшăн-и?

Борис тарăхнипе çĕлĕкĕпе кĕрĕкне çулса илчĕ те тăхăнмасăрах алăка шалтлатса хупса тухса кайрĕ. Вăрахчен çӳрерĕ вăл урамсем тăрăх тĕлсĕр-палсăр. Хула хĕррине те тухрĕ, çыртан ачасем йĕлтĕрпе ярăннине пăхса тăчĕ. Унтан кил умне çитсе ларчĕ, анчах пӳрте кĕрес килмерĕ унăн.

Хĕл сиввинче ура айĕнче юр кăчăртатни аякранах илтĕнет. Çырмаран пĕр вăтăр çулсенчи палламан ар çын хăпарать. Хăрах аллинче кукăр кĕвенте, тепĕр аллинче икĕ пушă витре. Çирĕп кĕлеткеллĕ, сарлака кăкăрлă. Çийĕнчи фуфайкине ӳле янă, вĕри кĕлеткинчен пăс тухать. Çăл патне шыва каять ĕнтĕ. Ăçта пурăнать вара вăл унта? Хăйсем куçса килнĕ чухне çурт тавраш ĕçукăччĕ-çке çырма енче. Ар çын сывлăх сунса иртсе кайрĕ. Борис ура çине тăчĕ, палламан çын килнĕ сукмакпа анаталла утрĕ. Нумаях пулмасть лартнă çурма çĕр пӳрт имĕш унта. Çĕр çийĕнче çурт тăрри те кăмака тăрпи çеç палăраççĕ. Тăрпаран шĕвек тĕтĕм тухать. Интересленсе кайса, Борис шала кĕчĕ, чĕрĕ чун курăнмарĕ. Пӳрт айлăмра пулин те, пӳлĕмре телевизор ларать. Çур пӳлĕме диван йышăнать, алăк çумĕнче холодильник тикĕссĕн ĕçлет. Çурăм хыçĕнче витре хăлăпĕсем чăнкăртатрĕç, хуçа тулли витресемпе таврăнчĕ.

— А-а, хăна килнĕ, ирт малалла, ав, вырнаç диван çине.

— Каçар, чĕнмесĕрех сĕмсĕрленсе кĕтĕм.

— Мĕн калаçмалли пур, пускил пускилпе пурăнмалла, паллашар, калаçса ларар..

Борис алăри сумкине алăк умĕнче хăварчĕ те хуçана алă тăсрĕ.

— Мана Борис тесе чĕнеççĕ.

— Мана — Никандр.

— Вăт аван. Ăçтисем пулатăн?

— Саратов облаçĕнчен. Ял пирĕн Атăл çыранĕнче вырнаçнă.

— Эпир мӑшӑрпа Чӑваш енрен.

— Энтешсем тесе шутлама пулать пире. Эппин паллашнӑ ятпа сыпса паллӑ туни те чармӗ.

Борис сумкинчен ҫур литр ҫуттине кӑларчӗ. Никандрӑн холодильникре хура вӑлча тупӑнчӗ.

— Бригадӑра ӗҫлекен вырӑнти юлташсемпе пулла кайрӑмӑр, хӗрӗх ҫичӗ килӧ туртакан пулӑ туртса кӑлартӑмӑр, вӑт ҫавӑн ӑшӗнчен пӗр витре вӑлча тухрӗ.

Никандр калаҫнӑ май ҫӑкӑр касрӗ, вӑлчана тирӗке кӑларса хучӗ, холодильникрен тата услам ҫу, тӗтӗрнӗ кӑлпаса, типӗтнӗ пулӑ кӑларчӗ.

— Пуллине вакран кӑларма тиврӗ. Пулӑ пуҫӗ тухаймасть шӑтӑкран, виҫҫӗн-тӑваттӑн анлӑлатаҫҫӗ ансӑр шӑтӑка. Пуллин шыв тӗпнелле туртать, лескана ура тавра явма тиврӗ, пулла тартас мар тесе. Вӑт ҫавӑн вӑлчи мана та пӗр банка лекрӗ.

Ырлӑ-мирлӗ шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса ларатчӗҫ ар ҫынсем, Зина пырса кӗчӗ.

— Кунта ҫитме те ӗлкӗрнӗ, тӗпсӗр пыр!

— Зина, ҫын умӗнче тытма пӗлесчӗ хӑвна, аван мар вӗт.

— Ак сана аван мар, ак сана аван мар!— Зина Бориса чышкисемпе тӑмалама пуҫларӗ. Лешӗ ура ҫине тӑчӗ те арӑмӗн аллисене ҫатӑрласа тытрӗ. Зина пӗтӗм вӑйран туртӑнчӗ те упӑшкин аллисенчен вӗҫерӗнсе лаках ларчӗ кут ҫине. Намӑсланса сиксе тӑчӗ те алӑкран тухса вӗҫрӗ. Унтан таврӑнчӗ те алӑка яри уҫса тултанах юнарӗ:

— Каҫармастӑп эп сана кунщӑн!

Борис йывӑррӑн хаш сывларӗ, пуҫне сулса илчӗ.

— Норка кӗрӗкӗ илсе патӑм паян, кӑмӑлне тултартӑм терӗм, тата тем ҫитмест ӑна.

Вӑл васкавлӑн тумланчӗ те сумкине илсе алӑк хӑлӑпне тытрӗ.

— Ан кӳрен, Никандр, халлӗхе сыв пул, вӑхӑт тупса ларӑпӑр-ха канлӗн.

Хул пуҫҫипе тӗртрӗ Борис ҫенӗк алӑкне, вӑл уҫӑлмарӗ, шал енчен сӑлӑп хунӑ. Темиҫе хут хыттӑн шаккарӗ, шал енчен сас-чӗв пулмарӗ. Ҫилӗ тулнӑ Борис урапа та тапрӗ алӑка, усӑ пулмарӗ. Вӑл кӑштах кӗтсе тӑчӗ те йывӑррӑн ҫаврӑнса утрӗ алӑкран. Ҫакна кӗтсе тӑнӑн самант чупса тухрӗ Зина, хӑй платье вӗҫҫӗнех.

— Ӑҫталла ҫул тытрӑн тата, кӗрт йытти?

— Сан ӗҫ мар.

— Борис, таврӑн, урӑх хирӗҫер мар. Шӑртланма пӗлет тата.

Зина Бориса хӑваласа ҫитрӗ, кӗрӗк ҫаннинчен ҫатӑрласа ярса илчӗ.

— Юрӗ-ҫке, эп ытлашши калаҫрӑм пулӗ, каҫар ӗнтӗ, айта кӗрер, куран вӗт, эп шӑнса кайрӑм.

Борис аллине сулчӗ те ҫатӑрласа тытнӑ кӗрӗк ҫаннине туртса илчӗ, унтан пӗр сӑмах шарламасӑр пӳрте кӗчӗ, сумкине кухньӑна лартрӗ, ҫӗлӗкне, кӗрӗкне хывса ҫакрӗ. Кӑрлач сиввинче чӗтреве ернӗ Зина кӗчӗ пӳрте.

— Хывӑнма васкамалла марччӗ, шыв ҫук килте.

— Ма ҫук вӑл, эс мӗн туса ларнӑ?

— Йывӑр мана шыв йӑтма, тата сукмакӗ ансӑр та шуҫлак.

Борис тумланмасӑрах икӗ хутчен кайса килчӗ шыва.

— Вутӑ илсе кӗрсе кӑмака хутса яр,— хушрӗ Зина.

— Эп шыв йӑтнӑ вӑхӑтра та пулин хутса ярайманӑн-и вара?

— Кил карти пӗҫ кӑкӗ таранах юрпа тулнӑ, вутӑ шаршанӗ патне ҫитме ҫук.

— Кӗреҫе ҫук-им сан валли сукмак та пулин уҫма?

— Кӗреҫи алӑран тухса ӳкет, аври яка, алӑ та шӑнать.

— Эх, ял хӗрӗ темерӗн, улпут майринчен те ачаш. Ав мӗншӗн качча илекен пулман сана.

Ку сӑмахсем хыҫҫӑн Зина чуттах шӑртланса каятчӗ, анчах ку хутӗнче чӑтӑмне ҫитерчӗ, шарламарӗ, мӗншӗн тесен Борис витӗрех ӑнланчӗ ӑна.

Борис пӗр ҫӗклем вутӑ пуленкки йӑтса кӗчӗ, кӑмака ҫинчен типӗ пуленкке илсе чӗлӗ чӗрчӗ, кӑмака айӗнчен хурӑн хуппи кӑларчӗ, вара кӑмака хутса ячӗ. Сӑмалаллӑ вутӑ шатӑртаттсах ҫунчӗ. Унтан кил картине тухса, икӗ сехет пек юр тасатрӗ, ытти вак ӗҫсене турӗ. Хӗллехи кун мулкач хӳри пек кӗске. Кӗҫех каҫ та пулчӗ. Борис пӳрте самаях ывӑнса кӗчӗ. Тепӗр кунне ир-ирех ӗҫе тухса утрӗ. Килтен тухсанах чунӗ ҫӑмӑлланчӗ, кӑмӑлӗ ҫӗкленчӗ унӑн, ӗҫе мар, тӑван килне каять тейӗн.

Ҫанталӑк тӗксӗмленчӗ, кӑшт ӑшӑтрӗ. Виҫӗ кун пӗр чарӑнмасӑр кӑпӑшка юр ҫурӗ. Шултра юр пӗрчисем ерипен вӗҫсе ӳкрӗҫ ҫӗр ҫине. Урамсем хулӑн юрпа витӗнчӗҫ. Кил карти каллех юрпа тулса ларчӗ. Виҫӗ кун хушшинче ниҫта та тухмарӗ Зина. Юр та тасатас килмерӗ унӑн. Тӑваттӑмӗш кунне уяртрӗ. Тулта ҫемҫе ҫанталӑк тӑчӗ. Зина магазинсем тӑрӑх ҫӳреме шутларӗ. Ҫӗнӗ кӗрӗк тӑхӑннӑран хӑйне хӑй киллеьнсе,

чылай магазина кĕрсе тухрĕ вăл, икĕ сетка апат-çимĕçпе тултарчĕ. Килĕ умĕнче пускиле тĕл пулчĕ. Сывлăх сунса, лешĕ килнелле анса кайрĕ. Мĕнле культурăллă çын, кăмăллă, кĕрнек кĕлеткеллĕ, пичĕ илемлĕ, куç харшийĕсем çăра та сăмала пек хуп хура, куçĕсем уççăн пăхаççĕ, ăслăн курăнаççĕ. Ирĕксĕрех туртăнтарать ку çын хăй патне. Уйрăмах сывлăхпа вĕрсе тăракан ӳт-пĕвĕ. Сеткине урайне лартса, Зина пускил патне утрĕ. Хумхануллăрах туйăмпа пырса кĕчĕ вăл Никандр патне. Лешĕ кăмака умĕнче аппаланатчĕ, хутса яма пикенетчĕ.

— Кĕме юрать-ши?

— Ма юрамасть, кĕрĕр, кĕрĕр.

— Сирĕн мăшăрăрпа паллашнăччĕ-ха. Сирĕнпе çук вара. — Никандр хм туса кулса илчĕ, лутра кăмака ани умне кукленнĕскер, вутсене кăмакана чикрĕ те кăмака алăкне хупса ура çине тăчĕ.

— Сире Никандр тетчĕç пулмалла.

— Ахă.

— Темĕнле хăнăхман ят.

— Тĕлĕнмелли çук, ун пек ят сахал параççĕ, уйрăмах хальхи саманара.

— Эп ак мĕнпе-ха, электрицăра пултаратăр-ши?

— Хама валлилĕх чухлатăп.

— Эппин пире валлилĕх те, кухньăра ман çутă çунмасть, йăпăртлăх пымăр-ши?

— Кăштахран çитĕп.

Зина чупнă пек хăпарчĕ килне. Кухньăна кĕчĕ те пукан çине тăрса лампочкăна кăштах пăрса кăларчĕ. Çи-пуçне хывса атлас халат уртса ячĕ, капрон чăлха тăхăнчĕ. Унпа урасем хĕвел çинче пиçнĕ ӳт пек илемлĕн курăнаççĕ. Тĕкĕр умĕнче куç харшисене сăрăпа кăшт илемлетрĕ. Çав хушăра çенĕкре ура сассисем илтĕнчĕç. Алăкра Никандр курăнчĕ, вăл кĕпе вĕççĕнех. Мĕнле шăнмасть вăл, вĕри юнлă пулĕ. Кун пек татах та илĕртӳллĕ вăл. Зина вĕтĕ утăмсемпе ăна хирĕç утрĕ.

— Ай, Эсир çитрĕр те-çке.

Зина ăнсăртран тенĕ пек халат аркине турткаларĕ, чи аялти тӳмине тӳмелерĕ.

— Васканипе мансах кайнă тӳмелеме.

— Ну, кăтартăр, ăçта çунмасть?

Кухньăна утса кĕрсе, Зина выключателе пусрĕ, çутă çунмарĕ. Пукан çине тăрса, Никандр лампочкăна пăрса кăларчĕ, куçĕ умне тытса шала пăхрĕ, лампочка çунса кайман. Ăна Зинăна тыттарчĕ, патрона пăрса кăларчĕ, шалти клеммисене

отверкăпа хускаткаларĕ, вара патронпа лапочкăна вырăна пăрса лартрĕ. Унтан пукан çинчен анчĕ те хăех выключателе пусрĕ. Çутă ялт çунчĕ.

— Ĕçĕ те сурмалăх çеç.

— Сирĕншĕн çавăн пек пулĕ те, маншăн вара...

Зина холодильнике кĕнĕ чухне Никандр тухса кайма тăчĕ.

— Тăхтăр-ха кăштах, Никандр, ларăрсамăрччĕ самантлăха та пулин сĕтел хушшине.

Холодильникрен коньяк кĕленчи, тĕтĕрнĕ пулă, вăлча тухрĕ. Зина хăвăрт çăкăр касса хучĕ.

— Сирĕн, арçынсен, аллăрсем хăнăхнă, уçăр-ха çак банкăсене, паллах, кĕленчине те.

Никандр хирĕç пĕр сăмах чĕнмесĕр сĕтел хушшине ларчĕ, мĕн кирлине чиперрĕн уçрĕ.

— Çыпçăнуллă Сирĕн аллăрсем, тем тума та пултараççĕ.

— Ķашни ар çыннăнах çавăн пек пулĕ вăл.

— Ан калăр, тепри пăта çапма та çынна чĕнет, хăй ар çын мар пек.

— Курман ун пеккисене.

Зина черккесене тултарчĕ.

— Сыпса пăхар эппин пускилле, пĕр-пĕрине пулăшса тăмалла пултăр.

Черккесене иккĕш те пушатрĕç. Зина чĕлхи сӳтĕлсех кайрĕ, вăл тем те пĕр сӳпĕлтете пуçларĕ. Черкке тултарнă чухне хĕрарăм тулли кăкрипе юриех арçыннăн хулпуççине сĕртĕнчĕ, пукан çине ларнă чухне халат аркине майланăн çĕклесерех илчĕ, çавна май урисем кăк тăранах уçăлчĕç. Халат аркине уçарах хучĕ Зина, капронпа тăртăннă урасем чĕркуççирен кăшт çӳлерех курăна пуçларĕç. Никандр çаксене курса ларчĕ. Хĕр арăма мĕн кирлине те ăнланчĕ, çапах та хăйне тытрĕ. Юхха ар çын пулсан çак самантра ун вырăнĕнче, пĕр тăхтамасăр аташĕччĕ. Анчах Никандрăн çирĕп принцип пурнăçра, ютта çӳремест вăл, хĕр арăмсемшĕнех тусĕсене çухатмасть. Иккĕмĕш черкке хыççăн ура çине тăчĕ те кил хуçине тав туса тухса утрĕ.

Ĕç тухманран Зинăн çилли тулчĕ, тарăхăвне ниçта чикме пĕлмерĕ вăл, вара тепре черкке тултарчĕ те шалт ĕçсе ярса Никандр хыçĕнчен хупăнса юлнă алăка шаплаттарчĕ, черкке чăл-пар саланчĕ. Ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр ун-кун кумрĕ, Зина, тарăхуллăн йынăша-йынăша илчĕ, чышкисемпе алăка пырса тӳпккерĕ.

— Ķаç пулттипе Борис ĕçрен килчĕ.

— Ăçта çӳренĕ ку таранччен?

— Ĕçре тытăнса тăма тиврĕ.

— Тытăн эппин татах, çӳре ютра!

Зина Бориса çухавинчен тытса вăйпах тĕртсе кăларса ячĕ. Арăмĕпе мĕн пулса иртнине ниепле те ăнланмарĕ-ха вăл. Ун çине çавăн пекех çилленме ним те туман-çке. Юрĕ тейĕпĕр, ĕçре тытăннă сехет-сехет çурă. Мĕнех вара? Начальство ыйтнипе хăйсемшĕнех кирлĕрен юлнă-çке. Ма ăнланмалла мар çавна? Таçта ĕçсе çӳренĕ пулсан, урăх сăмах. Тăм урă тавăрнчĕ-çке вăл паян киле. Мĕн çитмест-ши тата мăнтăрпа иртĕхекен мур хĕр арăмне? Çакăн пек шухăшласа, Борис Никандр патне çитрĕ.

— Мĕн пулнă сана, Борис, питре сăну çуккă?

— Ан та ыйт, тем урнă ман Зина.

— Вĕсене пĕлме йывăр çав, эс ирт малалла, алăк умĕнче тапăртатса ан тăр çăварлăхланă айăр пек.

— Иртме пулĕ-ха ăна, тен, кайса килетĕн, Никандр, магазина?

— Мĕн ура ывăнтармалли, килтех пур ман сапас.

— Хăвăн ирĕк, юрать эппин.

Пускил килĕнче хăтлă, чун канать çак пĕчĕк пӳртре. Икĕ черкке ĕçнĕ хыççăн хăй мĕнле май авланнине Борис тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ. Никандр чылай хушă чĕнмесĕр ларчĕ, лăплантăр кăштах пускилĕ терĕ. Тепрер черкке тултарчĕ.

— Ан нушалантар хăвна, Борис, уйрăл эс унран, кайтăр хăй ялне. Унсăрăн ĕçке ярăнма пултаратăн, пĕтрĕ вара сан пурнăç, ĕçна та çухатма пултаратăн.

— Пултараймастăп çав уйрăлма, Никандр.

— Çав териех мĕн тытать вара?

— Юратса пăрахрăм эп ăна юлашки вăхăтра.

— Эппин тытма пĕл хăвна, чиперех пурăнса каяс тесен. Юлашки черккесене пушатсан, тек тытăнса тăрас темерĕ Борис. Никандр тытса чарчĕ ăна.

— Калас теменччĕ те, каламах тивет пулĕ. Мăшăрна сыхлама тивет пек, унсăрăн аташса кайма пултарать, пĕччен юлнă кунсенче.

Пĕр сăмах шарламасăр тухса утрĕ Борис килне. Ку хутĕнче алăксем уçăччĕ. Зина çывăрма выртма ĕлкĕрнĕ.

— Ăçта çӳрерĕн?

— Ниçта та çӳремен, пускил патне кĕтĕм.

— Каллех сыпрăр пулĕ-ха?

— Мĕн тумаллаччĕ пирĕн тата? Ху хăваласа кăларса ятăн та, ăçта пулин те каймаллаччех манăн. Пускил çывăхрах.

— Сысна яланах пыльчăк тупать çав.

Татах тем те пĕр каласа хурасшăнччĕ те, йĕкĕлтес темерĕ, пĕлес пулать, малтан, мĕн çинчен калаçнă вĕсем Никандрпа иккĕш.

— Вырт хăвăртрах, шăнтăм пĕччен.

Борис нумай кĕттермерĕ, йăпăрт йăпшăнчĕ Зина çумне. Пĕр-пĕрне хĕрӳллĕн ыталасанах урăх пурнăç пуçланать тейĕн хĕр арăмпа ар çыннăн, пĕтĕм кӳренĕве манаççĕ вăхăтлăха. Е хăйсене хăйсем хисеплеме пĕлмен принципсăр çынсем хушшинче çеç çавнашкал? Борис та, ав, Никандртан мĕн илтнине каласа памасăр чăтаймарĕ.

Çавăнтанпа Зина Никандрпа калаçма пăрахрĕ, хăйĕн пĕрремĕш тăшманĕ вырăнне хучĕ. Хушăран-хушăран Борис патне ĕçри тусĕсем килеççĕ, шавлă ушкăнпа сĕтел хушшинче ларни те пулкалать. Анчах Зина нихăшĕнпе те çывăх пĕлмелле паллашма тăрăшмарĕ, упăшкипе те хăнана-мĕне тухса çӳреме кăмăлламарĕ, çавăнпа тус-юлташĕсен мăшăрĕсене пач палламасть теме те пулать. Ку уншăн аван та: хăйпе хăй ирĕклĕ. Енчен те ăнсăртран тем кĕтменни пулса иртес пулсан, Бориса никам та нимĕн те каласа памĕ.

Кĕçех Борисăн инçетри тайгана пĕр уйăхлăха кайма тиврĕ. Çĕнĕ вырăнта бур вышкине лартма пулăшмалла имĕш вертолетпа.

Зина килте пĕччен те ĕçсĕр ларса йăлăхрĕ. Кампа та пулин паллашма пулĕ-ши тесе хулана тухма шутларĕ, вара тĕкĕр умĕнче сехет патнелле аппаланчĕ. Те ахаль те илемлĕ сăн-питне татах та илĕртӳллĕрех тăвас терĕ-ши. Сăрлă-кремлă, пудрăллă, духи шăршиллĕ сăн-питпе çур кун хула тăрăх çӳрерĕ, унта-кунта кĕркелесе тухрĕ, анчах ун çине никам та пăхакан пулмарĕ. Вара вăл çыран хĕрне пристане анчĕ. Сак çине вырнаçса иртен-çӳрене сăнарĕ. Ун умĕнче пĕр çамрăк чарăнчĕ, вараланса пĕтнĕ шăлаварĕ йăлтăртатать, хăйĕнчен ыхрапа пулă шăрши перет.

— Хĕр ача, мана кĕтместĕр пулĕ те?

Зина ун çине пăхрĕ те, чуттах хăсса яратчĕ. Вăл васкавлă сиксе тăчĕ те хăвăрттăн кил еннелле чупрĕ, темиçе хутчен такăнчĕ, пĕринче чĕркуççипех çĕре перĕнчĕ, капрон чăлхи çурăлчĕ, ӳт кăвакарчĕ. Кун пек ĕç тухас çуккине кура, ĕç шырама шутларĕ. Кирек мĕнле ĕçре те ар çынсем пурах, паллашма та çăмăлтарах унта. Çывăхра вырнаçнă райпора кассира вырнаçрĕ вăл.

Бухгалтерире хĕр арăмсем çеç ĕçлеççĕ, пĕр май килти ĕçпуç çинчен, магазинра туяннă çи-пуç пирки тата тем те пĕр лăпăртатса лараççĕ кунĕ-кунĕпе. Ку е тепĕр магазинра пĕр-

пěр дефицит илсе килсен, ушкăнěпех тухса чупаççě, туянса таврăнсан, пěр-пěрин умěнче тăхăнса пăхаççě, кулаççě, шавлаççě. Зина та атă туянчě, урине кура, унăн атти чи пысăкки те чи хакли, хăйне питě килěшет, ун ури валлиех çěленě теййěн. Çапах та ăшра тем кансěрлет. Э-э, никам умěнче мухтанма çук. Ěçе анчах вырнаçнăран, хěр арăмсем умěнче аван марланчě вăл, килте Борис çук. Касса пÿлěмěнче шухăша путса, ыттисем киле кайса пěтнине асăрхаман та вăл. Алăк уçăлчě те, пÿлěме сарлака çамкаллă та кăтра çÿçлě ар çын кěрсе тăчě.

— Ма Эсир киле каймастăр, ěç кунě вěçленнě вěт?

— Килте никам та кěтекен çук мана, Николай Иванович.

— Çавнашкалах-и?

— Упăшка командировкăра, уйăх патнелле çук ěнтě.

— Ăнланмалла, çавах та питěрсе тухма тивет.

Иккěш те хыттăн кулса ячěç. Пуш çуртра сасă ян кайрě. Аллинчи туйипе шаклаттарса хуралçă кěчě.

— А-а, Николай Иванович, Эсир-çке, каçарăр, тархасшăн, ют çынсем кěмен-и тенěччě.

Виççěш те кил картине тухрěç. Хуралçă хăйěн чăланě еннелле утрě. Николай Иванович Зинăна хулěнчен çепěççěн тытрě те çемçе сасăпа ыйтрě:

— Сире машинăпа ăсатам-и?

— Эп юнашарах пурăнатăп.

— Шăп çавăнпа та, ытлашши куç ан асăрхатăр.

Ку сăмахсем мěне пěлтернине Зина çийěнчех ăнланчě. Çав каçранпа вěсем çывăхланчěç. Çавна туйса, секретарша кěвěçе пуçларě. Пěррехинче Зина кăнтăр кунěнчех директор пÿлěмěнче пулнă чухне секретарша Николай Иванович мăшăрне шăнкăравласа пěлтерчě. Лешě самант вěçсе çитрě те директор пÿлěмне вирхěнсе кěчě. Чи малтан Николай Ивановича шавлă çупкă пачě, унтан Зинăна çÿçрен явса илчě, хăй пěр май çухрашать, ятлаçать. Мěнле сăмахсем сирпěтмест пулě, арсын та пěлсе çитерес çук ун пек сăмахсене. Зина аран хăтăлчě унран. Пěтěм кантур кěпěрленсе пухăннă та лăх-лăх кулать.

— Мěн кулмалли тупрăр, упăтесем!?

— Эс анчах çав пирěн хушăра сар пике.

Хăйěн япалисене хăвăрт пуçтарчě те Зина пěр чарăнмасăр киле чупрě. Пěр эрне ытларах ěçлерě вăл райпора. Кантурта шавлă пăтăрмах пулса иртнě хыççăн тек ěçе тухмарě, намăс пулчě ăна унта пырса кěме. Пěчěк хулара хыпар хăвăрт сарăлать кашни кěтесех, çавна май ниçта та вырнаçаймарě вăл

ěçe. Пур çěрте те лăх-лăх кулса кěтсе илни хăйне те йăлăхтарса çитеррчě, вара тек ěç шырама пăрахрě вăл.

Çанталăк шăрăх тăрать. Ашкăрса ешернě йывăç-курăк типе пуçларě, шывсем палăрмаллах хухрěç. Сулхăнра та пăчă, сывлама йывăр. Такамăн асăрханусăрлăхне пула, тен, çут çанталăкăн пулăмне кура-и, тайга çуна пуçларě. Борисăн вышка лартнă çěртен киле таврăнасси пулмарě, вěсене пушар сўнтерме куçарчěç. Кунěн-çěрěн канăç пулмарě кунта. Май килсе тухсан, палаткăна аран-аран ывăннă кěлеткепе сěтěрěнсе çитетěн те выртнă-выртман вилнě пек çывăрса каятăн. Анчах тăраниччен çывăрма памаççě çав, кăшт кăтăш туса илетěн те, пырса вăратаççě, вăранаймасан, улмуççие силленě пек силлесе вăратаççě, уçăлман куçсемпех йăтса илсе ура çине тăратаççě.

Икě уйăх кěрешме тиврě пушарсемпе. Юлашкинчен вăйлă çилсем çур çěр енчен хура пěлěтсене илсе килчěç. Виçě кун лўшкерě сăваплă çумăр. Вара тинех пушарсем лăпланчěç. Анчах илемлě сип-симěс тайгаран кăмрăкланнă хура юпаллă лаптăксем тăрса юлчěç. Чун макăрать çавăн пек илемсěрлěхе курсан, уйрăмах çўлтен вертолетпа сăнанă чухне.

Пушартан таврăнсан, ку хутěнче ресторанра ларас темерěç, мăшăрěсене савăнтарас кăмăлпа килěсене урăллах саланчěç. Çула май универмага кěрсе парнесем илчěç. Кашниех ура иртейми тенě пек ывăннă, ўт-тир хăрăмпа та тарпа витěннě. Пурин те пěр ěмěт: хăвăртрах ваннăйне кěрсе ларса чун киленниччен çăвăнасси, унтан мăшăрěсенчен хыпарсем итлесе е хăйсем каласа парса вěри чей е кофе курка хыççăн курка хреплеттерсе ларасси, тен, ывăннă ятпа çутти те пулě-и унта. Ытларахăшěн, паллах, пулатех вăл, шăм-шак çемçетмěшě.

Борис та çакăн пек хăпартлануллă шухăшсемпе çитрě киле. Пўртре никам та çукчě. Тем шухăш кěчě-çке Борисăн пуçне, те Никандр асăрхаттарни асне кěчě, те Зина умне кěтментуман çěртен ăнсăртран тухса тăрас килчě, вăл çенěке тухрě те алăк хыçěнчи кěтесе тěршěнчě. Ывăнни хăйěннех турě пулмалла, вăл кěçех тěлěрсе кайрě. Темěн чухлě каннă вăл çавăн пек кěтесре кукленсе ларса тěлěрнěн, ăна пěлмест. Урисем çывăрса кайса сўленипе вăранса кайрě, вара тўрленсе тăрса урисене сăтăрма пуçларě. Çав самантра пўртрен палламан ар çын сасси илтěнчě. Борис алăк патне пырса хăлăпран туртрě. Шалтан алăка питěрнě имěш. Пуртă яланах çенěкрех выртать Борисăн. Вăл ăна ярса илчě те пěтěм тарăхăвěпе алăка хире пуçларě. Алăк парăнасшăн пулмарě, пурне те

çирĕп тăвассĕ çав çĕпĕр çыннисем. Пӳртрисем сисрĕç пулмалла çенĕкри çынна.

— Кам унта ватать ман алăка?— илтĕнчĕ Зинăн шиклĕ сасси.

— Уç хăвăртрах, эпĕ ку, Борис.

— Ан ват алăка, çинчас тумланатăп та уçатăп.

хушăк турĕ, вара хăрах куçне хĕссе хушăкран пăхрĕ. Мĕн курнине хăйне хăй ĕненмерĕ, куçне хупса илчĕ те тепре пăхрĕ. Çара пакартан ар çын алăк патнелле çурăмпа тăрать. Зина та çара пакартанах. Иккĕш пăшăлтатса тем хирĕçеççĕ. Борисăн пуçне вĕри юн тулчĕ, куçĕсем хуралса килчĕç, шăлĕсем шăтăртатрĕç. Борис çиллине шăнăçтараймасăр пуртăпа пĕтĕм вăйран алăка хирчĕ, çавна май çекĕл тăпăлса тухрĕ те алăк яриех уçăлса кайрĕ. Борис пӳрте вирхĕнсе кĕнĕ тĕле палламан ар çын трусы тăхăнса тăратчĕ. Борис ăна тӳрех палласа илчĕ: ĕçтăвком председателĕн çумĕ Петр Васильч. Лешĕ, Бориса асăрхаса, ытти çи-пуçне хăварса чӳречерен чăмрĕ. Борис ун хыççăн ыткăнчĕ, анчах Зина ура хума ĕлкĕрчĕ те, Борис ыткăнса кайса тăнне çухатрĕ.

Вăл тăна кĕнĕ тĕле Зина çи-пуçне тумланнăччĕ. Леш сăмартине касман ăйăрăн тумне тухса пама та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ йытă ами. Пăх-ха ăна, ним пулман пек лăпкă ларать, намăса пĕлмесĕр йĕлпĕрет тата. Борис чăтса тăраймарĕ, сиксе тăчĕ те вирлĕн çутăлтарса ячĕ Зинăна. Лешĕ стенана пырса çапăнчĕ, урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ, вара чикме хатĕрленсе урисемпе çыхнă сысна пек çухăра пуçларĕ.

— Қăравул, пулăшăр, вĕлерет!

Борис ун çине сиксе ларса çăварне хуплама пикенчĕ. Зина ун аллине юн кăлармаллах çыртса илчĕ, каллех çухăраша пуçларĕ. Борисăн çилли хăй те тытса чараймн тăвăлчĕ, вара вăл çухăрашакан арăмне мăйĕнчен икĕ аллипе ярса тытрĕ те пăва пуçларĕ. Тен, вĕлерсе те пăрахатчĕ пулĕ, çав самантра пӳрте икĕ милиционер чупса кĕчĕ те Бориса аран-аран Зинăран уйăрчĕ. Кусене леш Петр Васильевичĕ асăрхаттарнă пулĕ ĕнтĕ.

Аллисене хыçалалла туртса çыхса лартса милици уйрăмне илсе кайрĕç урнă Бориса, дежурнăй офицер патне тĕртсе кĕртрĕç.

— Арăмна пăвмаллах ма урса кайнă вара эсĕ?

Борис пĕр сăмах та чĕнмерĕ хирĕç, пуçне çеç пăрчĕ айккинелле.

— Хули пирĕн пысăк мар, пĕлетпĕр, эс кунта тахçантан-

пах пурӑнатӑн, хӑвна яланах чипер тытатӑн. Мӑшӑру, ав, нумай та пурӑнмасть хулара, ҫапах та палӑрма ӗлкӗрчӗ юлашки вӑхӑтра. Эс айӑплӑ маррине туятпӑр, ҫавӑнпа нумай тытмастпӑр сана кунта.

Дежурнӑй офицер протокол ҫырчӗ, алӑ пустарчӗ.

— Вунӑ тенкӗ штраф тӳлеме тивет, вара кайма пултаратӑр.

Борис укҫа тӗрки кӑларса вунӑ тенкӗ сӗтел ҫине хучӗ, ыттине каялла чикрӗ.

— Тавай уттар, урӑх килмелле ан пултӑрччӗ.

Кун пек хӑвӑрт хӑтӑласса шанманччӗ Борис. Леш пуҫлӑхӗ шӑнкӑравласа асӑрхаттарнӑ ӗнтӗ ытлашши шӑв-шав ан тӑвӑр тесе. Килте алӑксем уҫӑччӗ, анчах Зина нимӗн тӗрлӗ курӑнмарӗ. Пускилсем патӗнче мар-ши тесе, унта анчӗ. Анчах кунта пӳрт алӑкне икӗ хӑмапа хӗреслесе ҫапса лартнӑ. Борис тепӗр пускилӗн алӑкне шаккарӗ. Алӑка ватӑ хӗр арӑм уҫрӗ.

— Пӗлместӗр-и, Никандр ӑҫта куҫса кайнӑ?

— Вӗсене хваттер панӑ, аэропорта кайнӑ ҫӗрте кӗтесри ҫӗнӗ ҫурта.

— Тавах пӗлтернӗшӗн.

Ҫула май магазина кӗрсе литр эрех, темиҫе тӗрлӗ консерва илчӗ Борис. Хӗрринчи подъезд умӗнчи сак ҫинче темиҫе карчӑк ларатчӗ. Борис вӗсем патне пычӗ.

— Кинемейсем, Никандр ӑҫта пурӑнать-ши ҫакӑнта?

— Кунтах, кунтах, пиллӗкмӗш этажа хӑпарӑр та тӳп-тӳрех алӑка шаккӑр.

Кнопкӑна пуссан, шӑнкӑрав сасси илемлӗн янӑраса кайрӗ, ерипен алӑк уҫӑлчӗ те, Никандр курӑнчӗ, хӑй тӗлӗннӗ пек туйӑнчӗ.

— Эс ман пата урӑх нихҫан та килес ҫук тенӗччӗ, ун чухне тӗрӗссине пӗлтернӗшӗн кӳренчӗ ку тесе шутланӑччӗ.

— Ҫук, Никандр тусӑм, эп пӗртте кӳренмен, ман вӑхӑчӗ пулман сан патна кӗме. Эс асӑрхаттарни вара тӳрре килсе тухрӗ. Паян, ак, ар ҫынпа тытрӑм ӑна.

— Кӗр, ирт, мӗн алӑк урлӑ калаҫса тӑратпӑр эпир?

Никандр хваттерӗ хӑтлӑ, ҫутӑ. Мӑшӑрӗ упӑшки каласса кӗтмесӗрех хӑвӑрт сӗтел хатӗрлерӗ те ача сассине илтсе ун патне васкарӗ. Сӗм ҫӗрлеччченех калаҫса ларчӗҫ иккӗшӗ сӗтел хушшинче, кашни хӑйӗн чунне уҫрӗ. Борисӑн чунӗ кӑшт ҫӑмӑлланчӗ. Никандр Бориса килне ҫитиех ӑсатрӗ.

Ку хутӗнче те пӳрт пушахчӗ. Борис хыӑнмасӑрах выртрӗ те ирччен те хускалмарӗ. Тепӗр кунне те курӑнмарӗ Зина. Тем пулмарӗ-ши тесе, Борис шикленме те пуҫларӗ, анчах

çилĕ те сĕвĕрĕлсе пĕтмен. Борис юлташĕсем патне общежитие шăнкăравларĕ, хăй патне килме тархасларĕ. Ĕçрен пĕр кана пушă пулнăскерсем, вĕсем эрне аташрĕç Борис патĕнче, ещĕкĕпех илнĕ эрехе пушатрĕç.

Саккăрмĕш кунне Зина таврăнчĕ. Вăл пурне те хăваласа кăларса ячĕ. Халсăр Борис вырăн çинче выртса юлчĕ. Борисăн юлташĕсенчен хăтăлсанах упăшкин кĕсйисене ухтарчĕ Зина, виçĕ пин тенкĕ укçа туртса кăларчĕ.

— Юрать-ха пĕтĕмпех ĕçсе яман, каяннăй.

Зина укçасене хăй çеç пĕлекен вырăна пытарчĕ. Унтан Борис тумне тĕрмеше-тĕрмеше хыврĕ, трусине те хывасшăнччĕ те, анчах халлĕхе упăшки кирлĕ пулас çук тесе хывмарĕ.

Борис вăраннă тĕле Зина ун çумĕнче выртатчĕ. Пуç çурăласла ыратать Борисăн, чĕри кăкăртан тухса ӳкесле тапать.

— Зина, пăх-ха, тархасшăн, ниçта та нимĕн те юлман-и унта.

— Çук нимĕн те, эрнипе ĕçнĕ, çитет.

Зина вырăнтан та хускалмарĕ.

— Турăшăн, Христосшăн ыйтатăп, туп черкке те пулин, чĕре вăт-вăт чарăнса ларать.

— Суятăн эс, тата мĕн шутласа кăларăн-ши.

— Калаççĕ сана, чĕре тапми пулчĕ тесе, хĕрхен кăштах та пулин, ан пул чунсăр.

Сывлăш çитменрен Борис çăварне карса пăрахрĕ, хăрлатма пуçларĕ, вара темиçе хутчен туртăнса илчĕ те шăпланчĕ, хускалми пулчĕ. Зина хăраса ӳкрĕ, упăшкин кăкăрĕ çине хăлхипе выртса итлерĕ, кăкăр таппи палăрмарĕ, куçне унăн сăмси патне çывхартрĕ, сывлама пăрахнă, пульсне тытса пăхрĕ, ним палли те çук.

— Мĕн туса хутăм эпĕ? Упăшкашăн черкке шеллерĕм! Пурччĕ вĕт, пурччĕ ман коньяк, варли кĕтсе усрани! Эх, чунсăр тунката эп кун хыççăн!

Зина ĕсĕклесе йĕме пуçларĕ. Мĕн тăвĕ вăл халь Бориссăр? Нуль вĕт вăл кунта унсăр. Вăл ĕçлесе илекенĕ, тумлантараканĕ, тăрантараканĕ пулнă-çке, пĕр сивĕ сăмах каламан.

— Мĕн çитмен мана, ухмаха? Мăнтăр аташтарнă!

Зина пукан çине лак ларчĕ те монумент пек хытрĕ. Чылай ларнă-и вăл çавăн пек, ас тумасть. Анчах мĕн те пулин тумаллах вĕт. Вăл пĕр пускил карчăкне пĕлтерчĕ, теприне... Пуçланчĕ вара ун пек чухнехи кирлĕ ĕç. Васкавлă пулăшу чĕнчĕç, милицие шăнкăравларĕç, ытти ĕçсене турĕç.

Тирпейлесе пытарма ĕçри юлташĕсем, палланă сынсем килчĕç. Йĕркисене кирлĕ пекех майларĕç.

Бориса пытарнă хыççăн çумăрсем пуçланчĕç, кĕр çитсе килчĕ. Кăнтăрла ăшăткалать те, ир-каç вара туймаллах сивĕ. Пĕр май вĕтĕ çумăр пĕрĕхет. Зина ниçта та тухса çӳремерĕ, килтех кăштăртатрĕ. Хура тутăрне çыхма пăрахман-ха вăл.

Çавăн пек пĕррехинче шухăша кайса ларнă чухне алăка такам хăюсăррăн шаккарĕ

— Кĕрĕр, алăка питĕрмен!

Аça кушак пек йăпшăнса, Петр Васильевич кĕрсе тăчĕ, такама курасла ун-кун пăхкаларĕ. Ăна курса, Зина чĕрĕлчĕ, сĕтел хатĕрлерĕ, упăшкине пама шелленĕ кĕленчене кăларчĕ. Еçрĕç, апатланчĕç, савăшрĕç. Халь ĕнтĕ хамăн ĕçе турăм тенĕ май Петр Васильевич кайма пуçтарăнчĕ.

— Тăхта-ха кăштах, калаçмалли пур.

— Мĕн пирки-ши?

— Качча ил мана, Петр Васильевич, парăннă арăму пулăп, уруна чуп туса пурăнăп.

— Шутласа пăхăп,— терĕ Петр Васильевич вăрахран, хулăм тутисемпе чаплаттарса. Хăй хăвăртрах урамалла васкарĕ, кĕçех шлепкине манса хăварчĕ, Зина вăхăтра аса илтерчĕ. Килнĕ чухне йăпшăнса кĕнĕскер, чупса тенĕ пек тухса вĕçтерчĕ, урама тухсан, çăмăллăн хаш сывласа ячĕ, хăй шутларĕ: «Упăшки пур çинче чупнă пулсан, манпа та çавăн пекех пулĕ. Эппин мĕн тума кирлĕ вăл тек мана? Паянтан ура ярса пусмастăп. Хули пысăках мар пулин те, кирек хăçан та варли тупма пулĕ-ха».

Петр Васильевич ун патне тек килес çуккине Зина та ăнланчĕ, ăна варли çеç кирлĕ, ват супнăна.

Упăшки вилнĕренпе хĕрĕх кун иртсен, Зина именмесĕрех ар çын шырама пуçларĕ. Хăйне майлă каларăш та çуралчĕ унăн.

— Эп арсăр арăм, çавăнпа хампа хам хуçа,— теме кăмăллать вăл курнăçлансассăн.

Ун килĕнче ĕçке ернĕ хĕр арăмсемпе ар çынсем пуçтарăнма тытăнчĕç, кунĕн-çĕрĕн ĕçкĕ-çикĕ тăчĕ. Палланисем те, палламаннисем те кĕре-туха пĕлмерĕç. Кĕç пӳрт ăшчикки çаралчĕ. Кам ку е тепĕр япалана вăрласа кайрĕ, кам хуçи умĕнчех намăса пĕлмесĕр илсе тухса кайрĕ, йӳнĕ хакпа эрехшĕн суткалани те пулнă. Укçа та пĕтсе пычĕ Зинăн. Юлашкинчен компаньонĕсем те пыми пулчĕç ун патне, мĕншĕн тесен Зинăран урăх усси пулмарĕ. Хулана вăхăтлăха килекен е хула витĕр иртсе çӳрекен палламан арçынсем çеç пулкаларĕç ун патĕнче. Эрне каялла пĕр шавлă компани ун патне кĕнине курнă çынсем. Анчах вĕсем хăçан тухса кайнине никам та

курман. Пĕр эрне шăплăх тăчĕ пӳртре. Пускилсем тахçанах çӳреме пăрахнă ун патне, хăйне те никам та кĕртекен пулман. Пĕр кунхине почтальон çыру илсе килнĕ пулнă та алăк уççине кура пӳртех кĕме тăнă. Анчах шалтан сăмсана çурса виле шăрши çапнă. Почтальон пĕр тăхтамасăр милицие пĕлтернĕ. Зина çара пакартан сĕтел çинче выртнă, ӳчĕ çĕре пуçланă, ун çинче шурă хуртсем йăшăлтатнă.

Айăплисене тупайман, мĕншĕн тесен вĕсене никам та сăнран курман. Тĕрĕссине каласан, никам шыраман та вĕсене, ятне тенĕ пек пускилĕсенчен ыйткаланă çеç.

## УСРАВ ХӖР

Хулари нумай хутлӑ пӗр ҫуртӑн пысӑках мар кил картинче ӳсекен ҫамрӑк вӗренене кӗрхи сивӗ те вӑйлӑ ҫил ҫӗре ҫити тенӗ пекех авать, унӑн йӑм-хӗрлӗ ҫулҫисене тата-тата ывӑтать. Кӗҫех вӗренене ҫулҫӑсенчен ҫаратрӗ те пӗр тӑхтамасӑр ҫуртсем хушшипе вирхӗнчӗ. Ун хыҫӗнчен ҫурт кантӑкӗсем чӗтренсе юлчӗҫ. Аялти турат ҫинче темӗнле май сыхланса юлнӑ сарӑ ҫулҫӑ пӗр хушӑ вӗлтӗр-вӗлтӗр вӗлтӗртетрӗ те тустантӑшӗсене хӑваласа ҫитессӗн урам еннелле вӗҫсе кайрӗ. Ҫил кӑштах лӑпланнӑ пек пулчӗ, тӳпене йывӑр хура пӗлӗтсем хупларӗҫ, ҫумӑр пӗрӗхе пуҫларӗ.

Чӳрече умӗнче тӑракан Ирӑна тунсӑх пусса илчӗ, вӗрене ҫинчен вӗҫсе кайнӑ юлашки ҫулҫӑна шеллерӗ вӑл. Кӗҫех ылтӑн кӗр те кая юлать, йӗпе-сапаллӑ кунсем пуҫланаҫҫӗ. Икӗ пӳлӗмлӗ хваттер ӑшӑ та хӑтлӑ. Ку ӗнер ӑшӑ панӑран ӗнтӗ. Унсӑрӑн сивӗ те мелсӗр кичемччӗ хваттерте, тасатса тирпейленӗ пӳлӗмре те хӑтсӑррӑн туйӑнатчӗ.

Амӑшӗ кухньӑра каҫхи апат хатӗрлет, тем пӗҫерет, тем ӑшалать, кухньӑран хваттере тутлӑ шӑршӑ саралать. Ашшӗ коридорта хӗллехи ӑшӑ атӑсемпе аппаланать, вӑл енчен ацетон, ҫилӗм шӑрши килет. Юлашкинчен вӑл ӗҫне вӗҫлерӗ те ваннӑйӗнче аллисене ҫуса тасатса кухньӑна кӗчӗ. Ку вӑхӑта каҫхи апат та хатӗрччӗ ӗнтӗ.

— Ирт, лар сӗтел хушшине. Ӑҫта унта Ира?

— Кунтах эп, анне!

Спальнӑйӗнчен хӗрӗ тухрӗ. Кӗске кастарнӑ ҫӳҫлӗскер, арҫын ача пек курӑнать вӑл. Ҫемье васкамасӑр сӗтел хушшине вырнаҫрӗ.

— Калӑр, кама миҫе ҫӑпала кирлӗ? — ыйтрӗ Наташа упӑшкипе хӗрӗнчен, алла хуран ҫӑпали тытса.

— Мана ҫӑпала ҫурӑ ҫитет, — терӗ Ира.

— Пиллӗк, — кӗскен каларӗ Юра.

Виҫҫӗн рехетленсе борщ сыпма пуҫларӗҫ. «Эх, мӗн тери аван пулмалла пурнӑҫ, ҫакӑн пек ҫемьепе лӑпкӑн та канлӗн

ларса тăма яланах тӳр килес пулсан! Мĕн кирлĕ пире виççĕне унтан ытла?» — хăй ăшĕнче шутларĕ Юра, яшка сыпнă çемĕн мăшăрĕпе хĕрĕ çине савăклăн пăха-пăха илсе.

Апатланнă хыççăн Юра паянхи хаçатсене пăхса-вуласа тенĕ пек ларчĕ. Çавăнпа вăл хаçат та ĕнтĕ: кам мĕнпе интересленет, кама мĕн килĕшет, çавна вулать, ыттисене вара çиелтен, куç айăн, çеç пăхса иртterет. Кĕç вăл хаçатсене пуçтарса хучĕ те телевизор чĕртсе диван хыçĕ çине сĕвĕнсе ларчĕ. Наташа кухньăра чашăк-тирĕке çуса тирпейлесе вырнаçтарчĕ пулмалла та çутă сӳнтерсе упăшки çумне пырса ларчĕ, хаш! сывласа илчĕ. Темĕнле йывăр шухăш канăç паман пек туйăнать ăна.

— Юра, эп сана хамăн вăрттăнлăха пĕлтерес теменччĕ, тахçантанпах пытарса усратăп ăшра. Ним тума та çук, каламах тивет пулĕ. Диван çинчен тăмасăрах, малалла туртăнса, Юра телевизора сӳнтерчĕ те Наташăна хулпуççийĕсенчен ыталарĕ.

— Мĕн сиксе тухма пултарĕ сан унта, чĕкеçĕм?

— Калама та хăрушă, Юра: матка ракĕ манăн, юлашки стадире, ак, мĕн, — терĕ те Наташа, пуçне упăшки кăкăрĕ çине ӳкерсе, ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ. Упăшки ăна ачашшăн ыталама тăрăшрĕ, çемçен хăй çумне пăчăртарĕ.

— Ан пăшăрхан ун пекех, тен, иртĕ-ха.

— Çук, Юра, тек эпĕ çĕр çинче пурнас чун мар.

— Наташа, ан калаç кирлĕ мара. Мĕнле пурăнмалла тет ман сансăр?

Мăшăрĕ чĕнмерĕ, диван хыçĕ çине çурăмĕпе таянчĕ те тарăн шухăша путнă пек пулчĕ. Халь ĕнтĕ, хăйĕн инкекĕ çинчен упăшкине пĕлтернĕ хыççăн, малашлăх уншăн пĕлтерĕшне çухатрĕ, ӳт-пӳне халлĕхе кунта пулин те, чунĕпе таçта инçетре пĕчченĕн пулма хăнăхрĕ темех пулать пек. Килтисем те çакна асăрхаман мар пулĕ. Е кулленхи ĕçлĕх сынсене пурне те курми тăвать-ши? Çав самантра мĕн кирли çеç курăнать-ши куçа? Куракан куçпах суккăррăн çӳретпĕр мар-и эпир çĕр çинче? Пулĕ те... пулĕ те.,,

Юрăн та чунĕ тапранчĕ, кăмăлĕ пăтранчĕ. Пĕр вăхăтрах таçта та çитсе çапăнчĕ вăл çыхăнусăр шухăшсемпе. Çапах та мăшăрне, тен, çав хушăрах хăйне те-и, лăплантармалли сăмахсем пуçа кĕмерĕç. Çын самантрах çухалса каять çав ун пек чухне, мĕншĕн тесен пĕрре хăнăхнă канăçлă пурнăç татăлать çав самантран. Этем хăнăхман хăйĕн йăли-йĕркисене пĕр кунтах улăштарма. Уншăн çав самантра çĕр тĕпне анса

кайма çăмăлтарах пек пуçра явăнакан арпашуллă шухăшсенче. Çавăнпа Юра та нимех калама пĕлмерĕ Наташăна, çепĕççĕн ыталаса илсе, хăй çумне пăчăртама çеç пултарчĕ вăл.

— Юрĕ-çке, маншăн ан пăшăрхан, эп яланах санпа юнашар пулма тăрăшăп, мĕн кирлине пĕр тăхтамасăр тăвăп, — терĕ вара Юра, мăшăрне ытамĕнчен вĕçертмесĕр.

— Мĕнех пулĕ-ши мана пулăшмалли? Ав, медицина та халсăр та ку чире çĕнтерме, — хаш! сывларĕ Наташа, хăйне пӳрнĕ шăпипе мирлешсе.

Наташа тахçанах ыйăхне çухатнăччĕ ĕнтĕ, тăрăшсах килтисене систермен çеç. Çав каçран Юра та ыйăхне çухатрĕ. Тĕрлĕ шухăшсем явăçрĕç пуçра. Наташа тесен вара, вăл кунсерен хавшанса, юхăнса пычĕ, куçĕсем путса кĕчĕç. Питĕ йывăр пулчĕ Юрăна çакна курса тăрса чăтса ирттерме. Тем тунă пулĕччĕ, тем панă пулĕччĕ чунĕпе мăшăрне сыватса тăратма. Килти ĕç-пуçа пĕтĕмпех хăй çине илнинчен ытла нимех те шутласа кăлараймарĕ вăл. Юлашкинчен Наташа вырăн çинчен тăрайми пулчĕ, вара ӳт-пӳне хухса-хухса пычĕ те пĕр каçхине яланлăхах сывăрса кайрĕ. Темиçе каç уйрăм сывăрнăскер, çакна Юра ир çинче çеç пĕлчĕ.

Мăшăрне пытарса килсен, Юра пĕр хушă тĕтрери пек пурăнчĕ, никампа та хутшăнмарĕ, никампа та калаçмарĕ, пĕрпĕчченех ĕçрĕ те эрех — минрерĕ, ĕçрĕ те — минрерĕ. Юратьха ĕçĕнче шеллерĕç, черечĕ çитмесĕрех отпуск пачĕç, анчах пырса куракан та, «ан ĕç-ха ун пекех» текен те, ăс паракан та пулмарĕ. Тепĕр тесен, итленĕ пулĕччĕ-и кама та пулин Юра? Çук та пулĕ. мĕншĕн тесен ун çине хуйхă мар, тĕнче йăтăнса аннăн туйăнчĕ. Ун пек чухне çынна пурăнни-пурăнманни — пурпĕрех. Ира, хĕрĕ, темиçе хутчен ӳкĕтлеме пикенни те пулăшмарĕ. Çапла вара хулари икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте икĕ çын кашни хăйĕн тĕнчине пĕчченшерĕн тăрса юлчĕ. Пĕри сутă куна курми пулчĕ, тепри шкула сайра-хутра çӳре пуçларĕ, кайрантарах пачах çӳреми пулчĕ.

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлтиллĕ хĕр ачах ӳсрĕ Ира семьере. Нимрен чару пулман, нимрен катăк усраман, кирлĕшĕн ятланă, тивĕçлĕ чухне ырланă. Пĕр сăмахпа, ӳснĕ хĕр ача ашшĕ-амăшĕ хӳттинче. Анчах хĕр шухăшĕ кĕрсе пынă майăн тĕкĕр çине ытларах пăхма тытăннăранпа хĕр ачана улăштарнă тейĕн. Вăл килте ытлашши калаçми пулчĕ, хăй ăшне таçта шала кĕрсе пычĕ. Пĕрре çапла тĕкĕр умĕнче чылайрах тытăнса тăнă чухне хăй сăн-пичĕпе ашшĕпе те, амăшĕпе те пĕр пек маррине, çӳçĕсем те вĕсен тĕрлĕ тĕслине, пит шăммин тытăмĕ

те расна пулнине асăрхарĕ. Ку ăна, паллах, шухăша ячĕ. Амăшĕ ăна урăх арçынран çуратман-ши тесе те шутларĕ. Анчах ун пек шутлама сăлтавĕ те çук пек, мĕншĕн тесен ашшĕпе амăшĕ яланах килĕштерсе пурăнчĕç, пĕр-пĕрне кĕвĕçни, усал сăмахсем калани пулман вĕсен. Çапах та Ира хăй те ăнлантарса пама пултарайманла ирĕксĕррĕн чĕмсĕрленсе пычĕ. Паллах, килтисем çавна сисмесĕр юлман, ку хĕр пĕрчи хĕр шутне кĕрсе пырать пулмалла тесе шутларĕç хăйсем хушшинче. Вара хĕрĕ улшăннин сăлтавне тĕпчес-тăвас темерĕç, пурнакиле хăйех вырăна ларĕ-ха, терĕç.

Анчах шăпи пӳрмен çав Ира пурнăçне вырăна лартма. Амăшĕ вилнĕ хыççăн хĕр ачан пурнăçĕ пачах арпашăнса кайрĕ. Ашшĕ пĕр вăхăта эрех ăшне путни те пулăшрĕ пулмалла. Килте пĕччен юлнă кунсенчен пĕринче Ира шифоньер шкапĕн алăкĕнче çăра уççи вырăнта пулнине асăрхарĕ. Амăшĕ пурăннă чухне усă яланах амăшĕ çумĕнчеччĕ. Килтисем шанманран мар, пĕрре йăлана кĕнипе, мĕншĕн тесен унта документ хучĕсене тата укçа усранă амăшĕ, ăнсăртран ют-таçам кĕресрен сыхланă.

Теменле вăрттăнлăх уçасла, хĕр алăка пырса туртрĕ. Çăрине питĕрмен те имĕш, алăк ирĕклĕнех уçăлчĕ. Ира пĕр пысăках мар шкатулкăна асăрхарĕ те ăна илсе, сĕтел патне кайрĕ. Çемьере ун пек вырăнта усракан хутсем хушшинче Ира хăйне усрава илнине çирĕплетекен хут тупрĕ. Ав мĕншĕн расна вĕсен сăн-пичĕсем! Амăшĕ хăйне ют арçынран çуратман-ши тесе шутланăран лайăх марланчĕ Ирина, унăн тасалăхĕшĕн савăнчĕ. Анчах амăшĕ-и-ха вăл уншăн? Камсем пулнă ăна пурнăç паракансем? Ма ун пирки пĕлтермен ăна ку таранччен? Çĕр ыйту явăçрĕ пулĕ çавăн чухне Ира пуçĕнче. Ашшĕ те ашшĕ мар пулса тухать-çке кун пек. Мĕн тесе чĕнмелле ĕнтĕ ăна малалла? Тем тĕрлĕ шутласа пăхсан та вĕçне-хĕрне тупаймарĕ хĕр.

Мĕнле чармалла пĕр вĕçĕм явăçакан шухăшсене? Мĕнпе чармалла пĕр вĕçĕм явăçакан шухăшсене? Мĕнпе пусармалла ытла та пăлхануллă кăмăла? Çак ыйтусене Ира хăйне хăй памарĕ пулин те, ашшĕ ӳсĕр пулнă чухне унран пытарнă пуçланă кĕленче çинчен хăй ирĕксĕрех аса илчĕ хĕр. Паллах, çакăнтан ним тĕлĕнмелли çук, мĕншĕн тесен ун пек чухне, çынна йывăрлăхсем пырса тивнĕ чухне, эппин, аслисем ытларах эрех сыпса ирттерсе янине курса ӳснĕ-çке вăл. Хăй ку таранччен ĕçсе кайман пулин те, уявсенче-темре е кампани-

сенче сыпса та пулин пăхнах ĕнтĕ. Çавăнпа та вăл пач сыпсă курман теме çук.

Акă Ира ашшĕн алли çитме пултарайман вăрттăн вырăнтан кĕленчене туртса кăларчĕ, унти шĕвеке кухньăри сĕтел çинчех ларакан черккене, ăна шывпа чӳхесе илмесĕрех, ячĕ. Еçиччен эрехрен сăмсине кĕнĕ шăршăпа пĕтĕм кĕлеткипе çӳçенсе чĕтренсе илчĕ, унтан йĕрĕнерех туйăмпа куçне хупрĕ те алăри йӳçĕ шĕвеке хăвăрттăн пĕр сывламасăр сыпса ячĕ. Алли хăйне майăн ирĕксĕрех шалт! лартрĕ черккене сĕтел çине. Унччен аслисене курнипе пулчĕ-и ку, хăйне хăй тĕлĕнчĕ Ира. Тепĕр кăштахран çăмăл пек туйăнса кайрĕ ăна. Вăл тепре ярса ĕçрĕ те шăлне шатăртаттарса пӳлĕмсем тăрăх çӳре пуçларĕ, «ак кăтартам-ха пĕрре мана улталанăшăн» терĕ хăй пĕр май такам ăна итлесе тăрасла. Кĕç унăн çамрăк пуçĕ минрерĕ. Хĕр тарухăллăн татах та татах сыпрĕ, çапла май çурринчен кăшт ытларах пулнă кĕленчене пушатрĕ те вырăн çине мĕнле май çитсе выртнине хăй те ас тумасăр ним туйми ыйăха путрĕ.

Тепĕр ирпе ĕçе пуçтараннă Юра, хĕрĕ халь те тăманнине кура, мăшăрне пытарнă хыççăн Ирăна панă спальнăйне кĕчĕ те хĕрĕ çи-пуçĕ мĕнĕпех сарман вырăн çинче хуп туртнине курчĕ.

— Ира, мĕне пĕлтерет ку? Ма хывăнмасăрах, вырăн сармасăрах çывăран?

Хĕрĕ хăнк та туманнине кура, ун патне пырса, хулпуççийĕнчен силлерĕ. Лешĕ аран-аран куçне уçрĕ, анчах ним те ăнкарса илеймерĕ: ăçта вăл, мĕн пулнă унпа? Вырăн умĕнче ашшĕ тăнине чухласа илчĕ те ăна ĕнерхи аса килчĕ, вара кăмăлĕ шăмăрланчĕ.

— Сан ĕç çук, мĕнле выртас тетĕп, çавăн пек çывратăп. Тек эс ман атте мар!

— Ира, мĕн калаçатăн? Асран тухман пулĕ те?

— Эп ăсран тухман-ха. Эсир вăт мана улталаса пурăннă.

— Мĕнле улталанă-ши, хĕрĕм? Кирлĕ мара ан сӳпĕлтет-ха.

— Тек хĕрĕм тенĕ ан пултăр, манра сирĕн юн юхмасть!

— Ав эс мĕн пирки, усрав хутне тупрăн пулĕ-ха. Каçар, ĕнтĕ, пĕлтерме вăхăчĕ çитмен тесе шутланăччĕ.

— Çитмен, çитмен! Çавах пĕлтермелле пулнă? Мана халь пурпĕрех!

— Ун пекех ан кала-ха, Ира. Ку таранччен сана нимпе те кӳрентермен, тăван ача пекех пăхса ӳстернĕ, саншăн ним те хĕрхенмен.

— Пулин! Манра çук сирĕн юн!

— Юнӗ ҫук пулӗ те, ун вырӑнне чунсене панӑ сана аннӳпе иксӗмӗр. Юрӗ, ыттине каҫпа калаҫӑпӑр, ман ӗҫе васкамалла. Эс те сӑлтавсӑр ҫилемесленсе ан вырт, санӑн та шкула каймалла.

Ира тек хирӗҫ пӗр сӑмах та шарламарӗ, вырӑн ҫинчех выртса юлчӗ ашшӗнчен. Пуҫӗ ҫаврӑнчӗ унӑн, ӑшӗ пӑтранчӗ. Ёнер ахалех эрех ӗҫнӗшӗн вырханнӑ пек пулчӗ, анчах ытлашшиех кулянмарӗ. Ах, унӑн шкула каймалла-ҫке! Анчах мӗнле чӑтса ларӗ вӑл паян унта кунӗпе? Эх, тепӗр тесен, пӗр кунлӑха каймасан та юрать пулӗ. Ахалех атте вӑратрӗ. Атте тетӗп тата, ултавҫӑна: ытла пысӑк чыс. Эппин мӗн тесе чӗнмелле-ха ман ӑна малалла? А-а, куҫ курӗ унта, уншӑнах пуҫа ватас мар-ха. Унсӑрах, ав, хӗссе ыратать. Чей ӗҫес пӗрех хут. Лешӗ, арҫынни, вӗретнӗ пулӗ-ха ирпе. Вӑт тупӑнчӗ те чӗнмелли сӑмах «арҫынни», «Юра арҫынни». А мӗн — япӑх мар, кӳренмелли те ҫук пек. Атте мар-ҫке вӑл маншӑн ҫавах та.

Вырӑн ҫинче выртса муталаннӑ тумпах Ира ҫӑвӑнам пекки турӗ, чей ӗҫрӗ, ҫиесси-тӑвасси килмерӗ унӑн. Сехет ҫине пӑхса илчӗ те шкултан юлнине ӑнланчӗ, кая юлса та пулин каяс килмерӗ унӑн, мӗншӗн тесен кӑҫалхи тӑххӑрмӗш класа ҫитсе те ун пекки пӗртте пулманччӗ. Пӳлӗмрен пӳлӗме уткаларӗ, ун-кун пӗр е тепӗр япала тыта-тыта лартрӗ, тирпей тӑвам пекки турӗ, чечексене те шӑварчӗ, вӑхӑчӗ ҫавах та шӑвасшӑн мар. Ытла та тунсӑхлӑ та кичем пулса кайрӗ хваттерте. Пуҫӗ те хӗссе ыратать. Урама тухса уҫӑлса кӗрес тесе, Ира коридора тухрӗ. Ӑна хирӗҫ пусмапа виҫҫӗн хӑпараҫҫӗ. Кусем пӗр этаж ҫӳлӗрех пурӑнакан Таня ятлӑ хӗрпе унӑн каччӑ-юлташӗсем пулчӗҫ. Ира вӗсене унччен курkаланӑччӗ. Вӗсене ҫул парас тесе алӑк ҫумне хӗсӗнчӗ хӗр. Пускил хӗрӗ Таня каччӑсене пуҫӗпе сӗлтрӗ те ирттерсе ячӗ, Ира умӗнче чарӑнчӗ.

— Ира, сан тем куҫсем шыҫнӑ. Пӗлетӗп-ха сирӗн пысӑк хуйхӑ пулнине, ҫапах та кулянса та ҫитӗ пулӗ. А мӗн, айта пирӗнпе, тен кӑмӑлу кӑштах та пулин уҫӑлӗ, — сӗнчӗ вӑл хӑй те кӗтмен-туман ҫӗртен, вара Ирӑна хулӗнчен ҫавӑтрӗ те вӑйпа тенӗ пекех хӑйпе юнашар тытса пычӗ. Ира та ятне тенӗ пек ҫеҫ туртӑнса пычӗ. Ӑна, характерӗпе чӗмсӗртерехскере, тем туртрӗ ҫак шавлӑ хӗр патне. Тен, ҫӳлти хваттерте кунӗнҫӗрӗн тенӗ пек чарӑнми вылякан хавaслӑ ҫемӗсем тахҫанах илӗртнӗ пулӗ ӑна. Хӗрсен вӗсен курманнине курас килнипе пӗлменнине пӗлес килни ытларах ҫав.

Ҫапла май вӗсем Танясен хваттерне кӗрсе тӑчӗҫ. Хваттер хуҫи хывӑнса-туса тӑмасӑрах малалла иртрӗ те магнито-

фонне ячĕ, залра хаваслă та шавлă çемĕ янăраса кайрĕ. Таня пÿлĕмрен сиксе-ташласа тухрĕ, илĕртÿллĕ çинçешке кĕлеткине сиктерме чарăнмасăр плащне хывса çакрĕ те пĕр каччипе ташласа залалла кĕрсе кайрĕ. Тепĕр йĕкĕчĕ Ира патне пычĕ.

— Мĕн тăратпăр эпир кунта, алăк патĕнче? Айта, ташлар, килтĕмĕр пулсан.

Ира хирĕç чĕнмерĕ, куçĕнчен хăвăрттăн пăхса илчĕ те унта шикленмелли курмарĕ, вара ун хыççăн зала кĕчĕ. Лешсем хĕрсех авкаланатчĕç. Ира та намăс курас темерĕ, ташша хутшăнчĕ. Кĕçех вăл та çемĕ тыткăнĕнче пулчĕ.

— Мана Слава тесе чĕнеççĕ, сана мĕнле-ши? — ыйтрĕ унпа ташлакан йĕкĕт. Ира чĕнменнине кура, Таня хутшăнчĕ:

— Ира, Ира ятлă вăл! Эс мĕн, Ира, вăтанатăн-им? Е кăмăлу халь те хуçăк-им? Апла пулсан, çиччас тÿрлететпĕр ăна.

Таня кухньăна чупса кайрĕ. Унпа ташлакан йĕкĕт те юлмарĕ унран. Кухньăра тем палтлатни илтĕнчĕ. Кĕçех Таньăпа йĕкĕт шампански эрехпе фушерсем йăтса тухрĕç. Ирăн çăвар ăшĕ паçăрах типнĕччĕ. Çавăнпа, ăна эрех сĕнсен, вăл турткаланса тăмарĕ, пĕр-ик сыпкăм турĕ. Çакна курса, ыттисем ăна вăйпа тенĕ пекех ĕçтерчĕç пысăк фушера. Кăштахран тепĕр кĕленче шампански уçăлчĕ.

Кайран мĕн пулса иртнине Ира пĕтĕмпех ас тумасть. Хăй çиччен тем каласа панине, каллех ташланине, каллех эрех, сăв шутра — çуттине те, ĕçнине тĕтреллĕн ас тăвать-ха вăл. Унтан вара...

Хăйпе юнашар такам выртнине туйса вăранса кайрĕ Ира. Аюк! Мĕне пĕлтерет ку? Хăй те, юнашарри те çара пакарта! Ку тарана çитсе, амăшĕсĕр пуçне, никампа та çывăрнине ас тумасть хĕр. Ярт! сиксе тăма пикенчĕ вăл, анчах пултараймарĕ, мĕншĕн тесен юнашаррин алли унăн кăкăрĕ çинчеччĕ, çитменнине хыçал енче выртать-мĕн хĕр. Ира витĕнмелли шырарĕ, хыпашласа тупаймарĕ, алли çеç темĕнле çилĕмлĕ япалапа вараланчĕ — юн имĕш. Анчах ăçтан тухнă-ха вăл? Иккĕнтен пĕри аманман пулĕ те? Апай! Чыса çухатнă-çке эпĕ кĕçĕр! Юнашарри — ĕнерхи каччă Слава, имĕш. Мĕн туса хутăм эп капла? Мĕнле пурăнмалла тет ман малалла? Ай, намăс! Ай, намăс! Çĕр çăтасчĕ мана пĕрех хут! Хам айăплă! Ира куляннипе, чăтаймасăр, ĕсĕклеме тытăнчĕ. Çавна туйса, Слава та вăранчĕ. Вăл хĕрĕн кăкăрĕ çинче выртнă аллине таçталла тăсрĕ те пĕр бокал шампански тăсса пачĕ хĕре.

— Ме, ĕç — пулăшать, вара ваннăйне кĕрсе çăвăн, çи-пуçу сан унта, ал шăлли те çавăнтах.

Хăй çинче çи-пуç пулнă-тăк, питне-куçне чăрмалама хатĕрччĕ Ира, анчах тек мĕнех тăвайăн — йăнăша нимпе тӳрлетме çук. Çак самантра ăна намăсран çи-пуç çеç хăтарнине çеç ăнланса, вăл ваннăйне чупса тенĕ пек кайрĕ. Таняпа тепĕр каччи юнашар пӳлĕмре çавнашкалах çата çара пакарта выртаççĕ имĕш, пӳлĕм алăкне те хупма ӳркеннĕ вĕсем.

Ĕçе каяс умĕн Юра ĕнерхи пекех Ирăна вăратас шутпа ун пӳлĕмне кĕчĕ те шалт! хытса тăчĕ — хĕрĕн вырăнĕ пуш-пушах! Ăçти чĕмерере çӳрет-ха ку хĕр пĕрчи? Уçăлма тухмарĕ пулĕ те? Мĕнле сисмерĕм вара алăк уçăлса хупăннине? Пальтовĕ те, плащĕ те вешалкăрах. Пĕр кофта вĕççĕнех инçете кайман пулĕ-ха. Алăри сехечĕ улттă кăтартать. Каçхи улттă пулас çук-ха — ав, гимн вылять радио. Килте çывăрман-ши вара хĕрĕ? Таçта çĕр каça юлма тус-юлташĕсем çук унăн. Тăхта-ха, çав çӳлти хутри Таня илĕртсе кайман-ши? Ав, ирех музыка янрать. Ашшĕ-амăшĕ каллех кăнтăрти курортра ĕнтĕ, ку пĕччен‍ех хуçаланать пулмалла. Каччăсемпе аташать теççĕ те, Ирăна та ан хутăштартăр анчах ку намăссăра. Вара пĕтрĕ пуç! Ӳстертĕмĕр, ӳстертĕмĕр те хĕре тасалăхра упраса... Шкула çӳрет анчах вĕт вăл, каччă шухăшĕ пулнине илтменччĕ-ха ку тарана çитсе.

Юра хăвăрт çӳлти хута чупса хăпарчĕ те шăнкăрав кнопкине пусрĕ, шалта музыка хытă вылянăран илтмеççĕ пулмалла. Юра татах та татах пусрĕ кнопкăна. Юлашкинчен ура сасси кăштăртатрĕ шалта, унтан алăк уçăлчĕ.

— Кам унта ир-ирех чăрмантарса çӳрет? — ыйтрĕ çурма тумланнă, çурма çара Таня. Çӳç-пуçĕ сапаланчăк хăйĕн. — А-а, пускиль... Ира, сан леш арçынни килчĕ! — кăшкăрчĕ вăл шалалла.

— Мĕнле леш арçынни пулам? Эп ун ашшĕ-çке, — тĕлĕнсе каларĕ Юра.

— Ира сана çавăн пек чĕнесшĕн малашне, эс унăн ашшĕ мар, тет.

Пӳлĕмрен хĕрĕ тухрĕ, çуç-пуçĕ Таньăнни пекех сапаланчăк, куçĕсем ялтăраççĕ, тута хĕррисем шыçнă. Вăл ирех эрех сыпма ĕлкĕрни пĕрре пăхсах курăнать.

— Эй, намăссăр, куçа уçнă-уçман сыпса лартнă. Килте те çывăрман пулĕ-ха? Аннӳ пурăннă пулсан, мĕн каланă пулĕччĕ-ши? Ма шутламастăн çавăн пирки?

— Эсир ман атте-анне пулман! Эп — усрав хĕр!

— Хирĕçлет тата! Намăса пĕлесчĕ. Ут хăвăртрах киле! — вăл Ирăна аллăран çавăтса вăйпах туртса анса кайрĕ.

— Ку сăн-питпе шкула каяс çук ĕнтĕ, халех выртса сывăрнă пултăр. Эп ĕçе чупрăм. Асту, Ира, вăл Таньăпа çыхланса, пуçна çухатма пултаран.

Кун вăрăммăн иртрĕ. Пуçран Ира тухма пĕлмерĕ, мĕнле вăл унта? Ларсах калаçма тивет хĕрĕпе, ăнланма кирлех ашшĕне. Шухăшласа-шухăшласа, ĕç вĕçленнĕ тĕле пуç ыратмах пуçларĕ. Килте Ира çуккăччĕ. Юра тӳрех çӳлти хута хăпарчĕ. Музыка ирхи пекех янратчĕ. Шăнкăрав кнопкине темиçе пусса та, алăк патне пыракан пулмарĕ. Юриех уçмасçĕ ĕнтĕ. Юра алăк умĕнче тăчĕ-тăчĕ те çаврăнса утрĕ. Мĕн тумалла ĕнтĕ хĕрпе? Куç умĕнчех пăсăлать вĕт. Анчах вырăн çумне те сăнчăрласа лартаймăн.

Çав хушăра Ира каллех çămăлччĕ ĕнтĕ. Шампански пылак эрех те çавах хăйĕннех илет — минретет пуçа.

— Слава, пăх-ха çавăнта, кайман-и леш арçынни?

— Халех, Ирочка, халех, пикеçĕм, — Слава алăк патне пырса глазокран пăхрĕ. Площадкăра никам та курăнмарĕ.

— Çук унта никам та, — терĕ вăл пӳлĕме таврăнса.

— Вăт аван, тек никам та чарас çук пире.

— Ира, ма эс аçупа çавăн пек хăтланатăн?

— Ман атте мар вăл, çавăнпа шеллеместĕп.

— Эсир хваттерте иккĕнех-и?

— Çапла, иккĕнех икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте.

— Ман идея çуралчĕ, — сиксе тăчĕ Таня. — Пирĕн ĕçмеçиме укçа пĕтсе çитрĕ. Хваттерна сутас пулсан, мĕнле пек? Пирĕн пĕр пӳлĕм пушах, çавăнта пурăнăн.

— Кирлĕ мара ан калаç-ха эс, Таня. Çапах та мана ӳстернĕ-çке вĕсем.

— Вăхăта савăк ирттернĕ пулăттăмăр вăл укçапа. Пĕрре пурăнатпăр-çке çĕр çинче, ма савăнас мар çамрăкла?

— Пĕлместĕп. Эп ун пирки шутламан.

Пĕр хушă шăплăх тăчĕ хваттерте. Кашнин кăмăлĕ пусăрăнчĕ. Вара килсене саланма шутларĕç. Ира киле таврăнчĕ те хăй пӳлĕмĕнче питĕрĕнсе ларчĕ. Юра икĕ-виçĕ хутчен те тĕксе пăхрĕ алăка, вăл çавах та питĕрĕнчĕк. Кăмăлне уçсах калаçасшăнччĕ те хĕрĕпе, ĕç тухмарĕ.

Ирпе Юра хĕрне вăратмасăрах тухса утрĕ ĕçе. Ира çакна çеç кĕтнĕ тейĕн, кухньăна чупрĕ. Яшка та ăшăтнă ашшĕ ун валли, гуляш та вĕри çатмара, салат та сĕтел çинче, компочĕ те куркарах. Ира сĕтел хушшине ларма ĕлкĕрчĕ çеç, шăнкă-

рав сасси янраса кайрӗ. Хӗр кӑмӑлсӑррӑн алӑк патне утрӗ. Алӑка уҫма ӗлкӗреймерӗ, Таня кӗрсе те тӑчӗ.

— Леш арҫынни ӗҫе утнине чӳречерен асӑрхарӑм та пӗр гӑхтамасӑр чупса антӑм, — хӑй калаҫнӑ хушӑра Ирӑран маларах кухньӑна иртрӗ, сӗтел хушшине килти пекех вырнаҫрӗ. — Ну, ӗнерхи сӗнӳ пирки мӗн шутлатӑн, хваттере приватизацилене вӗт эсир?

— Ним те шутламан-ха.

— Юрӗ-ҫке, сан ӗҫӳ, хӑвӑнне ху пӗл эппин, — терӗ Таня, хӑй вара ӑшра хӑйӗннех шутларӗ: паян мар-тӑк, ыран ҫавах килӗшӗ-ха — васкаттарас мар. Вӑл ура ҫине тӑрса холодильнике уҫса пӑхрӗ, шур эрех кӗленчине курсан, чӑтса тӑраймарӗ, сӗнчӗ.

— Айда, кӑмӑла ҫӗклемелӗх сыпар?

— Тем, ӗҫес килмест манӑн. Шкула та икӗ кун кайман ӗнтӗ.

— Шкулӗ тармӗ-ха, кирлӗх пулсан, каҫхи шкула та ҫырӑнма пулать. Пурнӑҫ, ав, япӑхлансах пырать. Перестройка, перестройка теҫҫӗ, усси вара унран курӑнмасть. Унччен малалла мӗнле пурӑнмаллине пирӗнсӗрех шутлакан пурччӗ. Халь вара никама та кирлӗ мар пулса юлтӑмӑр.

Хӑй ҫав хушӑра кӗленчене уҫрӗ, черккесене хӑйех шкапран илсе тултарчӗ.

— Ӗҫ, Ира, ним пирки те ан шутла. Ман пек ту, — вара вӑл куҫне хупрӗ те черккене карнӑ ҫӑварне ӳпӗнтерчӗ.

Ира та ҫавӑн пек тӑвасшӑнччӗ те, ҫӑварӗ карӑлмарӗ унӑн, вара вӑл черккене чӑпӑрт-чӑпӑрт туса ӗҫрӗ. Ана лайӑх пулса кайрӗ. Кӑштахран вӗсем татах сыпрӗҫ. Ыталашса ларса йӗрсе те илчӗҫ, мӗншӗн йӗрнине хӑйсем те пӗлмерӗҫ, шутламарӗҫ те ун пирки. Тӗрӗссипе, Ира шутламарӗ пулмалла. Таня тесен вара, вӑл хӑвӑртрах Ирӑпа ҫывӑхланма, хӑй тӑвас тенӗ ӗҫе хӑвӑртлатма ӗмӗтленчӗ. Ира ҫемҫелнине кура, сӗнме те вӑтанса тӑмарӗ:

— Ну, Ира, тавай, кирлӗ документсемпе хутсене кӑлар, пӑхса илер: хӑшӗ-хӑшӗ кирлӗ пулӗ ӗҫ тума.

Ира хускалмарӗ-ха, вӑл Таня ҫине чарӑлса кайнӑ куҫӗсемпе тинкерчӗ, чӑнах калать-и ку тесе, ӗненесшӗн пулчӗ.

— Ну мӗн ҫӑвара шыв сыпнӑ пек ларатӑн? Укҫасӑр кама кирлӗ эпир? — лӑскарӗ Таня Ирӑна хулпуҫҫирен.

Пускил хӗрӗ каланӑ сӑмахсем Ира тӑнӗ патне ҫитеймерӗҫ пулмалла. Вӑл ҫаплипех пӗр хускалмасӑр ларчӗ.

— Ӗҫе тӑвар та пӗр кана шик! шӑхӑрса пурнар, каччисем

те пулĕç унта... Тепĕр тесен, пĕрре пуранатпăр çĕр çинче, Ира. Ыран тем пулĕ те, паян пурăнса юлас.

Ира пĕр сăмахсăр шифоньер алăкне уçрĕ те иртнинче илнĕ шкатулкăна кăларчĕ, вара унта мĕн пуррине сĕтел çине ӳпĕнтерчĕ. Ĕçе аван чухлакан çын пекех Таня ордерпа кирлĕ хутсене хăвăрт суйласа илчĕ те хăйĕн сумкине хучĕ. Унтан иккĕш тĕкĕр умĕнче чиперленчĕç, эрех шăрши ан кĕтĕр тесе, духине шеллемесĕр сапрĕç хăйсем çине, вара улăштарупа суту-илӳ бюровне тухса утрĕç.

Нумай та кĕтме тивмерĕ, хваттер илекен тупăнчĕ те. Пĕтĕм ĕç-пуçпа учрежденисемпе кабинетсем тăрăх Таня чупса çӳрерĕ. Ира вара коридорсенче лара-лара юлчĕ, çынсем çине пăхма вăтанса, пуçне усса ларчĕ. Юлашкинчен чăтаймарĕ пулмалла, пĕчченех киле тухса чупрĕ. Çитсен, вырăн çине ӳпĕнчĕ те саспах йĕрсе ячĕ.

— Мĕн тăватăп эп капла? Эх, ухмах! — ятларĕ вăл хăйне хăй, минтере чышкисемпе тăрмакласа.

Тем чуль вăхăтран шăнкăрав сасси янăраса кайрĕ. Ана илтес мар тесе, Ира пуçне минтерпе хупларĕ. Шăнкăрав çавах та пĕр вĕçĕм янăрарĕ. Ирĕксĕрех алăка уçма тиврĕ. Таня кĕнĕ-кĕмен аллинчи сумкине диван çине печĕ те ыйтма пуçларĕ.

— Эс мĕн тартăн вара? Пĕтĕм çурчĕпе шыраса хăшкăлтăм.

— Турăшăн хăпăн манран! Пурăннă сансăр лăпкăн...

— Темех мар, иртет вăл, Ира.

Сăмах вакланă май Таня кухньăна кĕчĕ, холодильникран пăçăр пуçланă кĕленчене кăларчĕ, çур стакан ячĕ те Ира патне таврăнчĕ.

— Ме, шыв ĕç, лăплан кăштах.

Ира, шутласа-туса тăмасăр, шĕвеке çăтса ячĕ те чыхăнса ларчĕ. Темиçе хутчен ӳсĕркелесе, аран-аран иртгерсе ячĕ.

— Ма çавăн пекех улталан?

— Хăвăртрах лăпланăн, терĕм.

Таня чупса тенĕ пек шыв илсе килчĕ, çыртмаллине те манман. Хăй те ярса ĕçрĕ. Унтан татах сыпрĕç. Ак, кăмăлсем каллех çĕкленчĕç те.

— Эс пĕччен ал пусни çителĕксĕр, Ира, çемьерисен пурин те алă пусма тивет.

— Тем ĕнтĕ, леш арçынни килĕшес çук.

— Ан шиклен, ку ĕçе хам çине илетĕп, — терĕ Таня пĕр иккĕленмесĕр. Вара вăл сумкине илчĕ те алăк патнелле утрĕ.

— Ну, Ира, гуд бай ыранччен.

Ирăн ăшĕ вăркама пăрахмарĕ-ха, пуçĕ те хĕссех ыратма

пуçларĕ. Мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех манса каяс тесе, çывăрма шутларĕ, вара миçемĕш каç ĕнтĕ çи-пуçпах чăмрĕ вырăн çине. Ашшĕ килнине, вăл пӳлĕмсем тăрăх уткаланине илтрĕха Ира, çавах та тухмарĕ вăл, алăка та уçмарĕ.

Ирпе каллех шăнкăрав шăнкăртатрĕ. Ира уçма шутламарĕ те. Çавăн пек темиçе килсе шăнкăравласан та уçмарĕ вăл. Юлашкинчен ăçта куç курать, çавăнта кайма шутларĕ. Тумланчĕ те урама тухрĕ. Çĕрле юр çуса кайнă, тавралăх шапшурă. Ира алсишĕпе юра сирчĕ те пĕр сак çине ларчĕ. Чылай ларчĕ вăл çапла шухăша путса, шăнса та кӳтрĕ пулмалла. Вăл Таньăпа урăх курнăçас темерĕ, хутсене паянах каялла тавăрас терĕ. Ĕçрен килсен, ашшĕне каласа парĕ те, вăл хутсене кайса илĕ. Çак шухăшсемпе Ира подъезд умне çитрĕ. Ăна кĕтсе тăнă пекех, хирĕç Таня тухрĕ.

— Ăçта пулнă эс, вара? Темиçе хутчен анса шăнкăравларăм.

— Ав, скверта уçăлса лартăм. Тек капла тăсăлса пултараймасть. Сутас мар терĕм хваттере.

— Унта сана Слава темиçе сехет кĕтет ĕнтĕ.

— Курассăм килмест.

— Юрĕ-çке ĕнтĕ, ан кулян ун пекех. Пурте о'кей пулать.

Таня тĕртсе-тĕртсе илсе хăпарчĕ Ирăна хăйсен хваттерне. Унта иртнинчи пулнă йĕкĕтсемех лараççĕ. Вĕсен умĕнче «Амаретти» кĕленчи ларать, темиçе татăк кăлпасси тарелкăра.

— А, здрасте, лар пирĕнпе.

Ира пырса ларчĕ, сĕннĕ черккерен çуррине ĕçрĕ те сĕтел çине лартрĕ.

— Çу-ук, апла юрамасть, пирĕн кампанире тĕппипех ĕçеççĕ.

Слава ирĕксĕрлесех тĕппипе сыптарчĕ Ирăна. Ун çумне тепĕр енчен Таня пырса ларчĕ.

— Халь итле, Ира. Паллах, аçу санпа сыпас çук, çавăнпа санпа Слава пырать. Ăна каччу тесе паллаштар.

— Эсир мĕн, ухмаха ермен пулĕ те?

— Ан сӳпĕлтет, ту мĕн хушнине.

Ира ярт! сиксе тăчĕ те хваттертен сирпĕнсе тухса, шаклаттарса чупса анса кайрĕ. Слава унран юлмарĕ. Пĕр аллинче унăн шур эрех, тепринче — шампански. Ира хăй хыçĕнчен алăка хупасшăнччĕ, анчах Слава урине лартма ĕлкĕрчĕ. Алăк сассине илтсе, кухньăран Юра тухрĕ. Ирăн ирĕксĕрех алăка уçма тиврĕ.

— Атте, паллаш, ку — ман каччă.

— Иртерех мар-и-ха сана каччăсемпе çӳреме?

— Халь урăх вăхăт, атте.

— Юрĕ эппин, эс каланă пек пултăр.

Вĕсем виççĕш те кухньăна иртрĕç. Слава кĕленчесене сĕтел çине лартрĕ.

— Ķусем кирлех те марччĕ пулĕ.

— Çапла пулĕ те, çывăхрах паллашас терĕмĕр.

— Юрĕ-çке эппин.

Ира холодильникрен тăварланă хăяр кăларчĕ, çăкăр касса хучĕ. Слава кĕленчесене уçрĕ, çуттине черккесене, шампанскине фушерсене ячĕ.

— Айтăр, ĕçер эппин, паллашнă ятпа.

Сыпсассăн арçынсен калаçмалли тупăнать вăл. Çур сехетрен Юрăпа Слава ыталашсах лĕпĕртетсе ларчĕç, юрласа та илчĕç. Ансăртран тенĕ пек Таня пырса кĕчĕ те алăри хутне Ирăна тыттарчĕ.

— Ак çакăнта алă пустар, вара пулать те.

Ира ашшĕ патне пычĕ.

— Атте, çакăнта алă пус-ха. Паçăрах каласшăнччĕ сана, хăвăр тӳрех кухньăна утрăр та, шарламарăм.

— Мĕн хучĕ ку?

— Пулăшу илме хутсем пуçтарма хушрĕç те...

Юра пĕр шухăшсăр-нимсĕр алă пусса пачĕ. Ятне тенĕ пек тепĕр кăштах ларкаларĕç те Славăпа Таня кăмăллăн тухса утрĕç. Юра диван çинче таянса кайрĕ. Ира хăй пӳлĕмне кĕчĕ те паян вырăн сарса хывăнсах выртрĕ.

Ирпе, ашшĕ кайсанах, Таня чупса анчĕ.

— Айта, тумлан, паян ĕçе вĕçлер.

Çур кун хушшинче кирлĕ хутсене туса пĕтерчĕç те хваттер илекене шăнкăравласа пĕлтерчĕç. Лешĕ çур сехетрен персе те çитрĕ. Хваттерпе кăмăллă юлчĕ. Ķуçас-тăвас пирки ырана калаçса татăлчĕç.

Тепĕр кунне, ашшĕ тухса утсанах, хаклă тата меллĕрех япаласене çӳлти хута, Таня сĕннĕ пӳлĕме, куçарчĕç, ыттисене путвала антарса купаларĕç. Ķĕçех çĕнĕ хуçа та икĕ машинăпа кĕрлеттерсе çитрĕ. Ирăпа алăран алла çирĕм миллион парса татăлчĕç. Çакна курса тăнă Таня Ирăран çавăнтах çур миллион ыйтрĕ.

— Мĕн сăлтавпа? — тĕлĕнчĕ хĕр.

— Ара, учрежденисем тăрăх чупса çӳренĕ чухне унта та кунта тӳлеме тиврĕ, хам кĕсьерен кăларнă вĕсене. Тата çак кунсенче эрехпе сакускăсем валли çынран кивçен илнĕ. Çав парăмсене татмалла манăн.

Ира пĕр сăмахсăрах ыйтнă пек укçана шутласа тыттарчĕ, ыттисене чăматан тĕпне чĕркесе хучĕ.

Юра ĕçрен таврăнсан, алăка уçса кĕме тытăнчĕ, анчах çăра уççи темшĕн çăрана кĕмерĕ. Çăрине кун хушинче такам улăштарнă имĕш. Вара шăнкăрав кнопкине пусрĕ. Кăштахран шалта ура кăштăртатни илтĕнчĕ те, уçăлнă алăкран палламан арçын курăнчĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку? Мĕнле кĕнĕ эсир ман хваттере? Халех милицие чĕнетĕп.

— Çук, милицие чĕнме кирлĕ мар, ыр çыннăм. Кунта пурте йĕркеллех. Хваттере эпир хутсене чипер йĕркелесĕх илнĕ. Ак, ордерĕ те.

— Кам сутнă вара сире хваттере?

— Ира ятлă çамрăк хĕр. Эсир хăвăр та килĕшсе пуснăччĕ хут çине. Так что, пурте йĕркеллех.

Аптраса кайнă Юра лаках ларчĕ картлашка çине. Алăк шалтлатса хупăнчĕ. Юра çаплипех çĕр каçрĕ картлашка çинче. Кĕрен-тухансем шăппăн иртсе çӳрерĕç. Тепĕр кунне Юра ĕçрен ыйтса килчĕ те путвалти япаласене комиссионкă магазина кайса леçрĕ. Ирăна пĕр сăмах та шарламарĕ вăл. Тепĕр тесен, халь ĕнтĕ мĕнех тăвайăн-ши? Сутлашма та шутламарĕ: ытле та канителлĕ теççĕ те ĕçĕ.

Пуçланчĕ вара Юрăн çурма бомжла пурнăçĕ. Юрать-ха, кĕçех утмăл çул тултарчĕ те пенсие тухрĕ. Вара вăл пĕр организацие хурала вырнаçрĕ те хурал будкинчех пурăнса кайрĕ.

Çӳлти хваттерте вара уйăхĕпех музыка сасси татăлмарĕ. Ăна япраттараканĕсем те çавăн чухлех минререн тухма пĕлмерĕç, тепĕр чухне кампа выртса тăнине те чухламарĕç. Çирĕм миллионлă кайф вĕсемшĕн савăнăçлă иртрĕ. Çапах та пур япалан та вĕçĕ пур çав. Акă, пĕр кунхине Таньăн ашшĕпе амăшĕ кăнтăртан таврăнчĕç. Хваттер алăкне уçрĕç те чутах кайса ӳкмерĕç. Хваттерте темĕнле пăнтăх шăршă тăрать, пӳлĕмсенче пĕр тирпей те çук, кулленхи çӳп-çапа тухса тăкакан пулман, вăл, витресем урлă тухса, урайне сапаланнă, ăçта курнă — унта вăлча-консервăсен пуш банкисем выртаççĕ, кладовка тулли шампански, коньяк, бренди кĕленчисем.

— Хĕрĕм, Таня, кил-ха кунта! — чĕнчĕ тĕлĕннĕ амăшĕ. Ун патне ыйăхланса кăмăлсăрланнă хĕрĕ йăраланса пычĕ.

— Мĕн кирлĕ? — ыйтрĕ вăл çиллессĕн.

— Ăçтан укçа тупрăн кун пек аташма?

Таня хирĕç чĕнмерĕ, куçĕсене çеç чышкисемпе сăтăрчĕ.

— Банк çаратрăр-и е миллионера качча тухрăн? — ниепле

те лăпланаймарĕ амăшĕ. Ашшĕ унпа юнашар ним чĕнмесĕр тăчĕ. Анна халлĕхе ытларах асăрханă коньяк кĕленчи канăç памарĕ. Мăшăрĕ вара çиллине чараймарĕ.

— Эс мĕн, хĕрĕм, пурнăçна йăрт-ярт та йăкăл-якăл çеç пурăнса ирттерес тетĕн-ши? Шутла çавăн пирки эпир сывă чухне!

— Мĕнле кăмăл туртать, çавăн пек пурăнатăп. Ыранхине куç курĕ унта. Ма паян кулянмалла ун пирки?

Амăшĕ алла мĕн лекнĕ, çавăнпа хăмсарма пикенчĕ. Таня хăйĕн пӳлĕмне тарса кĕчĕ те питĕрĕнсе илчĕ. Вара Ирăпа иккĕш шăп ларчĕç кунĕпех, сывăрса та илчĕç пĕр кана. Қаç енне шăппăн тухса юхрĕç урама. Унта леш йĕкĕтсем кĕтсе те ларççĕ ĕнтĕ. Вĕсем вара ыталашсах çывăхри ресторан еннелле утрĕç. Ирăн юлашки япалисене сутса тупăннă укçи пур-ха вĕсем валли кĕçĕрлĕхе.

Çула май вĕсем васкавлă пулăшу машинине такама наçилккапа кĕртнине асăрхарĕç. Çынни ӳссе ларнă сухаллă пулин те, Ира ашшĕне палласа илчĕ. Чунĕ чăтаймарĕ, вăл машина патне чупса пычĕ.

— Атте, атте, мĕн пулнă сана?!

— Анна темĕнле машина çапса хăварнă, — терĕ пĕр санитарки. — Эс ун хĕрĕ пулсан, лар пирĕнпе, тен, кирлĕ пулăн.

Ира, юлташĕсем çинчен манса кайса, машинăна чăмрĕ. Ир енне пульницара ашшĕ тăна кĕмесĕрех вилчĕ. Машина çапса хăвариччен вăл ытлашшипех ӳсĕр пулнă, терĕç тухтăрсем. Пытарса-туса ĕç вĕçличчен виçĕ талăк та иртсе кайрĕ. Çав кунсенче Ира Таня патĕнче пулмарĕ. Ак, халь вăл, чунĕ тем пек туртмасан та, вĕсен хваттерĕ умне пырса тăчĕ. Алăка Таня уçрĕ. Вăл темĕнле ялтăркка куçĕсемпе Ира çине сиввĕн пăхса илчĕ те, пĕр сăмах шарламасăр, Ира умне унăн юлашки чăматанне кăларса лартрĕ. Алăк çавăнтах шартлатса хупăнчĕ. Çак саманта тахçанах кĕтсе пурăннă пулин те, Ира çухалса кайрĕ. Мĕн тумалла ĕнтĕ халь унăн? Ăçта каймалла? Ăçта пурăнмалла малалла? Тен, пурăниччен вилни авантарах? Çĕр çăтас пулинччĕ хăть пĕррех май. Çак ыйтусем çине хурав тупайманран Ирăн вăй пĕтсе килчĕ, вăл тахçан ашшĕ пек картлашка çине тĕшĕрĕлсе анчĕ.

Вăл тăнне çухатнине пускилсем тахăшĕ асăрхаса, васкавлă пулăшу чĕннĕ Анна вара пульницана илсе кайнă. Унта анализсем туса, унăн çие юлни çинчен пĕлтерчĕç хĕре. Ку тата мĕн тума кирлĕ халь ăна? Қам пулĕ ун ашшĕ? Слава е тепри? Пĕлмест вĕт çавна Ира, ӳсĕрле юлнă ача уротла çуралмĕ-ши

тата? Ҫама кирлӗ чун пулӗ вӑл ун чухне? Ма хӗн-асап курмалла тет унпа? Пӑрахас ӑна кая юлман чухне. Анчах мӗнле каяс пульницана? Намӑс вӗт. Луччӗ вилем хам та пӗрех хут. Ним лайӑххи те кӗтме ҫук пурнӑҫран. Эх, аттепех пурӑннӑ пулсан!.. Хваттере сутса яман пулсан!.. Чавса ҫывӑх та ҫыртма ҫук, теҫҫӗ ҫав...

Тепӗр эрнерен милици сводкинче ҫакӑн пек ҫырса хуни пулчӗ: «Таня ятлӑ хӗре хваттерӗнчех ҫӗҫӗпе чӗриччен чиксе вӗлернӗ. Слава ятлӑ йӗкӗтӗнне пӗр путвалта, ним пӗлми ӳсӗр пулнӑскерӗнне, ар хатӗрне касса татнӑ. Ира ятлӑ хӗр, тӑххӑрмӗш класа ҫӳреме пӑрахнӑскер, кӗпер айне сиксе вилнӗ». Анчах ҫак хӑрушла вилӗмсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑннине сахал кам пӗлчӗ. Пӗлменни, тен, аван та-и.

## ХВАТТЕР

1994 ҫул питӗ кичемӗн пуҫланчӗ. Ун пекки ку таранччен пӗртте пулманчӗ. Пӗрремӗш хут Ҫӗнӗ ҫул каҫӗнче хула паркӗнче пӗр чӗрӗ чуна та тӗл пулмарӑм. Хут купӑс сасси те илтӗнмерӗ, елка айӗнче хӗвӗщекенсем те курӑнмарӗҫ. Тунсӑхлӑ, савӑксӑр иртрӗ хӗллехи уяв. Нумаях пулмасть ҫынсен чи юратнӑ уявӗ пулнӑ тесе шутламӑн, ӑна пурте чи пысӑк шанӑҫпа кӗтсе илнӗ теме те ҫук. Хула транспорчӗнче пынӑ чухне хӗрарӑмсен куҫӗсем ытла та тунсӑхлиҫе асӑрхатӑн, пӗр-пӗринпе шавлӑн калаҫса пыни пач ҫук, кашни хӑйӗн тарӑн шухӑшӗсене путнӑ.

Ӗлӗксенерех Ҫӗнӗ ҫул каҫӗнче кашнин куҫӗ хӗм сирпӗтетчӗ, питсенче ҫутӑ кулӑ кайма пӗлместчӗ, йӗри-тавра шӑв-шав тӑратчӗ, хут купӑс кӗвви чунсене ҫӗклетчӗ, ушкӑнӑн-ушкӑнӑн юрлатчӗҫ, ташлатчӗҫ. Хуйӑх-суйӑх ҫинчен шутламан та ун пек уявра. Эпир те упӑшкапа аван пурӑнаттӑмӑр, уявсене ҫынсенчен юлман, халӑхпа пӗрле савӑннӑ. Анчах юлашки ҫулсенче пурнӑҫ пӑсӑлчӗ, ҫулсерен йывӑрлансах пырать. Мӑшӑрӑмӑн чунӗ ҫемҫерех пулчӗ пулмалла, йывӑрлӑхсене чӑтса ирттерейменсӗр эрех сыпма пуҫларӗ. Малалла та кун пекех кайсан, ӑна ҫухатасран питӗ шикленетӗп.

Пирӗн ҫуртра кашни уйӑхрах виле пытараҫҫӗ, ватӑлса е чирлесе вилнисене ҫеҫ мар, ытларах чухне ҫамрӑкраххисене, татах та чылай пурӑнмалласкерсенех. Эрех ӗҫсех боксер вилчӗ, пӗверӗ ӗҫлеми пулнӑ терӗҫ. Шутласа каяс пулсан, чылай хисепleme тивет. Уйрӑмах пӗр вилӗм чуна хурлантарать: тӑххӑрмӗш класа ҫӳренӗ хӗр ача ҫакӑнса вилнӗ. Пурнӑҫ тутимасине туянса курманскер вӗт, пурӑн та пурӑн Турӑ панӑ ҫут тӗнчепе савӑнса.

Хамӑн та алӑсем усӑнаҫҫӗ, нимӗн патне пырасшӑн мар. Ҫапах та чунра темӗнле шанӑҫ пурӑнать, пурнӑҫ улшӑнасса кӗтсе сӳнмест. Чи малтан упӑшкана ӗҫме пӑрахтарас килет. Ана пурнӑҫлама хваттер улӑштарса, ку ҫуртран тухса кайни пулӑшассӑн туйӑнать. Пуҫкил арҫынисемпе пӗр май пӑшӑл-

пăшăл туни, пӳлĕмсенче питĕрĕнсе ларса ĕçни йăлăхтарса çитерчĕ. Ĕçри юлташсем те усăллă сĕнӳсем параймарĕç, асăрхаттарчĕç çеç:

— Пĕтĕмпех çынран хăйĕнчен килет, ун характерĕ çук пулсан, нимĕнпе те пулăшаймастăн. Çĕнĕ çĕрте те хăй пек пускил тупăнма пултарать, мăшăрун пырне никам та вăйпах ямасть вĕт.

— Çаплах пулĕ, сирĕнпе килĕшмелле пек.

Хам хваттертен хам сивĕнсе пыра пуçларăм, юсав ĕçĕсене тек тытăнас килми пулса çитрĕ. Маччаран пурă тăкăнать, стенаран сăрă хăйпăнать, обойсем çурăлса усăна-усăна анаççĕ. Пĕррехинче аялти хутри пускил пырса кĕчĕ.

— Чӳрече тĕлĕнче сирĕн хутран пĕр май шыв сăрхăнать, маччa çумĕнчи кĕтес пĕр вĕçĕм нӳрелет.

— Пулма пултараймасть, эпир нихçан та шыв тăкмастпăр унта, чечек чӳлмекĕсем те пурте савăтра ларaççĕ.

— Эсир чӳрече уçса пăхăр, унта шуç тимĕр хăйпăннă сирĕн.

Чăнах та, çумăр шывĕ юхма тесе майланă шуç тимĕр пĕр пăтинчен тухнă та чалăшшăн усăнса тăрать. Çумăр çумассерен шыв кирпĕч хушăкĕсемпе аялти хута сăрхăннă.

— Қаçарăр, тархасшăн, çак кунсенчех юсăпăр.

— Қаçарасси пулĕ-ха та вăл, юсавне нумай пулмасть çеç тунăччĕ, кĕтес вара каллех хура. Эх, мĕн каласси пур, каллех шуратма тивет.

Пускил çиллессĕн алă сулса тухса кайрĕ. Эпĕ аван марланса тăрса юлтăм. Çав самантра çĕр çăтинччĕ хăть. Айăпĕ пирĕнтех ĕнтĕ, пăхсах тăмасан, тем те хăйпăнса тухĕ. Тем тесен те, укçа тупса юсамах тивет хваттере. Тек намăс курас марччĕ пускил умĕнче, хур та кăтартас марччĕ. Шăла çыртсах тăкакланмалла пĕрре хуть.

Хваттерĕ пирĕн хула варринчепе пĕрех. Çуртĕ — «хрущеба» текен коммуналлă çурт. Пирĕн пĕрлехи коридортан виçĕ алăк каснă. Эппин, виçĕ пӳлĕмре виçĕ çемье пурăнать. Қухня, ваннăй, туалет, коридор пекех, пĕрлĕхлĕ.

Çав пӳлĕмсенчен пĕринче атте-аннепе яшлăхри чи телейлĕ çулсене ирттернĕ. Вăтам шкул хыççăн института кĕме тăрăшсах экзаменсене хатĕрленеттĕм. Пĕр кунхине аттепе анне, мана чăрмантарас мар тесе тата канмалли куна усă сывлăшра ирттерес шутпа, Атăл тепĕр енне тухса кайрĕç. Анчах вĕри хăйăр çинче киленсе хĕртĕнеймен вĕсем. Атăл варринче вĕсен трамвайĕ иртсе пыракан пăрахутпа çапăнса путнă. Аттепе анне

çăланайман. Çапла вара пĕр кунтах иккĕшне те çухатрăм.

Юнашар пӳлĕмре Петĕр ятлă тантăш амăшĕпе пурăнатчĕ. Эпир унпа мĕн ачаран тус-юлташла пулнă. Юрату пирки нихçан та сăмах тухман пирĕн хушăра. Анчах ăна салтака илсе кайсан, тунсăхласа канăçа çухатрăм, самаях начарлантăм та пулмалла. Çар хĕсметĕнчен вăл пуш пӳлĕме таврăнчĕ. Амăшне пытарнăччĕ ĕнтĕ. Стройкăра ĕçлекенскер, кĕтмен çĕртен йăтăнса аннă плита айне пулнипе йывăр суранланса, пульницана лекнĕччĕ. Темиçе кунтан тăна кĕмесĕрех чунĕпе сыв пуллашрĕ. Çĕрĕн-кунĕн тенĕ пек ун патĕнче лартăм. Аллине ик алăпа çепĕççĕн тытаттăм та сывă çынпа пулленĕ пек пĕр вĕçĕм калаçаттăм. Вăл хăнк та тумастчĕ. Юлашки кун çеç ман алла вăйсăррăн чăмăртанă пек туйăнатчĕ. Кайран ăнлантăм, вăл мана илтсе выртнă, анчах хирĕç пĕр сăмах та калайман, хăй илтнине нимĕнле те пĕлтереймен. Чунĕ тухасса туйнă самантра çеç ман алла чăмăртанă пек туса, пил парса хăварнă.

Петĕр таврăнсан, икĕ тăлăх чун пĕр-пĕрин патне туртнăччĕ, вара вăхăта нумай тăсас темерĕмĕр, пĕрлешрĕмĕр. Икĕ пӳлĕме уйăракан стенара алăк касрăмăр та пĕр пӳлĕмĕн алăкне яланлăха питĕрсе илтĕмĕр. Вара пирĕн икĕ пӳлĕмлĕ хваттер пулса тăчĕ. Вăт çавăнта вунă çул ытла пурăнатпăр ĕнтĕ пĕрле.

Виççĕмĕш пӳлĕмре Юля пурăнать. Нумаях пулмасть вăл Вихтăр ятлă хусаха киле кĕртрĕ. Унччен пĕчченехччĕ вăл. Каççерен тенĕ пек яшсем пухăнатчĕç Юля патне. Вара çур çĕр иртиччен музыкă кĕрлетччĕ, юрă-ташă сасси янăраса тăратчĕ. Юрĕ-ха халь ĕнтĕ шăплăх тăрать. Тинех лăпланчĕ пулмалла Юля-Юлечка пускил, илем королеви. Ман Петĕрпе унăн Вихтăрĕ ваннăйĕнче питĕрĕнсе сыпкаланă вăхăтсенче çеç шавлам пекки туса илет. Анчах шавлам ятне тунăн çеç туйăнать, манран юлас мар тесе ĕнтĕ. Юлашки вăхăтра хама та шавласа йăлăхтарчĕ, çавах тем усси те çук. Луччĕ шăла сыртса чăтам, Турри çавăн пек пӳрнĕ пулсан.

Çĕр каç Петĕр ĕç хыççăн ӳсĕр таврăнчĕ. Йĕтĕрпе йĕслетес тенĕччĕ те пĕрре, ыратма пултарать тесе шеллерĕм, сывăртăрах терĕм. Çавах та мăшăрăм-çке, çитменнине нихçан та шавламасть, алă çĕклени те пулман. Вăл мăшлатса сывăрнă чухне пĕччеnлĕх кӳренĕвĕ чуна кăшлать вара. Çавах та хĕрарăм-çке эпĕ. Ман çулсенче теприсем пуç çухатса аташаççĕ. Эп пур, манашкă пек питĕрĕнсе пурăнатăп çак стенасенче.

Ирпе ĕçрен ан юлтăр тесе вăратнă хыççăн чунра тăвăлса тулнине пĕтĕмпех каларăм Петĕре, макăра-макăра, пӳлĕне-

пӳлёне уҫрӑм чуна. Хӑйне хӳтӗлеме пӗр сӑмах та тупаймарӗ вӑл, пуҫне усса мӑшлатса ҫеҫ тӑчӗ вӑл, ҫавӑнпа айӑпа кӗнӗ шкул ачи пекех туйӑнчӗ. Ку мана пушшех тӑвӑлтарса ячӗ.

— Ну, мӗн пӗр сӑмах та каламастӑн, мӗн айӑпа кӗнӗ шкул ачилле нӑшлатса тӑратӑн?

— Ҫаҫар мана, айӑплӑ эпӗ. Чун тӑвӑлать пӗр май. Сыпатӑн та, ҫӑмӑл пек туйӑнать, нервӑсем ҫемҫелеҫҫӗ. Стресран хӑтӑлатӑн теҫҫӗ ун пек чухне.

— Мана та хӑв пек сыпма сӗнместӗн пулӗ те? Енчен те ачасене тӑлӑха хӑварсан, кам пӑхса ӳстерӗ вӗсене? Ҫавӑн ҫинчен шутласчӗ хӑть.

— Лӑплан-ха эс, ан мутала чуна. Пӗтӗмпех ӑнланатӑп эпӗ, малалла тытма тӑрӑшӑп хама. Юрать-и?

— Юрӗ-ҫке, уттар ӗҫна, атту юлма та пултаратӑн.

Петӗр апатланмасӑрах ӗҫе тухса утрӗ. Ман ӑш вӑркама пӑрахмарӗ-ха, аялти хутри пускил асран тухмарӗ. Ҫавна туйнӑ пекех, Петӗр ӗҫрен тӑм урӑ таврӑнчӗ, хӑйпе пӗрле пӗр пакет цемент илсе килчӗ. Ман кӑмӑл хӑпартланчӗ, чупса тенӗ пек ача-пӑча вылякан лаптӑкран хӑйӑр илсе хӑпартӑм, ӑна ала витӗр кӑлартӑм, раствор турӑм. Петӗр чӳрече умне тул енчен юсама пуҫларӗ. Эп каҫхи апат хатӗрлеме кухньӑна кайрӑм. Чун юрлать кӑна. Ҫынна савӑнма та нумаях кирлӗ мар имӗш. Мӑшӑрӑм сыпкаланинче, тен, манӑн айӑп та пур? Пӗр май кӑмӑлсӑр ун умӗнче, пӗр вӗҫӗм мӑкӑртататӑп ун ҫине. Ҫамӑн кӑмӑлӗ хуҫӑлмӗ, чунӗ пирчемӗ ун пек чухне. Ахаль те пурнӑҫӗ йывӑр, ун ҫумне тата килти пусмӑр тиенет. Арҫынӑн та чунӗ канмалла-ҫке. Эп вара пурнӑҫ йывӑрланса пынишӗн пӗтӗм айӑпа ун ҫине тиетӗп. Ӑҫтан чӑттӑр ӗнтӗ сыпмасӑр. Паян, ак, мӗн тери аван вӑл чиперришӗн, манпа та, ав, кӑмӑллӑн калаҫать, ытти чухнехи пек чӗмсӗр мар. Хатӗрлемха апатне тутлӑрах, пулам-ха унпа ӑшӑрах, кӑштах та пулин ҫӑмӑллатам-ха пурнӑҫ йывӑрлӑхне, ҫемҫетем-ха чунне килтех. Килте канӑҫ тупмасан, ӑҫта тупмалла тет ӑна арҫыннӑн? Киосксен тӑррисене «хупласа-им»? Самантлӑх «туссем» тупса-им? Ма шутламан вара эп кун пирки паянччен? Мӗн минретнӗ ман пуҫа? Мӗн хупланӑ ман куҫа? Ах, тӑм писмен, ах, тӑм писмен! Ӗмӗр пурӑн та ӗмӗр вӗрен, тенӗ ваттисем. Пӗлнӗ ҫав вӗсем пурнӑҫ тути-масине.

Эп апат хатӗрленӗ тӗле Петӗр ӗҫе вӗҫлеме ӗлкӗрнӗ, ҫӑвӑнса тумне улӑштарнӑ. Апатпа кӑмӑллӑ юлчӗ вӑл. Ман сапас пурччӗ те, ӑна ҫур стакан ярса патӑм. Ку унӑн чунне ҫемҫетсех ячӗ. Куҫӗпе татах пӑхрӗ кӗленче ҫине, эп пӳрнепе юнарӑм,

ыран та кун пур тесе асăрхаттартăм. Петĕр, хăй сисмесĕрех, ассăн сывласа илчĕ, унтан кулса ярса, аллине сулчĕ те кăмăллăн сĕтел хушшинчен тухрĕ. Эп чашăк-тирĕк пуçтартăм, вăл паянхи хаçатсене вулама ларчĕ. Унтан телевизорпа «Время» пăхма диван çине юнашар вырнаçрăмăр. Петĕр мана ăшшăн ыталаса илчĕ. Эп те ăна ыталарăм. Эх, чун уявĕ тума кашни кунах пулать-çке, имĕш. Нумаях та кирлĕ мар ăна валли: пĕр-пĕрин чун ăшшисене ан шелле çеç.

Ытларах арçын çиллипе хăйĕнне илет. Эпир, хĕрарăмсем, пур, тивĕçлипе тарăхатпăр-и, тивĕçлипе мар-и, тӳрех кăларатпăр çиеле, вара тытăнатпăр çилĕпе арçына питĕнчен те куçĕнчен пеме, тăнлавне минретме. Хамăртан хамăр пистеретпĕр арçынсене, хамăр чĕмсĕрлететпĕр вĕсене. Анчах хирĕç чĕнекен арçынсем те пур тĕнчере. Юрпа пĕр-пĕрне пенĕ пек, пуçланать вара сăмах перкелешĕвĕ. Қашниех хытăрах тивертме пикенет. Кĕçех вăйăран вăкăр тухать вара. Тепĕр арçын алă хума та пултарать. Сахал илтетĕн-и ун пирки. Ак сана чăнчăн вăрçă, ак сана трагеди. Пĕри тепĕрне чиксе, касса е çапса вĕлерни çинчен тăтăшах çыраççĕ хаçатсенче. Тур сыхлатăрах ун пек инкекрен, çĕр çинчи чĕр тамăкран.

Шухăшсемпе тем патне те çитеттĕм пулĕ те, мăшăрăм сасси татрĕ вĕсене.

— Пĕлетĕн-и, Нюра, эп паян пĕрле вĕреннĕ юлташа тĕл пултăм.

— Мĕнех вара?

— Вăл мана хăйĕн визиткине пачĕ. Предприниматель пулса ĕçлетĕп, тет.

— Ĕçе чĕнмест пулĕ те?

— Ĕçĕ вăл, шĕкĕр Турра, хамăнах пур-ха.

— Пур та, усси сахал-ха. Миçе уйăх ĕнтĕ укçа илейместĕн. Чăнах та, продуктăсемпе çи-пуç тавраш̆ĕ хушăран илсе килетĕн ĕнтĕ. Анчах, укçи пулсан, вĕсене йӳнĕрех хакпа илме пулать-çке.

— Çапли çапла-ха вăл. Пĕрле вĕреннĕ юлташ урăх сĕнӳ парать.

— Мĕнле сĕнӳ-ши тата?

— Хваттер пирки-ха.

— Бесплат юсаса парасшăн мар пулĕ те?

— Эс итле-ха вĕçне çити, сан ялан хирĕçле калаçасси.

— Юрĕ-çке, кала эппин, шăпăрт итлесе ларăп.

— Хваттер улăштарас пирки лайăх сĕнӳ парать вăл.

— Юсавсăр кам килĕ кунта? Укçине ăçтан тупар? Пирĕн

фабрикăна кĕçех тăватă кунлă ĕçе куçараççĕ, шалу тытах чакать.

— Майлаштарас-тăвас ĕççене хăй çине илетĕп терĕ. Шăмат кун килсе курас пек каларĕ. Эпир хула варринеллерех пурăнни илĕртет пулмалла ăна.

Шăмат кун ир-ирех ура çинче пултăм. Упăшкан пĕрле вĕреннĕ юлташĕ умĕнче намăс курас килмерĕ. Килте тупăннă мĕн пур сапаспа усă курма тиврĕ. Кăштахран магазин умĕнче ирсерен пухăнакан пасара та тухса кĕтĕм. Япăх мар сĕтел йĕркелерĕм тетĕп, хам шутпа та пирĕн виçепе.

Вунă сехет тĕлнелле шукăль тумланнă патвар арçын кĕрсе тăчĕ пирĕн пĕтĕмĕшле коридора. Пĕр аллинче йăмăх хĕрлĕ тĕслĕ роза чечекĕсем, тепĕр аллинче — конфет курупки, самаях пысăк курупка. Ун хыçĕнчен хăй пекех патвар йĕкĕт кĕчĕ. Вăл икĕ аллипе картун курупка ыталаса тытнă.

— Ну, Петĕр, сывă-и, ак эпĕ çитрĕм те. Ку сан мăшăру пулĕ-ха?

— Салам, салам, Пурис. Хавас сана йышăнма. Паллаш, ку ман мăшăрăм, Нюра.

— Питĕ хавас, питĕ хавас паллашма, — терĕ те килнĕ хăна мана чечек çыххипе конфет курупкине тыттарчĕ.

— Кусем сире валли. Çак кучченеçсене ăçта лартмалла-ши? — терĕ вăл хăй хыççăн кĕнĕ йĕкĕт аллинчи курупка çине кăтартса. — Атту йĕкĕтĕн аллисем татăлса анĕç тата.

— Айтăр, пӳлĕме иртер, мĕн кунта кĕпĕрленсе тăмалли. Эпир те вара, чĕнме маннă хăнасене малалла иртме.

Малти пӳлĕме иртсен, ку таранччен çăварне уçман йĕкĕт аллинчи курупкине, вырăн шыраса ун-кун пăхса илсе, пушă диван çине лартрĕ те пĕр сăмах чĕнмесĕр тухса утрĕ.

— Ку йĕкĕт чĕлхесĕр мар пулĕ те? Мĕн, пирĕнпе пулмасть-и вăл?

— Хăйĕн вырăнĕпе ĕçне пĕлет вăл, çавăнпа чĕмсĕр. Ман шофер та, сыхлавçă та вăл, яланах çумра. Эп сыпкаласан, пуль умне лартатăп ăна, ытти чухне хамах тытса пыратăп машинăна.

— Мĕн ура ывăнтарса тăратпăр эпир, ларар сĕтел хушшине, калаçар шăкăл-шăкăл, — сĕнтĕм эпĕ арçынсене.

— Ун пекех васкар мар-ха. Эпир Пурispa хваттере пăхса çаврăнар. Эсир, Нюра, унччен курупкари кучченеçсене сĕтел çине майласа лартăр.

Вĕсем малтан тепĕр пӳлĕме, эпир спальнăй тенине, кĕрсе тухрĕç, унтан пĕрлĕхлĕ лаптăксене пăхма кайрĕç. Эп диван

çинче ларакан пысăк курупка патне пытăм, унтан пăшăрхана-пăшăрхана уçрăм та шалтах хытса тăтăм. Мĕн-мĕн çук унта! Шампанскийĕ, коньякĕ, çутти. Тĕтĕрнĕ кăлпасси, шăрттан, хаклă сыр, балык текен пулă, вăлча... Пурне те каласа пĕтерессĕм çук. Шиклене-шиклене хăшне-пĕрне лартрăм сĕтел çине. Кунта такам валли те çитмелле. Хам иртенпе хатĕрленĕ çимĕçе лартма та намăс пулĕ, кун пек пулсан, хăна умне.

Тепĕр кăштахран арçынсем таврăнчĕç.

— Эп илетĕп ку пурăнмалли лаптăка, — терĕ хăна, аллисемпе кăмăллăн сăтăркаласа.

— Ун вырăнне мĕн сĕнетĕр пире? — чăтаймарăм эпĕ.

— Эс, Нюра, яланах васкатăн, пар çынна каласса пĕтерме, — тĕртсе илчĕ Петĕр. Тепĕр чухне татса калаттăмччĕ те ăна, хăна умĕнче чĕнмерĕм. Пурис сăмахне малалла тăсрĕ.

— Ман шутпа, çĕнĕ планировкăллă çуртри икĕ пӳлĕмлĕ хваттерпе сырлахмалла эсир, пускилӳсене вара...

— Мĕн, пускилсене те хутăштармалла-и ку ĕçе? — каллех чăтаймарăм эпĕ.

— Тӳсĕмлĕ пул-ха эсĕ, Нюра, итлесе пĕтер вĕçне çити, — кăмăлсăрланчĕ Петĕр, маншăн хăна умĕнче аван марланса.

— Паллах, пускилсене те. Эп унсăрăн килмен те пулăттăм кунта. Мана пĕтĕм лаптăкĕ кирлĕ, кунта ватса-туса майласан, чаплă аппартамент тухмалла.

— Пускиле мĕн сĕнесшĕн тата?

— Вĕсене çавăн пекех çĕнĕ планировкăллă çуртри пĕр пӳлĕмлĕ хваттере.

— Апла, кайса чĕнмелле пуль вĕсене?

— Çак-шĕ, чĕнмелле.

Пӳлĕмĕнче Вихтăр пĕчченехччĕ. Юля тасту тухнă пулмалла.

— Вихтăр, каç-ха пирĕн пата, ĕç пур, — чĕнтĕм ăна алăкранах.

Вăл нумай кĕттермерĕ, кĕçех пычĕ.

Хăна сĕтел çине пăхса илчĕ те ман енне çаврăнчĕ.

— Нюра, эсир мĕн, пурне те кăларса лартман? — терĕ те, курупка патне пырса, хăйех кăларма пуçларĕ кучченеçĕсене.

Эп чашăк-тирĕксем лартрăм сĕтел çине, сыр, кăлпасси, çăкăр касма Петĕре çĕçĕ тыттартăм. Хам ун çине ыйтуллăн пăхрăм: лартмалла-и сĕтел çине хам иртенпе хатĕрленĕ апапăша?

Хăна мана Петĕртен маларах ăнланчĕ.

— Эсир, Нюра, именсе ан тăрăр, лартăр мĕн пуррине. Вĕри апат хатĕрленех пулĕ. Ĕç-пуçа путса, паян чиперрĕн

çиме те ёлкĕреймерĕм. Çăкăртан асли çук, теççĕ. Эпир чăвашсем вĕт, апат тиркесех каймастпăр.

Тепĕр тесен, мĕн вăтанмалли пур: солянка техĕмлĕ пулчĕ, шаркку та какайсăр мар, пахча-çимĕçсенчен тунă салата та никам тиркемĕ. Қăларса лартрăм кашнин умне пĕрер тирĕк.

— Вăт патша сĕтелĕ пулчĕ те, — терĕ хăна аллисене сăтăркаласа. Ку унăн йăли пулмалла. — Халь ĕнтĕ мăкăрич калаçăвне пуçарма вăхăт. Шампански ун валли мар, лартăрах хăйĕн черетне кĕтсе. Коньяка ӳкĕтлер пулĕ чĕлхемĕрсене çемçетме.

Коньяк кĕленчине пушатнă тĕле ар çынсем калаçса татăлчĕç те. Эпир тесен, Петĕр иккĕн паян тесен паян çĕнĕ хваттере куçма хатĕр. Ачамăрсем вара лагерьтен çĕнĕ çĕре таврăннă пулĕччĕç. Вихтăр та, ав, кăмăллă. Анчах пӳлĕмĕ Юля çинчеçке. Эпир ун çинчен мансах кайнă. Хуларан таврăнчĕ те пулĕ. Юльăна асăнсанах, Вихтăр унпа калаçса татăлма кайрĕ. Çур сехет те иртрĕ пулĕ, вĕсем çук та çук. Вара хамах калаçас тесе алăк патне çитнĕччĕ çеç, Вихтăр пĕчченех кĕчĕ.

— Вăт ăна хĕр арăм те така пуçа, ниепле те килĕшессĕн мар. Эп ăна лайăх тетĕп, вăл хирĕç япăх тет, эп ăна шурă тетĕп, вăл хирĕç хура тет.

— Юрĕ, ар çынсем, эсир ларăр-ха калаçса, эп хам каçса пăхам, хĕрарăм хĕрарăма ăнланмаллах, — терĕм те хирĕçе каçрăм. Юля телевизор умĕнче темĕнле передачă пăхса ларатчĕ, çав хушăра тăрăшсах хĕвелчамăш шĕкĕлчет, чĕрçийĕ çинче пĕр купа хĕвелчамăш хуппи выртать.

— Вихтăр ăнлантарчĕ пуль сана, Юля?

— Мĕн усси вăл ăнлантарни? Çавах килĕшместĕп эпĕ.

— Ма кутăнлашан эс, пускил? Ăнлан: юсав ĕçĕсене туса хăвармалла мар, çĕнĕ хваттере каятăр, хăвăра уйрăм пурăнма пуçлатăр. Унран ырри мĕн кирлĕ тата сана?

— Çуралнă эп кунта, ӳснĕ, йывăр мана хăнăхнă вырăнтан кайма.

— Ухмаха ан ер-ха, яланах уйрăм хваттер пирки ĕмĕтленеттĕнччĕ-çке.

— Ан та ӳкĕтле, тапранмастăп эп кунтан.

— Пулас ачусем пирки шутла, вĕсен те ĕмĕр ирттемелле тет-и çакăнта?

— Эсир тем тăвăр та, эп кунтах юлатăп.

— Мĕнле пăрçа çыртнă вара сана паян? Ыттисем пирки шутласчĕ хăть, кун пек сĕнӳ урăх пулас та çук. Қайран вырхан-

малла ан пултăр. Чавса çывăх та, çыртма çук, теççĕ вĕт. Çавна шута ил хăть.

— Ан палка тек, тухса юх хăван ар çыннусем патне, унта виççĕн кĕтсе лараççĕ сана.

— Эх, ухмах та эсĕ, психичка. Ҫайса сывалмалла сан.

Эп алăка шалтлатса хупса тухрăм пускил патĕнчен. Хамăр пӳлĕме те кĕрес килмерĕ, кухньăна утрăм. Пирĕн хăна, Пурис, унта пĕчченех пирус туртса тăратчĕ.

— Аçта вара пирĕн ар çынсем?

— Вĕсем пӳлĕмрех туртса юлчĕç. Эп хăнăхман пуранакан пӳлĕмре туртма, вара кунта тухрăм.

— Эс каçар пире, Пурис, ĕç тухмарĕ вĕт, ниепле те ӳкĕте кĕртеймерĕм вĕт пускиле, леш кутăн ашакла тĕрĕнчĕ те хăйĕн «кунта хăнăхнă» тени çинче, вырăнтан тапранмастăп, тет. Алла тыттарнă телейĕнчен пăрăнать.

— Темех мар, Нюра, ытлашши ан кулянăр вăхăтсăр, эп кăштах кĕтме пултаратăп. Тен, унччен кăмăлне çавăрăр та-и? Ну, юрĕ, кайма та вăхăт.

— Лармаллаччĕ те кăштах, мĕн тăвас тетĕн ĕнтĕ, эсир те ĕçлĕ çынсем, кану кунĕсем те çук пулĕ сирĕн, предпринимательсен. Эп Петĕре систерем-ха.

— Çук, Нюра, кирлĕ мар чăрманма. Сыв пуллашмасăр кайни аванрах та пулĕ, тепре килме сăлтав пулĕ.

— Хăвăнне ху пĕл эппин, Пурис. Ҫӳренсе ан кай.

— Хăвăр кӳренсе ан юлăр. Чипер юлăр, тепре куриччен.

Петĕр хăнана чĕнме тухнă тĕле Пурис тапранса кайрĕ. Пысăк ĕмĕт таталнăн туйăнчĕ çав самантра. Шанăç пурччĕ вĕт уйрăм хваттерте юлашки пурнăçа ирттерме. Çăлтăр пек çуталса илчĕ çав шанăç пирĕн умра. Çав пӳтсĕр хĕр арăма пула сӳнме пултарать вăл. Мĕнпе ӳкĕте кĕртмелле тата ăна? Куç умĕнче ӳсрĕ вĕт, курманччĕ вăл çавăн пек кутăнлашнине. Тен, асăрхаман-и?

Унтанпа эрне те иртсе кайрĕ. Ҫашни кун ӳкĕтлеме пикенетĕп, çук, яхăнне те ямасть, итлесшĕн те мар никама та. Петĕр те пуçне усрĕ. Ҫаллех сыпма ан тытăнтăрччĕ çеç. Кăмăллăрах пуласчĕ унпа, тăвăнса килекен çиллĕме ун çине тăкас марччĕ çеç, чăтасчĕ. Турă пулăштăрах чăтăмлă пулма.

Пĕр кунхине Петĕр ĕçрен хавас кăмăлпа таврăнчĕ. Шалу паман-ши вĕсене ĕçре, е сыпнă вăл?

— Мĕн çиçетĕн тулли уйăх пек? Мĕнле савăнăç тупăнчĕ? — чăтаймарăм эпĕ.

— Ан хирĕç-ха эс пĕли-пĕлми, итле малтан. Ĕçре хамăр нуша пирки каласа патăм та, пи-ит аван сĕнӳ пачĕç.

Петĕр хăй ĕçре мĕнле сĕнӳ илтнине пĕлтерчĕ çеç, тӳрех Юля патне каçрăм.

— Юля, юлашки хут ӳкĕтлетĕп. Каллех ӳкĕте кĕместĕн пулсан, хăвна ху айăпла.

— Мĕн хăратса çӳрен? Эп хам сăмаха тахçанах каланă.

— Юрĕ, эппин. Ху пĕлетĕн, юсав ĕçĕсем тума пире укçа кирлĕ, çавăнпа пĕр пӳлĕмне пушатма шутларăмăр эпир. Каснă алăкне те каялла хурса лартатпăр. Вара эрменсене хваттере яратпăр. Вĕсем пуян теççĕ, укçине ытларах тӳлĕç.

— Ухмаха ан ер-ха, вĕсем шавлă теççĕ, тата чылай хăна ырать, теççĕ вĕсем патне, çав шутра вĕçкĕн хĕрсем те.

— Мĕн тăвас тетĕн, нуша чăттарать. Эс ху та шава хăнăхтарнă пире. Манса та кайрăн-им?

— Юрĕ-çке, юрĕ, ан аса илтер. Вихтăр килтĕр-ха, канашласа пăхăпăр иккĕн ларса.

Эп çăмăлланнă чунпа тухрăм пускил патĕнчен. Ĕç тухатех, эппин. Асту, Вихтăрпа канашлатăр вăл, хăйне парăнтарнине тӳрех кăтартасшăн пулмарĕ çеç. Чăнах та, тепĕр кунне ĕç хыççăн хăйех кĕчĕ пирĕн пата. Эпир апатланаттăмăр.

— Апачĕ тутлă пултăр.

— Тав сана, лар пирĕнпе.

— Ларса тăма вăхăчĕ çукрах-ха. Эп мĕн, ĕнерхи калаçу пирки те, килĕшмеллех пулĕ сирĕнпе...

— Тинех ăслă сăмахсем илтетпĕр, тахçанах çавăн пек пулмаллаччĕ.

— Мĕн эсир, кая юлман пулĕ те?

— Ан хăра, ыран, вăт, каю шăтма пултаратчĕ.

— Тавах Турра, вăхăтра ăса кĕртнĕшĕн. Пĕлтерĕр, эппин, лешне, Юльăпа Вихтăр килĕшеççĕ, тесе.

Вăл тухса кайсанах, Петĕрпе иккĕн çăварти апата сирпĕтсе, кулса ятăмăр. Сĕтел хушшинчен тухсанах, Петĕр хыпара телефон-автоматпа Пуриса пĕлтерчĕ. Лешĕ алă пусмалли хутсемпе тепĕр кунех çитрĕ.

— Мĕнле пултартăр ӳкĕте кĕртме?

— Чее тилĕ те читлĕхе лекет, теççĕ вĕт.

Ун хыççăн çывăх шăмат кунах çĕнĕ хваттере куçрăмăр. Икĕ çемйине те машинăпа Пурис пулăшрĕ. Ырă кăмăлшăн Турă пулăшса пытăрах ăна пурнăçĕпе ĕçĕнче.

## ТАЙГА

Хурçă кăкăрĕпе умĕнчи сывлăша çурса, Инçет Хĕвел-тухăçне талпăнакан васкавлă пуйăспа Канашран купере эпир тăваттăн кайрăмăр. Çавăн пек инçе çула тухнă чухне, кичем ан пултăр тесе, кам та пулин карт чикетех кĕсйине. Пирĕн хушăра та карт хуçи тупăнчĕ. Вара çул тăршшĕпех чӳрече сывăхĕнчи сĕтеле шаплаттарса пытăмăр, вăхăт иртнине те сисмерĕмĕр — Новосибирска çитрĕмĕр. Пирĕн ушкăнран кунта иккĕн анса юлчĕç. Пуйăс тапрансан та, алăкран кĕрекен çын пулмарĕ. Купере эпир çăра хура сухал ӳстерсе янă пĕр вăтăр çулсенчи ар çынпа иккĕнех тăрса юлтăмăр. Пĕр вĕçĕм тухăçа кусакан пӳлĕме кичемлĕх сĕмĕ çапрĕ, иксĕмĕре те тунсăх туйăмĕ пусрĕ. Пĕрле е уйрăмшарăн тамбура тухса пирус туртни те пулăшаймарĕ. Сĕтел çинчех выртса юлнă картсемпе ыт-ахальтен сӳрĕккĕн перкелешсе ларни пушшех пусăхларĕ чунсене.

Станци таврашĕнчи вăрăммăн курăнакан складсем те, хула хĕрринчи çуртсем те тахçанах хыçала юлчĕç ĕнтĕ. Чукун çул çумĕпе тăсăлакан дачăсем те, хула сывăхнерех вырнаçнă ялсем те курăнми пулчĕç. Пуйăс вĕçĕ-хĕррисĕр симĕс вăрмана вирхĕнсе кĕчĕ. Хушăран-хушăран уçă вырăнсем, илемлĕ уçланкăсем, пĕчĕк юхан-шывсемпе кӳлĕллĕ вырăнсем куçа илĕртеççĕ. Юлташпа иксĕмĕрĕн сăмах-юмах çаплах сыпçăнмасть-ха. Вăл Женя ятлине çеç пĕлетĕп-ха халлĕхе.

Ку хутĕнче Женя пĕчченех пирус туртса кĕчĕ те кантăкне антарнă чӳрече патне пычĕ. Куçĕсем унăн савăнăçлăн ялкăшрĕç. Вăл пуçне чӳречерен кăларчĕ те чăтаймасăр кăшкăрнă пекех каларĕ:

— Акă манăн тайга, тăван ен, мĕн пек тунсăхларăм эпĕ унсăр!

Тулли кăмăлпа хăпартланса, вăл мана кантăк сывăхнерех туртрĕ. Авантарах курма пултартăр тайгана, хăй пекех чунри тунсăха сиртĕр терĕ пулмалла ман пирки.

— Вăт, çак тайгашăн тунсăхланă эпĕ инçетре, кунĕн те,

çĕрĕн те. Çулталăк ытла пулман эп кунта, — терĕ Женя кăштахран, вара çăмăллăн сывласа илчĕ те каллех сăмаха тăсрĕ: — Хулара унта яланах тем пусать, çурт ăшне кĕрсен те, стенисем сана хĕснĕн туйăнать. Кунта вара!.. Кунта!..

Купери пускил сăмахне вĕçлеймерĕ, каллех чӳречерен кĕç-вĕç тухса ӳкесле пилĕк таран чăмрĕ. Мал енчен вăйлă çапакан çил çинче вăл кинори пек уçлăха вĕçекен ирĕклĕ демон евĕрлех курăнать.

— Женя, асăрханулларах пул, тухса ӳкме те пултаратăн, вĕт! — туртрăм ăна каялла чун сехĕрленнĕрен.

— Ан хăра, эп çирĕп тытнă, пар кăштах тăван сывлăша тăраниччен çăтма! — терĕ вăл, пуçне ман еннелле пăрса.

Хăйĕн тăван енне çавăн пек каçса кайса юратакан, унсăрăн чăннипех те пурăнма пултарайман çынна хамăн пурнăçра пĕрремĕш хут куратăп.

— Эс луччĕ каласа пар мана хăвăн тайгăву çинчен, мĕнпе уйрăлса тăрать вăл ытти вырăнсенчен, мĕншĕн çав териех паха вăл саншăн? — сĕнтĕм эпĕ ăна ăнсăртран тухма пултаракан инкекрен хăтарас шутпа. Чӳречерен кутăн чакса, Женя хăйĕн вырăнне ларчĕ. Нумаях пулмасть чăтайми йӳçĕ эмел ĕçнĕ хыççăн пулакан евĕрлĕ сăн-пичĕ тулли савăкпа çиçрĕ, чĕрĕлнĕ куçĕсем ялтăртатрĕç.

— Эх, тăванăм, тайгана пĕлес тесен, унта пулса курас пулать. Пĕрре кĕрсен, тухас килмест унтан. Хăть кирек ăçта ан кай, вăл пĕр вĕçĕм туртать сана хăй патне.

Эп пĕр сăмах та чĕнмерĕм, вăл чунĕпе чĕрĕлсе пынипе савăнса килентĕм. Мĕн чухлĕ энерги пухăннă ун ютра, Ильич лампочки пек кĕç-вĕç çуталса каймалла. Эп шарламаннине кура, вăл сăмахне малалла тăсрĕ.

— Итле эппин, кăмăлу пулсан. Асатте мана мĕн пĕчĕкрен хамăр çӳрекен çĕре, çуралнă тăван тавралăха, çут çанталăка, тайгана юратма хăнăхтарнă.

Женя чуна тыткăнламалла хĕрӳллĕн каласа панăран, сисмесĕрех эпĕ те ун тĕнчине кĕрсе ӳкрĕм.

— Асатте мана тата яланах чăтăмлă та тӳсĕмлĕ пулма вĕрентетчĕ, çав тĕллевпех кашнинчех тайгана чĕнетчĕ. Кĕр кунĕсенче час-часах сунара çӳреттĕмĕр. Килтен тухас умĕн кашнинчех асанне кăмака умĕнчи чăлантан мĕн те пулин çимелли илсе тухса тыттаратчĕ. Эпĕ кăмпа куклине питĕ кăмăллаттăм. Хăй пĕр май асаттепе мăкăртатать.

— Мăнукăм кăвапу таран та ӳсмен, а эс, ват супнă, ăна

пĕр вĕçĕм тертлентеретĕн. Ќилĕнче хĕл каçмаллăх пурте çителĕклĕ, мĕн çитмест сана тата?

Ќăвапа пирки вăл, паллах, пĕчĕклетсерех калатчĕ. Эп пуç лĕпкипе асаттен çăра сухалне перĕнеттĕм ĕнтĕ. Ќам пĕлет асаннене, тен, вăл ман пирки асаттене кĕвĕçнĕ те-и, мĕншĕн тесен кунсерен пĕр-пĕччен тăрса юлатчĕ кил таврашĕнче. Вĕсемшĕн эпĕ пĕртен-пĕр чун йăпатмăшĕ пулнă пурнăçра. Аттепе анне, хĕллехи пулла кайсан, шывра путса вилнĕ. Ќаç сĕмĕнчи çил-тăманра кăшт юр витнĕ шăнман вырăна асăрхайман, иккĕш те кĕрсе ÿкнĕ. Тен, хăтăлма та пултарнă пулĕ, анчах анне хăранипе аттене çатăрласа ыталаса илнĕ те хăйпе пĕрле туртса анса кайнă.

Сывлăш çавăрса илме-и, тунсăхлă аса илÿ пусарнипе-и, Женя шăпланчĕ, ассăн сывласа илчĕ, ирĕксĕррĕн пăчăртанса тухнă куççульне вăрттăнтараххăн тенĕ пек шăлса типĕтрĕ. Эпĕ вара çакна курмăш пултăм. Ќăштахран вăл кĕтмен çĕртен таталнă сăмахне малалла тăсрĕ. Ќу хутĕнче сасси унăн кăштах пусăрăнчăклă та хăрăлтиллĕ тухрĕ.

— Хăйсене тупайман, çавăнпа вилĕ тăприйĕ те çук вĕсен. Ниçта кайса куççуль тăкайман, ырă ячĕсене асăнаймăн. Ќилти турăш умĕнче асăнни çех. Асанне мана та çухатасран вилсе кайса хăратчĕ, çавăнпа кашни сунара тухас умĕн асаттепе хирĕçетчĕ. Пулла каяс тесен вара, сехри хăпатчĕ, сăн-пичĕ кăвакарсах каятчĕ. Анчах асатте çынна лăплантарма пĕлетчĕ çав, ятлă-сумлă шутланатчĕ халăхра. Унпа ĕмĕр пĕрле пурăнса ирттернĕ асанне ăна такамран та ытла шанатчĕ, çапах та пĕрре хăнăхнă йăлапа мăкăртатма та пулин пăрахмастчĕ. Чунне лăплантарам пекки туса, çула малтанах хатĕрлесе хунă канфет-пĕремĕк сĕнетчĕ. Ќÿрентерес мар тесе, илеттĕм куччене ççене. Хăйĕн куçĕсенчен çапах канăçсăрлăх каймастчĕ.

Яланхи çак кăмăллă церемоние пула, эп тытăнарах юлаттăм, вара кил хуçшинчен маларах тухса утнă асаттене чупса хăваласа çитме тиветчĕ. Вăл пĕр хăй çеç пĕлекен тайга сукмакĕпе кăмăллăн та мăнаçлăн утса пыратчĕ. Ун умĕнче килте çула пуçтарăннă чухнех ăçта каяссине чухлакан лайка юртатчĕ. Кедр ятлăччĕ вăл. Палăртса хунă вырăна каç пулттипе çитсе ÿкес тесе, шутласа тухаттăмăр килтен. Ăçта-ăçта канса илмелли малтанах паллăччĕ асаттен. Ун пек тĕле маларах юртса çитнĕ Кедр пире савăнăçлăн хÿрипе вылятса кĕтсе илетчĕ. Çав тери ăслăччĕ шеремет янаварĕ. Хăй хыçĕнчен пыракан хуçисене хăрущлăх ан кĕтсе илтĕр кану вырăнĕнче

тесе, васканă пуль вăл маларах. Хайне ертÿçĕ вырăнне те хунă пулĕ вăл тайгари сукмаксем çинче.

Тайгара сахал мар çĕр каçма тивнĕ пире виççĕне. Мана яланах варринче вырăн лекетчĕ. Пĕр енчен Кедр вырнаçатчĕ, тепĕр енчен — асатте. Эх, мĕн тери аван çĕнĕ утă çинче çывăрма е ахаль канса выртма! Çемçе те мĕн тĕрлĕ ырă шăршă кĕрет. Халь те асра çав шăршăсем, халь те куç умĕнче ун чухнехи сăнсем. Тăраттăмăр кăвак çутăллах, кÿлĕ хĕррине асăрханса, пĕр сас-чĕвсĕр анаттăмăр та кăвакалсем пулмалли вырăнта тул çутăлса тĕтре сирĕлессе сывламасăр тенĕ пек кĕтеттĕмĕр. Кăвакалсем курăнма пуçласанах, асатте умлăхыçлă кĕрст! те кĕрст! перетчĕ. Кăвакалсем пăл та палт! çаврăнса ÿкетчĕç шыв çине. Вĕççе хăпараканнисене вĕçнĕ çĕртенех персе антаратчĕ. Кедр хăшкăлатчĕ кăвакалсене сырана йатса. Эп вĕсене кутамккана майласа хураттăм. Пĕррехинче асатте кăвакал амине персе тивертрĕ. Пĕрле пулнă аçи вĕççе тарма ĕлкĕрчĕ. Ун пек чухне кăвакал шыраса урăх вырăна куçаканччĕ. Эп утма хатĕрлентĕм.

— Тăхта, мăнукăм, ан васка, — терĕ асатте мана alăран тытса чарса. — Лар кăштах, вăл каллех вĕççе килĕ, ак.

Чăнах та, темиçе минутран кăвакал аçи вĕççе те килчĕ, кÿлĕ çийĕн нарт! нарт! янратса амине чĕнчĕ. Асатте ăна та персе тивертрĕ. Тем пулчĕ мана çавăн чухне, чун вырăнтан тапраннăн туйăнчĕ, хам вара питĕ шеллерĕм çав мăшăра. Çавăнтанпа кайăк-кĕшĕк сунарне çÿреме пăрахрăм. Асатте манран хăй пекех чаплă сунарçă тăвасшăнччĕ пулмалла та, ĕç тухмарĕ. Ерипен сунартан писрĕм, хулана туртăнтăм. Вăрман кайăкĕсене вара чунтан юрататăп. Сехечĕ-сехечĕпе итлеме хатĕр вĕсен чуна хăпартакан юррисене. Асаттене вара чăтăмлă та тÿсĕмлĕ пулма хăнăхтарнăшăн тав тăватăп. Хам эп тайгара ывăнмасăр та пĕр канмасăр кунĕпе утма пултаратăп, талăкĕпе çăвара апат хумасан та аптрамастăп, çăмăллăнах чăтса ирттеретĕп. Тайга хăйĕн сиплĕ сывлăшĕпе вăй парса тăрать пулмалла тепĕр чухне кунĕ-кунĕпе ура çинче пулма.

Женя калаçма чарăнчĕ. Эпир пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă пек пĕр харăс тăтăмăр та тамбура пирус туртма кайрăмăр. Куперех туртма пулатчĕ те — иккĕн çех, чаракан çук — çапах та тем тытса чарчĕ пире: те хамăра пÿлĕмре туртма хăнăхтарман йăла, те уçă чÿречерен кĕрсе тулнă тайга сывлăшне пăсас мар тени. Тамбурта пирус туртса пĕтеричченех пĕрпĕрне сăмах чĕнмерĕмĕр. Унăн кăмăлĕ темĕнле аса илÿпе

пусăрăннине туйса, чăрмантарас темерĕм, купене таврăнсан тин, унăн йывăр шухăшĕсене татас шутпа, ыйтрăм:

— Аслаçу патне каятăн пуль-ха?

— Тек çук вăл çут тĕнчере, — хуравларĕ вăл ассăн.

— Хăй вилĕмĕпех вилмен пуль, çавăн пек ассăн сывлатăн пулсан?

— Çапла, ўксе вилнĕ вăл.

— Ăçтан тата мĕнле ўкме пултарнă-ши?

— Пĕлесех килет пулсан, каласа парам эппин вĕçĕ-йĕрĕпе. Студентчĕ эпĕ ун чухне. Пĕрремĕш курс вĕçленсен, каникула киле килтĕм. Пĕр хĕл çеç ютра ирттернĕ пулин те питĕ тунсăхласа çитнĕччĕ тăван тавралăхран, атте-анне вырăннех хунă асаттепе асаннерен. Вĕреннĕ чухне пуш вăхăт çукпа пĕрехчĕ пулин те кĕнекесенчен е юлташсенчен кăшт пушансанах тайга аса килетчĕ, ытларах та ытларах хăй патне туртатчĕ, паллана вырăнсемпе сукмаксем, паллăрах йывăççемпе сăрт хысакĕсем аса килетчĕç. Чăтаймарăм, киле кĕнĕ-кĕменех вăрмана пуçтарăнтăм, çырла тупăп-и е кăмпа-и тесе, хамăн юратнă пуракăма, хурăн хуппинчен хам алăпах майланăскерне, илтĕм. Пўртрен тухас тесе алăк хăлăпне тытрăм çеç, ялан-хилле асанне сасси тытса чарчĕ. Йăлараччĕ унăн мĕн те пулин калаçа ăсатасси, ытларах чухне асăрхаса çўреме сунатчĕ. Ку хутĕнче сасси пăшăрханулла пулчĕ:

— Тен, каймăн-и, мăнукăм, пирĕн вăрмана çын çиен упа иленнĕ, çырла-кăмпа вырăнĕсенчи хурăнлăхра çўрет, теççĕ. Ача-пăчасемпе, хĕр арăмсене хăратса пĕтернĕ ĕнтĕ, вăрмана кĕме те хăратпăр. Иртнĕ эрнере çеç Шумиловсен ĕнине çапса ўкерсе, çурса хунă. Инкек-синкекĕ арçынсем ăна тытайманнинче, ниепле те пĕр-пĕринпе калаçса татăлаймаççĕ. Кашни хăйне уйрăм персе ўкерсе мухтанасшăн. Леш, мурĕ, питех те чее пулмалла, сунарçăсен куçĕ тĕлне пулмасть. Пирĕн те, ав, таврари чапла сунарçă шутлансан та, нимех те тăваймарĕ-ха пирĕн сехĕрленнĕ чунсене лăплантарма, — тĕртсе илчĕ вăл асаттене.

— Ытлашши ан хăрат-ха эс ачамккăна, курмастăн-им, вăл мĕнле туртăнать тайгана, — кăмăлсăррăн хутшăнчĕ асатте.

— Çук вăрманта çырла, иртнĕ ун вăхăчĕ. Хăмла çырли те пиçсе çитсе тăкăнса пĕтнĕ ĕнтĕ, — ўкĕтлеме пикенчĕ асанне.

— Эх, ăçта эпир пуç хуман, кашни упаран хăрасан, тайга тискерленсе кайĕ. Айта, мăнук, эп те пырам, — хăпартланчĕ асатте, паçăр хăйне тĕртсе илнине ăша илеймесĕр.

— Аслашшĕ, эс ытлашши ан хăпартлан-ха. Тем чуна хĕсет, сире кăларса ярас килмест, теме сисмест пулĕ те?

— Эс яланах пире вăрмана ярасшăн мар, йăлăхтарнă ĕнтĕ эс мăкăртатни.

— Ан йĕрĕх-ха эс, ватти, чăннине калатăп.

— Э-э, санпа, тыт пуракна, мăнук, кайрăмăр. Пĕлетĕн вĕт асаннӳне, яланах çавăн пек вăл, сăмахăн вĕçĕ-хĕрри çук унăн.

Васканипе пăшалсăр-мĕнсĕр тухса утнă эпир вăрмана. Темиçе çул каялла вăрман çуннипе пулнă уçă вырăна çитме шутларăмăр. Çамрăк хунавсем çын çӳллĕшĕнчен иртнĕ унта. Хăмла çырли тесен вара — вăл талккăшĕпех хунаса кайнă. Çырла вăхăтĕнче тат — ан ӳркен. Асанне асăрхаттарнă пекех, тĕмĕ тăрринчи çырласене е татса пĕтернĕ, е тăкăнма ĕлкĕрнĕ вĕсем. Анчах та аялараххи çулçăсем айĕнчи çырласем пиçсе çитнĕ, кĕç-вĕç тăкăнасла шăкăрттин усăнса лараççĕ. Эп çур пурак татиччен, асатте хăйĕн савăтне тултарнă та. Вăл хăмла çырлин çăра çулçăллă тураттисен тăррисене хуçса илсе, савăтри çырласене витрĕ те уçă вырăна лартрĕ, вара хупах çулçи тупса, унран вăхăтлăх савăт майларĕ те мана пулăшмалла çырла пухрĕ. Кĕçех манăн пурак та тулчĕ.

Кăшт каннă ятне туса илтĕмĕр те хамăр килнĕ сукмак еннелле утрăмăр. Сасартăк пире таçта çывăхрах упа сиккессĕн мĕкĕрни тăп тăратрĕ. Мĕн амакĕ сиксе тухнă ку вăрман чĕр чунне? Пире ку кăсăклантарсах ячĕ. Асатте чăтса тăраймарĕ, пулăшăва чĕнсе мĕкĕрнине туйтаракан сасă еннелле вирхĕнчĕ. Эп — ун хыççăн. Аран-аран ĕлкĕрсе пыратăп вата çын хыçĕнчен. Самантрах вăрман утарне чупса тухрăмăр та темиçе вĕлле хăяккăн выртнине асăрхарăмăр. Йĕри-тавра пĕр чун та курăнмасть. Хăрушшăн мĕкĕрни вара тастан çӳлтен илтĕнет. Инçех те мар уçланкă хĕрринче çӳллĕ хыр ӳсет. Хăйне тапăннă пыл хурчĕсенчен хăтăлас тесе, савăнта тарса улăхнă кăнтăр кунĕнчи вăрă-хурах. Анчах пыл хурчĕсенчен хăпайман. Лешсем ăна хура пĕлĕтлех сырса илнĕ. Вăт савсене малти урипе хăмсарса мĕкĕрсе ларать те тыткăнри хурах, чăтаймасăр пуçне унталла-кунталла пăрать, сулла-сулла илет, хăй арçурилле мĕкĕрет.

Ку упа леш юлашки вăхăтра ял çывăхĕнче алхасса çӳрекенни пулнине асатте тӳрех чухласа илчĕ. Сунарçăсем кунĕ-кунĕпе йĕрлесе хăшкăлаççĕ, вăл пур, ак, кунтах ларать — тыт çара алăпах. Мăкăрти асаннерен хăвăртрах хăтăлас тесе, вăрмана яланах чиксе тухакан сунарçă çĕççине те манса хăварнă çав кун асатте. Хăнăхнă йăлипе пиçихи çумĕнчи çĕçĕ

вырăнне хыпашларĕ аллипе — çĕçĕ çук. Кӳреннипе вăл чышкипе тăнлавĕнчен шаккаса илчĕ.

— Эх, ват супнă, пăшал та илмен, çĕççе те манса хăварнă. Пĕтĕмпех асаннӳ... хăйĕн яланхи шиклĕхĕпе.

Анчах асатте çухалса каймарĕ. Кун пек меллĕ самантпа усă курса юлмасăр пултараймасть вăл. Утарăн шĕшкĕ хуллисенчен явса çыхнă çатан карта çумĕнчи тинтерех тирсе лартнă шĕвĕртнĕ юпине туртса кăларчĕ те йывăç çине упăте пекех хăпарса кайрĕ. Упа патне алă тăсса çитмелĕх юлсан, лешне аллинчи юпан шĕвĕр вĕçĕпе кут шăтăкĕнченех тивертсе йĕкĕрлерĕ. Çакна туйса, упа шартах сикрĕ, чутах персе анатчĕ пулĕ, çапах та вăхăтра тăна кĕчĕ те йывăç тăрринелле чаваланчĕ. Асатте ун хыçĕнчен юлмарĕ, хăй упана аллинчи юпапа пĕр вĕçĕм канăç памасăр йăкăрласа пычĕ. Упа кăмăлсăррăн мĕкĕре-мĕкĕре йывăç тăрринелле улăхса пырать, асатте унран юлмасть, аллинчи юпа та пăшалтан кая мар унăн сехрине кăларать. Юлашкинчен йывăç тăрри унталла-кунталла сулăна пуçларĕ. Асатте упана пушшех канăç памарĕ. Кĕçех йывăç тăрри пĕр еннелле авăнчĕ-авăнчĕ те шатăртаттарса хуçăлчĕ. Упа анна çемĕн туратсене çапăна-çапăна çĕре шаплаттарса ӳкрĕ. Ӳкнĕ чухне аялти лăсăсăр шĕвĕр турата тирĕнсе хырăмне çурсах пăрахрĕ. Çĕре лаплаттарса ӳксен, упа пыршисем шыв хумĕ пек хырăмĕнчен тухса сирпĕнчĕç, унăн чунĕ çавăнтах тухрĕ.

Асатте те йывăç çинче тытăнса юлаймарĕ. Упапа пĕрле хуçăлнă йывăç турачĕ асаттен йывăçа ыталаса тытнă аллине тăрăнса шăтарнă, вара алли вĕçерĕнсе кайнипе вăл та упа хыççăнах шаплатса ӳкрĕ. Упа çинех лексе, ӳкесси çемçерех пулчĕ те, чĕри чăтаймарĕ пулмалла. Эп чупса çитнĕ çĕре асатте сывламастчĕ, юн таппи те çукчĕ.

Женя шăпланчĕ. Вагон кустăрмисем пĕр майлăн кăлтăр-кăлтăр, шăкăл-шăкăл юрларĕç. Пуйăс çул хĕррипе стена пек тăнă çăра симĕс тайга витĕр аслашшĕ вырăнне юлнă мăнукĕн, ку тăрăхри тайга хуçин, станцийĕ еннелле ыткăнса пычĕ.

## ТУХАТМĂШ ВЫРĂНĔ

Ĕçрен паян ывăнса таврăнтăм. Ик енне ларса тухнă засыпушкăсем хушшинчи ансăр урампа иртсе çӳреме кăмăллах мар çав паянхи пек ăшă çу кунĕсенче. Ăçта çитнĕ унта машинăсем хыççăн юлнă ланчашкасем, вĕсенче тирпейсĕр хуçасем тухса тăкакан шăршлă шыв кӳлленчĕкĕсем, çавăнпа тепĕр чухне сăмсана пăчăртаса тытмасăр иртсе кайма çук. Çу кунĕсенче каяш шыва урама тухса тăкма чарнă пулин те, хăшĕ-пĕрисем ăна каçпа, çын куçĕнчен вăрттăн тухса тăкма хăнăхнă. Пĕр намăс-симĕс пĕлмеççĕ тейĕн. Хĕлле тухса тăкни юрĕ-ха: шăршă та кĕмест, çӳппи-çаппи те çурхи шывпа юхса каять. Çу кунĕсенче вара... Уйрăмах чăтма çук шăрăх кунсенче... Пăсланса тăрать урам. Таврара йывăр шăршă тăрать. Пыра хăсăк капланать.

Сăмсана пахчасем еннелле пăра-пăра çитсе ӳкрĕмех киле, вара тинех çăмăллăн сывласа ятăм. Паян кун йывăр пулчĕ. Цехра шăв-шав та чăтайми шăрăх тăрать. Тапса тăракан тара типĕтсе пĕтерме çук. Ывăннăран кăштах канса та илтĕм. Унтан яшка ăшăтса çирĕм те икĕ-виçĕ курка çăра чей ĕçрĕм, вара вăй кĕнине туйрăм, шăм-шак çăмăлланчĕ. Халь ĕнтĕ килти ĕççене те тума юрать. Ытти чухне ун пек самантсенче диван çинче канлĕн вырнаçса телевизор пăхаканччĕ, ĕçлемест çав, лампа çунса кайнă. Хула лавккисенче шыраса хăшкăлтăм ĕнтĕ — ниçта та çук. Шăмат кун Кăнтăр поселокĕнчи пасара кайма тивет пулĕ. Хаклă тӳлесе пулин те илмеллех мур лампине.

Пӳртре ик алла ĕç тупăнмарĕ, мăшăрăм пĕтĕмпех майлană-тирпейленĕ. Пĕчĕк пахчана тухрăм. Çăтмахри пекех туятăп вара эпĕ хама унта. Тăрăшса тирпейленĕ темиçе пысăках мар йăран, улмуççи, чие, хурлăхан йывăççисем. Пурте çамрăк-ха вĕсем, çапах та кăçал шап-шурах çурăлчĕç. Улмиçырли пулмалла пек. Қарта çумнерех çĕр çырли ани, хăмла çырли тĕммисем. Хăмла çырли пиçме ĕлкĕреймен-ха. Çĕр çырлийĕ хĕрелет, сĕтекпе тулать. Пĕшкĕнсе çулçисене сире-

сире пăхрăм, анчах пĕр çырла та курăнмарĕ. Каллех шăпăрлан хуçаланнă ĕнтĕ. Хĕр ачи аташмасть-ха, пĕтĕмпех ăнланать. Ывăлĕ вара пиçнĕ-пиçмен тиркесе тăмасть, пĕтĕмпех сăптăрать. Ав, хăй те, вĕрлĕк кашти çине хăпарса ларнă та йĕлпĕрсех кулать.

— Симĕс çырлисене тĕкĕнмелле марччĕ хăть.

— Вĕсем пурте тутлă та, чăтса тăраймарăм.

— Чие çырли пиçме тытăннă çеç, эс хăпарса та кайнă. Ан ашкăннă пултăр, халех ан унтан.

— Çук, эп тĕкĕнмен вĕсене. Çул çине пăхса ларатăп. Интереслĕ сăнама.

— Юрĕ-çке, пăхса лар эппин.

Куçа пускил пахчине ывăтрăм. Пĕччен пурăнакан хĕрарăм сутлăх чечексем лартса тултарнă. Тем тĕрли те пур унта. Пурте ытарайми çук илемлĕ, куçа илĕртсе ларaççĕ. Мĕнле ырă шăршă сараççĕ тата таврана! Сывланă та сывланă пулăттăм, анчах ĕç тума тухнă — çук эпĕ. Ĕç таврашĕ паяна кунта та курăнсах каймарĕ.

Сасартăк канăçлă шăплăха хыттăнах ахăлтатса кулнă сасăсем вăратрĕç. Тӳрех тавçăрса илтĕм: темиçе кил урлă Почкинсен тĕлĕнче каллех арçынсем домино çапаççĕ ĕнтĕ. Тем сăлтава пула-çке вĕсен çурчĕ умĕнче пухăнса ларасси йăлана кĕнĕ. Вĕсен çумĕпе иртекен симĕс тăкăрлăка сĕтелпе саксем туса лартнăран пулĕ çеç. Эпĕ те унталла çул тытрăм.

Атте, эс ăçта каян?

— Почкинсен тĕлне.

— Эп те пырам-и?

— Аппуна каласа хăвар.

— Вăл, ав, Музыковсен тĕлĕнче вылять, пире курсах тăрать.

— Кӳр, эппин аллуна.

Ывăлăм вĕрлĕк çинчен сиксе анчĕ. Эпир алла-аллăн тытăнса васкамасăр вырăна çитрĕмĕр. Пускил арçынĕсем хăмаран çапса тунă сĕтел тавра ларса тухнă та пирус мăкăрлантараççĕ кăна. Вĕсем çийĕн кăвак тĕтĕм йăсăрланать. Ку хутĕнче картла выляççĕ имĕш арçынсем. Банкра самаях укçа пухăннă. Эпир пынă тĕле шăп та лăп свара тухнă пулнă. Пĕрикĕ туз пулнă, вăл выляса илчĕ. Вăл банкри укçасене хăй енне туртнă чухне мана асăрхарĕ.

— А, Микулай, лар пирĕнпе, шăпах тăххăрмĕшĕ çитместчĕ.

Сĕтелĕн пĕр пуçĕнче пушă вырăн асăрхаса, пырса лартăм. Ывăл инçе мар хăйăр çинче вылякан тантăшĕсем патне чуп-

рĕ. Эп çавăнтах ваййа кĕтĕм, пĕр-ик хутчен выляса та илтĕм.

Почкинсем — ытлă-çитлĕ пурăнакан çемье. Ку урамра чи пуяннисем тесен те юрать. Çурчĕ шултра пĕренесенчен хăпартнă, çенĕкĕ пăлтăрлă та крыльцаллă. Кил карти йĕри-тавра шуç витнĕ аслăк-сарай, нӳхреп, лаç. «Москвич» автомашина пур, ун валли — тимĕр гараж. Чулранах купаласа лартăччĕç пулĕ те, Çурçĕр-Хĕвеланăç районĕнне хваттер илес шанчăкпа пурăнаççĕ. Виçĕ ача хăйсен: икĕ ывăл та пĕр хĕр. Асли кăçал шкула каймалла.

Кун тахçанах каç еннелле сулăннăччĕ Тавралăха каç сĕмĕ витернĕччĕ ĕнтĕ. Сасартăк Почкинсен кил картинчен хĕрарăм хӳхлесе ятлани илтĕнчĕ. Сĕтел хушшинчисем пурте пуçĕсене ялт! тăратрĕç. Почкинăн мăшăрĕ тем урама янратсах çĕмĕрĕлет. Почкин аллинчи карчĕсене лăст печĕ те чупсах кĕрсе кайрĕ киле. Эпир выляма тăхтарăмăр, мĕн пулнă-ши тесе çурт еннелле пăхса кĕтсе лартăмăр. Кăштахран Почкин пирĕн пата тухрĕ.

— Мĕн пулнă унта сирĕн?— ыйтрĕç пĕр харăсах иккĕнвиççĕн.

— Э-э, арăм кĕпе-йĕм çуса çакнă та, такам мăшкăлласа ун йĕммисен тĕпĕсене касса тухнă. Кам ухмахне кирлĕ пулнă-ши? Пĕлес пулсан, çакăнтах пуçне çапса çурмалла та...

Вăл кӳренчĕклĕн аллине сулчĕ. Тек картла вылясси те пулмарĕ, тем никамăн та чунĕ туртмарĕ. Кăштахран пĕрерĕн-пĕрерĕн килсене саланса пĕтрĕмĕр.

Ку пăтăрмах пирки маннăччĕ те ĕнтĕ Почкинсен пускилĕсем. Анчах хăйсем мар. Тем пăшăрхантарчĕ кил-çурт хуçисене иккĕшне те, тем ăшра вăркарĕ, канăç памарĕ. Хуйхи-суйхи юнашарах çӳренĕ имĕш. Тепĕр икĕ эрнерен-и, ĕçрен таврăннă чухне пăхатăп та, Почкинсен хапхи умĕнче тупăк хуппипе хĕрес тăраççĕ. Кăçал шкула каяс аслă ывăлĕ сарăмсăр вилнĕ терĕç. Пытартăмăр вара пускилсемпе пуçтарăнса.

Ик уйăх иртрĕ-и унтанпа. Урам яланхи пекех лăпкă пурăнчĕ. Арçынсем Почкинсен тĕлнех пухăнатчĕç, хĕрарăмсем те туха-туха ларкалатчĕç. Пĕр Почкинăн мăшăрĕ çеç пĕртте курăнмарĕ. Хуйăх тытса халь те хура кĕпепе те хура тутăрпах тухкаларĕ урама кăнтăр кунĕсенче. Пĕррехинче малтанхи пекех каç пулттипе хӳхлесех йĕчĕ вăл. Каллех такама кирлĕ пулнă унăн канра çинчи типекен йĕмĕсен тĕпĕсене касма. Каллех инкек кĕт!

— Кама чăрмантаратпăр-ши эпир пурăнма?! Кам кураймасть-ши пире!? — хӳхлерĕ вăл çĕре ӳксех.

Почкин ниçта кайса кĕме пĕлми ăшаланчĕ. Нимĕнле сă-

махсемпе те лăплантарма пултараймарĕ мăшăрне. Пускил хĕрарăмĕсем йăтса-çавăтса тенĕ пекех илсе кĕчĕç йĕрекен арăма пÿрте, вырăн çине хучĕç. Унтан Почкина хупăрласа илчĕç.

— Эс, пускилĕм, шутласа-туса ан тăр, машинуна кăлар та вĕçтер ялалла, юмăç карчăкĕ шыраса. Пурах пуль вĕсем хăвăр ялта та, е çывăхри пĕр-пĕр ялта. Айта-айта, чуптар. Унсăрăн каллех инкек сиксе тухĕ тата.

— Ăçтан тупас ман вăл юмăç карчăкне? Никама та пĕлместĕп-çке. Илтмен те ун пекки çинчен. Тепĕр тесен, ку таранччен кирлех те пулман та.

— Эс яла вĕçтер. Тăванусем тупса параççех унта.

— Мĕн тăвас тетĕн, каймах тивет пулĕ.

— Ара, ара, кай çав пĕр тăхтамасăр,— хистерĕç хĕрарăмсем.

Почкин «Москвичне» гаражран кăларчĕ те каçа пăхмасăрах Етĕрне çулĕпе яла вĕçтерчĕ. Чунĕ сурса ыратрĕ унăн. «Инкек сиксе ан тухтăрччĕ çеç эп таврăниччен»,— шутларĕ вăл çула тимлĕн сăнаса пырса. Такам тахçан асăрхаттарни аса килчĕ. Хăйĕн çурчĕ вырăнĕнче ĕлĕксенче чÿк вырăнĕ-и, тухатмăш вырăнĕ-и пулнă тенине. Çурт лартнă чухне шутламан та вăл çавăн пирки. Пĕр енчен, вырăнĕ аванччĕ, çĕр лаптăкĕ те ыттисенчен чылайраххи пĕрре пăхсах курăнатчĕ, тата инçех те мар пысăк пĕве. Тепĕр енчен, çемье ÿсни хÿтĕртетчĕ. Икĕ ывăлĕ те çуралнăччĕ — общежити пÿлĕмĕ, паллах, пистернĕ вĕсене. Халь пулсан-и... ниепле те килĕшмен пулĕччĕ ку вырăнпа. Шăв-шав ан тухтăр тесе шарламарĕ вăл ун чухне мăшăрне. Каламаллах пулнăччĕ çав. Эх, чавса çывăх та, çыртма çук çав. Ара, ĕненсех кайман та усал-тĕселсене, çамрăк пулнă.

Çакăн пек сĕмленсе пырса, çур çĕр тĕлнелле Почкин яла çитрĕ. Ыйхăран вăраннă амăшĕ сехĕрленсе ÿкрĕ.

— Каллех инкек-синкек суксе тухман пулĕ те, ывăлăм? Мĕн каçа пăхмасăр çÿретĕн?— ыйтрĕ вăл ывăлĕ алăк сули урлă каçнă-каçман.

— Эп килтен тухнă чухне пулманччĕ-ха инкекĕ. Анчах арăм çуса çакнă тумне такам каллех пырса каснă. Мĕн тумаллине хамăр та пĕлместпĕр. Пускил хĕрарăмĕсем вăйпах юмăç шырама хăваласа ячĕç.

— Аçу хуралта-ха кĕçĕр. Ирччен кĕтмех тивет ĕнтĕ. Çур çĕрте кама шуйхатса çÿрĕн ĕнтĕ? Юмăçĕ те пирĕн ялта çук. Кунтан çичĕ çухрăмра пур-ха вăл. Анчах çавăн пек инçене пыма килĕшĕ-ши ĕнтĕ? Ыран аçупа кайса пăхăр ак. Халь

çырткала та выртса çывăр. Инçе çулта ывăннă пулĕ те, эс руль умĕнчи çын, çавăнпа лешне, шăм-шака çемçетмеллине сĕнместĕп. Ан кӳрен ĕнтĕ, ывăлăм. Хĕрхенет-хытать тесе ан шутла. Хăвна тем сиксе ан тухтăр тата.

Тупасса тупрĕç-ха вĕсем юмăç карчăкне тепĕр кунне аш-шĕпе иккĕшĕ. Анчах сакăр вуннăран иртнĕ шăлсăр карчăк ниепле те тухасшăн пулмарĕ ун пек инçе çула. Каялла ма-шинăпах илсе килетпĕр тесе лăплантарнипе тата амăшĕн аякри тăванĕ килсе тухнипе çеç пыма килĕшрĕ. Ун пек чухне ятне тума кĕренке услам çупа чӳлмек çăка пылĕ илсе кайни те хăйĕннех турĕ. Машинпа çемçе вырăн та илĕртрĕ-и хăрах урипе автансăр яла пусас патне çитсе пыракан карчăка. Пурнăçра тен, юлашки хут ярăнса та курас килчĕ пулĕ ĕнтĕ. Ăçтан пĕлен çынна, çитменнине тата вăл юмăç пулсан?

Çапла кăнтăрла тĕлне çула тухрĕç вĕсем. Теме сиссе-ши, ашшĕн чунĕ те туртрĕ Шупашкара. Икĕ талăк хурала та каймалла мар унăн. Хĕвел анас умĕнхи каç кĕлĕмĕ çитрĕç вĕсем хăма çапса тунă çуртсемлĕ урама. Анчах кая юлчĕç çав. Тем сăлтава пула тепĕр ывăлĕ те яланлăха куçне хупнă. Тепĕр кунне тухтăрсем ăшне касса пăхни те, мимине тĕрĕс-лени те ним те памарĕ. Сивĕ нӳхрепе ӳкнипе юнĕ шăнма пул-тарнă терĕç çеç.

Юмăç карчăкĕ ниепле те пӳрте те, кил хушшине те кĕме килĕшмерĕ. Гараж патĕнче чарăннă машинăран тухрĕ те тӳ-рех ансăр тăкăрлăкпа пахчасем хыçĕнчи пĕве еннелле утрĕ. Хăйпе пĕрле килнĕ Почкинсен ашшĕне çех хăй хыççăн пыма ыйтрĕ, ыттисене юлма хушрĕ. Пĕве çырминче тата çырма хĕррипе темиçе ватă йывăç ӳсетчĕç. Çавсене сăнарĕ карчăк, йĕри-тавралла тимлесе пăхрĕ, тем шыранăн туйăнчĕ. Пĕр йывăç çине ӳкрĕ куçĕ, теприн çине... Виççĕмĕшне шырама Почкинсен çурчĕ еннелле пăхрĕ, анчах ватă йывăç курăнмарĕ унта.

— Хăта, эс пĕлместĕн-и улун килĕ вырăнĕнче йывăç пул-ман-и?

— Темле кăк пурччĕ пек астăватăп. Ана кăкланă пулмал-ла вĕсем.

— Тухатмăш вырăнĕ пулнă кунта тахçан. Улна кала, ну-май ан пурăнтăр кунта. Ача-пăчасăр тăрса юлма пултарĕç. Эп усалĕнне çулталăклăх пусарăп-ха кăмăлне. Тепĕр çулсăр килес çук вăл кунта. Анчах те пурăнăп-ха эпĕ унччен. Пус-килсене ан янратса çӳреччĕр ун пирки. Шеллесе калап улна: кил-çуртне сутаймĕç тата.

Анчах та пĕрре çăвартан тухнă сăмаха кĕртеймĕн каялла. Кĕçех пускилсен хăлхисене те кĕнĕ пулĕ ку хыпар. Почкинсен умĕнче пуçтарăнма пăрахрĕç çынсем. Виççĕри хĕрĕпе те вылясах каясшăн мар урамри ачасем. Ютшăнчĕ халăх Почкинсенчен. Ку вĕсемшĕн питĕ йывăр пулчĕ. Кил хуçин хуйхи-суйхине ăнланчĕç пулмалла унăн ĕçĕнчи пуçлăхсем. Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер уйăрнăччĕ те вĕсемшĕн малтанах, çавнах пачĕç. Халь вĕсен тепĕр хĕр пĕрчи те ӳсет. Çуртне аран-аран сутса ячĕç. Çурт вырăнне урăх никам та килсе тĕпленмерĕ, уçă вырăн юлчĕ урамра. Турра-тĕшмĕше ĕненместĕп пулин те, эпĕ те шикленерех иртсе çӳретĕп вăл тĕлтен каçа юлнă самантсенче.

## ДЖУЛЬБАРС

Çурхи йĕпе-сапаллă пылчăклă çанталăк тăрать. Вырăн-вырăнпа юр кайса та пĕтмен, талкишпех шыв кӳлленчĕкĕсем, тĕл-тĕллĕн пылчăклă лаптăксем те пур. Çавăн пек урампа пĕр ача пĕчĕк анчăка çавăтса пырать. Мĕскĕн янавар ниепле те утасшăн мар, чарăна-чарăна туртăнать, хурлăхлăн йынăшать. Ача вара ăна вăйпах шыв-пылчăк тăрăх сĕтĕрет, тапа-тапа илет. Çакна курса тăрса чун чăтмарĕ те, ачан çулне пӳлтĕм.

— Ма тертелентерен анчăка?

— Сана мĕн ĕç?

— Чăрсăрланать тата, çиччас ĕнсе чикки туянтаратăп. Шел мари-и сана янавара?

— Чирлĕ вăл пирĕн. Атте пĕвере путарма хушрĕ, чул çыхса шыва пер терĕ.

— Чун илли вăл сан аçу, эс те чунсăр ӳсетĕн пулмалла.

— Пĕтĕмпех аттене каласа паратăп. Кăтартĕ вăл сана чун илли.

— Эс каллех хирĕçлеме-и?— ун патнелле пĕр утăм пусрăм. Вăл каялла чакрĕ те анчăк хӳри çине пусрĕ. Лешĕ çухăрса ячĕ, куçĕсем шывлă хăйĕн, питĕ мĕскĕнĕн пăхать янавар. Чун чăтмарĕ, ыйтрăм:

— Пар эсĕ ăна мана?

— Уншăн мĕн паран?

Эп кĕсьесене хыпашларăм.

— Ак, лупа пур.

— Ку сахал.

— Эп сана парап сахал, çавах шыва путарма каятăн. Унта сана кам мĕн парĕ?

— Ил эппин, шалкă мар,— терĕ те ача аллинчи кантрине пылчăклă çĕр çине пăрахрĕ, вара килĕ еннелле утса кайрĕ. Кăшт утсан каялла çаврăнчĕ те кăшкăрчĕ:

— Вăл çавах сывалас çук, вилет вăл.

Эп хирĕç пĕр сăмах та шарламарăм. Чĕтрекен анчăка алă çине илтĕм те ветеринари çурчĕ еннелле утрăм. Янаварсен

тухтăрĕ кăнтăр апатĕнчен халь çеç таврăннă пулмалла, крыльца çинче шăрпăкпа шăл хушшисене тасатса тăрать.

— Çакна сыватма пулмасть-ши, тем, чирлĕ пек вăл.

— Айта, ирт малалла. Кӳр-ха кунта мĕскĕне, пăхар мĕнле чирлине. Эп кунта тухатам-ха анчăка, эс урамра çӳре кăштах.

Эп хаваспах эмелсем шăрши кĕрекен пӳлĕмрен тухрăм. Анчах темшĕн уçăлса çӳрес килмерĕ манăн. Çурт умĕнчи сак çине ларас терĕм, вăл нӳрĕ пулчĕ, вара карта çумне сĕвентĕм. Улмуççисемпе чие йывăççисен тураттисем çĕрле шăннă пулмалла, халь вĕсенчен шултра тумламсем çĕре ӳкеççĕ, пĕр май палт та палт туни илтĕнет. Çут çанталăк чĕрĕлсе пыни таврипех туйăнать. Чун çĕкленет çурхи çанталăкра.

— Эй, шăпăрлан, ме, тыт анчăкна. Темиçе укол тума тиврĕ. Ак, сана тата эмел, апатлантарас умĕн кунне виçĕ хутчен пар. Анчăку мĕн ятлăччĕ-ха?

— Э-э-э, пĕлместĕп.

— Мĕн, хăвăн мар-им вăл?

— Хамăнах, хамăнах, ят пама ĕлкĕрмен çех. Джульбарс тесе ят парасшăнччĕ. Лайăх ят вĕт? Астăватăр-и, пĕр кинора ун пек йытă пурччĕ, пограничниксен йытти?

— Астумасăр, вăт маттур ача. Ӳссен аван йытă пулать, ухăç—Европа ăратĕнчен вăл. Савса ӳстер ăна, таса тытма тăрăш, вĕрентме ан ман, терĕ те ветеринар мана хулпуççирен лăпкаса илчĕ. Эпĕ килелле уттартăм.

Анчăк самаях лăпланнăччĕ ĕнтĕ. Паçăрхи пек тек чĕтремест вăл. Кăкăр çумне йăпшăннă та тĕлĕрсе пырать. Хăй çапах та хушăран-хушăран йынăша-йынăша илет: малтанхи хуçисенчен ниепле те хăтăлса çитеймест пулмалла. Ун пек самантсенче эп ăна ачашшăн ал лаппипе шăла-шăла илетĕп. Çавна туйса, вăл хăрах куçне уçса ман çине пăхса илет те самантлăха каллех лăпланать, тĕлĕрсе каять. Анчах кăмăла кайман тĕлĕкĕсем каллех канăç памаççĕ пулмалла, вăл вара татах йынăша-йынăша илет. Эп ăна çиййĕнчех ачашласа илетĕп. Çапла пĕр-пĕрин ăшшине туйса киле çитрĕмĕр те.

Килте нихçан та йытă тытса курманран, анне çывăха та ярасшăн пулмарĕ. «Хваттерте пĕр май йывăр шăрш кĕме пултарать, тата вăл кашни кĕтесре йĕпетме те варалама тытăнĕ, — терĕ. — «Эс ăна луччĕ çу каçа сарайĕнче тытса пăх, кайран куç курĕ унта»,— сĕнчĕ вăл, ман шеллĕ те тархасуллă куççене асăрхаса.

Эп хаваспах пăтара çакăнса тăракан уççа илтĕм те чупсах сарайне тухрăм. Кирлĕ мар çĕтĕк-çатăк тупса, пĕр кĕтесре

выран турам, анчака унта хутам, халь пĕр май унпа ăшшăн калаçрăм. Эп сăмах пуçласанах вăл хăлхине чăнк тăрата пуçларĕ. Çитменнине, хăш хăлхи ман енче, çавна чăнк тăратать. Е тата, тĕлĕрнĕ чухне хăш куçĕ ман енче, çавна уçса пăхать. Питĕ çивĕч туйăмлă янавар. Çавă савăнтарать те мана.

Тухтăр панă эмел хăйĕн тивĕçне пурнăçлать пулмалла. Манăн анчăк юсана пуçларĕ, ўсме тытăнчĕ, унăн сасси уçăлчĕ. Манран хăпма пĕлмест хăй. Çу каçа пĕрле кунларăмăр кунсене. Тепĕр чухне сарайĕнче çывăркалани те пулнă. Ман унта свалкăран тупса килнĕ тимĕр койка пурччĕ, çавăнта кивĕ тумтир сарса вырттаттăм. Джульбарс яланхи пек хăйĕн вырăнĕнче. Питĕ килĕшетчĕ ăна вăл вырăн.

Кĕркунне тĕлне ман анчăкран патвар йытă пулса тăчĕ. Килтисем пурте хăнăхрĕç ăна. Анне те пўрте кĕртме чарми пулчĕ. Пĕррехинче çывăх юлташпа кино курма кайма калаçса татăлнăччĕ. Кĕтрĕм, кĕтрĕм — юлташ çук та çук. Юлашки самантра тухса чупрăм клуба. Унта та çук юлташ. Кино хыççăн киле таврăнтăм та, лара парать юлташ пирĕн хваттерте. Алăк умĕнче Джульбарс ăна сыхлать. Толя пирĕн киле кĕнĕ пулнă та, йытă каялла кăларман ăна. Вара юлташăн ирĕксĕрех кам та пулин килессе тўсĕмлĕн кĕтсе ларма тивнĕ. Çавăнтанпа ачасем кĕме хăратчĕç пирĕн пата. Килтисем вара йытта татах та ытларах хисеплеме тытăнчĕç.

Кĕçех шкула кайма вăхăт çитрĕ. Манран пĕр утăм та юлман йытăна, темĕн пек шел пулин те, сарайа хупса усрама тивет. Джульбарс пĕр вăхăт кăмăлсăр пулчĕ. Çавна туйсакурса, анне ăна хушăран хăйпе пĕрле илсе çўрекелетчĕ. Пĕррехинче вĕсем çĕр улми уйне кайнă. Çĕр улми кăларса панăшăн тўлевсĕрех çĕр улми уйăратнĕç. Тулли кутамккапа каялла таврăннă чухне анне шуçлак каçă çинчен шыва ўкнĕ. Джульбарс пĕр тăхтаса тăмасăр хыççăн сикнĕ те аннене çипуçĕнчен туртса шывран тухма пулăшнă. Вăйĕ пурччĕ çав ўссе кайнă йыттăн. Çавăнтанпа анне ăна çемье йышĕнчи чун вырăнне хура пуçларĕ.

Пĕр уяр кун Джульбарспа кăмпана кайрăмăр. Шурă, хĕрлĕ, хура кăрăçсем тупма пулатчĕ-ха ун чухне. Яланхи йăлапа яштак шĕшкĕрен туя турăм. Кăмпа шыранă чухне ўкнĕ çулçăсене сирме меллĕ унпа, кирлĕ-кирлĕ марла пĕшкĕнме тивмест. Кăмпа тупма Джульбарс пулăшаймĕ-ши текен шухăш пуçа пырса кĕчĕ.

— Джульбарс, кил кунта, ме, шăршла.

Йытă хаваспах чупса пычĕ те кăмпана шăршларĕ.

— Халь шыра. Шыра, Джульбарс.

Йытă аяккалла чупса кайрĕ, анчах мĕн шырамаллине ăнланмарĕ пулмалла. Çавнашкал темиçе хутчен шăршлаттартăм, усси çавах пулмарĕ. Сасартăк вăл хăвăрт чупса кайрĕ те инçех мар вĕрсе мана чĕнсе илчĕ. Тинех ăнланчĕ ман йытă унран мĕн кирлине тесе савăнса чупса пытăм ун патне. Кăлăхах пулчĕ мĕн. Вăл малти урисемпе пĕр мулкача çĕр çумне лапчăтса хунă та эп пырасса кĕтет.

— Эп сана çакна шырама хушнă-им?

Пĕр енчен, йытăна мухтас килчĕ, тепĕр енчен, мĕскĕн мулкача та шеллерĕм.

— Аван, аван, пултаратăн,— терĕм йытăна ачашласа илсе.— Анчах эс ăна ан тив, яр ирĕке,— терĕм унтан çирĕппрех сасăпа.

Джульбарс кăмăлсăррăн каялла чакрĕ. Мулкач хăй ирĕклĕ пулнине ăнкараймарĕ-ха. Вара эпĕ темиçе хутчен алă лапписемпе çупса илтĕм.

— Тар хăвăртрах чăтлăха.

Мулкач вăшт сикрĕ те тепĕр самантран куçран çухалчĕ. Эпĕ хавас кăмăлпа каллех кăмпа пуçтарма пуçларăм. Кĕçех çатан тулчĕ те. Киле аран-аран йăтса çитертĕм.

Пĕррехинче уроксем хыççăн шкултан таврăнсан Джульбарспа поселок паркне уçăлма тухрăмăр. Йытă хаваслăн унталла-кунталла чупать, ман тавра сикет. Тытса чарми шухăллăн курăнать пулĕ айккинчен. Анчах виçене пĕлет йытă, ытлашши аташмасть. Сасартăк пирĕн ума пĕр паллаамн арçын пырса тăчĕ.

— Итле-ха, ачам?

— Мĕн кирлĕччĕ Сире?

— Сут мана йыттуна.

— Çук.

— Эп сана уншăн çĕр тенкĕ парăп.

Ун чухне çĕр тенкĕ вăл пĕр уйăх шалăвĕччĕ, пысăк укçа шутланнă. Çавах та мана илĕртмерĕ вăл.

— Пĕлетĕр-и, туса ылттăнпа та улăштармаççĕ.

— Эс ан васка, унталла-кунталла шутласа пăх. Вăн, шăлавару кивĕ те саплăклă, çĕннине туянăн.

— Ан та илĕртĕр, çавах сутмастăп,— тăтăм эпĕ хамăн сăмах çинчех. Палламан çыннăн ирĕксĕрех çаврăнса утма тиврĕ.

Йĕпе-сапаллă кĕр иртсе, хĕл те çитрĕ. Тавралăх юрпа витĕнчĕ. Эп çунашкана кӳлмелле турăм. Джульбарса кӳлсе яраттăм та е колонка патне шыва, е вăрмана вут-шанкăна, е

леспромхоз картишне тухса пăрахнă турпас купи патне çӳреттĕмĕр. Мана хама та сахал мар ярăнтарнă Джульбарс.

Çĕнĕ çул хыççăнччĕ пулмалла, пĕррехинче кĕрт йыттисене тĕл пултăмăр. Ман йытă мана ӳкерсе хăвараслах вĕсем еннелле туртăнчĕ. Аран-аран тытса чартăм. Джульбарс унталлах туртăнать, ман çине тархасланăн пăха-пăха илет, мĕскĕнĕн нăйкăшать. Шеллерĕм янавара, вĕçертсе ятăм. Кăмăлне тултарсан, хăйех таврăнĕ-ха тесе шутларăм. Пĕр кун кĕтрĕмĕр, икĕ кун — йытă çук та çук. Эп анчах мар, анне те куляна пуçларĕ, ятланă пек туса та илчĕ. Виççĕмĕш кунне туса шырама тытăнтăм. Пур урамсене чупса тухрăм, кĕрт йыттисем курăнмарĕç. Тăкăрлăксенче пултăм, уйсене тухрăм, ниçта та çук йытăсем. Тăваттăмĕш кунне кĕрт йыттисене вăрман хĕрринче асăрхарăм, анчах пирĕн Джульбарс унта çукчĕ. Вара ăна тек тупас çуккине ăнланса илтĕм те макăра-макăра киле таврăнтăм. Йытă тупăнасса мĕн çуркуннечченех шанса пурăнтăмăр. Çук, таврăнмарĕ. Унтанпа чылай çулсем иртрĕç, çавах пĕр май аса илетĕп ăна, вĕçĕм тем çитмест пек туйăнать.

## ПĔЧЧЕН ПУРНĂÇ

Иртенпе вахтăра ларма лăпкă, кăмăллă. Пасара е магазина тухса кĕрекенсем сахал. Вĕсем те пулин шăппăн иртсе çӳреме тăрăшаççĕ. Икĕ сехет хыççăн общежити коридорĕ пачах улшăнать. Иккĕмĕш сменăна васкакансем е ĕçрен таврăнакансем пĕр вĕçĕм тăпăртатса иртеççĕ. Ку шав каçхи çичĕ сехетчченех тăрать. Кайран шавлă утса иртесси, алăк шанлатасси ерипен чакса пырать. Ун хыççăн шукăль тумлă каччăсем канăç памаççĕ. Вĕсенчен «Шипер» шăрши кĕрсе сăмсана кăтăклать, куçа кĕрет. Унтан ытла коридора эрех шăрши тулать. Вĕсем пур тĕрĕс-тĕрĕс марлăхпа шала кĕме тăрăшаççĕ. Ку вара чи йывăр тапхăр.

Паян вахтăра ку общежитирех пурăнакан Дуся, вăтăрвăтăр пиллĕксенчи хĕрарăм, ларать. Ун патне комендант кĕчĕ, хăйĕн яланхи йăлипе йĕри-тавра пăхса илчĕ. Пурте йĕркеллех-и терĕ, унтан асăрхаттарчĕ:

— Асту, Дуся, пĕр каччăна та ан кĕрт, атту çемьеллисем кăмăлсăр, япаласем çухалаççĕ теççĕ. Ăнлантăн-и мана?

— Ăнланмасăр, ах çав ăйăрсене тытса чарма питех те йывăр, ĕрĕхтерсе иртсе каяççĕ.

— Милцие чĕнсе ил.

— Ун хыççăн вĕсем иртĕхсех каяççĕ, тем туса хума та пултараççĕ.

— Эс ан хăра, Дуся, санах никамах та тĕкĕнес çук, — ытарлăн тĕртсе каларĕ комендант, сăрланă шурă çӳçлĕ вăтам çулсенчи хĕрарăм. Дуся кӳренмерĕ те, шарламарĕ те, хитрех мар сăн-питлĕскер, хăнăхнă ĕнтĕ вăл ун пек тĕртсе каланине.

— Ĕçĕ тĕкĕннипе тĕкĕнменнинче мар-ха. Вĕсемпе те тивĕçлĕ пулма пĕлмелле.

— Мĕн сĕннĕ пулăттăн эсĕ?

— Манпа пĕрле пĕр-пĕр çамрăкрах хĕр ачана ларт та, çӳретĕр вăл этажсем тăрăх хĕрсене пĕлтерсе.

— Ку, чăнах та, аван пулмалла. Эп эппин кайса йĕрке-

лем-ха. Воспитательницăна калас, вăл хĕрсене аванрах пĕлет.

Тӳсĕмĕсене çухатма пуçланă каччăсем шавлама, Дусьăна ятлама пуçларĕç, вăл та парăмран юлмарĕ — кампа мĕнле калаçмаллине вĕренсе çитнĕ.

— Эй, ытлашши ан иртĕхĕр эсир, йĕрĕхсем! Кунти йĕркесене эп туман. Ав, вулăр унта мĕн çырнине, вăхăт тупса. Патшалăх çыннисем шутласа йышăннă. Ытлах та чăтăмсăррисем каласа ярăр хĕрсенчен.

— Хăш-пĕр хĕрсем ятарлă пĕлтермеççĕ. Пирĕн вара çурçĕрччен тăмалла тет-и кунта?

Тепĕр кăштахран манăн юлташ хĕр ача килчĕ. Çур сехет хушшинче пур ытакана та савнийĕсене чĕнсе тухса тивĕçтерчĕ те хăйпе илсе килнĕ кĕнекине вулама ларчĕ. Малалла ĕç-пуç çăмăлланчĕ, шăв-шав та лăпланчĕ. Кун пек вăр-вар ӳркенмен хĕр ачапа ĕçлеме те кăмăллă. Темĕнле çамрăк йĕкĕтпе паллашма та ĕлкĕрчĕ пулмалла — çамрăклăх темерĕн. Дусьăпа хĕр ачана тав туса кунта пуçтарăннисем тухса кайса пĕтсен, вахтер хĕр ачана кайма ирĕк пачĕ. Лешĕ, савăннăскер, йĕкĕт патне вăр-вар тумланса тухрĕ. Тек çав териех ытлашши чăрмантаракан пулмарĕ.

Çурçĕр иртни пĕр сехет тĕлне пур алăка та хупса питĕрсе кĕчĕ те Дуся диван çине меллĕн вырнаçрĕ. Халь ĕнтĕ канса илме ирĕк пур унăн. Пиллĕк сехетре вăл пушмак кĕллисен пĕрремĕш шак-шакĕпе вăранчĕ, хăйĕн вырăнне йышăнчĕ. Çынсем ĕçе туха-туха кая пуçларĕç. Уйрăмах çамрăксен пушмак кĕллисем пуçа минретмеллех таклаттараççĕ. Ку шав пĕр-ик сехет янраса тăчĕ. Сакăр сехетре ăна улăштарчĕç. Вăл çăмăллăн сывласа ячĕ.

Этажсем тăрăх çӳресе пĕр сумка пуш кĕленче пуçтарчĕ. Хăйĕн пӳлĕмне кĕрсен йывăр сумкăна пĕшкĕнсе урайне лартма тăнăччĕ, аяк енче ăшчикре тем чăтмалла мар чиксе ыраттарчĕ. Хуçланнипех аякне ик аллипе тытса вырăн çине ӳпĕнчĕ. Пĕр çур сехет пек выртсан ыратни иртсе кайнă пек пулчĕ. Дуся асăрхануллăн пуçтарăнчĕ те пульницăна тухса утрĕ. Ăна çамрăк тухтăр йышăнчĕ.

— Мĕн ыратать, инке, ăçта кансĕрлет?

— Тем, сылтăм аякра чăтма çук чикрĕ паян ирпе.

— Çак кушетка çине выртăр та хырăма уçăр.

Ку çамрăк тухтăртан имене-именех вăл мĕн хушнине турĕ Дуся.

— Çак вырăнта ыратать-и? — тухтăр пӳрнисемпе хырăма пусрĕ. Дуся чăтаймасăр йынăшса илчĕ.

— Пурте паллă. Сирĕн паянах операцие выртмалла, кайран кая юлма пултарать.

— Тухтăр, ман пĕр ĕç пурччĕ, тепĕр сехетрен килĕп.

— Пурнăçпа вылямаççĕ, инке.

— Мĕнех пулĕ-ши сехет хушшинчех?

Дуся май килнĕ таран васкам пекки туса общежитие çитрĕ, сумкине йăтса тухса пуш кĕленчесене парса таврăнчĕ. Халь те алăра пăчăртанса выртакан укçисене тӳрлетсе якатрĕ те клеенка айне чиксе хучĕ.

— Укçа вăл чуна ăшăтать, ватлăхра савăнтарать, — мăкăртатрĕ вăл хăйне хăй. Унтан пӳлĕме тирпейлерĕ, чейпе тин апат çикеленĕ пек турĕ. Вара сĕтел çине тирпейлес тесе тăчĕ, нӳрлетнĕ тряпка илсе килчĕ. Сĕтел çинчи тĕпренчĕксене шăлса илес тесе сĕтел урлă туртăнчĕ кăна, ун аякĕ каллех ыратса кайрĕ. Дуся тăнне çухатрĕ те урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ. Мĕн чухлĕ выртнă вăл урайĕнче, астумасть. Тăна кĕрсе куçне уçсан чӳречере каç сĕмне курчĕ. Вăл асăрханулăн ерипен-ерипен алăк патне шуса пычĕ те яланах унта тăракан швабрă аврипе алăка шаккарĕ. Çавăнтах хирĕç пӳлĕмрисем кĕчĕç.

— Мĕн пулчĕ сана, Дуся?

— Хăвăртрах пулăшу чĕнĕр, ăшчикре тем çурăлчĕ пулмалла.

— Эс эппин ан хускал, халех чĕнетпĕр.

Пĕр çамрăк хĕр ача çавăнтах телефон патне чупрĕ. Ыттисем ушкăнпа ăна вырăн çине питĕ те асăрханулăн йăтса хучĕç. Тахăшĕ шыв сĕнчĕ, тен, çăмăлланать терĕ. Кĕçех пулăшу машини çитрĕ. Дусьăна йăтса тухса кайрĕç. Пĕр хĕрарăм тепĕрне шеллевлĕн те ӳпкевлĕн каларĕ:

— Дуся çăварĕнчен, тем, аван мар шăрш кĕрет, хăйĕн сăхăлăхĕпе ырă апат çимест пулмалла.

— Тен, чĕрĕллех ăшчикĕ çĕрет унăн? — терĕ те тепри, кашни хăйĕн пӳлĕмне кĕчĕ.

Дусьăна пульницăна илсе пычĕç. Дежурстăвра ирхи çамрăк тухтăрах пулчĕ. Хĕрарăмпа мĕн пулнине пĕрре пăхсах ăнланса илчĕ.

— Хăвăртрах операцие хатĕрлĕр, тен, кая юлман,— терĕ те хăй те хатĕрленме тытăнчĕ. Хĕрарăмăн хырăмне кассан кая юлни тӳрех палăрчĕ: аппендикс темиçе сехет каяллах çурăлнă, пӳрĕ ăшчике юхса тухнă, çуса тасатнин те усси пулас çук текех.

— Ирпе приема килсессĕнех хумаллачĕ ăна операци сĕтелĕ çине. Итлесшĕн пулмарĕ вĕт, темĕнле васкавлă ĕç пур те-

рӗ. Мӗнех тума пултарнӑ-ши, апӑрша хӗрарӑмӗ? — терӗ те тухтӑр пуҫне усса тухса кайрӗ.

Дуся вилни ҫинчен общежити вахтине пӗлтерчӗҫ, илсе кайма ыйтрӗҫ.

— Тӑван-пӗтен ҫук-ҫке унӑн, мӗн тумаллине хамӑр та пӗлместпӗр.

— Нумай вырттарма май ҫук кунта, илсе каймах тивет.

Дежурнӑй шӑпланнӑ трубкӑна хучӗ те коменданта пӗлтерме васкарӗ.

— Дуся чылай ҫул пирӗн патра ӗҫленӗ, кунтах пурӑннӑ. Хамӑрӑннах тирпейлесе пытармалла ӗнтӗ мӗнле те пулин.

— Укҫи-тенкине ӑҫтан тупар? Хӑйӗн пулмалла та, кам наччасрах парӗ сберкассӑра ун укҫине?

— Мӗнле те пулин тупас пулать. Этем вӗт, кушак ҫури мар.

— Эппин эп каям-ха, хӗр-хӗрарӑмсемпе калаҫам.

Пӗр ушкӑн пуҫтарӑнса Дуся пӳлӗмне кӗчӗҫ, анчах укҫа тупаймарӗҫ. Ун вырӑнне чӑматан тӗпӗнче сберкнижка тупрӗҫ, вун пиллӗк пин пухӑннӑ имӗш. Икӗ ҫӑмӑл машина туянма пулать ку укҫапа, тӗлӗнчӗҫ хӗрарӑмсем. Анчах парас ҫук ӑна никама та тӑван-пӗтенсӗр пуҫне. Енчен парас пулсан та ҫак кунсенчех мар.

— Кам валли пухнӑ-ши укҫине? Пурӑнасчӗ савӑнса пӗрех хут,— терӗ пӗри ахалех пӗтес укҫана шеллесе. Комендант ун ҫине ӳпкевлӗн пӑхса илчӗ.

— Шӑпланӑр-ха эсир, вилнӗ ҫын ҫинчен япӑх калама хушман,— терӗ вӑл пуҫне ҫыхма ӗлкӗрнӗ хура тутӑра тӳрлетсе.— Хамӑр кассӑра укҫа сахал тупӑнчӗ. Айтӑр, камӑн мӗн чухлӗ пур, пухар.

Вара сӗтел ҫинче, шӑп та лӑп ӗнер Дуся клеенка ӑшне хурса хӑварнӑ укҫа тӗлӗнче, укҫа пухӑнма пуҫларӗ.

## МĂШĂРĔ ПАТНЕ

Çемен хул кăкĕ сурса ыратнипе тăна кĕчĕ. Шурă маччана тинкерсе, хăй ăçта выртнине тата кунта мĕнле лекнине тăруках ăнкарса илеймерĕ-ха вăл. Май килнĕ таран йĕри-тавралла пăхса илчĕ те хăйĕн вырăнĕнчен икĕ енĕпе те ĕретĕн краватьсем ларнине курчĕ. Вара тин хăй госпитале лекнине ăнланса илчĕ. Анчах мĕн пулнă-ши унпа, ăçтан аманнă вăл? Сылтăм хулĕ сурнине туйрĕ-ха вăл. Çакна тĕрĕслес тесе, сылтăм аллине çĕклеме тăчĕ те, вăл чиксе ыратса кайнине чăтаймасăр, йынăшса ячĕ. Вара пĕр кăна ним тапранмасăр выртрĕ. Унтан, хул туртса сурни кăшт лăплансан, сулахай аллипе асăрхануллăн сылтăм аллине хыпашласа шырарĕ, анчах ăна вырăнта тупаймарĕ. Аллипе çӳлелле, хул еннелле, шутарчĕ те чавса тĕлĕнче юнпа хытнă бинта сĕртĕнчĕ. Чăтаймасăр, каллех йынăшса ячĕ. Анчах ку хутĕнче ыратнипе мар, хăйĕн ĕç аллине çухатнине ăнланса илсе. «Çук, çук! Мĕнле капла? Мĕнле пурăнмалла малалла платник ĕçĕсемсĕр?» — çиçĕм пек вĕçсе иртрĕ пуçра шухăш. Çемен чăтăмсăррăн та çиллĕн шăлĕсемпе шăтăртаттарчĕ.

Анчах çак сарăмсăр аману пулса иртнĕ хыççăн тек ĕнтĕ кама çилленмелле тет? Ирсĕр фашистсене-и? Е çак хăрушă вăрçа пуçарса яракан Гитлера-и? Гитлерĕ те вăрçине пĕччен пуçпах пуçарман пулĕ-ха. Тен, приказ панă командира çилленмелле? Анчах вăрçă вăхăтĕнче, çитменнине хĕрӳллĕ те вутлă çапăçу хирĕнче, кам приказсем пирки шутласа тăрĕ? Çав приказа пама та Çемен хăй ирĕкĕпе ыйтса илчĕ-çке. Халь ĕнтĕ кирек-кама çилленсен те татнă алла каялла тавăраймăн. Ăнăçсăр шăпана ӳпкелемелли çеç юлать. Чунне çакнашкал лăплантарнă пек туйса, вырăнпа выртакан йывăр аманнă çамрăках мар салтак ассăн та тарăннăн сывласа илчĕ.

Ĕç-пуç çакăн пек пулса иртрĕ. Пирĕн фронт сарлакăшĕпех наступлениреччĕ. Наступление пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ пекчĕ. Анчах ăнсăртран Çеменсен роттин атаки ча-

рӑнса ларас, ку вара наступление тытса тӑрас хӑрушлӑх сиксе тухрӗ. Рота умӗнче ӗнер ҫеҫ утӑ купи пулнӑ вырӑнта нимӗҫсем каҫ хушшинче ДОТ тума ӗлкӗрнӗ. Пирӗн разведка ҫакна асӑрхамасӑр юлнӑ. Атакӑна кайма тӑнӑ ротӑн наступлени пуҫламӑшӗнчех ҫӗр ҫумне лӑпчӑнма тиврӗ. Темиҫе хут малалла ыткӑнма тӑрсан та халлӗхе ӗҫ тухмарӗ-ха. Ку пурне те тарӑхтарса ячӗ. Отделени командирӗ пулнӑ Ҫемен чӑтӑмсӑррӑн йӗри-тавралла пӑхрӗ, взвод командирне шырарӗ. Юлашкинчен асӑрхарӗ те ун патне шурӗ.

— Лейтенант юлташ, ирӗк парсамӑр ДОТа пӑчлантарма?! — ыйтрӗ вӑл аякранах.

— Ирӗк паратӑп, сержант Иванов! Салтаксенчен сапас гранатӑсем илме ан ман! Эпир сана ҫулӑмпа пулӑшӑпӑр!

Гранатӑсене хӗве чиксе тата ҫурӑм хыҫӗнче пиҫиххи хушшине хӗстерсе, Ҫемен асӑрхануллӑн ДОТ еннелле шуса кайрӗ. Хыҫалтан пӑшал пенисем илтӗнсе тӑчӗҫ. Нимӗҫсем пытаннӑ вырӑнтан инҫех те мар Ҫемен бомба ӳксе пулнӑ воронкӑна асӑрхарӗ те унта кӗрсе вырнаҫрӗ. Унтан гранатӑсене ӗретӗн хурса тухрӗ, ДОТ еннелле хӑвӑрттӑн пӑхса илчӗ. Вӑл инҫех те мар, граната вӗҫсе ҫитмелле. Анчах нимӗҫсем пуҫ ҫӗклеме те памаҫҫӗ. Пулемет черечӗ чарӑннӑ-чарӑнман Ҫемен ҫӗкленчӗ те пӗрремӗш гранатӑна ывӑтрӗ. Анчах вӑл амбразурӑран кӑшт аяккарах ӳксе ҫурӑлчӗ. Ҫакна асӑрхаса, нимӗҫсем ахӑрсах кайрӗҫ — пуля магазинӗ тӗпсӗр-вӗҫсӗр тейӗн. Ҫапах вӑл та юлашкинчен пушанать-ҫке. Ҫакӑнпа усӑ курса, Ҫемен тепӗр граната ывӑтрӗ. Ку амбразурӑ умӗнчех ҫурӑлчӗ. Пулемет шӑпланчӗ. Вара взвод атакӑна ҫӗкленчӗ. Анчах каллех ҫӗр ҫумне лӑпчӑнма тиврӗ, мӗншӗн тесен пулемет ҫӗнӗрен шӑтӑртаттарчӗ. Иккӗмӗш гранатӑн осколки нимӗҫ пулеметчикӗсенчен, тен, пӗрне ҫеҫ амантрӗ е вӗлерчӗ пулӗ. Ҫеменӗн тарӑхӑвӗ хӑпарсах пычӗ. Вӑл пилӗкӗнчи пиҫиххине салтрӗ те виҫӗ гранатӑна аврисемпе малалла туса, вӗсен варрине тӑваттӑмӗшне чикрӗ те пиҫиххипе ҫирӗппӗн туртса ҫыхрӗ. Вара меллӗ самантпа усӑ курса, пӗтӗм пӗвӗпе икӗ ури ҫине те тӑчӗ те ҫыхӑна пӗтӗм вӑйран ывӑтса ячӗ. Хӑй ҫавӑнтах алли чӑтайми пӗҫерсе кайнипе воронка тӗпне лаплатса ӳкрӗ, тӑнне ҫухатрӗ. Гранатӑсен ҫыххи амбразурӑна вӑркӑнса кӗнине те, рота атакӑна тӑнине те, наступлени ӑнӑҫлӑ вӗҫленнине те пӗлмерӗ Ҫемен. Вӑл, ак, госпитальте ҫеҫ тӑна кӗчӗ. Татӑк хуллӑ ҫын, тек ӗнтӗ вӑл салтак та, ӗҫ ҫынни те мар. Луччӗ пуҫа хумалла пулнӑ пӗреххут! Кама кирлӗ ҫын халь вӑл? Хапха умӗнчи пӗрене ҫинче ларса ирттермелле-им ӗмӗре? Эх, пурнӑҫ-пурнӑҫ.

Палатăри суранлă çĕнĕ салтак тинех тăна кĕнине юнашар краватьре выртаканни туйрĕ пулмалла.

— Э-э, тăна кĕтĕн-и-ха юлашкинчен, тăванăм? Тем, эсĕ пĕрмай аташрăн, темĕнле Акăне хăв патна чĕнтĕн.

Çемен йывăрланнă куç хăрпăкĕсене ерипен уçрĕ те ун умĕнче костыльсем çине тĕрĕннĕ хăрах уралла çынна асăрхарĕ. Хăй çулĕсенчиех ку суранланнă салтак, куçĕсем кăмăллăн пăхаççĕ. Сăнĕпе вăтам Атăлçи вырăсĕ пулмалла. Çемен, ăна хуравлас тесе, тутине вылятма пикенчĕ, анчах чĕлхи, çăвар маччи çумне çыпçăннă тейĕн, пĕртте хускалмасть. Хăй те ун пеккине тӳссе ирттернĕскер, лешĕ тӳрех тавçăрса илчĕ.

— Э-э, сан чĕлхӳ çаврăнмасть пулмалла. Пулать-пулать ун пекки. Ме-ха, сана шыв ярса парам, ĕç пĕр-ик сыпкăм, анчах нумай мар, унсăрăн сурана сиенлĕ пулĕ. Çук, çук, çитет, тăванăм, — вăл вăйпа тенĕ пекех алюмини куркинчен хăпăнма пĕлмен Çеменрен ăна туртса илчĕ. Çемен кăмăлсăррăн кхм-кхм турĕ, вара тинех калаçма пултарнине ăнланчĕ.

— Ман мăшăрăм вăл, Акăнь. Ентешĕм, эп хăçантанпа кунта?

— Паянтанпа виççĕмĕш кун ĕнтĕ. Ма эс мана ентешĕм тетĕн? Эп сана палламастăп-çке.

— Ара, сăнпа эсĕ вăтам Атăлçи вырăсĕ пек курăнатăн та. Эп хам чăваш çынни. Вăрçăччен сахал мар тухса çӳренĕ вырăса.

— Ав мĕнле-е, тăванăм. Витĕр куçлă эс. Эп Чĕмпĕр енчисем. Чăвашсене пĕлнĕ. Ытла тӳрĕ те ӳрĕклĕ çынсем вĕсем. Кăшт ултталам пекки тусанах, çав тери кӳренеççĕ.

— Çавăн пек пулмалла та мар-и вара? Чăваш вăл такама та шанать. Анчах пĕрре кăна ултала ăна, пурне те шанма пăрахать. Ун хыççăн йывăр вара ăна ĕнентерме. Пурнăç вĕрентет мар-и.

Палатăна шурă халатлă сестра кĕчĕ. Çемен çынпа калаçнине курчĕ те йăл кулса ячĕ.

— Тинех тăна кĕтĕн-и-ха? Аван, аван. Сан патна лейтенант килнĕ. Кĕртме юрать-ши?

— Кĕрт,кĕрт, сестричка,— савăнса кайрĕ Çемен.

Сестра тухнă хыççăнах алăкран яштак лейтенант кĕрсе тăчĕ. Ӳт-пĕвĕпе çамрăк пулин те сăн-питне ывăннă тĕс ӳкнĕ. Чылай хушă тăраниччен çывăрманни пĕрре пăхсах курăнать.

— Ну, мĕнле пурăнать кунта пирĕн ентеш? Мĕнле хăйне туять? — хавaслăн курăнма тăрăшрĕ лейтенант. Çемен вырăнĕ патне утса пырса. Ак, юлташусем кучченеçсем парса ячĕç, çитĕр, хăвăртрах сывалтăр терĕç.— Лейтенант салтак хутаç-

ҫинчен консервланӑ какай банкисем, таҫтан тупнӑ хӗрлӗ пан-улмисем кӑларса хучӗ. Панулмийӗсене нимӗҫсенчен хӑтарнӑ ялта тупнӑ пулӗ-ха. Унтан аллине хутаҫра вӑрахрах тытрӗ. Те памалла, те памалла мар тесе шутларӗ пулмалла. Вара ним шикленмесӗр фляга туртса кӑларчӗ.— Кунта сан виҫӗ кунхи пай. Тата отделенирен хушрӗҫ унта. Тыт, чиксе хур халлӗхе, ан сут мана тухтӑрсем умӗнче. Кирлӗ чухне усӑллӑ пулӗ. Сана наградӑна тӑратнӑ... Ҫемен,— сержант Иванов тени кунта вырӑнлӑ маррине ӑнланчӗ Чулхула вырӑсӗ. Ҫавӑнпа ентеш терӗ те алӑкран кӗрсенех вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Ҫеменпе пӗр хуран пӑттине ҫисе пурӑннӑ лейтенант.— Ну, манӑн кайма вӑхӑт, машина кӗтет унта. Эс каҫар мана, Ҫемен. Сывал хӑвӑртрах.

— Мӗн каҫару ыйтмалли пур, лейтенант юлташ, вӑрҫӑ вӗт. Тата эп хам ирӗк ыйтнӑ-ҫке ДОТа путарма. Юлташсене салам кала, маншӑн та ҫапӑҫчӗр. Хӑв куратӑн, эп тек салтак мар ӗнтӗ.

Те каҫ ҫӗнӗ юлташпа кӑшт сыпнӑран, тепӗр кунне Ҫемен час вӑранмарӗ. Вӑл куҫ уҫнӑ тӗле Куҫма (ҫавӑн пек чӗнеҫҫӗ юнашар кровате йышӑнакан хӑрах уралла салтака) палатӑра ҫукчӗ, уҫӑлма тухнӑ пулмалла. Ҫемен тӑрса ларма пикенчӗ, ахлата-ахлата тӑрса ларчех. Малтанах пуҫ ҫаврӑннӑ пек туйӑнчӗ, кӑшт сывлӑш ҫавӑрса илсен, ку туйӑм иртсе кайрӗ. Ҫемен ерипен ура ҫине тӑчӗ, сывӑ аллипе тимӗр кравать пуҫӗнчен тытса, ик-виҫ утӑм туса пӑхрӗ. Чиперех утма пултарать иккен! Вара тек чӑтса тӑраймарӗ палатӑра салтак, тулалла утрӗ. Эх, мӗнле кӗрхи ырӑ ҫанталӑк тӑрать тулта! Ҫулҫӑсем саралма, кӗренленме ӗлкӗрнӗ, анчах тӑкӑнма тытӑнман-ха халлӗхе. Хӗвел те ӑшшӑн пӑхать. Куҫмана Ҫемен йывӑҫсем патӗнчи тенкел ҫинче асӑрхарӗ. Сӑнӗпе, тем, хурлӑхлӑччӗ вӑл. Аллинче хут татки, ҫыру пулмалла.

— Ак, эс ӑҫта, ентешӗм. Мӗн эс салхуллӑ, Куҫма? Япӑх хыпарсем илмерӗн пулӗ те?

— Ан та кала, Ҫемен, луччӗ илмелле те марччӗ ку ҫырӑва, хӑть ӑшра шанӑҫ упранатчӗ. Халь ӗнтӗ вӑл та ҫухалчӗ. Арӑм (юриех мӑшӑрӑм теесшӗн пулмарӗ вӑл) ҫырать, урасӑр мӗн тума кирлӗ эс мана, тет. Килмесен те пултаратӑн, урӑххине качча тухатӑп, тет. Вӑт ватсупнӑ. Тепӗр тесен, мӗн ватсупни пултӑр, манран ҫамрӑк ӗнтӗ, хӗрӗхрен иртнӗ ҫеҫ. Ахальтен каламаҫҫӗ пулӗ, хӗрӗхе ҫитнӗ хӗрарӑм кая юлса пиҫнӗ ҫырла тесе.

— Ытлашшинех ан хуҫӑл-ха, Куҫма, салтак чӗриллӗ пул.

— Ҫынӗ ҫын та, ҫапах та пиҫӗхнӗ ҫын. Юрӗ, пуҫна ан ус.

Тупăн-ха хăвна ăнланакан хĕрарăма, хаљ арçын хакра. Сывлăху пултăр çеç. Эс ман пек алăсăр мар. Ик алла ĕç тупăнатех.

— Ĕçĕ унта мар, тăванăм. Эп ăна кирлĕ мара тухни кӳрентерет. Унччен Хурçă шăратакан пулнă, укçа чылай илнĕ, çавăнпа кирлĕ пулнă та. Халь вара кам эпĕ? Чăлах çын. Манпа ташша та тухаймăн. Эх, ташă тесен, каçсах каятчĕ, каçсерен хула паркне çӳреттĕмĕр. Тек ĕнтĕ урăххисемпе ташласа киленĕ.

— Эппин мĕн тăвас тетĕн, ентешĕм? Ăçта кайса чикĕн пуçна?

— Ун пирки кулянмалли çук-ха, Çемен. Тав турра, анне пурнать-ха халлĕхе. Ватлăхĕнче юнашар пулса савăнтарас ăна. Ялĕ пирĕн Чĕмпĕртен инçех те мар. Хулара та, ялта та ĕç тупма пулать Хурçă шăратнă пулсан, мĕнрен тимĕрçĕ мар эпĕ? Лаççи те пур ялта. Тимĕрçи ватăлчĕ ĕнтĕ тесе çыраççĕ тăвансем.— Ку шухăш пуçа кĕни кăшт кăмăлне уçрĕ Куçманне. Вăл çăмăллăн сывласа ячĕ. Сăнĕ çуталчĕ.

— Юрĕ-çке, ентешĕм, айта, кĕрер, ав, апата чĕнеççĕ пулмалла.

Йĕпреç енчи чăвашпа Чĕмпĕр енчи вырăс вăрçăччен шкул пулнă çурт еннелле утрĕç. Пĕри — теприн икĕ ури те сыввипе ăшра ăмсанса, тепри — çак госпиталь паллаштарнă юлташĕн ик алли те сыввине ăмсанса.

Теме пула Çеменĕн суранĕ час тӳрленмерĕ. Çамрăкрах чухне пӳрнене-мĕне кастаратăн-и, ик-виç кунта суран туртăнатчĕ. Эх, ватăлатпăр пулмалла. Вăрçи те хăвăртлатать пулĕ ваталассине. Шутласан, кунта вăрçă хирĕнче аллă урлă каçрĕ Çемен. Хăйне ниепле те ватă çын тесе шутласшăн мар-ха вăл. Анчах çулсем хăйĕннех тăваççĕ ĕнтĕ, ӳт-пӳ çавна туятех пек. Госпитальте выртса, Çĕнĕ Çула та ирттерчĕ Çемен. Куçма шăпине курнă хыççăн, чылай шухăшласа пурăнчĕ вăл, пĕрмай иккĕленчĕ: çырмалла-ши мăшăрĕ патне çыру, пĕлтермелле-ши ăна хăй чăлаха тухни çинчен? Юлашкинчен чăтаймарĕ, Куçмана çыру çыртарчĕ.

Акăнь мăшăрĕнчен чылай хушши чăтăмлăн кĕтсе пурăнчĕ çыру. Ăшĕнче темĕн те шухăшласа пăхрĕ ĕнтĕ. Те вĕлернĕ, ăна, те йывăр суранланнă вăл, те вăхăчĕ çук унăн? Вăрçă пырать-çке, тем те пулать унта, тĕрлĕрен хут килет унтан. Хăш хучĕ килĕ-ши ун патне? Акăнь кунсерен чӳречерен пăхать, почта хĕрĕ ун хапхи еннелле пăрмасть-и тет. Ак, паян тинех вăл юртан тасатнă ансăр сукмак çине пăрăнчĕ. Тунсăх-

лаҫа ҫитнĕ хĕрарăм тек чăтса тăраймарĕ, пӳртрен васкасах хирĕҫ ҫенĕке тухрĕ.

— Кĕр, кĕр, хĕрĕм, сивĕре ан тăр, кăштах ăшăнса тух,— пĕр харăсах савăнăҫлăн та шиклĕн чĕнчĕ вăл почта хĕрне.

— Эс ан хумхан-ха, Акăнь инке, ку вилни ҫинчен пĕлтерекен хут мар, салтак виҫкĕтеслĕхĕ, ҫыру эппин,— пĕлтерчĕ хĕр, алăкран кĕрсе тăрсан

— Тем, эсир хăвăрт улшăнатăр-ҫке, иртнинче урăххиччĕ, — терĕ хĕрарăм, тăсса панă ҫырăва илсе.

— Йывăр халь почтăра ĕҫлеме. Пĕрисене савăнтаран, теприсене хурлантаран. Хăв айăпсăрах ылханакансем те тупăнаҫҫĕ. Вара чăтаймасăр почта сумкине персе хăварса йĕрсе тухса каяҫҫĕ.

— Юрĕ-ҫке, юрĕ эппин, эс маларах иртсе лар-ха, ăшăнăн кăштах, ҫыру, ак, вуласа парăн ман темĕн юлашки вăхăтра куҫ начарланчĕ,— чĕнчĕ Акăнь, мăшăрĕн алли маррине асăрханипе тĕтреленнĕ куҫне саппун аркипе шăлса. Анчахрах шкул пĕтернĕ хĕрача ҫуттарах, чӳрече патнерех, иртсе ларчĕ те васкасах виҫкĕтеслĕ хута сӳтрĕ. Малтан хăвăрттăн ҫырăва куҫпа чупса тухрĕ, унтан хавассăн пĕлтерчĕ:

— Сывах Ҫемен пичче, вилмен, анчах аманнă, госпитальтен ҫырать, тĕрĕссипе, юлташне ҫыртарнă, персе ячĕ хĕр асăр хамасăр.

— Мĕнле вăл — юлташне ҫыртарнă? Ҫав териех йывăр сусăрланнă-ши? Эс, хĕрĕм, вула-ха, вула, хăвăртрах, пĕлтер, мĕн ҫырать ман Ҫемен.

— Йывăр амантнă ăна, Акăнь инке, сылтăм аллине чавса таран татнă тет, ҫавăнпа йышăнатăн-ши, йышăнмастăн-ши тесе ыйтать.

— Ай турух, мĕн калатăн эс, хĕрĕм? Мĕнле йышăнмасть тет вара? Ара, ҫур ĕмĕр ҫумма-ҫумăн пурăнса ирттертĕмĕр те. Мĕнле иккĕленме хăйнă вăл, мур илесшĕ. Килсе ҫиттĕрха кăна, эп ăна...

Тăрукак хумханса ӳкнĕ Акăнь ун-кун уткаларĕ, унтан сĕтел ҫывăхне пырса ларчĕ.

— Эс, хĕрĕм, сĕтел хушшине лар-ха, халех хурав парар. Килтĕр хăвăртрах, неччу унта ют вырăн ҫинче пыйтăсене тăрантарма.

— Пыйти унта ҫук пулĕ те, Акăнь инке, ҫавах та госпиталь вĕт.

— Кам пĕлет, купи-купипе сусăрланнă салтак выртать теҫҫĕ те, пурне те ăҫтан пăхса ҫитерĕн. Эс, хĕрĕм, мана ан итле, ҫыр ҫыруне, ан иккĕлентĕр, ҫыру илсенех тухса килтĕр,

те. Эп сана хурлăхан варенипе чей ĕçтерем-ха, пĕлнĕ пекех, сана кĕтсе ятарласа вĕретрĕм чейне, çулларан типĕтсе хунă пĕтнĕк куракĕпе.

Çыру илнĕ кун савăнăçне пытараймасăр хăпартлануллă ларакан Çеменсен палатине сыватакан тухтăр кĕчĕ.

— Иванов сержанта киле яма юрать,— терĕ вăл хăй хыçĕнчен юлмасăр пыракан сестра енне çаврăнса.

— Юрать, хутсене паянах хатĕрлĕпĕр, — кĕскен хуравларĕ лешĕ.

Çакна илтсен Çемен хавасланса пуçтарăнма тытăнчĕ. Хавасланмасăр, мăшăрĕ кĕтет, мăшăрĕ патне кайма паянах çула тухать пулсан. Кирлĕ хутсене алла илсен, кăнтăр апачĕ хыççăн вăл госпитальпе сывпуллашрĕ. Çывăхри станцине ăна апат-çимĕç илме каякан машинăпа ăсатса ячĕç. Пассажир пуйăсĕ çуккăччĕ. Вăл хăçан килесси те паллă мар терĕç. Вăрçă çынсене тавар пуйăсĕсемпе çӳреме хăнăхтарнă. Çемен те пашлатса тăракан пăравус еннелле утрĕ, машиниста ӳкĕтлерĕ. Лешĕ пиллĕкмĕш вакуна тĕллесе кăтартрĕ. Çемене вакуна иккĕн--виççĕн туртса хăпарчĕç. Кĕçех пуйăс та тапранчĕ. Теплушкăра халăх лăк тулличчĕ. Ăçта каять тулĕк халăхĕ, вăрçă вăхăтне пăхмасăрах? Кашниех хăйĕн ĕçĕ, хăйĕн хуйхи-суйхи пулĕ ĕнтĕ. Пуйăса ăна кама та е мĕне те пулин турттарма тунă вĕт, пушшăн чуптарма мар. Турттартăрах эппин хăйне май.

Йĕпреç станцине Çемен тепĕр кунне каç тĕлнелле çитрĕ. Анчах кун тĕттĕмленме ĕлкĕрейменччĕ-ха. Нимĕн те улшăнман пек кунта, салтак тумĕллĕ çынсем час-часах тĕл пулнисĕр пуçне. Ялĕ вĕсен кунтан виçĕ çухрăмра çеç. Çемен пĕр тăхтамасăр ял çулĕ çине тухрĕ те васкавлăн тăван килĕ еннелле талпăнчĕ. Çул тăршшĕпех никама та тĕл пулмарĕ вăл. Паллах, кам каçа хирĕç çула тухĕ? Тухас-тăвас текенĕсем те юлман пулĕ ку саманара. Пĕр енчен, Çемене савăнтарчĕ те ку. Унăн чи малтан тунсăхласа çитнĕ мăшăрне курас килчĕ. Каç сĕмĕ анса пыни те ун шухăшĕсене майлăн туйăнчĕ ăна. Акă ял йăмрисем те курăнса кайрĕç. Унта-кунта мĕлт-мĕлт тĕм юписем туртăнаççĕ. Каç сăнĕ çапнă çемĕн вĕсем курăнми тĕм юписем туртăнаççĕ. Каç сĕнĕ çапнă çемĕн вĕсем курăнми пулчĕç. Ялăн хура мĕлки çеç тăрса юлчĕ куç умĕнче.

Кил тĕлне çывхарнă çемĕн Çемен хумханма тытăнчĕ, чĕри хытăрах тапма пуçларĕ. Савăнăç та, иккĕленӳ те, шик те пулчĕç ăна хумхантаракан туйăмсенче. Ара, виçĕ çул иртрĕ те вăл тухса кайнăранпа. Куçмапа калаçни те пуçран тухса пĕтмен. Мĕнле йышăнĕ ăна Акăнь, çур ĕмĕр тенĕ пек пĕрле пу-

рӑнса ирттернӗ мӑшӑрӗ? Тепӗр тесен, мӗн иккӗленмелли пур, чӑваш хӗрарӑмӗ вӗт вӑл, йӑкӑл-якӑл вырӑс майри мар. Вӑт тупнӑ ахалех пуҫа ватмалли. Ҫемен лӑпланнӑ кӑмӑлпа хӑюллӑн тӗртрӗ хапха алӑкне. Сӑлӑп хума ӗлкӗреймен имӗш. Хӑй килте чух пӗр сассӑр уҫӑлса хупӑнаканскер, халь чӗриклетсе уҫӑлчӗ вӑл. Хапха шӑкӑлт туса хупӑннӑ тӗле килкарти енчи чӳречере ӑна темӗнле сивӗре те шӑнасран упрама пӗлекен Акӑнӗн сӑнӗ курӑнчӗ. Ҫемен, ҫенӗк еннелле утса кайма шутланӑскер, тӑпах тӑчӗ, чӳречене тинкерчӗ. Акӑнь те хумханса ӳкрӗ пулмалла, пӗрре ҫухалчӗ сӑнӗ чӳречере, унтан каллех курӑнчӗ, каллех ҫухалчӗ. Кӗҫех ҫенӗк шашулкки шаклатрӗ те, картлашка ҫине мӑшӑрӗ ҫара тумпах тухса тӑчӗ.

— Ах, Ҫемен, тинех ҫитрӗн-и? Мӗн хапхаран хӑпаймастӑн, ҫыхса лартман пулӗ те ун ҫумне? Ма пӗлтермерӗн килессе? Лаша кӳлсе кӗтсе илнӗ пулӑттӑм станцӑра,— каласрӗ вӑл савӑнӑҫне пытараймасӑр.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Ҫеменӗн чунӗнче таҫта чи тӗпӗнче ларса юлнӑ иккӗленӳ пач ҫухалчӗ. Вӑл ҫенӗк патнелле васкаса утса кайрӗ. Мӑшӑрне ыталаса илес шухӑшпа утнӑ ҫӗртех аллисене малалла тӑсма пикенчӗ. Анчах унӑн сывӑ алли ҫеҫ ҫӗкленчӗ. Теприне салтак пиҫиххийӗ хушшине хӗстернӗ ҫанӑ тытса чарчӗ. Хапхаран хӑпӑннӑ хыҫҫӑн ун ҫинчен маннӑ Ҫемен унӑн сылтӑм алли ҫуккине аса илчӗ, вара тӑруках ҫухалса кайрӗ, кил карти варринче тӑп чарӑнчӗ, сывӑ аллине пӗрре антарчӗ, тепре ҫӗклерӗ, унтан алӑ тӑснипех шак хытса тӑчӗ.

Упӑшки ҫак самантра мӗн пулса иртнине Акӑнь ҫавӑнтах ӑнланчӗ те Ҫемен тӑна кӗме ӗлкӗриччен, картлашкасем тӑрӑх хӑвӑрт чупса анса, пырса ыталаса илчӗ. Тепӗр кӑштахран пуҫне упӑшкин кӑкӑрӗ ҫине хучӗ те куҫҫулӗпех ӗсӗклеме пуҫларӗ.

— Юрӗ-ҫке, юрӗ сана хӗл варринчех ҫумӑр тӑкма. Турра шӗкӗр, чӗрӗ юлнӑ. Алли темех мар вӑл, унсӑрах пурӑнма хӑнӑхӑп-ха.

— Эп уншӑн мар, Ҫемен, савӑннипе йӗретӗп. Хӗрарӑм куҫҫулӗ вӑл, хӑвах пӗлетӗн, пирӗн ҫиелтех, хӑвӑрт тулать.

— Ну, ҫитӗ, ҫитӗ сана кӑкӑра йӗпетме. Ав, шӑнса кайрӑн пулмалла, кӗрер пӳрте.

Пӳрте кӗрсен, Акӑнь хӑй пӗччен тесе усӑ куракан мӗлтмӗлт лампи вырӑнне кӗленчеллӗ лампа ҫутса ячӗ, ун-кун кускалама, сӗтел ҫине апат-ҫимӗҫ лартма тытӑнчӗ, чашӑксем йӑтса нӳхрепе тухса кӗчӗ. Вӑрҫӑ умӗнхи ҫулсенчи пек пуян мар пулин те, ялта апачӗ-ҫимӗҫӗ тупӑнатех вӑл, йӳҫӗтнӗ ку-

пăста, тăварланă хăярпа кăмпа, çĕрулми тата тĕрлĕ сырла çимĕçĕ хĕлĕпех татăлмасть чăвашăн сĕтел çинчен. Çутçанталăк пурлăхне пухса хатĕрлеме пултарать чăваш, сĕм авалтан килекен йăла-йĕрке вăл. Ан кахаллан çеç. Акăнь тесен вара, пĕтĕм ял пĕлет, мĕн ачаран чĕкеç пек вăр-вар пулнă, аллиури унăн яланах ĕçе сыпăçуллă. Вăрăм хĕле каçма кăçал та çителĕклех хатĕрленĕ вăл çутçанталăк çимĕçне. Тата пĕччене нумай кирлĕ-и апачĕ? Шел, ача çуратса парайманĕ Акăнь. Ку вăл хĕр пĕрчи пулса çитнĕ чухне пăрлă шыва кĕрсе ӳксе йывăр чирленĕрен пулнă терĕç тухтăрсем. Усрав ача илес тенĕччĕ те, эсрел вăрçи килсе тухрĕ. Турри çавăн пек сырнă пулĕ ĕнтĕ ун шăпине.

Вăрман хăлхаллă, уй куçлă, теççĕ халăхра. Те пĕччен Акăнĕн чӳречисем уяв кунхилле ялтăр курăннăран тĕлĕнсе, те яла салтак килнине такам асăрханипе, Акăнь патне пĕри кĕрсе тухрĕ, тепри сăлтав çук çинче сăлтав тупса пычĕ, кайрĕ вара ялта хыпар: салтак килнĕ, салтак килнĕ! Çав çулсенчи ял çынни аван пĕлет мĕн пулнине ялпа çак хыпар хыççăн. Вăл патакпа хускатнă кăткă йăви пек йăшăлтатма пуçлать. Ахальтен каламан пулĕ, чăваш вăл пурне те хăй куçĕпе курса пĕлме ӳркенмен этем тесе. Ак, паян та, кун тахçанах каçа сулăннине уямасăр, тен, çавăнпах та-и, мĕншĕн тесен кăнтăр çутинче чăваш яланах мĕнле те пулин ал ĕçĕ тупать, Çемен пӳрчĕ кĕçех ял çыннисемпе тулса ларчĕ. Чи ваттисене сĕтел хушшине лартрĕç, хĕрарăмсем саксем çине ларса тухрĕç, ачапăча вара урай варринче кĕшĕлтетрĕ: чи малта — вĕтĕр-шакăрсем, алăк патнерех — аслă шкулсенче вĕренекен йĕкĕтсемпе хĕрсем. Çемене вăрçа ăсатнă чухне вунпилĕк çулти хĕр пĕрчисем паян-ыран тăван йăваран вĕçсе тухмалли хĕрсем пулса тăнă, салтак вĕсем еннелле кашни çаврăнса пăхмассерен пĕр-пĕрин хыçне пытанма пикенеççĕ. Анчах таврăнĕç-ши чĕрĕ-сывă вĕсем ăсатнă хыççăн, вăрçăн хаяр вутçулăмĕнче пиçекен йĕкĕтсем?

Çемен сĕтел тулашĕнчи пукан çинче алăк патнелле çурăмпа ларать, ăна курма пухăннă çынсене хăналать. Яланах саппаслă Акăнĕн Çемене ăсатнă чухнехинчен юлнă литр каçăнкă пулнă. Ăна хавaспа кăларса лартрĕ вăл тĕп сакайĕнчен. Тăван-пĕтенĕсем те, пускилсем те пуш алăпа килмен, мĕн те пулин саппун арки айне чиксе килнĕ — çавнашкал пулнă яланах чăвашăн йăли-йĕрки. Пирĕнтен тухман, пирĕнпе ан пĕттĕр ыра йăла-йĕрке, тет чăваш. Çапла пултăрччĕ ĕмĕрĕмĕрех: таçтан авалтан тухнă ырă йăла çумне çĕнĕрен те çĕнĕ ырă йăла хутшăнса пымалла пултăрччĕ пурнăçра.

Кăшт сыпкаласан, чĕлхесем çемçелчĕç çак савăнăçлă çурта пухăннă ял çыннисен. Кĕçех шавлă калаçу пуçланчĕ. Салтак курма килнĕ ача-пăчапа яш кĕрĕмсем тухса кайнăччĕ ĕнтĕ. Çывăх тăванĕсем, салтак арăмĕсем çеç юлнăччĕ. Юлашкисем Çемене ку таранччен ыйту парса чăрмантарманччĕ. Анчах темле чăтăмăн та хĕрри пур, вăл тулса-тулса пырса урлă каятех. Ак, пускилти пĕр арăм, унтан тепри, унтан тата тепри Çеменрен ыйтма пуçларĕç: «Эс унта, вăрçăра, ăнсăртран пирĕнне тĕл пулман-и? — терĕç. Çемен вĕсене пурне те питĕ лайăх ăнланать, çавăнпа нихăшне те: «Çук, курман»,— тесе пат татса каламарĕ, кăшт шухăшлам пекки турĕ те пуриншĕн те пĕр хурав турĕ:

— Ырă пускилсем, чăтăмлă салтак арăмĕсем, фронт вăл питĕ анлă, пиншер-пиншер çухрăма тăсăлать. Тепĕр чухне юнашарах çапăçсан та пĕр-пĕринпе тĕл пулаймастăн, ăнсăртран тĕл пуласси сахал хăçан пулать унта. Чăвашсем тесен, нумай вара унта вĕсем, таçти-таçти чăваш та пур. Эп ку таранччен чăвашра çеç чăвашсем йышлă пурăнаççĕ тесе шутланăччĕ. Çук иккен, Çĕпĕр чăвашĕсене те курма тӳр килчĕ вăрçăра, унта та ялĕ-ялĕпе пурнаççĕ имĕш чăвашсем. Вăрçă вăл такама та тĕл пултарать, анчах хамăр ялсене курасси пулмарĕ вара. Эсир, инке-арăмсем ан айăплăр мана уншăн. Айтăр, чĕрĕ-сывă таврăнччĕр тесе сыпар кăштах.

Алăк патĕнчи кĕтесре тахăшĕ ĕсĕклени илтĕнчĕ çав вăхăтра. Ку вăтам касри Хевронин пулчĕ. Вăл эрне каялла çеç хура хут илнĕччĕ (çавăн пек калаччĕç ун чухне кам та пулин вилни çинчен пĕлтерекен хута). Пурте ун çине çаврăнса пăхнине чăтаймасăр, вăл пӳртрен чупсах тухса кайрĕ. Ун хыçĕнчен татах тухакансем пулчĕç. Килсене саланма вăхăт çитнине пĕлтерчĕ пулмалла ку, тăван-пĕтенсем те ура çине тăчĕç, вара, апат-çимĕçшĕн Акăне тав туса, Çемене ал тытсах тата вĕсене хăнана чĕнсе пĕрерĕн-пĕрерĕн тухса кайрĕç. Пӳрт самантрах пушанса юлчĕ.

Упăшкине вăрçа ăсатнăранпа сарманччĕ сарлака кравате Акăнь, кăмака хыçĕнчи кутникпех çырлахнăччĕ, пĕччене мĕн кирлĕ урăх тесе лăплантарнăччĕ малтанах хăйне, кайран хăпăхнăччĕ унти ăшă вырăна. Паян, ак, пӳртре иккĕш çеç тăрса юлсан, вăл çухалса кайрĕ: сĕтеле пуçтарса тирпейлемелле-и, вырăн сармалла-и тесе шухăшласа, Çемен çине пăхрĕ. Лешĕ ăнланчĕ пулмалла мăшăрне, эп тухса туртса кĕрем-ха терĕ. Çемен кĕнĕ çĕре сĕтел те тап-таса тирпейлĕччĕ, кравать те кăпăш минтерсемпе илĕртетчĕ. Акăнь килте тĕртсе тунă катан пиртен çĕленĕ аялти тумпа вырăн хĕрринче ларатчĕ.

Çичĕ линейлă лампа çутине пăрса пĕчĕклетнĕччĕ. Сĕтел çинче тăвансем илсе килнĕ сăра кăкшăмĕпе çуррине ĕçнĕ эрех кĕленчи ларатчĕç тата çăкăр чĕллипе какай татки турилккере пурччĕ.

— Çемен, эс, тем, çынсем умĕнче ĕçмерĕн, тен, сыпассу килет? — терĕ Акăнь, пӳрте кĕнĕ хыççăн сак çине кайса ларнă упăшкине сăнаса. Хăй вăл, килти сăрасăр пуçне, эрех-сăмакун таврашне ĕçсе курман пурнăçĕнче, намăс тесе шутланă. Çемене те ураран ӳкиччен ĕçнине курман вăл ку таранччен. Пĕрлешсенех Çемен те сыпакан марччĕ. Кайрантарах, платник ĕçĕпе вырăса çӳреме пуçăнсан, сыпкалатчĕ, çапах та картне пĕлетчĕ хăй, нихăçан та пуçне сугман.

— Çук, ĕçес килмест, эрехĕ тармĕ-ха вăл. Эп салтак пайне сыпнă ĕнтĕ, тен, гвардейски паях пулчĕ-и? Пире унта, çарта, хăнăхгарнă нормăна. Тавай, сывăрар, çурçĕр те тахçанах иртнĕ, ав,— вăл, ура çине тăрса, ерипен çунакан лампа патне пычĕ те ăна вĕрсе сӳнтерчĕ.

Эх, мĕн тери рехетлĕ мăшăрĕ сарнă килти кăпăш вырăн! Салтакри ая та хунă, çиелтен те витĕнсе выртнă шинель, е госпитальти улăм тултарнă матрас мар ĕнтĕ. Турăсен çăтмахĕнче те ун пек канăç çук пулĕ? Виçĕ çул тунсăхласа пурăннă, чунне кантарнă Акăнь те тикĕссĕн сывлама пуçларĕ, Çемен çаплах çывăрса каяймасть. Мĕн татрĕ-ши ун ыйăхне? Э-э çав кăмака хыçĕнче пĕр саслăн чăрр-чăрр, чăрр туса юрлакан шăрчăк пулĕ. Хăçантанпа итлемен вăл çак сапăрлантаракан юрра. Çук, хăçантанпа мар, иртнĕ çул итленĕччĕ ăна украин ялĕнче. Ун чухне хула çыннисемпе ялта ӳснĕ салтаксем чутах хирĕçсе каятчĕç. Сакăн пек çывăрма выртнăччĕ Çемен отделенийĕ пĕр çуртра. Ниепле те час çывăрса каяймарĕç вĕсем. Кинора çеç вăл пуçне хунă-хуман çывăрса каять салтак. Пурнăçра яланах ун пек мар çав, тепĕр чухне, темĕнле ывăнсан та, час хупаймастăн куçна. Вăт, çавăн чухне Новосибирск йĕкĕчĕ пулмалла, çав тери халап саптарма юратаканскер, черетлĕ анекдот каласа култаратчĕ. Сасартăк салтак халапĕсене итлесе ывăннă шăрчăк чăтăмсăррăн чăрлатса илчĕ, чарăнăр эсир унта, манăн вăхăт çитнĕ терĕ пулмалла. Ялта ӳснĕ салтаксем чăнк хăлхисене тăратрĕç. Анчах халапçă хĕрсе çитнĕ çеç имĕш, палкать те палкать. Ростов облаçĕнчи Бобков рядовой чăтаймарĕ çакна:

— Эй, Çĕпĕр чалтунĕ, хуп çăварна, илтместĕн-им, шăрчăк юрласшăн, пар ăна ирĕк, атту приклад çитерĕп!

— Тупнă шăрчăк, мĕн ман халап интереслĕрех мар-им?

— Шăплан, шăплан эс унта,— терĕç иккĕн-виççĕн харăс,— чуна кĕме пĕл.

Итлемех тиврĕ Новосибирск йĕкĕчĕн. Вара, шăрчăк юррине итлесе выртса, сисмесĕрех çывăрса кайрĕç салтаксем.

Йĕпреç çывăхĕнчи ялти мирлĕ çуртра Çемен те юлашкинчен тикĕссĕн сывлама пуçларĕ. Вăл вăраннă тĕле мăшăрĕ выльăх-чĕрлĕхе апат пама та, ĕне сума та, яшка пĕçерме те ĕлкĕрнĕ. Савăнăçлă сăн-питпе те ытарлă кулăпа чупкаласа çеç çӳрет пӳртĕн-кил картийĕн. Упăшки тăрса ларнине курчĕ те, çакна тахçанах кĕтнĕскер, васкавлăн сăмах хушрĕ.

— Эс, Çемен, апатлан халлĕхе пĕчченех. Ман фермăна чупма вăхăт, ĕнесене сумалла, паян каярах юлтăм пулмалла, кĕтсе те ывăнчĕç ĕнтĕ. Апат-çимĕç хатĕр, тупатăн тĕпелте,— терĕ те вăл, алăк хăлăпĕнчен тытса тăраканскер, васкавлăн пӳртрен тухрĕ.

Йĕм пĕççийĕ ансăр пулнăран, салтак кăлифене тăхăнма кансĕртерех пулать тесе, пăлтăрти арчаран мăшăрĕ унчченхи шăлавара илсе кĕнĕ, кравать çумне кăçат лартнă. Çемен шăлавара ун-кун çавăркаласа пăхрĕ. Таса, тирпейлĕ вăл, вĕр-çĕнĕ пекех. Çавах та паянлăха салтак тумнех тăхăнас терĕ вăл. Урисене вара, хăрах алăпа вăрăм обмоткăсене чĕркеме кансĕр тесе, кăмăлпа нумаях пулмасть кăмака çинчен антарнă ăшă кăçатсем ăшне путарчĕ. Эх, мĕн тери рехет кăçатăпа çӳреме! Тек ура та шăнас çук. Шăнса шакăр-шакăр хытнă путинка тĕпĕ мар ĕнтĕ. Мĕн каласси пур, рехет, рехет.

Çемен çил çине лупас хыçне тухса кĕчĕ, чăланти умывальнике шăкăртаттарчĕ. Кунта та ăшă шыв яма ĕлкĕрнĕ канăçа пĕлмен вăр-вар çумма мăшăрĕ. Ничево-о, малалла хам пулăшса пырăп, ун пекех ĕçлеттермĕп Акăне, канăçлăрах пулĕ ăна. Унтан сĕтел патне пычĕ те кăкшăмри хаЛь те кăпăкланма пăрахман сăрана ярса ĕçрĕ, эрех кĕленчи çине пăхса илчĕ, анчах ăна тивмерĕ. Гимнастеркине тăхăнчĕ те, халлĕхе пиçиххи çыхмасăрах, тапак туртма ларчĕ. Ăна хăрах алăпах чĕркеме хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ вăл. Çăра тĕтĕме маччаналла йăсăрлантарнă май килнĕренпе тин пӳрт ăшчиккине тимлĕн пăхса çаврăнчĕ. Вăл кайнăранпа нимĕн те улшăнман пек. Кăмака та пăхма кăмăллă, шап-шурă. Ăна Акăне кашни çул икĕ хутчен шуратса çĕнетет. Мăнукпа Пукрав уявĕсем умĕн. Çук, çук, темĕнле улшăну пурах, Çемен çакна чунĕпе туять. Вăл тепĕр хут тимлĕн пăхса çаврăнчĕ. Э-э, чăлан çумĕнче ларакан фикус курăкĕ ӳссе кайнă, çĕнĕ туратсем хушнă тата турă кĕтессинче тепĕр турăш хутшăннă, Георги-Çĕнтерӳçĕ пулмалла. Çемен астăвасса, унта Турă Амăшĕпе Микулай

Турă кăначчĕ. Эй, ку туйăмлă Акăне. Мăшăрĕ, çĕнтерÿçĕ пулса, чĕрĕ-сывă таврăнтăр тенĕ ĕнтĕ. Эп вара, ак, ĕç аллине çухатса хăвартăм таçти инçетри ют çĕрте.

Ĕç тенĕрен... Паçăр тула тухсан, крыльца хăми пĕр пуçĕнче пăтаран тăпăлса тухса усăнса тăнине асăрхарĕ Çемен. Пăта тĕлĕнче çĕрĕшнĕ ĕнтĕ вăл, пĕрмай çумăр çапнипе. Пĕрене варринчен çурнă хăма пулĕ çеç, халех çĕрĕшмелле марччĕ-çке. Пĕрене варри маларах çĕрĕшекенччĕ. Çемен хăй те халь аса илчĕ: ку хăмана çапса лартнă чухне пăта çăмăллăн кĕнĕччĕ. Халех улăштарас мар-ши ку хăмана тесе шухăшланăччĕ вăл çавăн чухне, анчах темĕнле васкавлă ĕç тупăннипе ун çинчен вăхăтлăха маннăччĕ, кайран вара çаплипех тăрса юлчĕ. Ак, халь хăй çинчен асăрхаттарчĕ те. Юрĕ, паян та кая юлман, улăштарăп.

Кил-çурт таврашĕнче типтерлĕ хуçа пулнăскер, Çемен пĕр тăхтамасăр ура çине тăчĕ. Сĕтел патне пырса, хăйне салтак пайĕпе тивĕçтерчĕ, сĕтел çинче мĕн пуррине çыртам пекки турĕ, яшка антарса чăрманмарĕ. Вара кăмака çумĕнчи кунта та Акăнĕн ÿркенмен алли çакса хăварнă кухвайкăна тăхăнчĕ, пуçĕ çине, çÿçне тураса тирпейлемесĕрех, хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕк лартрĕ, кăмака айккинчи шăтăкран салтакăн виçĕ пÿрнеллĕ алсишĕсене илчĕ те (мăшăрĕ хурса хăварнă çăм алсишсене тĕкĕнмерĕ) тула тухрĕ. Унта вăл пĕр пăтаран усăнса тăракан хăмана туртса тăпăлтарчĕ те хăйĕн сарай-мастерскойне кĕрсе кайрĕ. Кунта унăн платник ĕçĕнче мĕн кирли пурте пур, кашни хăйĕн вырăнĕнче. Малтанхи вăхăтра мăшăрĕ хатĕр-мĕтĕре куçарса хунине юратмастчĕ Çемен, кашнинчех кăмăлсăррăн асăрхаттаратчĕ. Упăшкин тăрăшуллă типтерлĕхне ăнланчĕ пулмалла кайрантарах Акăнь, инструментсене тек тытмарĕ вăл. Халь те вĕсем Çемен мĕнле хурса хăварнă çавăн пекех выртаççĕ. Вăрмантан йăтса килнĕ типĕ шанкăна татма илнĕ пуртă çеç верстак хĕрринче выртать. Вăл та пулсан платникĕн ятарлă пуртти мар, вут-шанкă татса çурмалли. Çемен уншăнах кăмăлне пăсмарĕ, çăра мăйăхĕ айĕнчен кулса илчĕ кăна.

Кирлĕ пулакан хăма-пăрăс тавраш çителĕклех кунта Çеменĕн, кашни тĕсĕ хăйĕн купинче шаршанланса выртать — ан нÿрленччĕр те, ан çĕрччĕр. Çемен шаршанран хăма туртса кăларчĕ, ăна верстак çине хучĕ. Ун çине тăпăлтарса килнĕ хăмана вĕçĕсене тан туса вырнаçтарчĕ, вара хăпарса ларчĕ те хатĕрлесе хунă кĕске пăчкăпа татма пикенчĕ. Меллех мар пулин те татма пулать. Çитменнине платникĕн унăн сылтăм сулахай çукпа пĕрех темеле, ĕçре-мĕнре сусăрланасси те пу-

лать, ун пек чухне пĕр алли наянлансан тепри ӳркенмест. Чиперех татрĕ хăмана Çемен. Пăчки çивĕч, мăкалман. Кив хăмари пăта вырăнĕсене виççе, кунтах вырнаçтарчĕ вăл пăтасене çĕнни çине. Хăрах алăпа пăтана татса тăма, çав вăхăтрах мăлатукпа çапса кĕртме май çук, паллах. Платниксен эртелĕнче пăтана мăлатуксăрах хăма витĕр кăлармалла тупăшнине аса илчĕ те пăтасене малтан ывăç тупанĕпе сулса вырăнĕсене тĕрĕнтерчĕ, унтан мăлатукпа шаккаса витĕр кăларчĕ. Вара ун пек тума ăнкарнăшăн хăйне хăй ăшра мухтаса илчĕ, малаш ĕçре кирлĕ пулма пултарать ку меслет терĕ.

Çакăн пек хатĕрленĕ хăмана крыльца çумне çапса лартма йывăрах пулмарĕ ăна. Çемен хăмана вырăнне майлаштарса лартрĕ те пуçĕпе тĕкĕлерĕ, унтан пушаннă алăпа кухвайка кĕсйинчи мăлатукне кăларчĕ, вара хăман пĕр вĕçне юпа çумне пăтана кăшт çапса кĕртсе çирĕплетрĕ, унтан тепĕр еннелле çаврăнса тăрса-иккĕмĕш вĕçне. Ак, хăма хăйех тăрать, пуçпа тĕкĕлеме кирлĕ мар. Вара Çемен тула тухнăранпа тин туртса яма шутларĕ. Малтанах хуçлатса хатĕрленĕ хаçатне кăларчĕ, ăна чĕркуççи çине хурса тапак чĕптĕмне сапрĕ, ăна срипен чĕркесе майласа чĕртсе туртса ячĕ. Туртнă çемĕн, тата мĕн ĕç тумалла-ши тесе, кил картишне пăхса çаврăнчĕ. Пурте чиперех пек, пурне те тĕплĕ ала туни курăнать. Ара, çак килçурта Çемен хăй аллисемпе çавăрнă та. Таврара чи ăста платник шутланать мар-и. Çывăхри ялсенче вăл лартса паман çĕнĕ çурт çук та пулĕ. Чĕмпĕр, Пенза, Самар облаçĕсенче мĕн чухлĕ çурт лартнă тата. Çемен крыльца патне çаврăнса çитрĕ те хăма пăтисене вĕçне çити çапса кĕртсе лартрĕ. Чăнах та, мăлатук пăта айккипе кайрĕ-ха икĕ-виçĕ хутчен, çапах та пăтасем шлепкисем таранах кĕрсе ларчĕç,

— Эс, Çемен, ан ятла мана, хăмине ăна хамăнах тахçанах улăштармаллаччĕ те, ниепле те вăхăт тупăнмарĕ. Ирпе кăвак çутăллах фермăна тухса утатăп, ĕçрен тĕттĕмленсен çитетĕн, кăнтăр апатĕнче чăххи-чĕппине тăрантармалла, хамăн та чĕре сурилĕх ларса çимелле. Вăт, кунсем иртеççĕ çавнашкал. Сарайри хатĕр-мĕтĕре те тытма шиклентĕм, тем, хуçса хурăп-и ăнсăртран терĕм.

— Тем кирлĕ мара сӳпĕлтетсе ан лар-ха эс, Акăнь. Арçын ĕçне ăна арçынăн тумалла. Çавнашкал вăл пирĕн йĕрки.

— Эх, Çемен, ун пек калама ан васка. Вăрçă вăл хĕрарăма та арçын туса хучĕ. Хĕрарăм тума пултарайман ĕç юлмарĕ те пулĕ. Тепри тата арçын ячĕпех хĕрарăма тухать вĕт. Ав, районти, сайăмсем салатса çӳрекен Йăкнатĕв тăлăха

юлнӑ арӑмсен аншарлине кӳпсе лартать тет те арҫын ӗҫне те инке-арӑма тутарать тет, хӑй аяла кӗрсе выртать тет.

Упӑшкин куҫӗнче хаяр ҫутӑ ҫиҫсе илнине вӑхӑтра асӑрхаса, тӑпах шӑпланчӗ Акӑнь, хӑй ытлашшиех пӗлтернине тавҫӑрса илчӗ. Вара пӗр сӑмах шарламасӑр яшкине сыпса ячӗ те, тирӗкне йӑтса сӗтел хушшинчен тухрӗ.

Ҫеменӗн кӑмӑлӗ тӑруках пӑсӑлчӗ, сӑн-пичӗ ӑмӑрланчӗ. Вӑл эрех юлашкине пӗтӗмпех стакана ячӗ те тӗппипех ӗҫрӗ. Ҫисе яман яшкине хӑй умӗнчен сӗтел варринелле шутарса лартрӗ. Ҫисе тӑраннӑ тенине пӗлтерчӗ ку мӑшӑрӗшӗн. Вӑл, шӑппӑн утса пырса, тирӗк-ҫӑпалана ячӗ. Кун пек чухне вӑл кил карти енчи сак ҫинче вырнаҫаканччӗ те сылтӑм чавсипе чӳрече сули ҫине тӗрӗнекенччӗ. Халь те ҫавӑн пек тӑвас терӗ, анчах чӑлах хулӗ пирки вӑхӑтра аса илчӗ те ҫурӑмпа пӗренесем ҫине тӗрӗнчӗ.

— Юрӗ, эп васкам-ха эппин. Эс кунта ан ӗшен ытлашши, килнӗ ҫинех кан, — терӗ те Акӑнь, упӑшкин кӑмӑлне ҫавнашкал шухӑшламасӑр пӑснӑшӑн хӑйне-хӑй ӑшра ятлаҫса фермӑна тухса утрӗ.

Ӗҫсӗр ҫыншӑн вӑхӑт шумасть. Ӗҫлӗ ҫын вӑхӑт иртнине асӑрхамасть те. Ҫапла кил-ҫурт таврашӗнчи ӗҫ-пуҫа туса пырса, эрне, ик эрне иртнине сисмерӗ те Ҫемен. Вӑл ерипен хӑрах алӑ ӗҫне хӑнӑхса пычӗ. Пурнӑҫра ҫавӑн пек вӑл: хӑш аллине мӗнле ӗҫе хӑнӑхтаракан, ҫавна вӑр-вар тӑвать ҫав алӑ. Тепӗр арҫын сылтӑм алӑпа йӗм тӳммине тертлӗн вӗҫертет, мӗншӗн тесен ку ӗҫе вӑл мӗн ачаран сулахай аллипе туса пынӑ. Ҫемен те сулахай аллине хӑнӑхтарса ҫитерчӗ пек ӗҫе. Анчах улшӑну та пур! Ӗлӗксене вӑл пур ӗҫе те пӗрре хӑнӑхнӑ еккипе пӗр тӑхтамасӑр тӑваканччӗ. Халь вара мӗнле майпа тусан меллӗрех пуласса малтанах шутласа хурать. Унсӑрӑн майсӑр-мелсӗр кӑштӑртатнипе ытларах вӑхӑт кирлӗ пулать. Халь ӗнтӗ колхоз ӗҫӗ ҫинчен те шутлама вӑхӑт. Ҫӗршывӑн икӗ хут салтакӗ яланах ӗҫе хатӗр пулмалла.

Ҫакӑн пек шухӑшсемпе хӑйне-хӑй хавхалантарса, пӗр ирхине правлени тухса утрӗ Ҫемен. Правлени умӗнче, Ҫемен астӑвасса, ир-ирех ял арҫынӗсем чӗлӗм мӑкӑрлантараканччӗ, ҫӗршывпа тӗнче ӗҫ-пуҫне сӳтсе яваканччӗ, пӗр-пӗринчен шӳтлекелекенччӗ. Халь вара пӗр ҫын мӗлки те курӑнмарӗ, пӗр сас-хура та илтӗнмерӗ. Ял пурнӑҫӗ чарӑнса ларнӑ тейӗн. Ҫемен председатель пӳлӗмне кӗчӗ. Лешӗ, Ҫемен тантӑшӗ, сӗтел хушшинче пуҫне еснӑ та тӑрӑшсах тем ҫырса ларать, ҫӑмӑл мар пулмалла уншӑн ку ӗҫ. Ачаранах ҫыру ӗҫне юратманскере, халь ӑна нуши шур хута хураттарать пулӗ. Нуша вӑл те-

пĕр чухне кулач та çитерет техĕмлĕ хура çăкăра хăнăхнă чăваша. Сантăр та, Çемен пекех, хăрах алăпа таврăнчĕ вăрçăран. Анчах унăнне сулахай ал лаппине çеç татнă. Халь ун вырăнне сăран перчетке тăхăнтартнă. Протез хуралса тăрать. Алăк сассине илтсе, вăл пуçне çĕклерĕ.

— Э-э, Çемен-çке, фронтовик.— Вăл, ура çине тăрса, сĕтел хушшинчен тухрĕ те тантăшне ал тăсса пачĕ. Лешĕ ăна мелсĕррĕн сулахай аллипе чăмăртарĕ.— Эс каçар мана, тусăм. Ниепле те нăхăт тупаймарăм сан пата кĕрсе тухма. Ак, хăв куратăн, пĕччен ларатăп правленире. Председатель те, бухгалтер та, учетчик та эп хамах пĕчченех. Пĕр вăр-вар хастар хĕрача ĕçлетчĕ-ха манпа юлташла учетчикра. Вăл та пулин, пиччĕшĕ пирки хура хут килсен, военкоматра тархасласа йăлăхтарса, хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайрĕ. Эс лар-ха çакăнта, мана хирĕç,— тесе сĕнчĕ те Çемене Сантăр, сĕтел хушшине хăй кĕрсе ларчĕ.— Пĕлетĕн-и, тусăм, пуç çурăлать пулĕ шухăшласа. Кĕçех ака çывхарать, ăçтан тупас вăрлăх тыră? Хамăрăн çитес çук.

— Эс, тантăшăм, отчет туса ан лар-ха мана, ăн районта та ыйтĕç-ха санран, унта валли хăвар сăмаххусене. Эс мана, ак мĕн, пĕр-пĕр ĕç тупса пар. Алла усса ларас килмест, килте мĕн ĕç тумаллине туса пĕтертĕм таврăннăранпа. Тата пĕччене кичем кунĕ-кунĕпе.

— Эп сана, Çемен, кăштах кантарасшăнччĕ, вăрçă кункăрине мантăрччĕ терĕм.

— Эй, мĕн унта, леш тĕнчере канăпăр, Сантăр.

— Ну, юрĕ эппин. Малтанхи пек, платник ĕçне пултарăн-и?

— Мĕн калаçмалли пур. Эс, вăхăт тупса, ман пата кĕрсе тух вара, курăн эп мĕн тума пултарнине.

— Унсăрах ĕненеп сана, паян кăна пĕлместĕп вĕт. Ферма хĕрĕсем йăлăхтарса çитерчĕç, витесем ишĕлсе анма пултарасçĕ теççĕ. Унта мĕн-мĕн тумаллине паян кайса пăх та ыран ĕçе пуçăнма пултаратăн. Сан пата кĕрсе тухасса вара, çак кунсенче кĕрсе тухăп. Вăхăтсăр чăрмантарас мар терĕм. Халех чĕнме килчĕ тесе шутласран шиклентĕм. Юрать-ха, ху килтĕн. Кĕт вара.

— Ята ямăпăр, кĕрсе тух,— терĕ те Çемен пӳлĕмрен тухрĕ.

Фермăра ăна хаваспах кĕтсе илчĕç, ăçта мĕн-мĕн тумаллине ушкăнпах кăтартса çӳрĕç. Акăнь чи хыçалта утса пычĕ, çынсем умĕнче мала тухса тăма аванах мар терĕ пулмалла, е хĕрарăмсем арçынпа калаçса та пулин чунĕсене кăштах йă-

пантарччăр тěрě-ши.

Чиперех ěçлесе пычě Семен фермăра. Хăй пултарнă ěçрен нихăшěнчен те ютшăнмарě, платник ěçне çеç тумарě. Кěçех çуркунне те çитрě. Çырмасем шыв-шурпа тулчěç. Ялтан фермăна çитме пěр çырма урлă каçăпа иртмелле. Ирпе е каçпа, шăнтнă вăхăтсенче, вăл шуçлак. Çак каçă çинчен çурхи шыва ўксе шăнса чирленěччě те Акăнь, çиччěмěш класра вěренекенскер. Хăй пăхакан пăрусем патне килнěччě вăл ун чухне уроксем хыççăн. Амăшне кěтсе, каçченех юлнăччě вăл фермăра. Каçă çинче ури шуса кайрě те, пăрлă шыва шăмпăлтатса ўкрě вăл. Юрать, амăшě юнашар пулчě, Акăне вăхăтра туртса кăларчě. Çапах та палли ěмěре юлчě, ав. Çавăнтанпа яланах сыхланса каçаканччě вăл каçă урлă. Кăçал вара, тем пулчě унпа, Çемен килте пулни савăнтарчě-ши, вăр-вар чупса иртекен пулчě каçă урлă. Паян та, акă, фермăран кăшт маларах тухса утнă упăшкине хăваласа çитес тесе ěнтě, каçă урлă та васкавлă утăмсемпе иртме шутларě, анчах каçă варринче пăр муклашкинчен такăнчě те ура çинче тытăнса тăраймарě, пăрлă шыва шăмпăлт ўкрě.

— Çемен, пулăш, туртса кăлар!— кăшкăрчě вăл сас çитнě таран. Кěçех Çемен чупса анчě, Акăньпе пěрле çырана хуçăлса ўкнě карлăка хăрах аллипе ярса илчě те мăшăрне тăсса пачě. Вара, чакса-чакса пырса, Акăне çырана туртса кăларчě. Киле вěсем чупнă çěрте чупса, утнă çěрте утса пашкаса çитрěç. Çавăн хыççăн Акăнь йывăр чирлесе ўкрě те тек вырăн çинчен тăраймарě, кунсерен сўнсе пычě. Хăйěн Турă çырнă кунěсем нумай пулманнине ăнланса илчě те Акăнь пěр каçхине упăшкине чěнчě ерипен.

— Эс, Çемен, мана ан ўпкеле. Çав каçăна пулах сана ачасемпе савăнтараймарăм. Халь, ак, уншăнах тăлăха тăратса хăваратăп. Кěтрěм, кěтрěм те сана чăтăмсăррăн, кěтсе илтěм. Ěнтě манăн хамăн кайма тивет, унта каллех кěтме пуçлăп. Анчах та эс ан васка, Çемен, пурăн. Каçăна юсама ан ман, çирěпрех ту ăна, тек никама та сиен-хуйăх ан кўртěр.

Акăнь, калаçса ывăнчě пулмалла та, куçне хупрě. Тек уçăлмарěç унăн куçěсем. Мăшăрне пытарса килнě хыççăн тарăн хуйăха кěрсе ўкрě Çемен. Пурнăç интересне çухатрě вăл. Хырăнма пăрахрě те, кěçех сухалпа витěнсе ларчěç ун пичěпе янахě. Çак депрессирен вăхăтра тухма мехел çитереймерě Çемен. Кайран каю шăтрě. Сарă çутçанталăк ешерсе чечек сарнă кунсенчен пěринче вăл та ăсанчě автансăр яла. Мăшăрě патне васкарě ěнтě, апăрша, терěç ял çыннисем, Семене юлашки çула ăсатса.

# ЙĔПРЕҪ ТАРЗАНĔ

**Николай ЖИРНОВ**

Калавсем

Сдано в набор 21.10.1999 г. Подписано к печати 19.XI.1999 г. Формат 60×84/16. Бумага газетная. Гарнитура литературная. Печать высокая.
Учетно-изд. л. 4,0. Заказ № 3008. Тир. 500.
Лицензия № 040807 от 10.04.1999 г.

РГУП «Кугесьский издательский дом»
Государственного комитета ЧР по печати
429500, Чувашская Республика, Чебоксаркий район,
пгт. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

*Оформление обложки*
*художника Владимира ШВЕДОВА*

